29-154

749

# ÇĔНĔ ХУНАВ

## (КАЛАВСЕН ПУХХИ)

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР — 1929 ç.

# ÇĔНĔ ХУНАВ

(КАЛАВСЕН ПУХХИ)

Ретактăрĕсем: { Ç. П. КОРСКИ
М. В. ИССАЙĔВ }

ÇĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР—1929

# УМӖНХИ САМАХ.

Ђӑваш литтераттурине вӗренмелли прокрам халӗ ҫирӗпленсех ҫиткен. Пуринђен ытла ђӑвашсен револђутсиђђенхи пурнӑҫне кӑтартакан илемлӗ литтераттурӑ сахал, ҫавӑнпа та маттериала комплекс тӑрӑх ҫыхӑнтарасси, прокрамра йе хрестоматтире пӗр кӑлтӑксӑр просветенисем парасси — ҫӑмӑл ӗҫ мар.

Ҫакӑ калавсен пуххи 6—7—8-мӗш ҫул вӗренекен ађасене класра вуламалли просветенисем парать. Прокрампа вӗсем пурте ҫыхӑнсах ҫитмеҫҫӗ пулсан та, вӗсене пӗрле пуҫтарса кӑларни, шкулта тишкерсе тухни ђылай усӑ парӗ. 8 ҫул вӗренмелли шкулсем ваљђи прокрампа ҫыхӑнса тӑракан пӗр хрестоматти кӑларсан тата аван пулӗђђӗ, анђах вӑл ӗҫ ваљђи халђ условисем сахал.

Пухури просветенисене класра вулани, тишкерни усӑллӑрах пултӑр тесе, йӑвӑр тӑнлавлӑ вырӑнсен, сӑмахсен пӗлтерӗвӗсене кӑтартас терӗмӗр, тишкернӗ ђухне лартмалли ыйтусене те кӑтартрӑмӑр. Просветенисене вуланӑ ђухне, вӗсене кӑтартнӑ ыйтусем йенђен сӑнаса пыраҫҫӗ; вуласа тухсан, хӑйсем ҫӗнӗ ыйтусем хушса лартма та пултараҫҫӗ.

---

Чувашлит № 1295. Чебоксары, типогр. школы ФЗУ. Напеч. 3000. Заказ № 271

**Пинер.**

# МУСКАВ САССИ.

## I

ИКĔ ЕРНЕ пулаттĕ ентĕ Хветук пуçне Шупашкара кайса курас` шухăш пырса кĕни. Хăйсенпе йунашар пурнакан Михаҍа пиҍҍĕш Шупашкартан тĕлĕнмелле хыпарсем илтсе килнĕ. Çав хыпар пирки Хветукăн та Шупашкара курас килет.

Михаҍа пиҍҍĕш Шупашкара мар, Ентри пасарне кайса килсен те темĕн ҍухлех çĕнĕрен хыпарсем илтсе килет.

Çынсем те пасарта пулаççĕ; çынсем те, Михаҍа пиҍҍе пекех, пасара пырсан ҍи малтан Тимук алкумне улăхса тăраççĕ. Унтан, пăртак калаçкаласан, Улшуç урамнелле сулăнаççĕ. Улшуç урамĕнҍен—Пулă урамне; Пулă урамĕнҍен—Ҍўлмек урамне. Ҍўлмек урамĕнҍе çĕнĕрен хыпарсем нумăй. Унта мĕн те пулсан пулатех, анҍах вĕсенҍен пĕри те Михаҍа пиҍҍе пек хыпарсем тупма пултараймаççĕ.

Шупашкар — Ентри пасарĕ мар. Шупашкара кайса килнĕ хыççăн Михаҍа пиҍҍе ун ҍухнехинҍен те урăхларах, тата тĕлĕнмеллерех, Хветуксен йалĕнҍи çынсем илтмен хыпар илтсе килнĕ.

Мускавран калаçни Шупашкарта илтĕнет тесе сăмах сараттă вăл йалта. Çавăнпа та Хветук Шупашкара кайса курасшăнах тăрăшаттă.

Мускавран калаçни Шупашкарта илтĕнет тенине Хветук илтни икĕ ерне пулаттĕ ентĕ. Икĕ ернеренпе Хветук

Шупашкара кайса курма тапалашаҭ. Ҫак хыпара илтнĕренпе вăл каҫхине те ҫывăра пĕлмест; тĕлĕкре те Мускав сассипе аташаҭ.

Акă кĕрлеме пуҫларĕ те:

— Мăр-р, мăр-р, мăр-р,—тенĕ сасă илтĕнет.

Хвеҭук темĕн пек хĕпĕртесе тĕлĕкрен вăранаҭ кайаҭ,— анђах ун пуҫ вĕҫĕнђе кушак аҫи ҫеҫ мăрлатса ҫывăраҭ.

Тарăхнипе пушшех аҫам аркине пуҫ ҫинђен туртса витĕнет. Ăшă пулнипе каллех ҫывăрса кайаҭ.

Ир пулсан та йе ăна ашшĕ выљăхсене апатлама хушаҭ-и, йе Иван пиђђĕшĕсенђен сӳсмен тӳрлетме пăшатан илме йараҭ-и, вăл хăйĕннех:

— Атте, мана Шупашкара илсе кайса кăтартатна?—тет.

Хвеҭук ҫивĕђ ађа. Йалта ăна „востра“ теҫҫĕ. Куҫĕ тавраш выљаса ҫеҫ тăраҭ. Пĕвне пăхса шутлас пулсан, есĕр ăна вунҫиђђĕре тейĕр, анђах вăл раштавра вунвиҫҫе ҫеҫ кайнă-ха. Шкула та иккĕмĕш хĕл ҫеҫ кайаҭ.

Ну, вара есĕр унăн пуҫне курас пулсан,—хăрасах каймалла. Унăн хура пуҫĕ, мункун ернинђе кăмака хăрăмлакан мĕлке пекех, лапсăркка.

Ик ерне хушшинђе Хвеҭук темĕн тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕ. Ҫуран та кайас терĕ—айакра. Каллех уђитлĕ те: те йараҭ-ха, пĕлме ҫук. Ҫавах мĕнле пулсан та Хвеҭукăн телейĕ пулђĕ.

Пĕринђе Шупашкара, Происвотсойуса, хăйсенђен пĕр виҫ ҫухрăмри йалтан ђăпта леҫме лав шырама килнĕ терĕҫ. Хвеҭук ашшĕ те ђăпта леҫме икĕ пăт ырашла килĕшрĕ.

Ашшĕ килĕшрĕ, Хвеҭук та хĕпĕртерĕ.

— Аттепе пурĕпĕрех Шупашкара ларса кайатăп—тет. Ђăнах та ҫав, Хвеҭук Мускав сассине илтетех!..

## II

Шурăмпуç паçăрах килҫĕ. Хвеҭук хăйсен лашине анатри çăл кутĕнҫен шăварса килҫĕ те, сĕлĕ парса витине хупрĕ. Ҫăпта лавĕ те хатĕрех. Ĕ... кассиннҫен ăна ĕнер каçах тийесе килсе лартнă. Килкартинҫе вăл каç-ранпах кантăк умнелле пăхса туртисене кăнтса лараҭ. Хăвăрттăн тухса кайассине кĕтнĕ пекех туйăнаҭ.

Хвеҭук амăшĕ лашана шăварса килнĕ вăхăтра каçхи йулашки йашкана ăшăтса хуҫĕ. Хутаççа çăкăр ҫикме пуçларĕ.

Апатлансан, Хвеҭук ашшĕ лаша кўлме пўртрен сўсмен-сем йăтса тухрĕ. Турта пăйавсем вăрăм çула кайма шанҫăклипе шанҫăксăррине пĕлĕс, тесе, тата тепĕр хут вĕсене тĕплĕрех тыткаласа пăхрĕ.

— Хвеҭук, лашана витерен çавăтса тух-ха, йĕвен унта вите умĕнҫех пăтара çакăнса тăраҭ,—терĕ ашшĕ.

Лаша кўлсе тăратрĕç. Амăшĕ çăкăр хутаççине çуна пуçне тухса хуҫĕ. Пурте хатĕр. Ларасси те, тухса кайасси кăна.

Хвеҭук ашшĕ те çуна çине улăхса ларҫĕ, анҫах Хвеҭука лартса кайасси çинҫен пĕр сăмах та çук.

— Атте, мана Шупашкара лартса каймастăн-им вара?

Хăйĕн çавăнтах пит çăмартисем тăрăх куççўлсем йухса анас пек тăраççĕ. Хурлăхлăн туйăнҫĕ ăна.

Шухăшлăр-ха хăвăрах! Хвеҭук çав тери Шупашкара кайасшăн икĕ ернеренпе çунаҭ; анҫах çав тери кĕтнĕ çĕртенех, Шупашкара лартса кайасси çинҫан пĕри те пĕр сăмах уçмасҭ.

— Сана лартса кайса мĕн усси пур?—теме пуçларĕ ашшĕ.—Усăсăрах лашана ытлашки йăвăр пулаҭ, ахаљ те çулĕ кансĕр. Ав, йепле тăман тухса кайрĕ!

Çăварĕнђи ђĕлĕме кăларса çуна пуçне шаккарĕ. Йулашкиеђен пĕрре: —лађ!—сурђĕ.

— Лашана йывăр килет,—терĕ.

Апла каласан Хвеŭукăн ђунĕ пушшех тулашрĕ. Вăл мăшт та сикмерĕ. Çавах:

— Пыратăп, атте,—терĕ те, хапха патнелле паттăрăн утса карĕ.—Пурĕпĕрех пыратăп!

Ашшĕ, Хвеŭук тăрсах пырасшăннине курса, нумай туртăшса тăмарĕ.

— Пырса куртăр пуљ еппин, карђăк?

— Тем тумалла çав ађапђапа çул çинђе?

— Пырас тет-çке-ха!

— Ађапђа тем те калĕ вăл! Вĕсен хыççăн кайсан!?.

— Пырса куртăрах ĕнтĕ. Пит хытах кайас çук вĕт. Ну, нумай тăрас мар. Çăкăр пăртак ђикен пуљ, карђăк: иксĕмĕре çитмĕ тата.

Хвеŭук амăшĕ тата çур çăкăр касса тухрĕ.

— Аŭа, лар Хвеŭук! Ав Микихверсем тухса та карĕç, пирĕн те майĕпе йурттарас.

Хвеŭукпа ашшĕ çуна çине ларса тухса кайрĕç.

III

Аслă çул çине тухнă çĕре Хвеŭуксен лавĕ Микихвер пиђђĕшсене хуса çитрĕ.

Аслă çул—хурăнлă çул, çулăн икĕ айăккипе шап-шар, йур пуснипе шерепе йарăмлă хурăнсем пуçĕсене усса лараççĕ. Хурăнсемпе пĕрле телекрам йуписем.

Телекрам йуписене Хвеŭук пирвайхи хут кăна курмасŭ. Тĕлекрам Хвеŭуксен йалĕ витĕр те тухса кайаŭ.

Вăйлă çил тухсан, телекрам йуписем уласах макăраççĕ. Пайан та улаççĕ. Пайан та вăйлă çил, тăман.

Лашасене пыма çул йăвăр. Пĕр утăм та—çул çине тăман шăлсах лартаť, лашасене хĕвет. Шап-шар.

Ђуптарассинђен ытла уттармалла. Тăвалла улăхнă ђухне лашасем ђасђасах тăраççĕ. Лавăççене лав хыçĕнђен утса пыма лекет.

— Е-ей, пирĕн Хветук та пыраť-çке! Ма ашшĕ ку Хветука Шупашкара илсе кайаť-ши! тесе малти лав çинђе пыракан Çемен пиђђĕш Хветуксен лав хыçне йулса йĕкĕлтеме пуçларĕ.— Хам пулсан лав йахăнне те йарас çук.

— Пырса куртăр терĕм ĕнтĕ!

— Еккейех, тата ашшĕ те Хветук майлă!

— Есĕ кам майлă тăвасшăн тата?—терĕ Хветук паттăрăн.

Еп сана илсе кайасшăн мар. Шкула пыманшăн уђитлĕ те йатлаť-çке ĕнтĕ сана?

— Епĕ уђитлĕрен ыйтнă вĕт. Кайах терĕ.

— Е!... Апла пулђĕ-и?

Çул пăртак такăртарах пулсан, лашасене çапах та ђуптараççĕ. Анаталла май лашасене пусахлаççĕ, сăрталла — шак та уттипе, шак та çуна хыççăн çуран; Хветука йĕкĕлтеççĕ.

— Хветук йађĕпех Мускавран калаçаççĕ ĕнтĕ. Хветук Шупашкара пырассине Мускаврисем те пĕлеççĕ ĕнтĕ.

Анђах Хветук мăшкăланине пăхмаст. Унăн пуçĕнђе пĕр шухăш: Мускав сассине илтесси. Çынсем хуť те мĕн каласа кулђăр.

Хветука халĕ ĕнтĕ телекрам йупи кĕрлени те Мускавран каланăнах туйăнаť. Кашни йупи урăхла улаť, кашни йупан урăхла сасă.

Телекрам йуписем кĕрлеççĕ. Телекрам йуписем тем пек кĕрлесен те унтан пĕр сасă та илтес çук. Çапах та:

çуна пуçне кĕрсе выртсан та, çуна хыçĕнђен утса пынă ђухне те—телекрам йуписем кĕрлени Хвеҭука канăç памаççĕ.

Халиђђен, Мускавран калани Шупашкарта илтĕнет,— тенине пĕлмен ђухне телекрам йуписем кĕрлени Хвеҭукшăн нимĕнех те туйăнман. Анђах пайан апла мар. Пайан темĕншĕн телекрам йуписенђен ăраснах Мускав сасси илтĕнессĕн туйăнаҭ.



Лашасене пыма çул йăвăр. Пĕр утăм та—çул çине тăман шăлсах лартаҭ, лашасене хĕвет. Шапшур.

Шупашкар пĕр вунă çухрăмран малах йулмарĕ. Лашасене тепĕр хут çине тăрса пусахламалăх çеç. Анђах Хвеҭукшăн вăл та айакра. Хвеҭукшăн вунă çухрăм та тем пек вăрăм çулăн туйăнаҭ. Вăл кашни хирĕç пулакан çынтанах:

— Шупашкара тата миçе çухрăм йулђĕ?—тесе ыйтат̆.

Анђах пĕри те тĕллĕ калакан çук. Тата тепĕр çухрăм çур кайсан та çав шутах, вунă çухрăмах пулат̆. Йе тата, кирлех пулин, вуннă çумне çĕнĕрен пĕр-ик çухрăм хушса калакаӊ та пур.

Тăман пăртак лăпланма пуçларĕ. Хвет̆уксен лавĕсене хирĕç мунђала, пĕрене тийенĕ лавсем килме пуçларĕç. Хутран ситрен парпа кӳлнĕ хура хыçлă çунасем те тĕл пулкалаççĕ. Хура хыçлă çуна тĕпĕнђе пĕр-пĕр хура паљтто, хура паљтто çинђен тăлăп тăхăннă çын ларса пынине курсан, Хвет̆ука таçти, аслă вырăнта ларакан çыннăнах туйăнат̆.

Пĕр çавăн пек ларса пыракан çын çуни, вĕсен саласкинђен çаклатса, ђăпта лавне тӳнтерсе йарсан:

— Ку асли пулђĕ ĕнтĕ,—тесе Хвет̆ук сăмса айĕнђе мăрлатса илђĕ.

Шупашкар лапкипех курăнса кайрĕ. Тепĕр вун-вун-пилĕк минутран Хвет̆уксем Шупашкар урам хушшине пырса та кĕђĕç.

Хвет̆ука хӳмесем çине айлă та çийлĕ, темĕн ђухлех хутсем çыпăçтарса пĕтерни тĕлĕнтерсе йађĕ. Ђăнах та, вĕсен хурал пӳрђĕ умне те хутсем çыпăçтараççĕ ĕнтĕ, анђах ку тери нумай мар. Вĕсен хурал пӳрђĕ умне пĕлтĕрех „Траххомпа ђаххуткă ђирĕ çинђен ђĕнсе каланине“ çыпăçтарса хунă та, халĕ те çав хутах çакăнса тăрат̆. Ăна та пулин Т̆апук пиђђе Йăванĕ хăрах кĕтессинђен ђĕлĕм туртма ђĕрсе илнĕ.

Çав тери нумай хутсем хушшинђе тин çеç çыпăçтарса кайнă хут Хвет̆ука хăй йенне çавăрђĕ. Вăл хута çыпăçтарнă ђусти те çаплипех йĕрсе тăрат̆-ха. Хвет̆ук вулат̆:

*ВСЕМ, ВСЕМ, ВСЕМ!*

*Сегодня и каждый день в зале совпартшколы по радио можно слушать*

*Лекции, Доклады. Концерты.*

*Совет ОДР.*

Хвеўук пёђёк ађа пек хёпёртесе кайрё.

— Атте, атте! Лашана ђар-ха, ҫак хута вулам.

— Тупрё тата... Но-о-о!.. Ҫитсен те вулама ёлкёрён. Ђăптана ҫитсе пушатар-ха, вара маншăн пулсан, пётём хулари хутсене вуласа пётер!

Хвеўукăн ђунё кăртлатрё. Совпартшкулта тенёрен, Михаља пиђђёш: пасар урамё патёнђе илтёнет, тени Хвеўук пуҫёнђен таҫтах кайса ҫухалђё. Вăл пайан Мускавран каланине илтеймест пулас. Тен: пасар урамё патёнђе илтёнет, тесе Михаља пиђђёш улталарё те пуљ?

Пасар умёнђи хапха патёнђе те Михаља пиђђёш калакан йапалан йёрё те ҫук. Вăл пушшех Хвеўук ђунне тăвăрлатрё. Унта палли пулсан ҫапах та шанăҫ пурђё. Халё ёнтё...

— Ей, тепёр йенђен. Савпартшкула кайса кураймăпи вара?

IV

Ђăптана Атăл хёрринђе лаpакан пысăк склата пушатмалла пулђё. Кунтан Михаља пиђђёш калакан хапха курăнаў те, анђах айакра. Кам пёлет, тен хапха тăрринђен ђăнахах та Мускавран калани илтёнё? Пёлме ҫук. Ҫавăнпа та Хвеўук, ашшёсем ђăпта пушатнă ђухне, хапха

йенелле кайа-кайа пăхат̆. Анђах Мускав сасси мар, ђăпта пушатнă вăхăтра Мускав шăрши те туйăнмарĕ.

Ђăпта пушатса пĕтерђĕç. Ђăпта пушаттараканни лав укçи илме Происвотсойуса кĕрсе пама кăпитантсă çырса пађĕ. Хутне Муçей Павăлĕ илђĕ.

Муçей Павăлĕ Происвотсойусран укçа илсе тухиђђен, лашасене хваттере тăратса, пăртак çитерес тесе шут тытрĕç. Лашасем каннă вăхăтра пасара тухса çӳрес, терĕç.

Лашана апат парсанах, Хветукпа ашшĕ пасара утрĕç. Вĕсем Пулă урамне çеç çитнĕђђĕ, хайхи хапха патне халăх кĕпĕрленсе пуçтарăнма та пуçларĕ. Хветукпа ашшĕ те хапха патне пыђĕç.

Пĕр вăрăм сăмсаллă çынни кăрмахвун трупи пеккине майлаштарат̆.

— Атте, Мускавран калани çакăнтанах илтĕнети вара?

— Ман ăçтан пĕлес, ађам? Таçтан калаççĕ?

Халăх пуçтарăннă çемĕн пуçтарăнат̆. Трупана та майлаштарса лартрĕç. Унђђен те пулмарĕ, пысăк сасăпа:

— Товиришђ Антреев, товаришђ Антреев, хатĕрленĕр! Виçĕ минутран калама пуçлатпăр. Говорит радиостнция Общества Друзей Радио имени Чуваш ЦИК-а. Слушайте, слушайте! Через три минуты будет передача радиогазеты № 2—тени трупа çăварĕнђен илтĕнсе кайрĕ.

— Виç минутран калама пуçлаççĕ! виç минутран... тени халăх хушшинђе кĕрлесе кайрĕ. Виçĕ минутран Хветук кĕтнĕ Мускав калаçма пуçлат̆.

Акă пуçлапђĕ те.

— Итлĕр, итлĕр!—тесе кашни сăмаха татса, уйăрса мăн сасă калама тытăнђĕ.

— Халĕ акроном Танилăв стат̆йине вулама пуçлатпăр.

— Ри-и-и, тесе кромкоковориттĕл нăйлатса йăнăшма пуçларĕ. Çав хушăрах кăтăрт-катăрт тутарса илет.

— Çуркунне çитет... çураки айакках йулмарĕ... Хресҫенсен пурин те çуракине шултра, алланӑ, таса вӑрлӑхпа акма тӑрӑшас пулаť... Мĕн акӑн—çавна вырса илĕн.

Кромкоковориттĕл ҫӑвашла, ҫӑвашла ҫĕлхепе. Хвеťук калаçакан ҫĕлхепех калаçаť. Ку Хвеťука пушшех тĕлĕнтерҫĕ, ӑна пĕтĕмпех çунатлантарса йаҫĕ. Вунвиç çулхи Хвеťука—вӑтӑр çулхи çын шухӑшĕпе шухӑшлаттарҫĕ.

— Йут патшалӑхсемпе Совет Сойусĕ пурнӑçĕ çинҫен Авкçентйĕв йулташ каласа параť, терĕ калкалех мӑн сасӑ.



Хвеťукпа ашшĕ те хапха патне пыҫĕç.

Тата, тата, тата нумай каларĕç ратио тӑрӑх, нумайҫен итлерĕç ратио сӑмахне. Шак та ҫӑвашла, шак та Хвеťук ҫĕлхипе калаççĕ.

Ратиохаçат пĕтрĕ. Хаçат ретактӑрĕ Солӑттав, ӑна пулӑшаканĕ Авкçентйев, хаçата кӑларақанĕ Коншин, тенĕ хыçсӑн:

— Ку хаçат Шупашкарта кашни пасар кунĕ: ерне кунпа тунти кун тухаť, тесе пĕлтерҫĕç.

— Е-е, куна Шупашкарта калаççĕ-çке, Мускавран мар, тесе, Хвеťук тин тавçӑрса илҫĕ.

Анђах, Мускав çеç ђуна хăпартлантарaт-и вара?! Мускав çеç хаваслантарат-и? Шупашкар та Мускавах! Шупашкар та çамрăк çынна пысăк шухăша йарат.

Хветуксен пайан киле тухса каймалла пулмарĕ. Кайалла, çул май мунђала тийесе кайма килĕшрĕç. Татах каç та пулса килет.

Халех каймалла пулманни Хветука питех те май килђĕ. Пĕр йенђен—каç пулађђен ретаксине кайса килме пултарат. Унта мĕнле илтĕнни çинђен пĕлтерме пулђĕç. Тата тепĕр йенђен, Хветук каçхине ратио тăрăх Мускавран каланине илтме Совпартшкула кайма пултарат.

Анђах ретаксийĕ ăçта-ши? Хăш вырăнта ларат-ши? Кун пирки нумайђђен шухăшласа тăђĕ. Ăна петтехнĕккăмра вĕренекен ађа ретакси тĕлне кăтартса йађĕ.

## V

Ретаксине пырсанах, ђи малтан унăн куçĕсем алăк çине

> „КАНАШ“
> **хаçат ретаксийĕ**

тесе çыпăçтарса хунă хут çине ђарăнса тăђĕç. Çавăнтах унăн пуçĕнђи малтанхи шухăшĕсем хăйсен йалĕнђи Карађăм патне кайса килђĕç.

Çакăн пек пулат ĕнтĕ вăл Карађăмăн ретаксийĕ,— терĕ. Çакăнта çырса йарат мĕн Карађăм хăйсен йал пурнăçĕ çинђен, çакăнтах тухнă вĕсен йалĕнђи пуп çинђен çырнă статйи те.

Хветук ретаксине пынă ђухне, ретаксире ĕçлекенсем саланса пĕтме пуçланă. Хĕллехи кун кĕске вĕт. Виç-тăват сехетре каç пулат. Ретаксинђе мĕн пурĕ те ик-виç çын анђах тăрса йулнă. Пĕри килне халех кайма шухăшламаст пулас-ха. Çутнă електритсă лампăђкисем кутĕнђе

çине тăрса тĕрмешет. Темскер арђа пек тăрăхла тăваткăл йапала çине лампăђкăсем çутса пĕтернĕ. Арђа пек йапалана пралуксемпе карнă.

— Епĕ кунта ратио çинђен пĕлме килтĕм,— терĕ Хвеťук, çав арђа пек йапала патĕнђе мĕштĕртетекен çын кăшт пăртак пушаннă пек пулсан.

— Ратио çинђен тетĕн? Аван йапала! Епĕ хам та ратиоприйемнĕкпа мĕтĕсленетĕп-ха.

— Çакăн пек пулаť-и вăл ратио текен йапала?

— Куна ратиоприйемнĕк, теççĕ.

— Мĕн тумалли? Ратио мар-и вара?

— Çавă. Çак аппарат тăрăх ратио итлеме пулаť.

— Ха! Ĕнттереснă...

— Ĕнттереснă çав.

Пирĕн Хвеťукпа ратио хуçи калаçма пуçларĕç. Ратио хуçи вăтам çын, сарă. Сăмсисем Хвеťукăннинђен пысăкрах. Хăй питĕ кăмăллă. Ун кăмăлĕ такама та килĕшмелле.

Сарă çын Хвеťука ратио çинђен ăнлантарма пуçларĕ. Вăл ратио мĕнле илтĕнме пултарнинђен пуçласа, ратиоприйемник кашни йалтах лартма пуласси патне çитиђђенех каларĕ. Ратиоприйемнике кашни йалтах лартма пулаť. Кашни йалтах Мускавран каланине итлеме пултараççĕ.

Йулашкинђен Хвеťукран:—Акă Мускавран каланине итле,—тесе пуç çине темскер икĕ хăлха ункиллĕ, пĕкĕ пек йапала тăхăнтарса лартрĕ.

— Лонтăн... Лонтăн... Март... 20...

— Куна Мускавран калаççĕ-и?

— Мускавран.

Лайăх илтĕнет-çке! Кунпа нумай çын итлеме пултарайраť-и?

— Есĕ паçăр пасарнăй плошђăтре каланă ђухне унта пултăн-и?

— Пултăм.

— Унта кăрмахвун трупи пеккине куртăн-и? Куртăн пулсан, çавăн пекки лартайрас пулаť. Вара нумай çын итлеме пултараť.

Хвеťук ретаксинђен тухса, савăннипе хваттере мĕнле çитнине те сисмерĕ.

Сакăрвун çиђĕ тенкĕ! Сакăрвун çиђĕ тенкĕ унăн пуçне пăтратма пуçларĕ, унăн пуçĕнђен тухмасť.

Вăл каçхине ђăнах та Совпартшкула Мускавран каланине итлеме кайрĕ. Ашшĕ те пыђĕ. Вĕсем пынă ђухне, ратио тăрăх контсерт пуçланнă. Хут купăссем, сĕрекен купăссем калаççĕ, йурлаççĕ.

Хвеťук хваттере тавăрăнђĕ. Çывăра пĕлмест. Сакăрвун çиђĕ тенкĕ унăн пуçĕнђен тухмасť. Хăвăртрах киле çитес килет, киле...

Ирхине Хвеťук ашшĕсенђен малтан, тул çутлађђенех вырăн çине тăрса ларђĕ.

— Атте, майĕпен киле ђуптаратпăр пуљ!

Хăй пуçĕнђе çав шухăшсемех: сакăрвун çиђĕ тенкĕ укçа, ратио ђленĕсем, ратиоприйемник. Ратиоприйемник умĕнђе пысăк трупа -кромкоковориттĕл...

Çула тухнăранпа Шупашкар тахçанах курăнми пулђĕ. Кĕç Хвеťуксен йалĕ те сăртсем хыçĕнђен курăнса кайрĕ. Хвеťук ывăннипе, те каçхине çывăрайманнипе тĕлĕрсе пыраť.

Йал курăнсанах унăн куç умĕнђе икĕ вăрăм шалђа курăннăн туйăнса кайрĕ. Икĕ шалђа хушшине икĕ пралук карнă. Икĕ пралукран тата тепĕр пралук кăкарса йанă. Вăл пĕр вĕçĕ Хвеťуксен пўртне кĕрет. Пўртре ратиоприйемник. Ратиоприйемник кутĕнђе кромкоковориттĕл çук-ха. Хăлха çине тăхăнса пĕр çын итлемелли анђах.

Ашшĕ:—Т-ăр-р-р!—тенĕ хыççăн Хветукăн куçĕсем ҫалтăрах уçăлса карĕç.

— Ан çуна çинҫен, киле çитрĕмĕр вĕт!

* *
*

Хветук киле таврăнсанах шкула кайрĕ. Уҫитле хăй мĕн курни-илтни çинҫен пĕтĕмпех каласа кăтартрĕ. Уҫитлĕ те Хветук каласа панисене питĕ хапăл туса илҫĕ.

Вĕренекен аҫасем ратио тусĕсен опшҫестви йаҫейккин ҫленне çырăнма пуçларĕç. Вĕсенҫен пĕри те ратио тусĕсен ҫленĕ пулманни йулмарĕ.

Аҫасене кура ашшĕсем те ҫлена çырăнма пуçларĕç.

Унтан М... йалĕнҫи копператтив правленийĕнҫе ратио çинҫен токлат лартрĕç. Правленийĕ ку ыйтăва копператтив ҫленĕсен пухăвне куçарҫĕ. Копператтив ҫленĕсем пурте тенĕ пекех ратио тусăсен ҫленне кĕҫĕç. Тата укçа парса пулăшма постановлени йышăнҫĕç. Пулăшу Комиттеҫĕ патне те çитсе перĕнҫĕç.

Уйăхран ратиоприйемник пулса та ларҫĕ. Шкул тăррине лартнă шалҫа çинҫе вĕлкĕшса ларакан хĕрлĕ йалав таçтанах курăнса ларать. Çак йалава курса кӳршĕ йалсем те шкула кунран кун ытларах пухăнма пуçларĕç.

Ҫи малтан ратио тăрăх вĕсем ТАСС телекрамĕсене итлерĕç.

— Лонтăн... Лонтăн... Анклире çĕркăмрăк ҫавакансен сапастовкки пуçланнă... Майăн виççĕмĕшĕнҫе çурçĕр тĕлĕнҫе шахтăсенҫе ĕçлекенсем пурте ĕçе пăрахса шахтăсенҫен тухнă... Ҫукун çулсем ĕçлеме ҫараннă... Тĕнҫе пуçланнăранпа та, Анклири корҫаксен сапастовки пек, хăватлă сапастăвкă пулман...

Пурте итлесшĕн, пурте Мускав каланине хăйсен хăлхипе хăйсем илтсе ĕненесшĕн.

Ђерет нумай. Кромкоковориттĕл çук. Хăлха çине тăхăнтарса пĕрерĕн çеç илтмелле. Çавăнпа та уйрăм çынна пĕр-ик минутран ытла илтлеме çук.

Вăт тăк на. Ђиперех илтĕнет, ђиперех:—„çĕркăмрăк ђавакансем“ тет.

— Итлеме те стойăт,—тет пĕр курпун старик:—тем те шухăшласа кăларĕ ку етем ăс-пуçĕ.

Хвеťук хăй савăннипе нимĕн тума та пĕлмест. Вăл мĕнле те пулин хăй ытларах илтесшĕн тăрăшаť.

— Ăçта-ха, сасси лайăх илтĕнет-и?—тесе пĕр-ик çын итлесенех, хăй итлесе пăхаť.

* * *

Халĕ Хвеťуксем кромкоковориттĕл илесшĕн тăрăшаççĕ. Тата Шупашкарти ратио перетатђăкпа та çыхăнса тăма май шыраççĕ.

**Хăшпĕр сăмахсене ăнлантарса пани.**

1. Сўсмен—хăмăт. 2. Лашасене хĕвет—лашасем çине йуркупалаť. 3. Шак та уттипе— пĕр май уттипе.

ЫЙТУСЕМ:

*1. Çак каловăн тĕп шухăшне кăтарťăр.*

*2. Йалта мĕн майпа ратио лартма май пур?*

*3. Ратио пире мĕн усă параť?*

Патман Н.

# МЁНШЁН?..

ЙУЛАШКИ спасра Мăн-Кушилре ҫиркӳ праҫникĕ. Мăн-Кушил ҫыннисем вăл праҫнике ҫулленех „ҫаплă“ иртереҫҫĕ. Пуйансем ҫылай вăйлă ĕҫкĕ гăваҫҫĕ, ҫухăнсем те кăшт-кашт хăна пухкалаҫҫĕ. Пуртараххи ĕҫет, ҫийет, ҫукраххи ун патне пырса хăнисемпе калаҫса ларать.

— Йурĕ-ха кунта та,—теҫҫĕ вара ун пеккисем тĕпелерех иртме сĕнсен, — пире шăпăр шăтăкĕнҫе те йурĕ-ха, теҫҫĕ.

Ҫуллен ҫулах Мăн-Кушилре йулашки спас кунĕ, каҫ йенне кайсан, килрен киле йе йурă сасси, йе кăшкăрашни-ҫапăҫни илтĕнет. Хăйă ҫутти урам урлă йарлатса выртсан ĕҫкĕ тата хĕрӳленсе кайать. Ку ҫĕр вара инкексĕр иртсе каймасть.

Ҫапла иртереҫҫĕ Мăн-Кушилре ҫиркӳ праҫникне.

* * *

Пуйан Мирун пайан хăна пухасшăн. Хăнасем килиҫҫен кил-картинҫи ĕҫсене пуҫтарса пĕтерес тесе, вăл ҫутăлнă-ҫутăлман ура ҫине тăнă. Хăй тăрсанах лупас айĕнҫе урапа ҫинҫе ҫывракан тарҫине тăратма кайрĕ.

Тарҫи исленсе кайса ҫывăрать. Йăвăр ĕҫпе ҫĕмĕрĕлнĕ ҫамрăк шăм-шаккисем шăлтăрах кайнă.

— Ҫтаппан, тăр ҫасрах!

Ҫтаппан илтмест. Ҫĕтĕк ҫаппан айĕнҫе, măш-măш, сывласа выртать.

— Çтаппан! тет Пуйан Мирун тата хытăрах. Çтаппан татах илтейменнине кура айак пĕрђинђен, танк, ђышаҭ.

Тарçи куçне, ђар, уçса йађĕ те, урапа çинђен сиксе анђĕ. Сасартăк хăрăса văраннипе унталла-кунталла пăхса илђĕ. Хăй умĕнђе тăракан тађка кўмерккеллĕ хуçине курсан тем пек çилли тăвăлса килђĕ, анђах ирĕксĕрех:

— Мĕн? тесе йăвашшăн сăмах ђĕнђĕ.

— Мĕн „мĕнĕ“, тăрас пулаҭ ђасрах, ăйăх ђăпти. Паçăрах çутăлнă, есĕ улпут пек сарăлса выртатăн, йе ђăнах та улпута тухасшăн-и?

— Ĕнер кĕлте пушатса ђас выртаймарăм та, çавăнпа-и тен, пайан çутăлнине те сисмен, — терĕ Çтаппан.

— Сисмен! Ак систерĕп еп сана — кĕркунне кăларса йарап та, сисĕн вара хырăму ђарлата пуçласан.

Çтаппан хирĕç ђĕнмест, — хирĕç каласа хуçине çилентересрен хăраҭ văл. Хуçа „ырлăхне“ văл тахçанах пĕлсе çитнĕ. Пуйан Мирун мĕн тăвас тет — çавна тăваҭ: усрама та пултараҭ, кăларса йарсан та унăн ирĕк.

Ерне, Мирун патĕнђе ĕçĕ çăмăлах мар, анђах Çтаппанăн çапах та, выçă пурнăçа кура, Мирун патĕнђен тухса кайасси килмест.

— Мĕн кăркка пек сĕнксе тăратăн тата? — кăшкăрса пăрахрĕ Мирун. — Лаша кўл те Сăрнел ђиккинђи йулашки йулнă çĕмеле тийесе кил. Хăнасем килиђђен, пайан капана тăрласа пăрахас.

Çтаппан пĕр самантрах ура сырса, питне сив шывпа кăшт-кашт йĕпеткелерĕ те, лаша кўлме ђуптарђĕ. Пĕр-ик минутран Çтаппан кĕлте тийеме тухса та кайрĕ.

Анђах нумайах та вăхăт иртмерĕ, Çтаппан пуш ура папа кайалла вĕçтерсе килђĕ.

— Мĕн пулђĕ тата? — тесе кăшкăрса йађĕ Мирун урам йенђи ђўређине йар уçса пăрахса.

— Мирун пиђђе, çӗмеле такам тийесе кайнӑ, пӗр кӗлте те хӑварман.

Çӗмел çук тенине илтсен, Пуйан Мирун шартах сикрӗ. Ђӳређине шарт хупрӗ те, Çтаппан патне урама ђупса тухрӗ. Ђупнӑ май хӑйӗн туптулли хырӑмӗ, лӑстлӑст силленсе пыраҫ.

— Мӗн тетӗн? терӗ тӑвӑлса çитнӗ сассипе Çтаппан çине тилмӗрсе пӑхса. Çилли капланса килнипе хӑй пӗрре кӑвакарса, тепре хӗрелсе кайаҫ.çамки çинђи йун тымарӗсем пӳрне хулӑмӗш хӑпарса çурлас пек выртаççӗ, куçӗсем сиксе тухас пекех Çтаппан çине тӗллесе пӑхаççӗ.

— Çӗмеле вӑрӑсем вӑрласа кайнӑ тетӗп.

— Ах, шуйтансем! — тесе кӑшкӑрса пӑрахрӗ Пуйан Мирун пӗтӗм çанçурӑмне ђӗтретсе йарса. Ах, çӑхансем!.. йавӑлсем!.. пӗтерђӗç, 5 тенкӗллӗх тырра çисе йађӗç!..

Хӑй икӗ ђӑмӑрне ђӑмӑртаса, халех такама тытса хӗнес пек, тем тӗрлӗ авӑнаҫ.

Çтаппан пӗр ђӗнмесӗр тискерленсе кайнӑ хуçи çине пӑхса тӑраҫ.

— Ес мӗн йупа пек тӑратӑн тата кунта? терӗ йулашкинђен Пуйан Мирун Çтаппан çине тулхӑрса пӑрахса, — кай, ђуп ђасрах старӑстӑ патне, халех урапа йӗрри тӑрӑх кайас.

Çтаппан вӑрт-варт лашине карташне кӗртсе йађӗ те старӑсӑ патне ђуптарђӗ.

Нумайах та тӑмарӗ — старӑстӑ та персе çитрӗ. Мӗншӗн ђӗннине пӗлсен: — халӑх пухас, терӗ. — Тата пунеттейсем те ђӗнтерес, терӗ.

Çтаппана каллех йал тӑрӑх ђуптараççӗ. Пуйан Мирун пунеттӗйе кама ђӗнмеллине те каларӗ: — Иван Павӑлђа, виçӗ шыв арманӗ, пӗр çил арманӗ тытакан йалти тепӗр пуйана, Сӑхӑ Васлине, йалта ђи вӑйлӑ кӑшкӑрма та,

ёҫме те пултаракан карланка, тата Шăрт Михали, йалти лавкаҫ, патне те кĕрсе тухма хушрĕ.

Ҫтаппан каллех йал тăрăх вĕҫтерҍĕ.

Пуйан Мирун ҫĕмелне вăрланă хыпар йала ҍасах сарăлҍĕ.

Мăн-Кушил пысăк йалах мар — йалта мĕн пулни, мĕн килни ҍасах йал ҫине сарăлаӑ. Пуйан Мирун тесен, ун пек хыпарсем тата та ҍасрах вĕҫрен вĕҫе ҍупса ҫитеҫ-ҫĕ, мĕншĕн тесен Пуйан Мирун Мăн-Кушилре ҍи пуйан, ҍи ҍаплă, ҍи паллă ҫын.

— Пуйан Мирун ҫĕмелне вăрласа кайнă темеҫҫĕ-и? тесе ыйтаӑ Лутра Михала Сăхă Ваҫли урам тăрăх васкаса пынине кура.

— Ҫапла тет ҫав, тет Сăхă ҍарăнса ҍăрманса тăмасăрах.

— Пунеттейе ҍĕнҍĕ-им сана? тет Ваҫли хыҫĕнҍен Лутра Михала.

— Пунеттейе... тет Ваҫли.

Лутра Михала ҍӳреҍине хупрĕ те, апат ҫиме пăрахсах, Пуйан Мирун йеннелле тухса утрĕ.

* * *

Мирун умĕнҍе халăх ҍылай пуҫтарăннă. Калаҫаҫҫĕ, шавлаҫҫĕ. Пухăннă халăх варринҍе старăстă темскер хыттăнах кăшкăраӑ. Аллисемпе ҫапкаланнă май, хăйĕн кăкăрĕ ҫинҍи йĕс металĕ, йăлт-йалт выҍаӑ.

— Тем каласан та, Мирун Иванҍă ҫĕмелне Сăрнел тутарĕсемех илсе кайнă, тет старăстă.

— Тата ҫавсем пулмасăр, Сăрнел ҍиккинҍен кам вăрлатăр, тутарсемех, теҫĕ ыттисем те.

— Ара, пĕлтĕр манăнне те пĕр ҫĕмеле касса кайрĕҫ вĕт, шуйтансем, тет ҫинҫе сасăпа Упрам Кĕркурийĕ, — вăррине те кайран пĕлтĕм те, ним тума та пулмарĕ, тет.

— Ан шавлăр-ха пустуйа, тет Мирун халăха, — кайса курмасăр калама хĕн — те Сăрнелсем, те такам, ăçтан пĕлен ăна, хамăр йалтах-и тен.

— Хамăр йалта пулас çук, тет Упрам Кĕркурийĕ, халиҕҕен пирĕн йалта çĕмел тавращпе никама та тытман.

— Тытман тесе питех шанса ан тăр, Упрам,—тет Сурат Хĕветĕрĕ,—кăҕухнехи етеммӳне шанма çук—хамăр йалта та пулĕ.

— Ан калаçăр-ха, тархасшăн, пустуйа,—тет старăстă, тем шăпăлтатса тăриҕҕен аҭăр уйа кайса урапа йĕрне пăхар.

— Аҭăр!.. аҭăр!..

— Кайар!..

— Пунеттейсем пурте килнĕ-и?

— Пурте, тет хыçалтан Иван Павăлҕ. Хăй тин анҕах çуллă икерҕ çисе тухнă пулмалла: — тути-çăварне çуллакаласа тăраҭ.

— Кайар апла.

Тапранса кайрĕç. Мирунпа старăстă малта, вĕсен хыçăнҕен пунеттейсем, пунеттейсем хыçĕнҕен халăх пыраҭ Утнă май çынсем пĕрерĕн-икшерĕн калаçкаласа пыраççĕ. Халапсем, паллах, малтанлăха çĕмел вăррисем çинҕенех.

— Каларăм пĕркунах халăх çинҕе, тет Сурат Хĕветĕрĕ, уй хуралçисене çав Сăрнел ҕиккине лайăхрах сыхлама хушас тесе, итлемеççĕ вĕт — ей кам мурĕ пырса кĕтĕр унта çырма пуçне, теççĕ. Ак, хайхи, пырса кĕме мар, тасатса та кайнă, тет.

— Ей, пирĕн халăхпа, тет тепри, каласан та ним тулăка кĕресшĕн мар — уй хуралçисене мар, йал хуралне те ҕипер тăмаççĕ.

Халап йалти кăлтăксем ăшне кĕрсе кайаҭ. Ҕăнах та кунта калаçмалли нумай, калаçни те темĕн ҕухлех пулнă.

Анђах, çапах та халăх нийепле те татăлса килĕшеймест.

— Ђеретлĕ хурала пăрахас, хуралăç тытас теççĕ хăшĕ-хăшĕ халăх çинђе. Анђах çавăнтах карма çăварсем кăшкăрса та пăрахаççĕ:

— Мĕн хурал тыса укçа сайа йамалли пур, ђеретлех хăварас.

Йал хуралне ђеретле тухмаллах хăвараççĕ, анђах ђерет çитсен карма çăварсем хăйсемех ђерете пăсса йараççĕ. Мĕн тăвас тетĕн? Нимĕн те тăваймăн, пĕтĕм йалти ĕçе карма çăварсем туса тăраççĕ.

Мăн-Кушил авалтанпах тĕрĕс-тĕкел пурăнайман. Йал хушшинђе вăрçă-çапăçу ĕлĕкренпех пулса пынă. Пĕри теприне кураймасť, теприт, тĕк тăнă çĕртенех, виççĕмĕшĕнне пуçне çапса шăтарат̆, виççĕмĕшĕ çиленнипе хăй тăшманĕн çуртне вут тĕртма хатĕр. Халăх пăлханат̆, çĕмĕрлет.—Çав вăхăтрах ђейереххисем, пуйансем, хăйсене мĕн кирлĕ, çавна туса пыраççĕ.

Пуринђен ытла Мăн-Кушил çыннисем çĕр пирки тавлашаççĕ. Çĕрĕ сахал, çитменнине тата тăмлă, çырмаçатраллă. Пурин те хăйне лайăх çĕр илсе йулас килет, анђах хăйĕн пĕртен пĕр навус тăкса çемçетнĕ çурпилĕкне туртса илсен, тем тĕрлĕ çиленет, халăха хирĕç пыма тытăнат̆.

—Ма илтĕр-ха, халăх ман йал вĕçĕнђи анана? тесе ыйтат̆ халăхран Хăнђăр Петĕрĕ.

Ма илтĕр?.. Кам пĕлет ма илнине — ав, ыйт Сăхă Васлинђен хăйĕнђен, теççĕ Петĕре хирĕç.

Ђăнах та пĕлтĕр çĕр валеçнĕ ђухне Хăнђăр Петĕрĕн навус анине Петĕртен туртса илсе Сăхă Васлине пађĕç.

— Парас Сăхă Васлине, тесе кăшкăрђĕç ун ђухне Иван Павăлђпа Пуйан Мирун.

Паҙӗç Сăхă Ваçлине. Анҙах Сăхă тепӗр куннех навус анине Пуйан Мируна 3 çуллăха сутса йаҙӗ. Çапла Мăн-Кушил халăхӗ вăрçаť, хирӗлет. Хирӗлнӗ май пӗрмайах хăй аллинҙен ҙи лайăх анасене вӗçерсе пыраť.

Йулашки çулсенҙе Мăн-Кушил пурнăçӗ пушшех пăсăла пуçларӗ. Сăрнел тутарӗсем Мăн-Кушиле пит иленсе çитрӗç. Кунӗн-çӗрӗн йалтан туха пӗлмеççӗ, пӗрмайах ӗçкӗ шыраççӗ. Ӗçкӗ май Мăн-Кушил çыннисем те ҙылайӗшӗ тутарсемпе паллашма тытăнҙӗç. Тутарсем пиркийех тата çӗнӗ пуйансем те çурала пуçларӗç. Тӗлӗнмелле! — çӗрӗ те, мӗнӗ те ыттисенни пекех, çынтан ытлашши ӗçлени те çук — мӗн шыçмаклантарса йаҙӗ-ха вӗсене? Йал çыннисем мӗн пирки шыçмакланнине пӗлеççӗ те, анҙах уççăн калама хăраççӗ.

— Çав-çавăнне кӗçӗр каç виçӗ сурăхне илсе кайнă тет, теççӗ çынсем ирхине пӗрне-пӗри тӗл пулсан.

— Çав Мирун шуйтан хушнипех турӗç ӗнтӗ кăна та, теççӗ ыттисем шăппăн.

Çапла, çав Мирун пек пуйансем йал халăхне хăратса пурăнаççӗ. Хăйсене хирӗç каласан калаканăнне йе лашине, йе сурăхне, йе тата кӗлетри йапаласене вăрлаттарса йараççӗ.

Йал хирӗçет, йатлаçаť, анҙах пуйансене хирӗç тăма хăраť, мӗншӗн тесен вӗсен шайкки пӗтӗм йала çавăрса илнӗ. Çитменнине тата мӗн пур вăрри, мӗн пур уретникстрашнӗкӗсем те, пурте вӗсен тусӗсем. Мӗн тăвас тетӗн? Шăлна çыртас пулаť те, ҙăтас пулаť.

* * *

Калаçкаласа пынă май ана тӗлне çитрӗç. Çтаппан çӗмел вырăнне йертсе кайрӗ. Çӗмел ларнă вырăнта ыраш пӗрҙисем анҙах сапаланса выртаççӗ.

— Халăх, айаккарах пăрăнăр, йĕр çине ан таптăр, тесе кăшкăрать старăстă.

Халăх, кӳршĕ ана çинђен пăрăнса, çĕмел вырăнĕ патне пуçтарăнать.

Çĕмел кутĕнђен çавăрăнса кайнă урапа йĕрри ана тăрăх йарах тăсăлса выртать. Малти урапи шинлă, кайри шинсăр. Кайри урапин сулахай тукунĕ пăркаланђăк, ахăртне—ана тăрăх çĕлен пек кукăр-макăр йĕр туса кайнă.

Пурте, кам урапи-ши ку тесе, пуç мимисене çавăраççĕ. Анђах нихăшĕ те йалта никам урапи патне пырса перĕнеймеççĕ. Кукăр-макăр йĕре пăхсан,—ун пек йĕр тăвакан пăркаланђăк урапасем йалта ђылайĕшĕн пур, анђах камăн-ши — малти шинли, кайри пăркаланђăкли?.

Атăр халăх йĕр тăрăх кайар, терĕ старăстă.

Кайрĕç йĕр тăрăх. Пуйан Мирунпа старăстă малта, вĕсем хыçĕнђен пунеттейсем, пунеттейсем хыççĕнђен халăх пырать.

Ана вĕçне тухрĕç. Йĕр ана пуçĕнђи çул çине пăрăнђĕ. Çеп-çемçе тусанлă çул çинђе йĕр лăпах выртать. Кайрĕç çулпала. Анђах пĕр-ик ана урлăш кайсанах йĕр Мăн-Кушилпе Сăрнел ђиккинђе сарăлса выртакан йемйешĕл курăклă пруђак (кран) çине пăрăнђĕ те, пĕтрĕ.

— Ак, тамаша!..

. — Мĕн тăвас?..

— Ара, мĕн тăвас — кайар иккĕн-виççĕн çӳлелле; епĕр, ыттисем, пруђак тăрăх айалалла анăпăр, йĕр ăçта та пулин пруђак çинђен пăрăнмаллах, терĕ старăстă.

— Ђăн Микихвер пиђђе, йĕр пăрăнатех...

— Атăр, ерттел, çӳлелле, терĕç хăшĕ-хăшĕ.

— Атăр!..

Уйăрăлса кайрĕç:—пĕр ерттелĕ Сăрнел йалĕ йеннеле, тепри Пуйан Мирунпа пĕрле, айалалла уттарђĕ.

Ђылай вăхăт иртрĕ. Икĕ эрттелĕ те паçăрах куçран çухалђĕç. Икĕ эрттелĕ те малалла утаççĕ, хăйсем пруђак айккине тем тĕрлĕ тинкерсе пăхса пыраççĕ. Çук та çук! Йĕр ниçта та пăрăнса кĕни курăнмарĕ. Пуçтарăнђĕç каллех ĕлĕкхи вырăна.

— Ну, тупрăра? тесе ыйтат пĕр эрттелĕ тепринђен.

— Çук. Есĕр?

— Çук. Сехре çырминех çитрĕмĕр, ниçта йĕр пăрăннине курмарăмăр.

— Сехре çырми тăрăх кайса пăхмаллађĕ тата, теççĕ аптăранă йенне тепĕр эрттелтисем.

— Кам шуйтан пырса кĕрет унта ишĕлекен çырма тĕпне, теççĕ лешсем.

— Ара, çырми тĕпне мар, çерем тăрăх кайса çырма пуçĕнђен çавăрăнса кайма пултарнă вăл, тет Лутра Михала.

— Кайĕ унта вăрру. Епĕ унта вунă тенкĕ парсан та каймастăп кĕлте тийенĕ урапапа — тўнсе кайрĕ урапу та, пĕтрĕн вара лашу мĕнĕпех çырма тĕпне анса кайсан.

Халăхсем ђылай шавларĕç, ђылай шухăшларĕç, анђах никам ним ăс пама пултараймарĕ.

— Мĕн тăвас?

— Киле кайас, тейе пуçларĕç.

Пуйан Мурун пуçĕнђе темле шухăш пур. Халăх шавланă май вăл Шăрт Михалипе Иван Павăлђа кăшт тĕртрĕ те, йĕр пăхнă пек пулса, халăхран пĕр-ик ђалăш айаккала илсе кайрĕ.

— Çак ĕçе Кăтра Иван Кĕпĕрйанĕ тунă, терĕ вăл шăппăн.

— Ара унăн малти урапи шинлă мар-çке, терĕ Иван Павăлђă тĕлĕнсех.

Шинлă мар та, пайан шинлă пултăр. Ман ăна „шинлаттармалли“ пур-ха, терĕ Мирун куçне хĕссе.

Иван Павăлҍă ҍасах сисрĕ, вăл Мирун Кĕпĕрйана тахçанах „шинлаттарасшăн“ çуннине ахаљ те пĕлет.

— Есĕ те, Михал Çтаппанҍă, терĕ Мирун Шăрт Михали йенне çавăрăнса, Сăхă Васлисене тĕрт – ан ўркенҍĕр пайан кăшкăрма.

Халăхсем пĕрерĕн-икшерĕн килелле ута пуçларĕç. Çĕмел вăррине тытайманни ҍылайĕшне кўрентерҍĕ. Хăшĕн-хăшĕн ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне те татрĕ.

— Ĕлĕк авал вăрă-хурах тытсан пăртак ал хĕрмеллĕх сыпкалаканҍҍĕ тетҍĕç ваттисем, тесе шуŷ туса илҍĕ Сăхă Васли.

— Авал вăррисем те тытăнаҍҍĕç, тет çа-ав, тесе йури култармаллах, хуйхăрнă пек пулса, йăвăррăн сывласа йаҍĕ Сурат Хĕветĕрĕ. Халăх ахăлтатса кулса йаҍĕ. Ахăртне пĕри те çĕмел вăррине тытса ҍышкăсене хĕртмеллĕх сыпас шухăша хирĕç пулман.

— Ан кайăр-ха, халăх! тесе кăшкăрса йаҍĕ сасартăках Пуйан Мирун халăх хыçĕнҍен.

— Мĕн тупрăн тата, Мирун Иванҍă? тесе харăсах ҍарăнҍĕç сынсем.

— Тупасси тупман та, çапах та ан васкăр-ха.

Халăх, Пуйан Мирун тем каласса виссе, ун патне пухăнса тăҍĕ.

— Ак, хайхи! терĕ Сурат Хĕветĕрĕ хăй умĕнҍе тăракан хĕрлĕ сухала тĕртсе, — тем каласан та ку ывăнса çўренине кура пĕр ҍетзĕртлĕх парасшăн.

— Кĕтсех тăр Пуйан Мирун парасса. Сан пекех ухмах тетĕни есĕ ăна?

— Ухмах мар та, çапах та, тен...

Халăх кайалла пухăнса çитсен, Пуйан Мирун çапла сăмах пуçларĕ:

— Çак ĕçе, никам та мар, хамăр йалсемех тунă.

Хамӑр йалсем тенӗрен, кашни пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илҭӗ: те хӑйсем хушшинҭе тӑракан вӑрра паллас тесе, те хӑйсене вӑрӑ тесе кӑтартасран хӑраса.

— Кам вӑрланӑ? тесе ыйтрӗ пӗри халӑх хушшинҭен.

— Кӑтра Иван Кӗпӗрйанӗ.

Ҫынсем куҫсене йарах ҭарса пӑрахрӗҫ — никам та ун ҫине шухӑшламан.

— Ҫавах, халӑх, ҫавах, тет Пуйан Мирун, кукӑр-макӑр ҭупакан сулахай кайри кустӑрма камӑн пултӑр Мӑн-Кушилре? — Кӗпӗрйанӑн.

Мирун йал хушшинҭи сулахай кайри кустӑрмасене сӑнани ҭылайӗшне тӗлӗнтерсех пӑрахрӗ.

— Ах, шуйтан шампа хырӑмӗ, — сулахай-сылтӑм кустӑрмасене те сӑнатӑ, мур илесшӗ! Хаҭ те хамӑн ҭалӑш тукӑнли сулахайра мар — вӑрӑ туса хуратӑҭӗ вӗт ку мур, тесе ҫын куриҭҭен хӑвӑрт сӑхсӑхса илҭӗ Лутра Михала.

— Ҭӑнах та кам мурӗ асӑрхатӑ ӑна, урапа майланӑ ҭухне те сулахайа лекет вӑл, те сылтӑма, мур асӑрхатӑ-и ӑна, тесе шухӑшларӗҫ ыттисем те Лутра Михалапа пӗр вӑхӑтрах.

— Ара, унӑн малти урапи шинсӑр-ҫке, терӗ Пуйан Мируна хирӗҫ Сӑхӑ Ваҫли.

Шӑрт Михали Сӑхӑ Ваҫлине тӗртрӗ. Шӑрт Михалине курсан Сӑхӑ ҭӗлхине шатах ҫыртрӗ. Ҫитменнине тата Шӑрҭӗ Ваҫли ури ҫине пусса Мируна хирӗҫ шавлама йураманнине систерҭӗ.

— Шинлӑ урапа тупасси йӑвӑр тетӗн-им вара есӗ, Ваҫҫа? терӗ Мирун Сӑхӑ ҫине сиввӗн пӑхса. Малти урапине вӑл пӗр каҫлӑха такамран та тупма пултаратӑ. Ес асӑрхаман-им унӑн Малти-Касри йыснӑшӗн тӑрантас урапине? Йыснӑшне епӗр пӗлетпӗр вӗт мӗнле ҫынне, тет Мирун.

Халӑх Сӑхӑ Ваçли мӗн каласса кӗтет. Анҫах Сӑхӑн хирӗç каласси-мӗнӗ пулмарӗ. — Кам мурӗ пӗлсе çиттӗр вӗсен йыснӑш-каҫкине, терӗ те, ҫарӑнҫӗ.

— Кӗпӗрйанах тунӑ ку ӗçе, терӗ Иван Павӑлҫӑ та халӑх варринелле тухса. — Мирун Иванҫӑ каласан епӗ хам та аса илтӗм, — Кӗпӗрйанӑн ҫӑнах та кайри урапи кукӑр-макӑр.

— Кукӑр-макӑррине ӑна ахаҫ ге пӗлетпӗр те...

— Пӗлетӗр пулсан мӗн кирлӗ тата сире? Урапи çавӑн вӗт.

— Çавӑн! тесе кӑшкӑраҭ халӑх хушшинҫен Шӑрт Михали.

— Урапи Кӗпӗрйанӑн пулсан, вӑрри кам пултӑр?

— Кӗпӗрйанах, Кӗпӗрйанах, тесе кӑшкӑраҭ каллех Шӑрт Михали.

— Кӗпӗрйанах, Кӗпӗрйанах! теççӗ Шӑрт Михали çумӗнҫе тӑраканнисем те иккӗн-виççӗн.

Халӑх кӗрлеме тытӑнҫӗ. Ҫылайӗшӗ Кӗпӗрйана вӑрӑ тунипе нийепле те килӗшесшӗн мар.—Халиҫҫен ӑна вӑрӑпа тытман, теççӗ.

— Тытман... тытсан калаçса та тӑмастпӑр.

— Çапах та вӑрӑ тытассин хӑйӗн саккунӗ пур...

— Ес-им вара уншӑн саккун? Ес кӑларатӑна кӗлте вӑррине сыхламалли саккун, йе есӗ камне пӗлместпӗр тетне вара?

Пуйан Мирунсемпе вӗсен йаттисем халӑха тулама тытӑнҫӗç. Паçӑр кирлӗ вӑхӑтра ҫӗлхине шатах çыртнӑ Сӑхӑ Ваçли ним пакки-ҫиккине пӗлмесӗр кӑшкӑраҭ: Аҭӑр, халӑх, Кӗпӗрйан урапине кайса пӑхар, тет.

— Аҭӑр, теççӗ ыттисем те.

— Аҭӑр... Аҭӑр!

Кӗпӗрленсе кайрӗç.

*
* *

Кĕпĕрйан Мăн-Кушилре ытти килхуçисем хушшинђе ни пурлăхĕпе, ни хăйĕн халăх çинђи йађĕпе халиђђен ниçтан та уйрăм паллă çын пулса тăман. Йалçыннисем ун çинђен калаçас-мĕн пулсан та:

— Шалккă мĕскĕне, çамрăклах асапланса пурăнма тиврĕ анђах, теççĕ.

Кĕпĕрйан çинђен урăх калаçма, ђăнах та, ним тĕл те çук. Пурлăх, пуйанлăх тĕлĕшпе вăл йал хушшинђе никама та хапсăнтарас çук. Кĕпĕрйанăнни пек ђĕренђе витнĕ кивĕ пӳрт, вите, ђалăшса кайнă ђĕриклетекен хапха — ун пек хуралт Мăн-Кушил çиннисемшĕн пит ăмсанмаллах пуйанлăх мар. Мăн-Кушил аслă урамне Кĕпĕрйан хуралђĕ хăй те илем кӳрес шухăша тахçанах пăрахнă. Илемлетме мар, хăйĕн ватă, тĕксĕм сăнĕпе аслă урамра салхун ларни урам ђапне те пăса пуçларĕ.

Мăн-Кушил аслă урамĕ, авалхи пĕрген пĕр урам, йулашки çулсенђе ђылай улшăнђĕ. Авалхи çынсенђен йулнă кив хуралтсем пыра-киле сахаллана пуçларĕç. Вĕсен вырăнне ăçта-çитнĕ унта çĕнĕ хуралтсем аталана-аталана ларма тытăнђĕç. Çĕнĕ пӳртсем хушшинђе шатровăйсем те кăшт-кашт курăнкала пуçларĕç. Çурта пек тӳрĕ те, сапсарă пĕренерен пуранă пӳртсем пуçĕсене каçăртса лараççĕ. Пысăк ђӳређисем хĕвел çинђе йăлтăртатса иртен-çӳрене хавассăн пăхса ăсатса йараççĕ. Йал улшăнат, кивĕ тумтирне пăрахса çĕнĕ тăхăнат. Пĕр Кĕпĕрйанăн ђĕренђе витнĕ пӳрђĕ анђах хăйĕн симĕсĕн-кăвакăн курăнакан икĕ пĕђĕк хĕсĕк куçĕсемпе тинкерсе пăхса, урам илемне пăсса ларат.

— Ех, анне, хăçан çынсем пек çĕнĕ хуралт çавăрăпăрши? тет Кĕпĕрйан амăшне.

— Ан хуйхăрха, Кĕпĕрйан, тет амăшĕ, сывлăху пулсан есĕ те ҫын шутне кĕрĕн. Тавта-пуҫ турра, хађ лаша туйантăмăр, анасене текех ҫыңна памастпăр — малашне те ҫаплах пырсан, тен, ҫуртйĕрне те ҫавăрăпăр-ха, тет амăшĕ Кĕпĕрйана пусарса.

Анђах Кĕпĕрйан амăшĕ хăй те тем ђухлех хуйхăрат̆. Хуйхăрмасăр, — аллă ҫула ҫитиђђенех карђăк пулса ларнă та, ăҫтан унта савăнмалла шухăшсем пулђђăр? Кĕпĕрйан амăшĕ вăйпитти ђухне йăвăр ĕҫпе ҫĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Шăмшаккисем ыратнипе хăй пĕрмайах йăнăшат̆.

— Ытла ђас ватăлтăн-ҫке ес, анне, тесе шеллет Кĕпĕрйан хăш ђухне амăшне.

— Ватăлтăм ҫав, ывăлăм, ватăлтăм, аҫу патаккине ҫисех ватăлтăм, тет амăшĕ сĕтел патне пырса ларса.

Кĕпĕрйанăн йăваш куҫĕсем амăш ҫине ăшшăн пăхаҫҫĕ. Ђăнах та Кĕпĕрйан амăшĕ упăшкинђен нумай ђăтнă пулмалла. Ав, халĕ те пĕркеленсе пĕтнĕ пит ҫăмартисем ҫинђе ĕмĕрлĕхе йулнă пысăк-пысăк паллăсем кăн-кăвак кăвакарса тăраҫҫĕ. Апат ҫиме ларсан та сылтăм аллипе кашăк тытаймаст̆, сулахаййипе анђах сыпкалат̆.

— Ҫав Иван пиркийех ђăлах пулса йултăм ҫав, — вут пуленкипе ҫапса хулпуҫҫи тĕпекине ҫĕмĕрсе пăрахрĕ вĕт асар писерскер.

Кĕпĕрйан амăшĕ мĕншĕн ђăлах пулнине тахҫанах пĕлет. Анђах амăшĕн сăмахне татас мар тесе; — мĕншĕн? тесе ыйтат̆.

— Мĕншĕнне кам пĕлет унне. Пĕрмайах ĕҫетђĕ, пĕрмайах хĕнетђĕ. Пуйан Мирун патĕнђен туха пĕлместђĕ, киле таврăнсан пушшех те урса кайат̆ђĕ. Ҫав Пуйан Мирунах пĕтерђĕ ҫав аҫуна, тет амăшĕ.

Пуйан Мирун тесен, Кĕпĕрйан, калаҫса ларнă ҫĕртех, ҫилли тулса килнипе, хĕрелсе кайрĕ. Пиҫнĕ панулми пек

хĕп-хĕрлĕ икĕ пит çăмарти çинђе темскер кăлт-калт турткаланса илђĕ.

Кĕпĕрйан Пуйан Мирун унăн ашшĕпе амăшне мĕнмĕн „ырлăх“ тунине лайăх пĕлет. Ашшĕ Пуйан Мирун патне ђас-ђасах çӱренине, унăн патĕнђен пĕрмайах ӳсĕр таврăнса амăшĕпе хирĕлнине Кĕпĕрйан, ун ђухне çамрăк пулнă пулсан та, лайăх астăват. Ĕлĕкхине астуни кăна мар, Пуйан Мирун халђ те Кĕпĕрйана ђас-ђасах хăй çинђен аса илтерет. Ĕлĕк ђухне ашшĕне çаратса кĕлмĕçе хăварни çитмен, халђ те вăл Кĕпĕрйанпа амăш ђĕрисен тăпсинђех ларат.

Кĕпĕрйан ашшĕпе амăшĕ, Кăтра Иванпа Алтаҫи, ĕлĕк Мăн-Кушилре аванах пурăннă, тет. Вĕсем иккĕшĕ те кăмăллă, ĕçлеме йуратакан çынсем пулнă. Çурт-йĕрĕнђе вĕсен хăйсене пурăнмаллăх тупра пулнă. Тырри-пуллинђен вĕсем нихăçан та аптăраман.

— Тавтапуç турра — халиђђен пăтăн илсе çисе курман, тетђĕ Кăтра Иван арăмĕпе калаçса ларнă ђухне.

Анђах пурнăç урапи пĕрмайах тикĕс пымасҫ: тем тĕрлĕ аван пурăннă çĕртенех хăш ђухне кĕтмен йапаласем килсе çапăнаççĕ. Пĕр çуркунне, шăп акана тухас тенĕ ђухне, Иванăн лаши ђирлерĕ. Ђирлерĕ те ик-виç кунтан тăсăлса та выртрĕ. Иванпа арăмĕ тем пек хыпса ӳкрĕç.

— Мĕн тăвас? теççĕ иккĕшĕ те пĕççисене, шарт çапса.

— Мĕн тăвас тетĕн, çĕнĕ лаша илес пулаҫ — лашасăр пурнăç — пурнăç мар.

Пӳлмери тырринђен вăрлăх валђи уйăрса хураççĕ те, йулашки йулнине сутса пĕр хăла лаша илсе йараççĕ. Лаши ђиперскерехђĕ, пысăках та мар та, ђăп-ђăмăрђĕ хăй. Çула тухсан йурттипе, ака сухара турттипе савăнта-

ратђĕ. Кăтра Иван хăй те савăннăђĕ, ку лаша хăйĕн хакне татĕ-ха, тесе тăратђĕ.

Анђах телей пулмарĕ: пĕр каçхине, Питрав умĕн, хăла лашана выртмаран вăрласа кайрĕç.

Ку инкек Иванпа арăмне йăлтах хуçса кайрĕ. Кăтра Иван тем пек ăшаланса ÿкрĕ. Лашана шырама тытăнђĕ. Йалта лаша таврашĕ çухалсан хăшне-хăшне Пуйан Мирун тупса параканђĕ—унăн снаккум нумай—уретникĕ те, вăррисем те. Анђах хаљхинђе Иван лашине тупаймарĕ. Аптăранă йенне Иван Сăрнел тутарĕсене ђылайĕшне ĕçтерсе пăхрĕ, анђах вĕсем те нихăш те лашана тупса параймарĕç. Лаша, шыва путнă пекех, пађах çухалђĕ.

— Мĕн тăвас? теççĕ каллех Иванпа арăмĕ.

— Мĕн тăвас, тата тепĕр лаша илсе пăхас.

— Илессине илес те, анђах укçине ăçтан тупас?

Иванпа арăмĕ темĕн тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕç, анђах ниçтан та лаша илмеллĕх укçа тупас меслет тупаймарĕç. Йулашкинђен Иван Пуйан Мируна кайса пуççапас терĕ—тен лаша илмеллĕх укçа памĕ-и?

Пĕр каçхине Кăтра Инан Мирун патне уттарђĕ. Авалтан йулнă йăлана астуса кăсйине пĕр пулштух ерех ђикрĕ.

Пуйан Мирун Ивана питĕ хĕрхенсе калаçрĕ. Нушталлă çынна çемçе сăмахсемпе лăплантарђĕ, анђах Иван лаша туйанмалăх пулăшу ыйтма килнине пĕлсен, ăшаланă пăрça пекех хытса ларђĕ.

— Ей, Иван шăллăм, ăçтан пирĕн ун ђухлĕ укçа пултăр. Çук, çук, тупаймастăп тем ђул тархасласан та пулăшаймастăп, тет.

Иван ката патĕнђи хура пусри çурпилĕк çинђен асăнса илђĕ. Хамăн акса хăварасси пулмасть пуљ: лаша çук, тытса актарма хаклаларать...

— Лашасăр кансĕр çав, лаша илеймесен, акма мар, акнине те сутса йарăн, тет Мирун.

Иван ђĕнмест. Унăн пуçĕнђе йăвăр шухăшсем йăшăлтатаççĕ. Миruна пулăшĕ тесе шаннăђĕ, анђах вăл, нушталлă çынна пулăшас вырăнне, Иванăн акнă анисем çинђен калаçа пуçларĕ.

— Тархашшăн, хура пусри çурпилĕкпе килĕш, тесе тархаслаŤ Иван.

— Çук, пултараймастăп — хама укçа кирлĕ. Навус анине парсан мĕн пулĕ, тесе лараŤ Мирун.

Нимĕн те тăваймăн. Пулштуха ĕçсе пĕтерне çĕре Иванпа Мирун килĕшрĕç. Мирун Ивана кĕркуннеђђен 30 тенкĕ параŤ, пулăшу панăшăн Иванăн навус ани çинђи ырашне çуррине вырса илет. Иван кунпа та савăнђĕ, савăннипе Миruна ўксех пуççапрĕ.

Çакăнтан вара Кăтра Иван Мирун аллине кĕрсе ўкрĕ. Малтанлăха вăл, Мирун укçипе лаша илсен, питĕ савăнђĕ. Тавтапуç, терĕç арăмĕпе иккĕшĕ те, лаша тĕсĕ курасса сунманђĕ, терĕç. Анђах Мирун ыраш анине вырса илсен, Иванпа арăмĕн ђунĕсем хурланђĕç. Мĕн тăвас тетĕн, килĕшĕвĕ çапла. Иван çĕнĕ лаша хакне кăларас тесе ĕçлеме тытăнђĕ. Стансана, хулана лава çўрерĕ, кĕрĕшсе пĕр-икĕ ана сухаласа, акса пађĕ, тата çавăн пек ытти ĕççем те ђылайах ĕçлерĕ, анђах, темĕн ђухлĕ асаплансан та, 30 тенкĕ мар, 30 пус та Миruна параймарĕ. Ĕçлесе тупнă укçа хăйсене çиме, тата лашине тăрантарма анђах çитсе пыђĕ.

Кĕркунне йенне кайсан Мирун парăм çинђен астутара пуçларĕ. Иван каланă вахăтра парайманнине кура, лашине туртса илессипе хăрата пуçларĕ. Иван каллех кăсйине пулштух ђикрĕ те Мирун патне, парăма çуркуннеђђен тăсма, пуççапма кайрĕ.

— Мирун Иванђă, тет Иван каллех пуççапса, — тархашшăн çуркуннеђђен ђăт, хăвах пĕлетĕн: çулла укçа тупма пулмарĕ, тата, çитменнине, кăçал тырри те сахалтарах пулђĕ, хĕле кĕрсен ĕç нумайтарах тупăнаканђђĕ, çуркуннене хатĕрлĕп, тет.

Мирун çуркуннене хăварђĕ, анђах, хăйĕн ырă кăмăлне кура, Ивана та кăшт-кашт килсе пулăшма ђĕнђĕ. Çакăнтан вара Иван ђас-ђасах Мирун патне пулăшма çӳре пуçларĕ. Хăш ђухне хăйĕн капланса килне ĕçне пăрахсах Мирун патне тухса утаťђĕ. Мĕн тăвас тетĕн, ђĕнтерет вĕт, каймасан йурамасť. Иван арăмĕ, Кĕпĕрйан амăшĕ, вара пĕтĕм килти ĕçсене хăй туса тăраťђĕ: выђăхне пăхаťђĕ, йашка-çăкăр пĕçеретђĕ, хăш ђухне вăрман касма та хăйех кайаťђĕ.

— Ех, хăçан ку Мирунтан хăтăлăпăр-ши, тесе макăраť-ђĕ вара хăш ђухне ытла та ђунĕ тарăхса çитсен.

Анђах Мирунтан хăтăласси пулмарĕ. Парăмĕ кĕркуннерен çуркуннене, çуркуннерен кĕркуннене йулса пыђĕ, çитменнине тата Иванĕ те, ђунĕ тарăхнипех пулĕ çав, ĕçе пуçларĕ. Пĕр ĕçме тытăнсан вара парăм татасси тата та шала кĕрсе кайрĕ.

Иван ђас-ђасах киле хĕрĕнкĕ таврăна пуçларĕ.

— Ах, Иван ђунăм, каллех ĕçнĕ-çке есĕ, ма пăртак шухăшламастăн парăма татас тесе? тетђĕ вара арăмĕ.

— Ан шавла тархашшăн, сансăр пуçне те кунта ђĕре çунаť, тесе хураťђĕ Иван арăмне.

Иван пурăна киле тăтăшах ĕçе пуçларĕ. Ӳсĕрĕлсе килсен, çиллине шăнараймасăр, арăмĕпе хирлешме тытăнаťђĕ. Утне тивмен туртине, теççĕ ваттисем. Çавăн пекех Иван та, Мируна тарăхса, арăмне хĕне пуçларĕ, Кĕпĕрйан амăшĕн пурнăçĕ пĕтĕмпех хĕсĕнсе çитрĕ. Иван ерех ĕçмесĕр сахал кун иртеретђĕ, ĕçсе таврăнсан хĕне-

месĕр хăвармастђĕ. Çапла хирĕлсе-çапăçса пурăннă хушăрах пĕр вăхăтра Иван хытă ђирлесе пăрахрĕ те вилсе те кайрĕ. Арăмĕ вара вунпиллĕке кайнă ывăл ађипе, Кĕперйанпа, тăрса йулђĕ.

Мĕн тăвас? Кĕпĕрйан çамрăк, хăй хĕнесе пĕтернĕскер ĕçлеме пултарајмасĭ. Çитменнине тата Иван вилсен Мирун та парăма текех тăсасшăн пулмарĕ. Ирĕксĕрех вара Иван арăмĕн лашине сутса парăма татмалла пулђĕ.

— Мĕн пулсан пулаĭ, лашана сутас та Мируntan хăтăлас, çут тĕнђере выçă вилмĕпĕр-ха, терĕ.

Лашана сутса йулашки йулнă парăма татрĕç. Мирун — вунпилĕк тенкĕ йулнă, терĕ. Вунпилĕк тенкĕ пађĕç. Кам шутланă унăнне? Иван пулăшмалла кайа-кайа ĕçленине, Иван ўсĕрпе килтен Мирун патне тем те пĕр йапала сĕтĕрнине, ыраш пуссинђи анана вырса илнине шутласан, тен, Кăтра Иван парăмĕ пилĕк хут та тăтăлнă пулĕ.

— Ан тив ĕнтĕ, пуйтăр пирĕн куççулĕпе, терĕç Кĕпĕрйанпа амăшĕ.

Мируntan хăтăлђĕç. Анђах пурнăç тата йăвăрланса кайрĕ. Çĕрĕсене малтанлăха çурмалла акмалла парса пыђĕç, кайарахпа икĕ йађĕпех тара пара пуçларĕç. Пурнăç йăлтах пĕтсе çитрĕ, çиме çăкăрĕ çитейми пулђĕ. Килне хупса вара йут йала ыйткалама та кайа пуçларĕç. Çапла вара мĕн тĕрлĕ тĕрĕс-тĕкел пурнакан килйыш çука тăрса йулђĕ. Ђип-ђиперех хăй пурнăçĕпе пурăнакан çуртйĕр те тĕтĕм сўннĕ пекех пĕр састўсĕр шăп пулса ларђĕ.

Кĕпĕрйанпа амăшĕ çак вăхăта ђас-ђасах аса илеççĕ. Аса илсен вĕсем, йепле выçса вилмен тесе, шалтах тĕлĕнсе кайаççĕ.

— Йураĭ, есĕ ўссе çитĕнтĕн, тет амăшĕ, есĕ пулман пулсан епĕ тахçанах выçă вилмелле, хăй ђун хавалĕпе

сăхсăхса илет. Тавтапуç турра, — пăрахмарĕ, каллех хамăра хамăр пурăнмаллăх пурнăç паҕĕ, тет.

— Турри те пирĕн çине питех пăхасшăн мар çав, анне, тет Кĕпĕрйанĕ, вăл пурринех парать; ав, пăхха Пуйан Мирунăн мĕн-мĕн çук, тем те пур, çапах та çитмест — татах пуйас тесе çунать. Пирĕн пекки пур, тем пек асаплансан та хăйĕнҕен ытлашши тупаймасть.

— Пуйан Мирун-и? тет амăшĕ, Мируна ăна турă мар. шуйтан пуйтарать. Шуйтан пулăшать ăна çын пурлăхне вăрласа пуйма. Ех, çĕрçăташшĕ, тет амăш тарăхса.

Кĕпĕрйанпа амăшĕ Мируна ылханман кун сахал иртет. Кирек мĕн çинҕен калаçас пулсан та, сăмах Мирун çине кĕрсе кайатех. Çак иртнĕ кĕркуннерен тата пушшех те Кĕпĕрйанпа амăшĕ Мирун йатне асăна пуçларĕç, пушшех те вĕсен, Мирун тесен, ҕĕрисем кăрт-кăрт тăва пуçларĕç.

— Татах пĕтересшĕн ĕнтĕ пире, татах çийесшĕн пирĕн пуçа, теççĕ иккĕшĕ те Мирун çинҕен калаçма тытăнсан.

Пуйан Мирун ҕылайтанпа Мăн-Кушелре трахтир уçасшăн çунать. Ун шухăшĕпе Мăн-Кушилре трахтир пит усăллă пулмалла: йалта ернере пĕрре пасар пулать, кашни праçник кунĕ Мăн-Кушил ҕиркӳне прихут çынни пухăнать, çитменнине тата Сăрнел тутарĕсем ҕапа тухнă май, ĕçкĕ питĕ кайа пуçларĕ.

— Ех, пĕр кĕрлеттерсе кăна йарăттăм трахтир уçса, тет Мирун. — Вырăнĕ çукки ҕарса тăрать, вырăнĕ пулсан ыранах хулана права илме кайăттăм, тет.

Пуйан Мирун пуçне çак шухăш ҕылайтанпа çĕмĕрет, анҕах пасар çывăхĕнҕе пушă вырăн çукки ĕçе ҕарса тăрать.

Мĕн тăвас? Акă мĕн тăвас. Пасар çывăхĕнҕех Кăтра Иван Кĕпĕрйанĕн хăрăк-харăк хуралҕĕ аслă урам тĕсне

пăсса лараť. Кĕпĕрйана унта ларса ним усси те çук — суту-илӳ тумасť, — йарас ăна хамăн йал вĕçĕнђи çĕнĕ плант çине.

Мирун, ĕçе ђылайа йамасăрах, пĕр каçхине Кĕпĕрйана тĕл пулса хăй шухăшне пĕлтерет. Анђах Кĕпĕрйан шарт та март — ним тулăка та кĕресшĕн мар.

Епĕ сана пĕтĕм хуралту-мĕну йăлтах хам куçарса парăп. Пĕр пус та санран расхут тухас çук.

— Манăн капла та расхут çук, мĕншĕн епĕ тата санпа çыхланам.

— Пӳртне сиплесе парăп, пӳртӳ ишĕлсе анаť вĕт, Кĕпĕрйан.

— Спаççипă ырă сăмахушăн, анђах мана санăн пулăшни ђĕрне тăршшĕ те кирлĕ мар. Аттене те есĕ пулăшу парсах çука йертрĕн. Çыхланмастăп санпа, Мирун Иванђă.

— Асту, Кĕпĕрйан, кайран асăнăн та — пулмĕ, тет Мирун.

— Ху пăртак астăварах хăтлан, тет Кĕпĕрйан Мируна. Çакăн йевĕрлĕ Кĕпĕрйанпа Пуйан Мирун кĕркуннерен вара темиçе хутђен те калаçса пăхрĕç, анђах нийепле те килĕшеймерĕç. Кĕпĕрйан Мируна парăнасшăн мар. Малтанлăха ăна Мирун тархасласа ыйтни, тен, кăмăлне те кайрĕи, — ара çав тĕрлĕ курайман пуйан тăшмана пăртак та пулсан тавăрмасăр ăçтан ђăтан? Анђах кайарахпа, Мирун хăраткала пуçласан, Кĕпĕрйан шиклене пуçларĕ — кам пĕлет ăна? Вăл тем те тума пултарĕ. Йал çинђе, вĕт, вăл хуçа — мĕн тăвас тет, çавна тăваť.

Çавăнпа та Кĕпĕрйанпа амăшĕ ђас-ђасах Мирун йатне асăна пуçларĕç.

— Турă сиртĕрех çав шуйтанран тесе, сăхсăхса илет Кĕпĕрйан амăшĕ хăш ђухне.

* * *

Пайан, праçник кунĕ, Кĕпĕрйанпа амăшĕ Малти Касри ашшĕпе пĕр тăван аппăшĕ патне кайса килесшĕн. Кĕпĕрйан, ирхине тăрсан, лашине пăтратса паҫĕ те, урапине сĕрме тикĕт илме кайрĕ. Шăрт Михали лавки патĕнҫе çынсем калаçкаласа тăраççĕ. Кĕпĕрйан, мĕн çинҫен калаçаççĕ-ха кусем тесе, вĕсем патне пырса тăҫĕ.

— Ес ма каймарăн тата? тесе ыйтаť пĕри Кĕпĕрйантан.

— Ăçта?

— Хире çĕмел вăрри шырама.

— Мĕнле çĕмел вăрри?

— Ара, ес илтмен-и? Пуйан Мирун çĕмелне вăрласа кайнă тет кĕçĕр каçхине, тесе пĕлтереççĕ Кĕпĕрйана.

— Хаљ тин анҫах халăх пухса йĕр тăрăх кайрĕç, теççĕ.

— Ей, ун вăрласан та пĕтес çук-çке.

— Çапла та, çапах шалкă мар-и хăйĕн хăйне.

— Хăйĕн шалкă, çынăн шалкă мар — мĕн ҫул çын макăртнă пуљ вăл хăй вăрăсемпе çыхланса.

— Вăл çапли çапла та, çапах та... теççĕ çынсем çаврăнкаласа пăхса.

Кĕпĕрйан тикĕт илсе таврăнҫĕ, урапине сĕрҫĕ, кил картинҫи ĕçсене пуçтаркаларĕ те, анкартине тухса тăрланайман капанне улăм витме тытăнҫĕ — кам пĕлет, тен, çăмăр пулсан капана ислентерсе пăрахĕ тата, терĕ. Капанне витсе пĕтернĕ çĕре кăнтăрла та çывхарса киле пуçларĕ. Ĕçсене пĕтерсен Кĕпĕрйан пўрте кĕҫĕ. Амăшĕ йашка хатĕрленĕ. Апат çиме ларҫĕç.

— Анне, кĕçĕр каçхине Пуйан Мирун çĕмелне вăрласа кайнă тет, тет Кĕпĕрйан.

— Вăраннe вăрласа та пĕтерес çук, — тет амăшĕ: — пĕр

çĕмел çухалнă вырăнне ăна пайанах Сĕрнел тутарĕсем вунă çĕмел тупса кӳрсе параççĕ.

— Анђах пĕр çĕмелшĕн те вăл тем те пĕр кăшкăрса-ахăрса пĕтрĕ тет, халăх пуçтарса йĕр шырама карĕ, тет.

— Ей, намăссăр, кĕççе пит! Халăхран та вăтанма пĕлмест вĕт, хăй патĕнђе вăрă-хурах татăлмасť, хăй пĕр çĕмелшĕн праçник кун халăха ĕшентерсе çӳретет, тет карђăк тарăхса.

Çапла каласса ларнă çĕрте Кĕпĕрйан хăлхине халăх шавланă сăсă илтĕнсе кайрĕ. Кĕпĕрйан урам йенђи ђӳређине уçса урамалла уртăнса пăхрĕ.

Анаткас йенђен халăх кĕпĕрленсе килет. Халăх пуçĕнђе малта Пуйан Мирун аллинђи туйине йăлт-йалт выљатса пыраť. Ыттисем хыçалтан шавласа, калаçса пыраççĕ.

— Ăçта кайаççĕ? тесе ыйтрĕ Кĕпĕрйан халăх йенђен ђупса килекен пĕђĕкрех ађаран.

— Тарса пытан ђасрах, Кĕпĕрйан, сан патна килеççĕ, терĕ ађа васкаса.

— Мĕн тума?

— Çĕмеле есĕ вăрланă, теççĕ.

Кĕпĕрйан тем тĕрлĕ хараса ӳкрĕ. Хăранипе вырăнтан та тапранаймасť.

— Тар ђасрах, тар, ак çитеççĕ вĕт, — тем туса пăрахĕç, тет каллех ађа.

Çав вăхăтрах халăх та Кĕпĕрйан патне çите пуçларĕ.

— Ав, вăл ђӳређерен пăхса выртаť, тесе кăшкăрса йађĕ тискер сассипе Сăхă Ваçли: — Тытăр ăна! тытăр!

— Тытăр, ан тартăр!

Халăх кĕпĕрленсе ђупса кĕрсе кайрĕ Кĕпĕрйан картишне. Кĕпĕрйан ђӳређине хупрĕ те хăранипе ниçта кайса кĕреймесĕр амăш çумне пырса йăпшăнса ларђĕ.

— Ах, ађам, мĕн пулђĕ? тет амăшĕ.

— Анне, пĕтрĕмĕр, халăх мана, кĕлте вăрланă тесе хĕнеме килет.

Амăшĕ, ку сăмахсене илтсенех, ăнсăр пулса йăванса кайрĕ!

Пӳрте ђăн малтан Пуйан Мирунпа Иван Павăлђă кĕђĕç. Пуйан Мирун Кĕпĕрйана курсанах кăшкăрса пăрахрĕ.

— А, йăтă, кĕлте вăрлама-и?

Кĕпĕрйан йенне аллинђи тупăлха туйине сулса йађĕ. Анђах Кĕпĕрйан сулмаклă туйине вăхăтра йарса тытса, Мирун аллинђен туртса илђĕ.

— Мĕн кирлĕ сире? терĕ Кĕпĕрйан ђĕтрекен сасăпа.

— Акă мĕн кирлĕ! терĕ те Иван Павăлђă Кĕпĕрйана сулахай хăлхи ђиккинђен мĕн пур вăйпа çатлаттарђĕ.

Кĕперйан пăрăнса-пăрăнса кайрĕ, урлă сак çине амăшпе йунашар тăсăлса выртрĕ.

— Е-е-е, ђенђешке, кĕлте вăрлама ăста, патаккине çийесшĕн мар... çап ăна тата лайăхрах, тет Мирун.

Иван Павăлђăпа Шăрт Михали тата пĕр иккĕ тăхăнтарса илђĕç. Кĕпĕрйан сак çинђен тăнă май, пуçне çĕклерĕ. Çав вăхăтрах Мирун Кĕпĕрйана çӳçрен çăлса тытрĕ те, урайне тăсса пăрахрĕ. Кĕпĕрйан Мирун çине тем пек йăлăнса пăхаť.

— Ма хĕнеттерен, Мирун Иванђă?.. Еп вăрламан вĕт сан кĕлтӳне...

Кĕпĕрйан каласа пĕтериђђенех Мирун атă кĕллипе тăрс! тутарђĕ питĕнђен. Сăран атă кĕлли айĕнђе темĕскер лăђăртах турĕ.

— Илсе тухăр карташне, терĕ Мирун.

Пӳртрен сĕтĕрсе тухрĕç. Кĕпĕрйан пуçран çапнипе анкă-минкĕленсе кайнă. Сулахай хăлхинђен хĕп-хĕрлĕ йун йăпăртатса анаť. Пиђĕ-куçĕсем, ийĕе ђăмланă пек, ним йĕркесĕр пулса кайнă.

Кёрпёрйана курсан ђылайёшён кăмăл хуçăлђё. Ђёрене такам ђăмăртаса тытса хёстернё пек туйăнса кайрё.

— Ма çапатăр?.. тесе кăшкăрса йађё пёри ђунё ђăтайманнипе.

— Вёлерес тетрем? Ёлкёрёр, малтан урапине кайса пăхăр виçи ларат-и, лармаст-и. Тен вуçах вăл вăрламан, терёç ыттисем те.

Çав вăхăтрах Сăхă Ваçлипе Хăнђăр Петёр лупасайён-ђен Кёпёрйан урапине туртса кăларђёç.

— Ак, пăхăр, терё Сăхă халăх йенне кăшкăрса. Пăхăр, ак кукăр-макăр кайри урапине, çавах вёт. Мён виçсе аппаланса тăмалла тата?

Ђăнах та Кёпёрйанăн кайри урапи леш ана çинђи йёр майлах. Урапи çинђе те ыраш пёрђисем, пуђаххисем сапаланса выртаççё.

Халăх каллех кёрлеме тытăнђё.

— Ара, кайри урапа камăн кукăр-макăр пулма пултармё? Латнă, ес пуйан та — урапусем тёреклё, Кёпёрйан ес мар вёт — вăл тăлăх ађа, теççё хăшё-хăшё.

— Пуйан... пуйан, есёр пёрмайах пуйан тетёр. Санăннипе пуйн-им епё? тет Мирун.

— Пулнă та пулё, теççё хыçалтан хăшё.

Пуйансем халăх çине сурђăксене сирпёте пуçларёç. Вёсене кура вёсен шайккинђи карма çăварсем те ахăра пуçларёç.

Пуйан Мирун Кёпёрйан йенне тем пек тулхăрса ахăрса пырат.

— Çапăр ăна, хёнёр, халăхсем! тет.

Кёпёрйана каллех сăрса илеççё.

— Халăх! тет сасартăк хытă сасăпа Сурат Хёветёрё.— Тархашшăн ан хёнёр-ха, хёнеме кайран та ёлкёрёр, атăр малтан капанне кайса пăхар. Ёлёксенђе вăрра кёлтерен

пĕлетђĕç. Мирун Иванђă, сан кĕлтўсен çыххи мĕнле? тесе ыйтать.

— Куђĕ йенђен çыхнă, тет Мирун.

— А, Кĕпĕрйанăн тăрри йенђен, епĕ ăна хамăр ана çумĕнђе вырнă ђухне асăрханă, тет Сурат Хĕветĕрĕ.

— Пăхас капанне, теççĕ халăхсем.

— Пăхас!!!

Анкартине кайса 5—6 урапаллă капанне пăхаççĕ.

— Ађсемĕрсем, йăнăш пултăмăр — кĕлтине тăрри йенђен çыхнă, терĕç халăхсем харăсах.

— Вот, çапăр тесе кăшкăратăр, çапăр ĕнтĕ хаљ, тет Сурат Хĕветĕрĕ халăха ўкĕтлесе.

Пурте, хăйсенђен хăйсем вăтаннă пек пулса, капанран айаккарах пăрăна пуçларĕç. Иван Павăлђă та, халиђђен Кĕпĕрйана тарасран çатăртаттарса тытнăскер, аллисене лаштах йађĕ. Çынсем пĕрре Мирун çине, тепре Кĕпĕрйан çине пăхаççĕ. Кĕпĕрйана та ђун кĕнĕ пекех туйăнђĕ. Анђах пуйан мăшкăла йулмасть нихăçан та.

— Сўтсе пăхар пĕтĕм капанне, тесе кăшкăрса пăрахрĕ Мирун халăх çине çиленсе.

Капана сўтме тытăнђĕç. Туп-тулли сарă кĕлтесем вăљт та вăљт анђах сирпĕнеççĕ. Вăйпа ывăтса йанă май типĕ ыраш йĕтем çине шапăр тăкăнать.

— Ак, хайхи! тесе кăшкăрса йађĕ Сăхă Васли.

— Ак, хайхи! терĕç ыттисем те.

Ђăнах та пĕр пилĕк-ултă йĕр сўтсенех куђĕ йенђен çыхнă çыхăллă кĕлтесем сиксе тухрĕç.

А-а-а, терĕ Пуйан Мирун кутĕнђен çыхнă кĕлтесене курсан, ну, — çамрăк вăрă, ăçтан тийесе килтĕн ку кĕлтесене? Ну кала?..

Кĕпĕрйан пуçран çапса анкă-минкĕлентернĕскер, ним калама пĕлмест. Тутисене пăркаласа аран-аран:

— Кăна аппа ађисем пулăшмалла килсе вырса панăђђĕ, терĕ.

Ђăнах та пĕр кунхине Малти-касри аппăшĕн ађисем килсе Кĕпĕрйана пĕр ђĕрĕк вырса хăварнăђђĕ. Ăна йалçыннисем те ђылайĕшĕ пĕлеççĕ.

— Е-е-е! аппу ађисем-и? Çавсем, иккен, саншăн ман ана çине ытлашши çĕмелсем туса лартнă. Ак сана аппу ађисем... ак сана аппу ађисем...

Пуйан Мирун Кĕпĕрйана тулама тытăнђĕ. Пĕтĕм халăх çак тискер ĕçе пăхса ним тума пĕлмесĕр тăрат. Ђылайĕшĕ Кĕпĕрйана тем пек шеллесе тăраççĕ, ђылайĕшĕн Кĕпĕрйаншăн ђĕри ыратат, Кĕпĕрйана ђипер тăнă çĕртенех вăрă туса хуни тарăхтарат, анђах пурте пуйана хирĕç тухма хăраççĕ. Турă сиртĕр унпа çыхланасран, тем кăтартĕ тата тĕк тăнă çĕртенех, тесе тăраççĕ хăшĕ-хăшĕ.

Пуйан Мирун Кĕпĕрйана çапат те çапат. Çынсем пăхса тăнине кура хăйĕн шайккинђисене хĕнеме ђĕнет. Лешсем те Кĕпĕрйана çавăрса иле пуçларĕç. Анђах çав вăхăтрах сасартăк ђунĕ тўсейменнипе, халăх хушшинђен Лутра Михала сиксе тухрĕ. Сиксе тухрĕ те, Пуйан Мируна пĕрех тĕртсе йађĕ. Мирун хăйĕн тађка кўмĕрккипе йăванса кайрĕ. Халăх Лутра Михала Пуйан Мируна тĕртсе йанине кура, хăраса хытсах кайрĕ. — Йепле хăйрĕ ку çав тĕрлĕ куштана тĕртсе йăвантарма? Пурте, мĕн пулĕ-ха тесе, пăхса тăраççĕ.

— Сволăђ!.. терĕ Лутра Михала çинçе сасăпа йĕтем çинђе кĕрнеклĕ пĕççисене тăратса выртакан Мирун йеннелле сивĕ куçпа пăхса: — Йепле санăн ђĕлхў çавăрнат çак тăлăх ађана вăрă теме? Еп хам куçпа хам курнă унăн аппăш ађисем хура пус патĕнђи ђĕрĕкне вырса панине. Кĕлтесем те çавсемех, ăна та хамах курнă. А, есĕр тата,

ерех пиђикисем, выçӑ карланкӑсем, терӗ Лутра Михала Сӑхӑ Ваçлипе унӑн шайккисем çине пӑхса, — есӗр çак касмак вӑрӑ майлӑ пулса Кӗпӗрйантан ӗçесшӗн-им? Ех, йӑтӑсем, намӑса пӗлӗр пӑртак, таса çынна вӑрӑ теме!..

Халӑх пӗр ђӗнмесӗр ђар пӑхса тӗлӗнсе тӑраҭ.

Пуйан Мируна та кӗтмен çӗртен Михала сиксе тухса тӗртсе йӑвантарса йани питӗ тӗлӗнтерђӗ. Йепле пулђӗ-ха ку? Мируна халиђђен никам пӳрнепе тӗртмен, ӑна пурте Мирун Иванђӑ, Мирун Иванђӑ, тетђӗç, ак хаљ кӗтмен çӗртен пӗр кӗлмӗç Михала тӗртсе йӑвантарђӗ. Мирун, месерле кайса ӳкнӗскер, ӳпне çавӑрӑнса тӑват уран тӑђӗ. Михала çине кашкӑр пек пӑхаҭ. Хӗп-хӗрлӗ хӗрелсе кайнӑ куçӗсем сиксе тухас пек йӑлтӑртатса тӑраççӗ. Тата пӑртак çӗкленђӗ. Икӗ ђӑмӑрне темӗскер пек çатӑртаттарса ђӑмӑртарӗ. Карланкинђе темӗскер хӑрлата пуçларӗ.

— Е-е-е, есӗ-и?.. есӗ-и мана касмак вӑрӑ текенни? Михала кашкӑр йенне çавӑрӑнса тӑђӗ.

— Ну, терӗç халӑхсем хӑйсен ӑшӗнђе, мӗн те пулсан пулаҭ кунта, терӗç.

Ђӑнах та Пуйан Мирун, есӗ-и? тесе хуллен кушак пек йӑпшӑнса пыђӗ те, Михала çине пӗрех сикрӗ. Анђах Михала Мируна каллех кӑкӑрӗнђен кӑнлаттарса тӗртсе йађӗ. Çав вӑхӑтрах Мирун тепре сикрӗ те, Михалана çавӑрса илђӗ. Ак хайхи халӑх кӗтсе тӑни тинех çитрӗ. Пуйан Мирун йӑлтах урса кайрӗ. Çав вӑхӑтрах Михалана карланкӑсем те йарса илђӗç.

— А, вӑрӑ хутне кӗме-и? вӑрра хӑтарма-и?.. Михалана тӗпӗртеттереççӗ кӑна. Мӗскӗнӗ аран-аран вӗçерӗнсе тарђӗ. Урса кайнӑ куштансем Кӗпӗрйана тулама тытӑнђӗç.

Пӑхса тӑракан халӑх килелле шӑва пуçларӗ. Тем курса тӑрӑн нарастаранах, курман, илтмен, сывӑ пултӑр.

Хӑй шайккипе анђах йулђӗ Кӗпӗрйан анкартине Пуйан Мирун.

Хаљ тем тусгн та ӗнтӗ хӑйсен ирӗк!

* * *

Ҫуллахи вӑрӑм кун каҫ йеннеле сулӑнђӗ. Тӑвансем хурӑнташсем, праҫник йађӗпе, пӗр-пӗрин патне пуҫтарӑна пуҫларӗҫ. Вӑрӑ тытса хумханнӑ йал лӑплана пуҫларӗ. Урамсенђе ађа-пӑђасем хӑйсен вӑййине выљаҫҫӗ. Тӗлӗ-тӗлӗпе хапха умне ҫамрӑксем пуҫтарӑна-пуҫтарӑна лара пуҫларӗҫ. Йар уҫса пӑрахнӑ ђӳређесенђен хӑнасем шавласа калаҫни илтӗне пуҫларӗ.

Ђиркӳ праҫникӗ йал ҫине хӑй сӑнне ӳкерђӗ.

Пуйан Мирун килӗнђе те ӗҫкӗ хӗрсе ҫитет. Мирун пайан — те ҫухалнӑ ҫӗмелне тупнӑшӑн, те тата хӑйӗн йал ҫинђи хӑватне ђаплӑн кӑтартнӑ майпа — питӗ савӑнӑҫлӑ. Паҫӑр ҫиллипе сиксе тухас пек выљаса тӑракан ҫап-ҫаврашка куҫӗсем тађка пит ҫӑмартисем ҫинђе ҫуллӑн йӑлтӑртатса тӑраҫҫӗ. Ҫемҫе, мӑнтӑр аллисемпе хӑй пӗр-майах сухалне йакатать. Хӑнисемпе темтӗрлӗ ҫемҫе калаҫать.

— Ну, Мирун Иванђӑ, шар кӑтартрӗ сана пайан Кӗпӗрйан, теҫҫӗ хӑнисем.

— Ей, Кӗпӗрйан шар кӑтартнипе, тет Мирун ҫӑмӑл-лӑн. Кӗпӗрйан, мана мар, хӑйне хӑй кӑтартрӗ. Тавта пуҫ турра — турӑ панипе Кӗпӗрйан вађљи те пур-ха манӑн. Ӗҫӗр, ҫиййӗр, хӑнасем, тет Мирун. Хӑй ђетвӗрђӗпех йарса тытнӑ ҫуттине, ђей куркипе ӗҫтерсе ҫӳрет. Хӑнисем йанк та йанк йараҫҫӗ ерехе.

Ӗретрен ӗҫтерсе пынӑ май. Мирун кутник ҫинђе хӗсӗнсе ларакан Сӑхӑ Ваҫлине курах кайрӗ.

— Ес ма, Ваҫҫа, тӗпелерех иргместӗн, ирт, ирт маларах...

— Кунта та йурĕ-ха пире.

Мирун Ваççана умлă-хыçлă виç ђей курки тыттарђĕ. Ĕçме сĕннĕ май Ваççа аллине ђăмăртарĕ те, куçне хĕссе тулалла тухма хушрĕ.

— Ваççа, хăна лашисене кайса апат парха.

Ваççа пўртрен тухрĕ. Ун хыçĕнђен Мирун та майĕпен шурĕ.

— Ну, мĕнле, Ваççа? тесе ыйтрĕ Мирун Ваççана тĕттĕм лупасайĕнђе шыраса тупса.

— Мирун Иванђă, халăхсем тата ĕçкĕ ыйтаççĕ, тет Сăхă.

— Сурăхĕсене ĕçсе йатăрим?

— Паçăрах... лашине сутас терĕç те — илекен çук, тет Ваççа.

— Ме еппин тата 3 тенкĕ. Асту, Ваççа, лайăхрах ĕçтер. Мирун Ваççана виçĕ кĕмĕл кăларса тыттарђĕ. Ваççа кайма тытăнђĕ, анђах Мирун хулпуççинђен кăшт тытрĕ.

— Ан кайха, Ваççа.

— Мĕн тата?

Мирун Ваççа хăлхине хăйĕн çăварĕ патнех илсе пыђĕ.

— Каланă сăмаха ан ман — пайанхи пек аван кун урăх тупас çук есĕ, терĕ шăппăн.

Сăхă мĕнле сăмахне ђасах сисрĕ. Мирун Ваççана Кĕпĕрйан çуртне вут тĕртме хушаҭ. Ун çинђен вĕсем праçник умĕнех килĕшнĕ. Кĕпĕрйанà çунтарса йарсан, Пуйан Мирун ун вырăнне йышăнма нимех те мар, мĕншĕн тесен Кĕпĕрйанăн çуртйĕр çаврасси пулаҭ-и, пулмасҭ-и халĕ ђасах. Унђђен Мирун, Сăхă Ваççли пек карма çăварсене ĕçтерсе, Кĕпĕрйан вырăнне çавăрса илме те пултараҭ. Пĕр вырăн илсен вара Пуйан Мирун ĕмĕтленекен трахтир пулса та ларђĕ. Вот йепле тăваççĕ

ăна! Кĕпĕрйана вăрă тăвас шухăш та Пуйан Мирун пуçне çак сăлтавпа анђах кĕђĕ пайан. Вăрă тытсан халăх вăрăран ĕçет, ўсĕрлет. Халăх пакки-ђиккине пĕлмесĕр ĕçсе ўсĕрлсен, вут тухсан та, никам та тĕртнĕ тесе калас çук: пурте ўсĕрпе пулнă, теççĕ.

— Ну?.. терĕ Пуйан Мирун Сăхă ђĕнмесĕр тăнине кура, сăмаха тытатна, Ваççа?..

Сăхă ђĕнмест.

— Ну?..

— Йурĕ, Мирун Иванђă, ăна хамăр пĕлĕпĕр мĕнле тумаллине...

Сăхă Ваçли хăй ĕçне тума уттарђĕ.

* * *

Кĕпĕрйан килĕнђе тем тĕрлĕ ĕçкĕ пырат. Халăхсем хăшĕ ђерккепе, хăшĕ куркапа сăра, ерех ĕçеççĕ.

Кĕпĕрйанăн виçĕ сурăхне сутса пĕр самантрах ĕçсе йанă.

— Тата мĕне сутас? тесе кăшкăраççĕ.

— Лашине сутас!

Анђах лашине илекен пулмарĕ. Мĕн тăвас?—ĕçес килет. Нўхреппинђен, кĕлетĕнђен катка-пиђкисене çĕклесе тухрĕç.

— Кам илет? Аллăшар пус... хуť те хăшне ил!

Сутса йараççĕ. Татах ĕçеççĕ. Татах ураççĕ.

* * *

Хĕнесе çĕмĕрсе пĕтернĕ Кĕпĕрйан халăхсем анкартинђен тасалса пĕтсен те темĕнђен ăнсăр пулса выртрĕ. Пиђĕ-куçĕсем хăйĕн кăн-кăвак кăвакарса кайнă, пăхма та хăрушă. Кăкăрĕнђе йун кĕвĕлсе ларнă пирки сывлана

май хăр-хăр туса тăрат̆. Выртсан-выртсан тата вăрăмăҥ сывласа йарат̆.

Çуллахи хĕвел майĕпен шăва-шăвах лупас хыçне пытанса ларђĕ. Кĕпĕрйана айалтан сивĕ çапа пуçларĕ. Лупас мĕлки те шăва-шăва Кĕпĕрйан урлă каçса кайрĕ. Сулхăн ӳксен Кĕпĕрйан пăртак тăна кĕнĕ пек пулђĕ. Куçне уçса пăхрĕ.

Куç хупаххисем икерђĕ пек шыçăнса кайнă, туртăнса тăраççĕ. Пĕрмай пуçран çапнипе пуç ђашки тем пек ыратат̆.

— Ах, тесе вăрăмăн сывласа йађĕ.

— Пăрахса кайнă... Пĕђђенех хăварнă... Ей, турă, мĕншĕн çав тĕрлĕ çын мăшкăлĕ пултăм-ши? тесе ађа пек уласа йĕрсе йађĕ. — Ма пĕреххутђен вĕлерсех пăрахмарĕçши?..

Тĕттĕмлене пуçларĕ. Йал хушшинђе ађа-пăђасем, хĕрсем, кађђăсем шуйăхни илтĕнет. Йал вĕçĕнђе, турикасра, хут купăс нăйăклатат̆. Кӳрĕшĕре хăнасем йурлани йанах илтĕнет. Кĕпĕрйан карташĕнђе ӳсĕр çынсем, карма çăварсем шавлаççĕ.

— Сутас лашине! тесе кăшкăрат̆ пĕри. Сутас!..

— Пĕтереç ĕнтĕ, пĕтĕмпех çутса ĕçсе йараççĕ антăхнă карланкăсем, тесе шухăшласа выртат̆ Кĕпĕрйан.

Сивĕ пула пуçларĕ. Шыçса кайнă çан-çурăм сивĕпе кăлт-кăлт туртăнкала пуçларĕ. Кĕпĕрйан тăват уран упаленсе пырса кĕлтесем хушшине кĕрсе выртрĕ.

Лупас хыçне такам майĕпен йăпшăнса тухрĕ. Тухрĕ те, ниçта кайма аптранă пек ђаранса тађĕ. Кĕпĕрйан, паллас тесе, тинкерсе пăхат̆, анђах тĕттĕм çĕрте, шыçăнса кайнă куçĕсене тем пек ђармакласан та, палласа илме хĕн.

— Анне! тере Кĕпĕрйан майĕпе.

Ҫын мӗлки, темле сасӑ илтӗннӗрен, пӗшкӗнсе ларђӗ. Итлет.

Анне мар ку, кам та пулсан урӑххи тухрӗ пулмалла, тесе шухӑшлат̆ Кӗпӗрйан.

Мӗлке ларсан ларсан каллех тӑђӗ. Тата пӑртак итлесе тӑђӗ те, сылтӑмалла пӑрӑнса ҫухалђӗ. Кӗпӗрйан тем пек тинкерсе пӑхса йулђӗ.

Нумайах та тӑмарӗ, мӗлке ҫухалнӑ тӗлте лупас арки айӗнђе вут ҫути, ђӑлт-ђӑлт, турӗ, Кӗпӗрйан ђӗри лаштах ҫурӑлса кайрӗ.

— Пӗтерет шуйттан... ҫунтарса йарасшӑн... Распуй!!! Кӑраул!!! Ҫунтарса йараҫҫӗ!.. тесе кӑшкӑрса йађӗ Кӗпӗрйан ыратнине мӗне пӗлмесӗрех сиксе тӑрса.

Анђах ҫав вӑхӑтрах ҫип-ҫинҫе вут ҫутти лупас арки айӗнђен ҫӗлен пек йарлаттарса лупас тӑрне хӑпарса кайрӗ. Кӗпӗрйан вут йеннелле ђупрӗ, анђах хӑранипе урисем тӑлланӑ пек хытса ларђӗҫ те, кукленсе ларђӗ.

Лупас йенђен ҫын кӗлетки уйрӑлђӗ те Кӗпӗрйан сывӑхӗнђенех ҫавра ҫил пек вӗҫтерсе иртсе кайрӗ. Кӗпӗрйан Сӑхӑ Васлине лайӑхах палларӗ.

Карташӗнђен ӳсӗр ҫынсем ђупса тухрӗҫ. Унталла-кунталла пӑхаҫҫӗ, ним тытса сӳнтерме ҫук. Вут шатӑртатса типсе кайнӑ лупас ҫиййӗнђи улӑма капах хыпса илђӗ.

— Пушар!.. Пушар!!. тесе кӑшкӑра пуҫларӗҫ йал хушшинђе. Ђиркӳ тӑрӑнђе ђан кӗрлеме тытӑнђӗ.

* * *

Пӗтӗм Мӑн-Кушил Кӗпӗрйанӑн шатӑртатса ҫунакан кивӗ хуралђӗ йенне ђупат̆; пӗтӗм Мӑн-Кушиле килнӗ хӑна, кӗреке кутӗнђен тухса, урам тӑрӑх пушар сӳнтерме вӗҫтерет.

— Кам тĕртнĕ?..

— Кам пултăр, кам Кĕпĕрйан сурăхĕсене сутса ĕçнĕ— çав тĕртнĕ. Ӳсĕрпе пулнă ку ĕç, ӳсĕрпе, тесе кăшкăраť пĕри.

— Тытас вĕсене, тытас! теççĕ ыттисем.

Анђах çав вăхăтрах Пуйан Мирун ђупса çитрĕ. Хăй лаша пек хашкаť. Çитрĕ те, халăх çине кăшкăрса пăрахрĕ:

— Кĕпĕрйан тĕртнĕ, Кĕпĕрйан... хăйне хăй çиллине шăнараймасăр тĕртнĕ вăл, терĕ.

Халăх пĕр вăхăта шăпах пулђĕ. Кĕпĕрйана айăплани никам кăмăлне те каймарĕ. Сурат Хветĕрĕ Мирун умне сиксе тухрĕ.

— Ăçтан хăйне хăй тĕрттĕр Кĕпĕрйан, халăхăн пуçне çаврасшăн есĕ, Мирун Иванђă! Йе санăн кĕлтӳне вăрланă тесе, есĕ ăна вутта пăрахтарса çунтарса йарасшăн-и тата? Çитĕ сана тăлăх ађана амантса пĕтернĕшĕн те, терĕ.

— Кĕлтине те Кĕпĕрйан вăрламан, Кĕпĕрйанăн ăçтан шинлă урапа пултăр, тет тепри.

— Улталаť вăл халăха, улталаť. Пĕтересшĕн вăл пирĕн пеккисене, хăй анђах пурăнасшăн вăл йалта куштан пуйан... теме тытăнђĕç халăхсем те.

— Ан кайăр пуйансем хыççăн: пĕтереççĕ вĕсем пире пĕрерĕн пĕрерĕнех, тесе кăшкăра пуçларĕç çынсем.

Пуйан Мирун ђасах пăрăнђĕ. Кунта тăрса усси çук, тăвас тенĕ ĕç пулнă, мĕн кирлĕ тата? Килне çитрĕ те, кĕтесри Микула турă умне ђĕркуçланса ларсах савăннипе тав тума пуçларĕ.

— Спаççипă, ырă туррăм, пăрахмарăн, ĕмĕтленнĕ ĕмĕте патăн. Кĕпĕрйан вырăнĕ тасалђĕ, хађ ĕнтĕ хамăн ĕç—трахтир пулатех. Тавтапуç, туррăм, тавтапуç.

Пуйан Мирун ўке-ўке пуççапаť. Ђўређерен пушар çутти Мирун пўртне çап-çутах кěрет. Мирун тăлăх ађана пěтерме пулăшнăшăн турра тав тăваť...

Пушар вăйланнăçем вăйланса пыраť. Кивě хуралт тем тěрлě çатăртатса çунаť. Хăрушă, тем тăршшěллě çулăм тапхăрăн-тапхăрăн, тискер кайăк пек, Кěпěрйанăн ашшěнђен йулашки йулнă хуралтне туллаť, кăшлаť.

Кивě, хăрăннă хуралт нумайах ђăтса тăраймарě — ђасах çунса пěтрě. Йал çыннисем, хăнана килнě йут йалсем пушар патěнђен пěрерěн-пěрерěн салана пуçларěç. Йулашкинђен, амаланса выртакан пўрт пěрени таттисем йăлт-йăлт туса илђěç те, сўнђěç. Халăх та киллеле уттарђě. Пěр-ик сехет хушшинђе тап-таса тасалса йулнă çурт вырăнђе пěр Кěпěрйанпа амăшě анђах уласа, макăрса йулђěç.

* * *

Тепěр кунне, ирхине, Лутра Михала — те ěнер ăна çапкаласа илнипе тарăхса, те тата урăх йăвăр шухăшпа — çывăраймасăр ирех тăђě. Пуçри шухăш канěç паманнипе аптăраса Михала, пěрех хутђен, çуртри пуссинђи хуратул анине кайса пăхас, терě.

Мăн-Кушилěн кăçалхи çуртри пусси Сехре çырмине пуçăн. Çўреме кансěр, çитменнине тата Сăрнел йалě йенђен çаврăнса каймалла, мěншěн тесен, Сехре çырми, çуллен ишěле-ишěле хăпарса çуртри пуссине йăлтах Сăрнел йенелле татса хăвара пуçларě.

Лутра Михала хуратул ани тăрăх айалалла анаť. Хуратулě кашласа лараť, кăçал атă тăхăнтармаллах пулнă.

Ани вěçне çитрě. Ани вěçěнђе Сехре çырми сарăлса выртаť. Михала çырмана шыв ěçме анђě. Çырма тěпěнђе тап-таса шыв шăкăртатса йухса выртаť. Михала тăра-

ниђђен пĕр кана ӳпне выртса ĕҫрĕ тĕ, ҫырма тăрăх ҫӳлелле уттарђĕ. Ишĕлекен ҫĕре ҫитрĕ. Ҫырма пуҫĕнђе пӳртрен пысăк ҫĕр татăкĕсем кӳмерккипех ишĕлсе анма хатĕрленсе тăраççĕ. Пăхат̆ Михала. Шăп ҫырма пуҫĕнђе, айалта, ҫурхи шывпа шуса аннă сĕтел пек лаптăк ҫерем ҫинђе сап-сарă ыраш кĕлтисем вырта параççĕ.

— Ку мĕнле кĕлтесем?..

Лутра Михала кĕлтесем патнех пыђĕ. Ҫырма тĕпĕнђе пĕр урапана йахăн ыраш кĕлтисем сапаланса выртаççĕ: ахăртне ҫӳлтен, ҫырма хĕрĕнђен, сирпĕтнĕ пулмалла. Кĕлтисене пурне те тăррисене каса-каса илнĕ.

— Ак, хайхи! терĕ Лутра Михала. Ак, хайхи Пуйан Мирун ҫĕмелĕ!..

Михала ҫырма хĕррине хăпарса пăхат̆. Анасем пуҫĕнђе ыраш пусси йенђен шинлă малти урапапа кукăр-макăр кайри урапа йĕррисем расах тăсăлса выртаççĕ.

Урапа йĕрри ыраш пуссинђен килсе ҫырма пуҫĕнђен, кĕлтесем сапаланса выртакан тĕлтен, ҫаврăннă та ҫуртри пуссинђи Сăрнел йеннелле кайакан пруђак йенне патах пăрăнса кайнă.

— Ах, шуйттан тутарĕсем, ҫавсемех вăрланă ҫав ҫĕмеле, ҫавсемех... Каларăм ĕнерех ҫавсем тесе, халăх вĕт: Кĕпĕрйан!.. Кĕпĕрйан! тет пуйансем хыççăн кайса. Ак, хайхи Кĕпĕрйан тап-тасах вĕт. Мĕншĕн хĕнерĕҫ-ши ĕнтĕ ăна, мĕншĕн ҫунтарса йађĕҫ-ши? Мĕншĕн Пуйан Мирун ăна вăрă туса хуђĕ-ши ĕнер? Мĕн ҫитмерĕ-ши ăна тата — ашшĕне пĕтерђĕ, ывăлне ҫаппа ҫарамаса хăварђĕ, тата кама ҫаратма тытăнĕ-ши ĕнтĕ. Ех, пирĕн пек ђухăнсем, пĕтереҫ ĕнтĕ пире пуйансем пĕрерĕн пĕрерĕнех...

Лутра Михала пысăк шухăша кайрĕ. Ăна пĕр ыйту аптăратат̆:

— Мĕншĕн? Мĕншĕн? Мĕншĕн пуйансем ђухăнсене ҫийеҫҫĕ?.. Мĕншĕн вĕсем ђухăнсене пĕтереҫҫĕ?..

Пуҫ тăрăнђе кайăк-кĕшĕксем йурлаҫҫĕ, савăнаҫҫĕ, ҫĕрте, курăк ăшĕнђе, хурт-кăпшанкăсем йашăлтатаҫҫĕ. Пуртеваскаť, пурте ĕҫлет, пурте хăй пурăнăҫĕпе пурăнаť.

Пĕр Лутра Михала анђах, уй варринђе йупа пек ђаранса тăрса, хăйĕнђен хăй:

— Мĕншĕн?... Мĕншĕн?.. тесе ответ ыйтаť.

## Хăшпĕр сăмахсене ăнлантарса пани.

1. Меслет — май. 2. Тăтăшах — пĕр майах. 3. Плант — йал ҫывăхĕнђи пуш выран. 4. Ђенђешке — ҫемҫешке, ђеђен. 5. Тупăлха — йăвăҫ йађĕ. 6. Ийĕе — ҫырма-ҫатрара, мунђара пурăнаť текен шуйтан йађĕ. 7. Нарастăранах — ахалех, 8. Пакки-ђиккипе — ним виҫесĕр.

## ЫЙТУСЕМ:

*1. Ку калавра авттăр хăҫанхи пурăнăҫа кăтартат?*

*2. Ун ђухне ђухăнсем хăйсен инттересне мĕншĕн сыхлайман?*

*3. Калава „Мĕншĕн“ тенине мĕнле тăнлатăр?*

Паймен В.

# ÇĔПРЕ.

## ТРАШУК.

ТĔКСĔМ йăвăр пайанхи кун Трашукшăн.

Умĕнђе шыв. Вăлта хулли шывра хуçкаланса выртаť, ик айăккипе хăмăш вĕттĕн кашлаť. Ним те курмасť Трашук. Шыва, кăвак тӳпеллĕ пĕлĕте, шыв леш айккинђи икĕ тăлăх хурăна, мĕлтлетекен вăлта хăмăшне тĕттĕм хупланӑ.

Пăхаť—курмасť.

Шухăш нумай. Шухăш йăвăр. Хаљђђен çăмăл, таçта ырлăх патшалăхне вĕçтерсе кайакан шухăшсем килнĕ ун пуçне. Йепле шухăшламăн? Трашукăн ашшĕ хытă ђирленĕ, ыран-пайан вилес пек. Вăл вилсен мĕн тăвас? Ăçта кайас? Кам пулăшĕ?!

Ашшĕ ђирлеђђен ĕç аванах пырађђĕ. Ашшĕ ун тырă акма пăрахнă çын. Çĕрĕ çук. Çĕр ваљђи укçа çитерес,— лаши сухи ваљђи çук. Пĕр вĕçне сыпсан, тепĕр вĕçĕ татăлаť. Пĕђĕккĕ ђух, кусналла выљђама каймасăр хăмăтсем сӳте-сӳте пăхни, атăçă Љђавук патне кайа-кайа ларни йурарĕ. Сисмесĕрех ик алă ĕçне вĕреннĕ Сахар. Çавăнпа вара:—хаљђђен тарăхни те çитĕ терĕ те, атăсем тӳрлеткелеме, хăмăт-кутлăхсем çĕлекелеме тытăнђĕ. Йулашки акăш-макăш лашине сутса струментсем, ђĕн илсе тултарђĕ. Çĕлет, сутаť, киввисене тӳрлетет. Пурăнмаллăх йулаť,—çитрĕ. Пурнăç пĕр йенђен шеллерĕ Сахара: пĕр ывăл çех пађĕ. Ывăлĕ маттур, ыră ђĕрĕллĕ, тăнлă ӳсет.

Пысӑк шанђӑк хурат̆ ун ҫине ашшӗ. Атӑ ӗҫне вӗрентес тенӗђђӗ,—Трашук урӑх шухӑшлӑ пулђӗ. Хутла вӗренесшӗн. Тӑват ҫул ҫӳрерӗ йалта, тата Крађухкари второкласнӑй шкула кайасшӑн. Амӑшӗ те: Кайтӑр, тийеђук пулсан пурӑнма ҫӑмӑлтарах пулӗ, терӗ.

Ҫавӑнпа ашшӗ те ђарӑнсах тӑмарӗ. Кӗркунне Ђейе Миттапа иккӗшне Крађухкана леҫрӗҫ. Ђейе Миттан ашшӗ пуйан. Пупсем тавра ҫавӑрнкалат̆, хӑшпӗр ђух тийеђук вырӑнне те пулса илет. Ђейе Миттана пурӑнма ҫӑмӑл. Укҫа та нумай парат̆ ашшӗ, ҫимелли те ҫителӗклӗ. Трашук хӑшпӗр ђух выҫӑллӑ-тутӑллӑ та пурӑнкалат̆.

Трашукпа Митта шкулта йулташлӑ. Ђӑвашран иккӗнех. Вырӑссем кулкаласҫҫӗ. Ҫавӑнпа иккӗш, йалта автанла пурӑннӑ пулсан та, кунта туслӑ.

Ҫапла пӗр ҫул иртрӗ. Ҫавӑнпа хура тӗттӗмӗн хупласа илет шухӑш Трашук пуҫне. Ашшӗ вилсе кайсан, вӗренме пӑрахас пулат̆; ашшӗне вӑл пит йуратат̆. Вӑл ӑна хађђђен сисменђђӗ, хађ ҫивӗђӗ ҫӗҫӗпе ђӗререн касса илђӗ.

Ир тӑма вӗреннипе кӑна уттарђӗ пайан пулла, шухӑшра пулӑ мар.

Ђӗтрекелет пӗлӗт тӗслӗ шыв ҫийӗ. Вӑрман тӑррисем ђарӑнмасӑр кашласҫҫӗ. Сӑрт хыҫӗнђен хӗрсе, выђаса тухат̆ хӗвел.

Илтмест, курмаст̆ Трашук.

## САХАР.

Сахар пӳрђӗ пуринђен уйрӑм. Урамӗ кӗске, вунвуник кил кӑна. Пурте пуйан ҫурђӗсем. Тимӗрпе, хӑмапа витнӗ, пилӗк ҫтеналлӑ. Кӗтессисенђе кукӑр мӑйлӑ, ҫӗлен ҫӑварлӑ шыв йухса анмаллисем симӗсӗн, хӗрлӗн курӑнса йавӑнасҫҫӗ. Ђӳређисем тӗреллӗ хупӑллӑ. Сахар пӳрђӗ ҫех урам тӗсне пӑсса ларат̆. Ытти пӳртсен ретӗнђен

таçта шала ђикĕннĕ. Улăм виткĕђин те кăшламан, тăпăлтарман вырăнĕ йулман. Сахар пӳрђĕ йалти пуйан Микуђ-пай çуртне хирĕç. Хăйĕн айаккалла пăрăнса тухнă çтенине, ђалăш-ђĕлĕш ђӳређисемпе, становой умĕнђе пуçа тайнă пекех ларать.

Ăçтан пуйан ретне килсе ларнă Сахар, хăй те пĕлмест. Аслашшĕ пуйан пулнă, теççĕ. Те ђăн, те суйа, анђах ашшĕ хăй вилнĕ ђух, пĕр тапкаланђăк хăла кĕсрине çех хăварђĕ. Аслашшĕ пуйан пулнă-и, пулман-и, ăна Сахар пĕлмест. Хăй ĕмĕр тăршшĕпе пуйас шухăш тытнине лайăх пĕлет. Ĕмрипех пăхса ӳстернĕ шухăш: укçа пухăп, çурт лартăп, икĕ лаша, икĕ ĕне илĕп.

Халĕ те, ик тунката çине хăма хурса тунă вырăн çинђе çав çурђĕпе, икĕ лашапа аташать. Акă пырать Сахар улăх урлă, хирсем тăрăх иккĕпе кустарса. Ак сылтăм йеннелле Сахар ырашĕ пуçне кăшт тайса ларать, тинĕс пек хумханать. Ак тата çаранĕ йепле! Пуçран çӳлĕ, йĕритавра шăрш сарать, шăрши ырă, тутлăн кăтăклать сăмсана... Кустарать Сахар. Пиђеври сикет, мăйне пăрать çăварлăхне тулласа. Туртари шултăран хытăрах вĕçесшĕн йарăнса йуртать... çиййĕнђи кĕрĕкне ута-ута йарать, минтеррине туллать.

Умĕнђе Трашук амăшĕ куççулне йухтарать. Ик ерне тăна кĕмесĕр выртать вĕт. Тарăхса сӳне пуçланă шанђăкпа пăхать Сахарăн типсе, саралса ларнă пиђĕ çине. Ак!.. Мĕн-ха ку? Трашук амăшĕ ђĕрĕлђĕ, хыттăн сак çинђен татăлса анђĕ, çутăлса кайнă куçĕсемпе пăхать Сахар çине. Ăна хирĕç Сахар урăхланнă куçĕсемпе пăхрĕ те, типнĕ тутисемпе:

— Сăпанӳк, есĕ-им? Ăçта Трашук? вилетĕп. Курас теп вилиђђен... тепре... пиллес теп...

Куçĕ каллех тĕттĕмленђĕ, куçĕ ӳкрĕ...

Пĕшкĕнсе кĕрет Трашук пӳртне, хăй пысăк та мар, алăкĕ тата лутрарах.

— Ах, Трашук, аçун тăнĕ кĕнĕђђĕ, сана ђĕнђĕ.

Ак татах çĕклерĕ Сахар пуçне, куçĕсем уçăлђĕç, тăнлăн пăхрĕ Трашук çинелле.

— Е-еп сана ђĕннĕђђĕ, килтĕн-им-ха? Еп вилеп, ђипер пурăнăр, аннӳне пăх... пуйан... Йулашки сăмахĕ тухмарĕ. Кăкăрĕ хыттăн çĕкленсе ӳкрĕ, вăрăм сывлăш кăларђĕ, кĕлетки лăпланђĕ.

Ним те ыйтмасť ĕнтĕ Сахар. Лашисем те, çурђĕ те кирлĕ мар, çĕрĕ те пĕр виç-тăват аршăн çеç кирлĕ.

## У Й - Х И Р.

Хĕрхенмесĕр хĕртет хĕвел. Çӳç тĕпĕнђен, кĕпе айĕнђен пăђăртатса тар тухаť.

Ирĕк уйĕсарăлса, ĕççыннине ђĕнсе выртаť. Сăрт тăрĕнђе кăлкан, ађа çӳçĕ пек, çилпе выљаса, Атăл çийĕ пек хумханаť.

Уйĕ пысăк. Хĕррисĕр. Анђах хĕррисĕр уйа та шăнăçаймасť Трашук ђĕри. Вăл пурнас тет. Хыттăн шаккаť, çăмăллăн хăпарса кăвак пĕлĕт тӳпине ђуптăваť. Ун шухăшне йавса, таçта çутă тӳпере тăри сасси выљанаť. Хăй курăнмасť. Хĕвелĕ хăйех çак йурăпа хĕртсе пăхаť тейĕн.

Микул-пайăн икĕ ака вăкăр. Вăкăрĕсем тĕреклĕ, мăнтăр. Çавăн патне пакуншăка кĕршнĕ Трашук.

Мĕн тăвăн. Килте çимелли çук. — Йăвăр пулĕ, тӳсĕн, терĕ. Амăш пĕр иртен тепĕр ире ађишĕн куççул хурланса йухтарђĕ, анђах — ан кай, тесе калаймарĕ.

Трашук никама та ӳпкелемест. Кам айăплă ашшĕ вилнĕшĕн? Вăл анђах мар йалта. Тата та аран-аран сыпăнкаласа пурнакансем нумай. Ак Йахруша илес.

Ашшĕ те, амăшĕ те ватă, ĕçлеймеççĕ. Вуник çултан утă пысăккисемпе тан çулать. Тарçăра пурăнать. Çулталăка ăна пĕр уçминник акса парать пуйан Таңуш. Çав уçминник тыррипе çулталăк пурнаççĕ ашшĕпе амăшĕ.

Çавăнпа, тĕнҫере турă çапла хушнă пулĕ тесе, нумайах кун çинҫен шухăшламасть Трашук. Пуçне ҫиксе утать йăран тăрăх. Шухăшпа пулсан та, сыхă пырать. Трашук, умра пыракан вăкăрсем йериперех ута пуçласанах, пушине пуç тавра çавăрса, тиверсе илет. Тиверме ўркенсен, йе айăкалла пăхкаласан, акапуç тытса пыраканни Трашука хăйне тиверсе илме ўркенмест. Йатлаçать, харкашать тата ҫышкисемпе те паллаштарать.

Канăç вăхăҫĕ пит савăк. Ҫăсăлса кĕрсе выртан урапа сулхăмне. Кашни шăмă пĕрҫĕкĕ канать, анҫах нумай канмалли çук. Тутлă вырăнтан ҫас хăвалаççĕ.

Каçхине тата йăвăртарах. Куç хупмасăр пăхас пулать. Айхăпа кĕрешме çăмăлтарах пултăр, тесе, йуратман тапака туртма вĕренҫĕ.

Тайанса выртать курăк çинҫе. Куçĕсем хупăнаççĕ. Çăлтăрсем те тўпере çухалаççĕ, палтушка сасси çех хăлхаран каймасть: пăлтăр-пăлт-пăлт... Кăшт йеррипеленсенех Трашук сиксе тăрать. Вăкрисене хăваласа çавăрать те каллех тĕтреллĕ айха пута пуçлать.

## ХĔВЕЛ.

Çăвĕ шăвать. Пĕр йенҫен йерипе, ĕне уттипе ĕселенет. Тепĕр йенҫен çăмăл путек сиккипе сиккелет.

Тĕллĕн-тĕллĕн йур айĕнҫен хуралса тухнă çĕр вăхăтĕнҫен пуçласа, пĕтĕм çĕр шур виткĕнҫĕкпе витĕнесси çитиҫҫенех — ĕç. Йăвăр, тарлатакан ĕç.

Çур кунĕпе çу кунĕ çавах та йал çыннине савăнăç парать.

Хěвел пысăк, вěри. Кулса, выҫҫаса пăхат̆ ҫěр ҫине. Пурне те ҫěртесшěн. Шурă йур ҫех кулҫанат̆. Йěрет. Куҫҫулěсем пěҫěккěн-пěҫěккěн пěлтěрхи курăк туни ҫине пăҫăртатса тухаҫҫě. Малтан тумламсем, унтан пěҫěк йухăмсем, унтан ҫырма. Ҫырми кěрлет, шарлат̆ йур куҫҫулҫпе.

Сăрт. Сăртăн пуҫě хура, айăккисем шурă. Виҫ кунтан айккисенҫен те шурă саплăксем ҫех тăрса йулаҫҫě. Ҫěрě хура, саплăкě шурă. Ҫěрě ҫирěп, саплăкě ҫěрěк. Ҫěтěлет. Вěтěленет. Пěтет.

Пайан пирвай пуҫтарăннă ҫамрăксем ку сăрт ҫине. Кашни ҫул сăрт итлет. Ҫамрăксен вăйлă сассисем сăрта вăратаҫҫě.

Кăвак кěпе, сар пиҫиххи, сарă кěпе кăвак пиҫиххи, симěс кěпе, хěрлě кěпе, ҫутă ату... хěрсем, каҫҫăсем ҫинҫе йалтăртатаҫҫě. Хитре пирěн ҫăваш хěрěсен тумлавě. Кěпи шурă, ҫăлт шурă, йур пек. Вырăнě-вырăнěпе йунлă хăмаҫă вěҫрен вěҫе. Хăмаҫă айккипе тěрě—ҫăваш тěрри. Мăйěсенҫе хěрлě мăйа, кăвак мăйа, вěтě шăрҫа, шултра шăрҫа. Пуринҫен пысăк укҫаллă мăйа пысăк шăрҫа хушшинҫе кěмěл патша пуҫлă тенкěсем. Кăкрисем ҫинҫе кěмěл тенкěллě хěвел выҫат̆, пиҫě ҫине ўкет сар хěре хěретсе. Хыҫěнҫе хўре. Хитре ҫўҫеллě, сарă йěслě ҫăваш хěр хўри. Сылтăм айккинҫе йенҫěк, пилěк йарăм кăвак шăрҫа, каҫака пуҫлă йěс тура. Йěс турине ҫакнă йарăмě ҫинҫе прунсă, пăхăр, кěмěл ҫěрě. Каҫҫă ваҫҫи, савни ваҫҫи, венҫет ваҫҫи.

Йурлат̆, кěрлет сăрт пайан.

Микул-пай килěнҫен иккěн килнě. Наҫтук, Микул-пай хěрě, тепри Трашук. Наҫтук малтан утрě, ҫас йулташěсемпе пăтранса карě. Трашук кайран йерипе пырса тăҫě сăрт ҫине.

Кăшт тăрсан Йахруш та çитрĕ сăрт çине, тӳрех Трашук патне пыђĕ.

— Мĕн пуçна усса тăран, аҭа выљама!

— Ђим-ха, Йахруш, ан тулла! Ман пĕђђен тăрас килет.

Йахруш ђăмрĕ çамрăк хум варрине.

Трашук пĕђђен пăхаҭ. Нумайĕшĕ çутă аттисемпе хĕвелпе тавлашаççĕ. Ун çăпата. Йахрушăн та çăпата. Мĕншĕн-ха Трашук вăтанаҭ çăпатисемшĕн, Йахруш вăтанмасҭ, ыттисем те вăтанмаççĕ. Ак ђейе Миҭҭа хĕрсем варĕнђе çавăрăнса çӳрет. Трашук çине çаврăнса та пăхмасҭ. Крађухкара йулташђĕ, хаљĕ йулташ та мар. Ăçтан йулташ пулас. Миҭҭан ашшĕ тарçăсем тытаҭ, ку хăй тарçăра çӳрет.

Йанраҭ сăрт тăрри çамрăксемпе ђеђекленсе. Сар хĕрсен куллисем, кĕленђе çĕмĕрнĕ пек ђăнкăртатаççĕ, шăнкравăн йавăнса йалалла анаççĕ. Вĕрет çамрăк йăви.

— Кам хураллаҭ?..

— Епĕ, епĕ!

— Кăшу-у-уй, первайхисене тытмастăн!

Хуралта Йахруш. Ђейе Миҭҭапа Наçтук ђупмалла.

— Ђупăр, пĕрре... иккĕ... виççĕ...

Икĕ айккинђен икшер ура уткăнђĕç айакалла.

Йахруш сылтăмалла, Наçтука тытасшăн. Те Наçтук урисем кăшт кĕскелђĕç, те Йахруш урисем вăрăмланђĕç— тытрĕ.

Кайалла таврăннă ђух Наçтук йерипе:

— Ма Трашук выљамасҭ?

— Ес пĕлмелле, пĕр килтех пурнаттăр вĕт!

— Пĕр килте те, епĕ ăна сайра курап, вăл йалан ĕçре, курсан та калаçмалла мар...

— Пĕрре... иккĕ... виççĕ...

Трашука ђĕнме Микул-пай кĕçĕн кинне йанă.

— Трашук, сана ђĕнеççĕ.

Трашук карĕ. Йулашкинђен пăхрĕ Настук çине, каллех ђейе Миттапа тăрат. Ђĕринђен такам çивĕђĕ ђĕрнисемпе ђĕпĕтрĕ.

## СТАРШИНАПА МИКУЛ-ПАЙ.

Стаккан урлă ерех тăкăнат, пуçĕсенђе тĕтĕм.

Микул-пайăн кинĕсем тулăн-шалăн ђупкаласа çех çÿреççĕ. Пĕрне те йамаст Микул-пай килĕнђен. Пурте куç умĕнђе пулђђăр, пайан пушшех. Старшина килнĕ,— вулăс пуçлăхĕ.

Сухаллине шăлкалат старшина. Çулланнă куçĕсене ывăтат Микул-пай кинĕсем çине. Çамрăкки пит аван. Пĕлет старшина: Микул-пай пайан нимрен те ђарăнас çуккине, хăй старшина пуласшăн, çавăнпа çутă старшина куçĕсем.

Трашук тултанах илтрĕ пÿртре камне, сисрĕ пайан ырлăх пулас çук.

Кĕрсенех:

— Есĕ мĕн туса çурен, анђăк çÿри, пĕлместĕн-и ес ăçтине, мĕн ђĕнмесĕр тăран, ђĕлхĕне çăтрăн-им?

— Еп Николай Ваççи...

— Ес калаçатни тата... аллинђи тулли стаккан уткăнђĕ алăк патнелле.

Хăвăрт та Трашук аллисем. Пăрăнас вырăнне кап! тытса илђĕ стаккана (ереххи сĕтел çинех тăкăнса йулнă).

— Йĕкĕт, куншăн мухтап,—терĕ старшина: — килђ, йарса парам.

— Çук, еп ĕçместĕп.

— Ну, йурĕ ĕнтĕ сана, ĕç ĕçтернĕ ђух,—çемçелђĕ хуçи те:—старшина ĕçтерет вĕт!

Ĕçмесен татах мĕн те пулсан кĕтсех тăр. Тытса сыпрĕ.

— Хаљ ĕнтĕ пыр хăвăрт,—урăлнăрах саспа каларĕ:— теçетник патне кайса киљ, çак сынсене ђĕнме хуш: 1) Пăсара Çимунĕ, 2) Тимка Праканĕ, 3) Çеркей салтак, 4) Темен Йăванĕ. Хăвăрт, пилĕк минутран кунта пулђăр! Старшина ђĕнтерет те.

Кăшт тăрсассăн пĕрерĕн кĕре пуçларĕç. Малтан Пăсара Çимунĕ килђĕ.

Старшина пăхмасăрах:

— Ну, ес кала, куланай тӳлетĕн-и, çук-и? Нумай калаçмалла-и санпа?

— Хоспотин старшина, тархаслатăп, ман ађасем выçă ларaççĕ!..

— Еп сана парăп ађасем. Ӳ-у-у!..

— Çимун еп сана хĕрхенеп,—çуллакан саспа Микул-пай:—ман ђĕре çапла, тӳлĕп саншăн, мĕн ђул памалла?

— Тăват тенкĕ те хĕрĕх пус.

— Анђах ес уншăн пăртак ĕçлесе парăн, пĕр теçеттина вырса пама пултаратăн-и?

— Тавах сана, Микул пиђђе, калама çук ырлăх тăван, ĕмĕр кĕлтума хушăп ађасене.

Тата виççĕшне те çаплах.

Микул-пай çăлакан. Йепле ăна хисеплес мар. Вăл хисепре, ăна пуйаннисем те, çуккисем те хисеплеççĕ.

... Çавăншăн Микул-пай çӳлтен вĕçет, старшинана лартма сăмах пађĕ хаљхи старшини.

## Й А Л.

Çутăлнă-çутăлман е́не мĕкĕрнипе йал çурăлать̆, кĕтӳçĕн пушши шартлатса илет. Кăшт тăрсан урапасем, кăрмансем тăпра тусанĕпе ђăркаланса, кĕмсĕртетсе иртеççĕ.

Кăнтăрла йал çывăрать̆. Тарăн тӳпеллĕ пĕлĕт хăйĕн

хӗрӳллӗ хӑрах кусӗпе пӑхса хӗртет. Унта-кунта пӳрт сулхӑмӗнђе ватӑ-вӗтӗ тухса ларат̆.

Касхине малтан ураписем, кайран кӑрманӗсем йерипе хӑйӑлтатса таврӑнассӗ, унтан кӗтӗвӗсем хӗвеланӑс хӗрлине тусанпа хупӑрлантарса анассӗ. Тӗттӗмленерехпе ађасем выртма кайассӗ.

Хӗлле... Ирӗ тӑп. Мӗкӗрекен, кӑшкӑракан, кӗмсӗртетекен сук.

Ырӑ сивӗ ирӗ, йӑмра тураттисене, улӑм пӗрђисене сухаллантарат̆. Хитре шурӑ сухал.

Ак умлӑ-хыслӑ выђӑх сӑл патне ирхи ђейе тухат̆. Трупасем кӑвак-хура тӗтӗм сывласа кӑлараccӗ. Тӗтӗмӗ йавӑна-йавӑна пӗлӗте хыпалат̆, ђӑрмалат̆. Утӑ сунисем пӳрт пек купаланса сула капласcӗ.

Хӗвел пӑхсанах ту айкки ђӗрӗлет. Пӑркутсем, тенкелсем, сунаскасем сӳлтен сил пек вӗсесcӗ, айалтан аран ӗселенесcӗ.

Сапла йерипе пурнат̆ђӗ йал. Пуйанни пуйанђђӗ, мӗскӗнни—мӗскӗнђђӗ. Татӑлђӗ пурнӑс йӗрки пӗр кунтах.

Шӑрӑх утӑ кунӗ вулӑсран пӗр йуланут кустарса килђӗ. Тӳрех старӑстӑ патне.

— Вӑрсӑ, мӑплисатси!.. терӗ те темле хут пӑрахса тата малалла кустарђӗ.

Йал пӑлханђӗ. Ӗсӗ тасста кайса кӗђӗ, пулман пекех Тата тепӗр хуйхӑ. Хупахсене хупса хуђӗс. Савах та самрӑксем ерехне тупрӗс. Ик вис кун виле ӗссӗр. Урамсем ђӗрӗлђӗс. Йурӑсем тӗттӗме сурса тасста хура-хуран тӳпере йавӑнассӗ. Хуткупӑсӗ пӗр кӑшкӑрат̆, пӗр савӑнат̆, пӗр макӑрат̆.

Ђи малтан тействиттӗлни слушпӑра пулнисене илђӗс. Кӗркунне самрӑксем те лекрӗс. Пӑсара Симунӗ, Темен Йӑванӗ, тата ыттисем те лекрӗс.

— Мĕнле вăрçă? Кампа вăрçмалла, мĕншĕн вăрçмалла?

— Кермани патшипе, теççĕ. Епĕр çĕнтерĕпĕр, пирĕншĕн турă, Анкли пирĕн майлă.

— Ан кала-ха, Анкли пирĕн майлă пулсан вĕсен майлă шуйттан пулĕ. Çак шухăшсемпе пăтранаť йал.

Çĕр вăрăм. Çĕр тĕттĕм. Унтан та вăрăм Трашук хуйхи, унтан та тĕттĕм. Тĕттĕм кĕрхи каç Трашук амăшĕ ђирлемесĕрех вилсе выртрĕ. Пурăнђĕ йерипе никама курăнмасăр, никампа усал сăмах калаçмасăр, вилђĕ никама истермесĕр.

Пĕр пĕђђĕн тăрса йулђĕ Трашук. Хĕрхенекен çук, макăракан çук. Çĕрĕ вăрăм пулсан та, ир çĕнтерсе илет, çавăн пекех Трашук хуйхи те пĕђĕккĕн ирте пуçларĕ.

Хаљ ĕнтĕ Трашук пĕђђен. Ăçта кайас тесен те каймалла. Кайĕђђĕ Микул-пай патĕнђен, Наçтук йамасť. Кашни куллен курас килет. Вăл йуратасса ĕненмест, хăй ĕненменнине те ĕненмест. Шухăшĕ йалан Наçтук çинђе.

Пайан Трашук вăрттăн вăййа тухрĕ. Курăнас мар тет. Йерипе утса пырса тăђĕ вăйă хĕрне.

Ђĕрĕ йун, çамрăк йун выљаť. Сивĕ каç ђĕресене ăшăтаť. Трашукăн ђĕри шăннă. Кам ăшăтĕ! Наçтук çех ăшăтма пултараť ăна. Ăçта Наçтук? Тĕксĕмленнĕ куçĕсемпе хыпаласа тупрĕ. Акă Наçтук, ун умĕнђе. Ђейе Миťťа калта пек йавăнкалаť, акă вĕсем айаккалла утрĕç. Темскер хĕрўллĕн пăшăлтатаççĕ. Трашукăн куçĕнђе тĕттĕм, пуçĕнђе тĕтĕм. Ђирлĕ çын уттипе таврăнђĕ хăйĕн витине.

Шухăшĕ пысăк. Шухăшĕ ђул, пусаť айалалла. Ђулĕ пуснипе тĕтре сирĕлет, куçĕ çутă пăхаť, малалла—çул. Пăхаť айаккалла—тĕттĕм, пăхаť кайалла—çыран.

Пӗлтӗрхи уҍҍиттӗле астурӗ, вӑл панӑ „Хыпара“ астурӗ. Пӗр хитре сӑввин пусламӑшне лайӑх астӑват:

Аҍисем те пӗҍӗк ун,
Упӑшки те тийерӗ.
Ҫӑнӑх-кӗрпе кашни кун
Пӗтсе пырат пӳлмере.

Тата Варуҫи ҫинҍен каланӑ илемлӗ, хурланмалла.

Пиллӗкӗмӗш ҫулта пулнӑ револҍутси вӑхӑтӗнҍе туха пуҫланӑ хаҫата ҍарнине астурӗ.

„Ҫитӗ“ терӗҫ Трашук куҫӗсем. Туртмалли хут ҫине кӑранташ татӑкӗпе ҫырҍӗ:

„Савнӑ Наҫтук. Есӗ мана йуратасса, еп нихҫан та шухӑшламан, анҍах таҫта ҍӗрере ӗмӗт пурнаҍҍӗ, пайан вӑл та татӑлҍӗ. Ҍейе Миттӑ ӑраскаллӑ. Усал йатпа ан асӑн. Епӗ йала урӑх таврӑнас ҫук. Сана ӗмӗр ыр сунакан Трашук“.

Вӑйӑра Микул-пайӑн аслӑ ывӑлӗн Петтине тупрӗ.

— Ирхине Наҫтука пар, никама та ан кала.

— Йурӗ.

Хутаҫҫине ҫурӑм хыҫне ҫакса йал вӗҫнелле уттарҍӗ. Йал вӗҫӗнҍе ҍарӑнҍӗ. Тепре шухӑшларӗ. Таврӑнас мар-и? Ҫук! Ҍулӗ пусса анҍӗ. Ҫулӗ куҫ умӗнҍе. Кайас пулат. Тӑван ҫӗршыв тӑрса йулат. Ҫуралнӑ, ӳснӗ тӑван ҫӗршыв сывӑ пул, усал сӑмахпа ан асӑн!

## КАМ ЛАЙӐХ?

Йал—хуран. Вӗрет. Ҫийеле кӑпӑкпа пӗрле пӗтӗм тасамарлӑх пухӑнат.

Камшӑн? Мӗнле нумӗршӗн ҫырмалла? Нумӗрӗсене астуса ҫитереймӗн. Лайӑх астӑваҫҫӗ: 8-мӗш — полҍшевиксен, 3-мӗш — сотсиалис-револҍутсионерсем. 8-мӗш вӑрҫа пӗтересшӗн, 3-мӗш тата вӑрҫасшӑн. Микул-пай, Пуйан

Таҧуш тата ыт. пуйансем 3-мӗшне ҫырӑнаҫҫӗ. Ҫукрахсем — 8-мӗшне. Нумайӗшӗ пуйансем калани хыҫҫӑн кайса ҫыраҫҫӗ. Салтак арӑмӗсене ҫех улталаймаҫҫӗ. Хӑшӗ вӗсен упӑшкисене киле тавӑраҭ — ҫавсем лайӑх. Йахруш та салтакран 8-мӗш номӗре ҫырӑнӑр, тесе йанӑ.

Вӗрет йал. Пуҫсем, ӑссем ҫаврӑнаҫҫӗ.

Патша пурҧҧӗ, ӑна лайӑх, тетҧӗҫ, ҧиркӳре те мухтаса йурлаҭҧӗҫ.

Патшине кӑларса пӑрахсассӑн, Временни правиттӗлствӑ пулҧӗ, ӑна та лайӑх, терӗҫ.

Халӗ тата: Временни правиттӗлствӑ лайӑх мар, халӑха улталаҭ, Канаш ирӗкӗ кирлӗ—теме пуҫларӗҫ. Хӑшӗ лайӑх? Кам пӗлет? Кам калӗ-ши? Ма хӑҭ турри анса каламасҭши? Ӑна тата хӑйне те ҫук, теҫҫӗ.

— Керӗнски лайӑх!..

— Поҧшевиксем лайӑх!..

— Меншевиксем лайӑх!..

Кам лайӑх!

Кӗркунне хуранай хытӑрах хыпса хурана пӑлхатса йаҧӗ. Шкулта кулленех пуху.

Уҧиттӗл тӑрса калаҭ.

Ҧейе Миҭҭа тухса калаҭ.

Ваҫҫили Карпҧӑ тӑрса кӑшкӑраҭ.

Урӑх кӑшкӑракан ҫук. Вайпитти арҫынсем салтака кайса пӗтнӗ. Пӗри те таврӑнман-ха.

Трашук салтакра.

Йахруш салтакра.

Тимкка Пракапӗ салтакра, Темен Иванӗ те салтакра.

Ку таранҧҧен кирек хӑшне илтсен те лайӑхҧӗ, пурте: ҫӗнтермесӗр вӑрҫа пӑрахмалла мар, вӑрҫас пулаҭ, Уҧретиттӗлни сопранине кӗтес пулаҭ,—тетҧӗҫ. Халӗ шатах тӗрлӗрен кайрӗ. Таврӑнҧӗҫ сасартӑк салтакран Йахрушпа

Тимкка Пракапĕ. Никама пĕлтермесĕр, мĕн каласнине пĕлес тесе, шăппăн пухува пырса тăҫĕç.

Ҫейе Миттa тăҫĕ.

— Стариксем, тăвансем! Халĕ епĕр йăвăр вăхăтра пурăнатпăр, патша çук. Патша пирĕн кĕтӳçĕҫҫĕ, кĕтӳ кĕтӳçĕсĕр пурăнаймасть. Çавăн пекех пирĕн халăх та хуçасăр пурăнаймасть. Çавăнпа патшалăх пуçлăхĕ кирлĕ. Халĕ Временни правиттĕлствă. Ăна пăхăнас пулать. Уҫретиттĕлни сопранире патшашăн сасăлăпăр...

Нумай каларĕ. Халăх лăпах пулҫĕ. Миттана итлеме вĕреннӗ. Хăш-хăш çĕрте харлаттарни те илтĕне пуçларĕ. Тата уҫиттĕл нумай каларĕ. Çĕре хресҫенсене парассине асăнҫĕ. Анҫах вăрçă пĕтессе кĕтес пулать, терĕ.

— Сăмах пар-ха! сăмах!

Кӳлле ҫул ӳкнĕ пек ӳкрĕç халăх çине сăмахсем. Сасси Йахруш сасси пекех.

— Ах мур, Йахруш мар-и ку?.

— Тупата Йахруш, трупаран килсе гухмарĕ-и ку? Пурте вăранҫĕç. Йахруш сĕтел патĕнҫе.

— Йулташсем!

— Кала, кала! Итлĕпĕр. Кунта йăлăхтарҫĕ ĕнтĕ йалан кăсене итлени.

— Йулташсем!

Сăмахĕсем мăлатукпа сунтала çапнăпа пĕрех ҫанлатса тухаççĕ.

Йулташсем, хресҫенсем! Сире улталаççĕ. Сире Вăхăтлăх правиттĕлствă çĕр парас çук. Вăл татах вăрçасшăн. Патшан йурăхсăр политтĕкне тăвать. Мĕншĕн тесен, вăрçă пуршуйсене кирлĕ. Ҫейе Миттa та пĕҫĕк пуршуй. Çавăнпа вăл та вĕсем майлă, вăл та кунта вăрçасшăн кăшкăрать. Уҫиттĕл вĕсен тарçи. Вăл ес-ер, халĕ пĕтĕм ес-ер-сем пуршуйсем çумне çыпçăнҫĕç, сутăнҫĕç, пур-

шуйсен тарçи пулђĕç. Есĕр пĕлместĕр-ха Вăхăтлăх правиттĕлствă улпутсене тивес çук тунă, вĕсен çĕрĕсене хресђенсенђен туртса илсе калла тавармалла. Вăрçă кама кирлĕ? Пире кирлĕ-и, кирлĕ мар-и? Пуршуйсене çех кирлĕ, пире кирлĕ мар!..

— Тĕрĕс, тĕрĕс калат!.. Халăх шавласа кайрĕ.

Çак кунтан пĕтĕмпех улшăна пуçларĕ. Микул-пайпа Пуйан Таңук та кусен сассине тыта пуçларĕç. Ђейе Миттапа уђиттĕл сасси илтĕнми пулђĕ.

Пĕр-икĕ кунтан Пăсара Çимунĕпе Темен Иванĕ салтакран таврăнђĕç. Кусем те пољшевиксем майлах тăраççĕ.

## КАНАШ.

Октапĕр уйăхĕнђе хуларан хут килђĕ.

„Временнăй Правиттĕлства ўкернĕ, пољшевиксем çĕнтерсе Канаш ирĕкĕ тунă. Йалта та йал канашĕ суйламалла“...

— Вăт самана! Лайăх йеннеллех сулăна пуçларĕ. Ирĕкĕ халăхра. Кам кирлĕ çавна суйлатпăр совета — йал пуçлăхне. Çĕрне пољшевиксем кайалла илсе парас, теççĕ. Улпутсем тарнă.

— Пољшевиксем—антихриссем.

— Мĕн антихрис пулмалла, пирĕн майлах. Ак тата мир тунă, теççĕ, ăна та пољшевиксем. Салтаксене киле темле Ленин йарат, тет.

— Салтаксем те, пурте пољшевиксене мухтаççĕ. Йал йўçет. Хĕрлĕ çĕпрепе хунăскер лайăх хăпарат. Совет суйлана. Советра пурте салтакран таврăннисем.

Йахруш, Тимкка Прахокĕ, Пăсара Çимунĕ, Темен Йăванĕ. Çамрăксем. Ђейе Миттана кўртесшĕнђђĕ пуйансем — кĕреймерĕ.

Микул-пай çывăрмаст: „Револђутси пулсан, револђутси

пултăр, уссине унтан та курма йурат̆. Пилĕк çухрăмра Киççеђов именийĕ. Мĕн пăхмалла — революутси.

Микул-пай хатĕрленет.

Ваççили Карпăђă хатĕрленет.

Шăппăн, никама та систермесĕр çаратасшăн пуйан пуйана.

Микул-пайăн ултă лаша.

Пуйан Таңушăн пилĕк лаша.

Ваççили Карпђăн виçĕ лаша.

Мĕн пурĕ вунтăваттă. Каçĕ тĕттĕм. Уйăх çыврат̆. Йал çыврат̆. Йахруш çех çыврмаст̆. Ăйăх пĕр те килменрен çĕрле тăрса ларђĕ. Анкарти йенђе йăтă вĕрет. Йахруш урама. Урапа сассисем. Кам çӳремелле халĕ? Татах сас. Нумай. Йеррипе йăпшăнса анкарти хыçне тухрĕ. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... вуннă, малта татах пиллĕк пулмалла. Вунпилĕк ăлав. Камсем?

Ăçта кайакансем?

Хăваласа çитсе пĕлес?...

Ак патĕнђех ура сасси, Йахруш капан хыçне!

— Ес лайăх пĕлетни вара унта етем çуккине?

— Ак тата, пĕлмесĕр!

Хăй тахçанах тарнă. Ытти етеммисем те виçĕ хуралçă хăварса тарнă.

Лерелли илтĕнми пулђĕ. Йахруш йала. Совет ђленĕсене вăратат̆. Саççетани пухат̆.

— Мĕн пулнă? Ма çĕрле?

— Çапла кирлĕ.

— Йулташсем! Епĕр Киççелов именийĕ çинђен мансах кайнă. Ăна пирĕн уђђота илсе сыхлас пулат̆...

— Вăл апла та-ха, мĕн уншăн çĕрле вăратмалли пур?

— Ђим, автан! Ан сик вăхăтсăр, итле малтан. Епĕр ĕнер анђах илтрĕмĕр кӳршĕ йалсем Ăршанăвă çаратнине.

Кĕçĕр пирĕн пуйансем 15 ăлавпа имени çаратма карĕç. Йертсе пыраканни Микул-пай...

15 минутран йышăнђĕç:

„Ђухăнсене пуçтарса, вĕсене хĕçпăшаллантарса Микул-пай опосне хирĕç тухас. Тыррине ђухăнсене, мулне кайалла леçмелле“.

Ир сулхăнпе Тук-шывĕ сывлаť. Хĕвел тухăçĕнђе тăрă кăвак йарăм.

Кама кам?

Шăрри-шари. Опос килет. Етем вăраниђђен çитесђĕ. Ак анкартисем. Стой! Кам килет?

Икĕ йенђен вуншар етем пăшалсемпе, сăнăсемпе, револђверсемпе. Пăхрĕ Микул-пай, ним тумалли те çук. Суйа пуçларĕ.

Ĕç тухмасť.

Йахруша улталаймăн.

Савăнђĕç ђухăнсем тырăпа. Микул-пайа пуç тайаççĕ тата илсе килме кулса ыйтаççĕ. Микул-пайĕ шурă куçпа пăхаť.

Пĕр çулпа мар вĕсене канашпа. Таклăх савăнђĕç малтан.

Пĕтмерĕ Микул-пай. Çĕр пур. Çĕр пĕтĕм халăха панă. Микул-пай—„халăх“. Курăпăр—теççĕ Микул-пай куçĕсем.

## ХАЛĂХ.

Тепĕр кун пуху. Пуринђен ытла ђухăн пухăннă. Илтнĕ ытти йалсем именисем çаратнине. Вĕсем те пурте кайса килме тапăнаççĕ. Йахруш ђараť.

— Ђухăнсем, ан хыпаланăр, пурте пирĕн пулĕ. Каланă: Ним марри мĕн пурĕ пулĕ, тенĕ. Кулаксене çех çаратма йарас пулмасť. Иртнĕ каç кайса килни йурарĕ.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн тырă пур, тата мĕн кирлĕ? Пĕтсен тата кайса илме пулаť.

— Мĕн вырăнсăр калас пире пустуй, вырăссем çаратаççĕ, вĕсене йураť, ђăвашсене йурамасť.

— Çапла, çапла... Ђăваш йăваш, тенĕ ĕлĕкхи çынсемех.

— Кайас!

— Ђăваш та хăйне кăтартĕ.

— Кăтартас!..

Сăмах çăмхи. Ăнлану çук. Кайаллах тимĕрлĕн:

— Йулташсем! терĕ çирĕп сас. Кăшт лăпланђĕç.

— Йулташсем, халĕ револђутси, тустарса çĕмĕрсе пĕтересси çех мар... малалла та пăхас пулаť. Халĕ çаратма кайсан мĕн тумалла? Кулаксен 3—5-шер лаша. Сирĕн нумайĕшĕн пĕри те çук. Вĕсем пĕтĕм туприне турттарса пĕтерĕç, есĕр нимĕнсĕрех тăрса йулăр. Тепĕр йенђен тата епĕ пайан Трашукран çыру илтĕм. Вăл: Епĕ пыратăп, кĕтсех тăрăр, тесе çыраť. Халĕ вăл полкковой комиттет претçетаттĕлĕ, тет. Вăл пурне те лайăх пĕлет. Тавăрăнсан мĕн тумаллине каласа парĕ.

— Тĕрĕс ĕнтĕ ку, тĕрĕс, стариксем.

— Кĕтес, кĕтес Трашука. Полккă пуçлăхĕ—ку шуткă мар!

Пухуран пурте Йахруш сăмахĕсене ĕненсе тавăранђĕç.

Микул-пай пухăва хăй кайман, Ваççили Карпђа йанă. Ваççили Карпђă пухуран таврăнсан, Микул-пай патĕнђе хăйсем пуху туса илђĕç.

— Мĕн калаççĕ?

Ваççили Карпђă йĕркипе каласа пађĕ.

— Наçтук, илсе кĕр-ха пире сыпмалли... çакăн пек сăмах ыватрĕ Микул-пай, леш пўрт алăкне уçса.

Наçтук икĕ путылккă кăмăшка илсе кĕђĕ.

— Ну, мĕнле? Мĕн тăвăпăр?

Ђимха,—ђарђё Ваççили Карпђă Мукул-пайа,—хăвăн пакуњшăкна—Трашука ̆астăватни?

— Манман, лайăх пакуњшăкђё, ахаљ те аван ађађё.

— Аван çав! Халё пурте çавна кётсе тăраççё... Никам та сисмерё Настук алли ђётренине, стаккана хытăрах лартнине. Никам та курмарё çÿç тёпёнђен пусласа йанах айё таранах хёрелнине.

— Вăл унта полккă пуçлăхё пулнă, тет. Халё тавăрăнап, тесе çырнă Йахруш патне. Пурте хавасланса кётеççё.

Вот, шуйттан,—вёресе кайрё Микул-пай;—ара, мур, ман тарçă пулнăскер, йал пуçлăхё пулас тет-и вăл?!.

— Мён калаçан, кунта ним тума та çук. Ху стришна пулма хатёрленнёђё, тарçу маларах пулё.

Ђейе Миттă ашшё сасă пађё.

— Пустуйа харкашма пăрахăр-ха. Халё мён тăвас? Вăл килсенех, именинђе мён те пулин илмелли пётег. Ман шухăшпа, именине пушкăртсем çаратаççё, тесе хыпар йарас. Пурте унта кайёç. Хамăр малтан, мён кирлине тийёпёр те, хăвăртрах ман пиђђе утарне...

Çитеђђен ёлкёрсен епёр унта пулнине никам та сисес çук. Пушкăртсем çаратса кайнă, тейёç. Анђах ку антихристсене систерес мар. Вара пётрё ёç, пётём ёç хупланса ларать.

Ку сăмахсемпе пурте „соклаç“ пулђёç. Каçах темён халăх пилёкшерён-ултшарăн пухăна пуçларё. Кулаксем пёр ушкăнтан тепёр ушкăна:

— Пушкăртсем ̆Киççељов именине çаратаççё, хамăр илсе йулар. Совет ђленёсене систермесёр каймалла çёрле...

Совет ђленёсем патёнђе Ваççили Карпђă нумайђђен тавлашса ларђё.

Вăхăт нумай. Йахруш çыварма хатĕрленет. Такам йерипе шаккарĕ ђўређерен.

— Кам ку?

— Йахруш пиђђе тух-ха.

— Ха, Наçтук мар-и ку? Мĕн çăмăлпа килтĕн.

Тухас пулђĕ.

— Йахруш пиђђе, есĕ кулăн каласан.

— Мĕн кулмалла, вăт тата.

— Сан пата Трашук çыру йанă, теççĕ.

— А-а-а! Пĕлеп ĕнтĕ. Аĭа пўрте, пĕтĕмпех каласа парăп. Хаљ килте еп пĕђђенех.

Пўртре нумай калаçса ларђĕç. Йахруш мĕн пĕлнине пĕтĕмпех каласа пађĕ. Наçтук ђĕрине усрĕ, хайне кађђа пама тăни çинђен каласа кăтартрĕ.

— Мĕн ку, виççĕмĕш урапа иртсе кайаĭ.

Автансем авăтрĕç. Кам çўремелле!

Наçтук шартах сикрĕ, темскер калас тенĕђђĕ, Йахруш урама тухса ђупрĕ.

Малти-касран ту çинелле вĕççĕр ăлавсем хăпараççĕ. Тин тĕрĕс шухăш çапрĕ Йахруш пуçне. Çав вăхăтрах Тимкка Пракахĕ ђупса çитрĕ, хашкаса.

— Пĕтрĕ! Кулаксем йертсе карĕç çаратма.

— Куратăп хам та! Çак пулĕ ĕнтĕ. Ораттăрсем хулара йалан „крестьянская стихия“ тесе кăшкăратђĕç.

Çавă ĕнтĕ вăл.

## ЂЕХСЕМ.

Трашук, киле тавăрнас тесе тăнă ђух, Мускава пырса лекрĕ, унта Хĕрлĕ кварти пуçтараççĕ. Çырăнђĕ Трашук та Хĕрлĕ квартине. Киле кайран та кайĕ. Кил шухăшĕ мар хаљ. Лайăххийех те килте ним те çук. Хĕрлĕ квартире пулнă ђух йăвăр тиврĕ. 1918-мĕш çул, февраљ

уйăхĕнђе, Хĕрлĕ çар органисатсиленнĕ. Унта Трашук полкри военком пулса тăђĕ.

Туттăва хирĕç—Оренпурк çине. Хĕлĕпе, çăвĕпе вăрçăра. Çулла ђехсене ђарма йађĕç. Ђехсем нумай ђарăнмарĕç. Самартан ђакнă ђухне Трашук сулахай аллине усрĕ, пуђă ђавсаран айаларах тивнĕ. Прахутпа хăвăрт Ђĕмпĕрти ласарета çитерђĕç. Ним те тумалли çук, пĕр уйăх ĕçсĕрех выртмалла пулђĕ.

Ĕçсĕр вăхăт—шухăш ирĕк. Мĕн çинђен шухăшлатă? Йал çинђен. Йалти пуйансем, йалти ђухăнсем çинђен.

Мĕн тăваççĕ-ши? Çыру татăлђĕ. Унтан тата кăшт... Наçтук çинђен.

Кађђа кайнă-ши, кайман-ши? Е-е-е! Ун çинђен мĕн шухăшламалла. Кайсан-каймасан та халђђен тупнă ĕнтĕ. Тепĕр йенђен, вăл пуйан хĕрĕ.

Ку хушăра йалти ĕçсем умлă-хыçлă, урлă та пирлĕ, пуçхĕрлĕ пулса кайрĕç.

Октăпĕр хыççăн аванах пыђĕ. Совет аванах ĕçлерĕ. Хĕрлĕ çар тусан Совет ђленĕсем пурте çара кайрĕç. Хăшĕ — мопилисатсипе, хăшĕ — хăй ирĕкĕпе.

Тинех кулаксене ирĕк çитрĕ. Претçетаттĕлĕ Ваççили Карпђă. Çăвĕпе ђухăнсене алăра тытрĕç. Таçтан Ђейе Миттапа уђиттĕл сиксе тухрĕç.

— Совет пĕтет!

— Совет пĕтрĕ!

— Мускава ђехсем илнĕ!

— Самара ђехсем илнĕ!

— Михала патшана лартаççĕ!

Кулленех хыпар çине хыпар. Хыпарсем пуçран пуçа вĕркелеççĕ.

Нумай кĕтмелле пулмарĕ. Ђăнахах та ђехсем ирте пуçларĕç. Ђерет çитрĕ Тук йалне те.

Микул-пай патне охвитсерсем тулђӗҫ. Салтаксем килсерен саланђӗҫ. Ђухӑннисем ҫех хӑтӑлкаларӗҫ.

Пӗр йенђен—хӑраҫҫӗ, тепӗр йенђен—таса мар, теҫҫӗ.

Микул-пай патӗнђе ӗҫкӗ. Охвитсерсем ҫӗпре сӑрӑхтарђӗҫ.

Ним пӗлми пулса ҫитес умӗн аслӑ охвитсерӗ мӗн тумаллине аса илђӗ.

— Халӗ ӗнтӗ калӑр: камсем Совет ђленӗсем? Кайса хыпаласа пӑхар.

Микул-пай пуҫӗ хӑвӑрт ӗҫлет, вӑл пит ӗҫмен.

— Тарнӑ, тарнӑ, мур пуҫӗсем, пурте тарнӑ.

— Е-хе-хе! Пирӗншӗн ку тата лайӑхрах. Арӑмӗсем пур-и? Ҫамрӑк-и?

— Ҫук, шуйттансен, пӗрин те ҫук.

— Ну мӗн пур, кала! Мӗн пур кала тенӗ! Епӗ капиттан Тунђин, мана итлеменнисем...

— Пур, пур, Йахрушпа Ҫемски Ҫимунӗн ҫурђӗсем пур.

— Тата мӗн пур, ҫуртӗнђе кам пур?..

— Пӗр Йахрушӑн ватӑ амӑшӗ пурђђӗ, вӑл та вилме ӗлкӗрнӗ, шуйттан, ыттисен ним те ҫук. Пурте тарҫӑра пурӑннӑскерсем.

— Ђӗртес, тӗпӗ-йӗрӗпе ҫунтарас.

Охвитсерсем сирпӗнсе тухрӗҫ. Микул-пайӗ вӗсенђен малта, йертсе пыраҭ. Йахруш пӳрђӗ хӑйӗннипе хыҫахыҫҫӑн килнине те маннӑ.

Капиттанпа поруђђӗк тӑрса йулђӗҫ иккӗнех.

Тӑрсан-тӑрсан икӗш икӗ йенне утрӗҫ: поруђђӗк — пӗђӗк пӳрте, капиттан — сарайне.

Пӳртрен ҫӗрӗпе ӗссӗр сассем илтӗннипе Наҫтук ҫывраймарӗ. Сыхӑ вырҭаҭ. Ак, ура сасси. Кам пулмалла? Пӗр-пӗр ӗссӗр ҫын. Тарас-ши? Хӑранипе хытса кайрӗ.

Темле кĕлетке тайкаланса килсе тăҕĕ. Хăй тем мăкăрлататť, пĕлмелли ҫук.

Наҫтук кушак пек. Ĕҫсе супнăскер нимĕнех те тăвас ҫук, тет хăй ăшĕнҕе. Сылтăм алли ыталаť кăпиттана, тепринпе киншалне йарса илҕĕ. Тупрĕ аврине, алăра... Кăппиттан курмасť...

Ҕĕтĕрекен аллисем Наҫтук кĕпи тăрăх шăваҫҫĕ. Курмарĕ киншал ҫĕкленине, курмарĕ кăкрине йепле кĕрсе ларнине. Анасланă пек туса ҫеҫ илҕĕ. Курмарĕ, таҫта йут ҫĕршывра, вăрҫа килнĕскер, хĕр аллинҕен вилнине.

Пĕҕĕк пÿртре Микул-пайăн аслă ывăлĕпе кинĕ поруҕҕĕкне пуҫтарса хунă.

Мĕн турăм?.. Ҫынна вĕлертĕм. Трашук мĕн калĕ. Вырăн ҫинҕе виле. Хăрушă. Сарайĕнҕен ҕупса тухрĕ. Темĕн унăн куҫне ҫапрĕ. Хĕрлĕ. Мĕн ку? Ҫулăм сарайа пырса тивнĕ. Пĕтĕм кас хыпаť.

Наҫтук хăй ăшĕнҕе:

Ҫунса кайнă, тейĕҫ... терĕ.

Ирхине, ҕăнахах та вут сÿнтерсе мухмăр уҫсан, хисепе илҕĕҫ ҕехсем:

„Тăвата охвитсер, виҫĕ салтак ҫунса кайнă“.

## ИКĔ ҔĔРЕ.

Ҫапуҫҫи шаккипе йанăраҫҫĕ анкартисем. Ҫулсем ҕарăклатса ăсатаҫҫĕ тутă ҫăва. Ăна хирĕҫ ҫаралнă ҫулҫăсемпе, кашкăрăн вăрмантан килет кĕр.

Тук ҫыннисем ĕҫре. Ҫуннисенҕен пĕр Микул-пай ҫех ҫунса кайнинҕен лайăхрах ҫурт туса лартрĕ. Ыттисем хăшĕ хваттерте, хăшĕ тăм пÿрт туса лартнă.

Трашук тÿсеймерĕ. Алли тÿрленмесĕрех, ҕехсем каймасăрах, йала сăтăрăнҕĕ килне. Хуларан аллă ҫухрăм. Кăнтăрла каймалли ҫук: тытма пултараҫҫĕ. Ҫĕрле утаť,

пĕђђен мĕлкен шăваť çул тăрăх. Иккĕмĕш каçра çитрĕ. Кам патне кĕрес? Çамрăксем килте çук. Танак Миккуљ патне!

Миккуљ шартах сикрĕ ђўређерен шакканăран.

— Кам унта?

— Уç, Миккуљ пиђђе. Кайран пĕлĕн.

Тепĕр кунне Трашук кунĕпе мађђара ларђĕ. Йалта икĕ охвитсер, пĕр рот салтак. Вĕсем ыран пайан тухса каймалла сасђў пур. Миккуљ каласа кăтартрĕ ђехсем мĕн хăтланнине. Трашукăн ăшĕ вĕрет: Кăсене пуçтарма ĕлкĕресђĕ. Трашукăн виçĕ кранат, икĕ револьвĕр.

Миккуљ Трашук килнине никама та каламан, хăйĕн арăмне çеç кăшт хулхаран: Трашук килђĕ, пирĕн мађ-ђара, терĕ. Арăмĕ—кумине, куми—хăйĕн кумине. Йалта пурте кума. Микул-пай аслă кинĕн пĕр вуник кума. Ăна та хыпар лекрĕ. Вăл — упăшкине, упăшки — ашшĕне... Карĕ... Пĕр кун хушшинђе пĕтĕм йал пĕлђĕ.

Микул-пай пĕлђĕ хай „мур Трашук“ таврăннине — тўрех охвитсерсем патне.

— Çапла, çапла... Комунис таврăннă. Пытанса пурăнаť. Каçхине тытса, ăçта кирлĕ çĕре ăсатмалла канаш турĕç.

Ах, Наçтук! Наçтук манман Трашука.

Наçтук та илтнĕ хыпара.

Пиђђĕшĕ ашшĕне каланине хăрах хăлхипе илтсе пĕлђĕ. Мĕн пулассине пĕлет. Тытĕç, вĕлерĕç. Шухăш шăтараť пуçне: хăтарас пулаť.

Хут татăкĕ илђĕ те:

„Ес таврăннине аттесем те пĕлеççĕ. Тарас пулаť. Тутскинђе хĕрлисем тăраççĕ. Çавăнта тар. Миккуљ пиђђе анкарти хыçĕнђе пирĕн кăвак лаша тăрĕ, сана ваљђи. Йуратап. Наçтук“.

Хутне Миккуле ђёнсе илђё те, вӑрттӑн пађё. Миккул тёлёнет: ӑҫтан муртан пёлнё вӑл таврӑннине. Никама та каламанҫке, хӑй тухса курӑнат пулё, тет. Наҫтука ёненсех ҫитмест, шанмаст. Мён пулсан та, пёлессине пёлнё — хутне ђасрах парас, терё.

Трашкуӑн шухӑшё мађђана шӑнӑҫмаст. Ђёре тӑвӑрланат, ахаљ выртмаст. — Кам илсе килђё йала, мён пур йалта, кам пур? Анне ҫук, атте ҫук. Наҫтук?!. ҫук!.. — Ах, кам?!. Трупа хыҫне, аллинђе револьвёр.

— Епё, Трашук, ан пытан. Ну, мён тӑвас? Есё кунтине пёлекенсем пур. Ак сана Микул-пай хёрё хут пама хушрё. Вӑл та пёлнё...

Сисмерё те Миккуљ Трашук хута йепле хыпсаи лнине.

Вулат Трашук. Йулашки сӑмахёнђен пӳҫне ним те ӑнланмарё. Йулашки сӑмахё: „Йуратап“. Пёђёк ађалла сиксе илес — Миккуљран вӑтанђё, мађђи те лутра.

— Кай, кай кунтан ђасрах.

Миккуљ ним ӑнланмасӑрах пусма тӑрӑх ђикеленсе анса кайрё.

Тепёр хут куҫсем ђупаҫҫё хут тӑрӑх.

Ӑнланђё. Хыпарёсем пурте лайӑх.

Трашукӑн ђёри вёҫет.

Ђасрах, хӑвӑртрах.

Трашук хёвеле хӑвалёђђё.

Унтан хӑвалёђђё Мукул-пай кӑвак лашине.

Унтан хӑвалёђђё хёрлисемпе пёрле, кайалла.

Унтан хӑвалёђђё ђехсене йалтан.

Унтан... Унтан Наҫтук!..

Анђах хёвелё йерипен, йулхавӑн шӑват. Виткёђё шӑтӑксенђен кёре-кёре кулат Трашук васканинђен.

Каҫё пулђё.

... Хыçала. Хыçалтан анкартине... Рикӑ патӗнђе, арлаççи хыçӗнђе кӑвак лаша. Лаши патне. Ђасрах сиксе ларас. Хӑвалас. Мӗн ђул хӑвӑрт, ун ђул ђас Наçтука курма пулаѓ. Ак лаша ђӗлпӗрӗ. Ак... рикӑ хыçӗнђен Наçтук вӗçсе тухрӗ. Пуç çаврӑнаѓ. Куç ӗненмест. Ура хускалмасѓ. Çӑвар уçӑлмасѓ.

Икӗ ђӗре! Икӗ ђӗре пӗринђен пӗри инçе мар. Икӗ ӳт, икӗ кӗпе витӗр. Вӗри, тутлӑ Наçтукӑн тутисем... тӑранмалла мар ђуптуса... пӑхса ытармалла мар.

Наçтук хыпалантараѓ:

— Ђасрах, аттесем пӗлӗç!

Сӑмахӗ „кай“, тет,—ђӗри йамасѓ. Тути йамасѓ. Хытӑ тытнӑ. Уйӑрӑлђӗç.

Трашук вӗçет:

Лаши çӗртен,

Ђӗри çӳлтен.

## ТАТАХ КАНАШ УМӖН.

Микул пай пайан савӑнаѓ: Лекрӗ алла хайхи полђшевик çури. Хаљ ӗнтӗ ниçта та кайаймӑн. Тӗттӗм урама купаланаѓ. Пӳрте сӑрхӑнаѓ ђӳређе витӗр.

Микул-пай охвитсер патне.

— Мӗнле, кайатпӑр-и?

— Çук, ир. Тӳс-ха кӑшт. Епӗр ун ђул мар тӳсетпӗр. Хаљ халӑх çывӑрман.

— Ик охвитсер, икӗ салтак, Микул-пай, йал лӑплансан, Ђакак Миккулӗ патне пырса тӑђӗç. Шаккасшӑн—систерес мар, теççӗ. Пӗри хапха урлӑ каçса алӑкне уçрӗ.

Йерипен, кушак пек, мађђа патне: малта салтаксем, унтан охвитсерсем, унтан Микул-пай. Икӗ хунарпа харӑс çутатса йађӗç мађђана—шыраç. Пӗр ђун та çук. Хӑмӑр кушак çех ђӑмрӗ карнис айне.

— Тарнă, шуйттан, тарнă, тесе усаллăн пăшăлтатса илђĕç.

Мĕн тăвас? Ăçта шырамалла? Çĕрле, тупаймăн.

— Хуçинђен ыйтас, калĕ кăшт хĕстерсен, тет Микулпай.

— Йуратъ.

Тупаланатъ Ђакак Миккулĕ.

— Ак туршăн, хĕвелшĕн никам та пулман ман патра... пĕр ђун та.

— А-а! Вăл тата тунма тăратъ! Тытăр.

— Епĕр сана урăхла калаçтарăпăр.

Икĕ салтак ик аллинђен, Миккуђ арăмĕ урисенђен тытнă. Турткалаççĕ пĕр етеме.

Салтаксем малалла, Миккуђ арăмĕ — кайалла. Охвитсерĕ туртса илђĕ, тĕртсе йађĕ арăма. Салтаксене:

— Хăвăрт путвала хупăр, ђассовăй тăратăр, терĕ.

Пурте тухса кайрĕç. Охвитсер (асли) ђарăнса тăђĕ.

Мĕнле пăрахнă çаплипех ђикĕнсе вырттатъ Миккуђ арăмĕ. Айалти кĕпепе. Кĕпи ђĕркуççирен çӳлерех уçăлса кайнă. Тем шухăш тытађђĕ тата охвитсер, салтак ђупса кĕђĕ, — Ваше пăлхароти, курйер çекретлă хут илсе килђĕ. Охвитсерĕн шухăшĕсем вĕçрĕç килне. Штапа хыпаланса çитрĕ.

Паккетĕнђе приккас: „Ыран тапранмалла“.

Ирхине çутăлнă çутăлман ђехсем тапранђĕç. Кĕрхи ир, анђах макăрса ђарăннăскер, сиввĕн пăхатъ. Çĕрĕ лаша урисем айĕнђе çăрăлса ђусталанатъ. Лашисем пуçĕсене уснă. Салтаксем усал, тутлă ыйхăран ир вăратнăран.

Ир пулсан та, хресђен урама тухнă. Ђĕри савăнатъ çак шуйттан ђехсем кайнăшăн. Тăварларĕç, çитĕ. Сурăхсене ђылай сĕтĕрђĕç. Ирсĕрлерĕç.

Йулашки урапасем сăрт хыçне пытансан, етемсем ушкăнăн — ушкăнăн пухăна пуçларĕç.

— Карĕç, мур пуçĕсем!

— Ес йериперех! Микул-пай илтсен, вĕсем тата таврăнсан, тем курăн.

— Ну, хăрап еп сан Микул-пайăнтан.

— Ак мĕн йапала'ку?

Пăшал, пăшал сасси.

— Атаман.

Икĕ пăшал сасси хыççăн ĕретсĕр перӳ пуçланђĕ. Вăрман йанраť.

Ђехсем ним пĕлмесĕрех çывăркаласа пынă. Аслă охвитсерĕ темĕскер астуса илђĕ те, тепĕр охвитсерне ђĕнђĕ:

— Хыпаланнипе мансах кайнă путвала хупса хуни çинђен. Хăвăрт кустар кайалла.

Ыйтса пĕл, мĕнле поЉшевик пулнă, ăçта тарнă, тунсан — пуЉăпа хĕрхенмесĕрех персе хăвар.

Йулашки сăмахпа пĕрле йывăççен хыçĕнђен вăрмана пăшал йанратса йађĕ. Охвитсерĕ ним курмасăр, пĕлмесĕрех хирĕç персе йађĕ.

Çулĕ вăрманпа пыраť. Çул икĕ йенĕпе икĕ çтена салтак ӳссе тăђĕ, малта Трашук команти̇р.

Охвитсерĕ камантă пама шашкине йăтсанах, ăна Трашук тĕллесе илђĕ.

Салтакĕсем камантăсăр ним тума пĕлмесĕрех хĕрлĕ ункă варĕнђе пулса йулђĕç.

— Кам сĕре пĕтес темест, пăрахăр пăшалăрсене!

Пурте пăрахрĕç, икĕ охвитсерсĕр пуçне. Пĕри сăмахсăрах хăйне хăй персе вĕлерђĕ. Тепри, ревоЉвĕрне парас пек пулса, Трашук тытас умĕн персе йађĕ. Трашук кĕлте пек ӳкрĕ. Охвитсерне çавăнтах 10 — 12 штык çине çĕклерĕç.

Лекпом пур. Пăхкаларĕ.

— Суранĕ питех мар. Пĕрер уйăхран тӳрленсе çитĕ, інђах кивĕ суранĕ уçăлса кăшт ђăрмантарĕ.

Кĕтмен-сӳтмен çĕртен йала хĕрлисем килсе кĕђĕç. Вĕсемпе пĕрле ђехсем те, кусем пăшалсăр.

Урама çĕтĕк-çатăк ĕселенсе тухрĕ. Кашни хĕрлĕ салтака хăй патне кӳртесшĕн. Тав тăваççĕ.

Штапне пуйан Таңуш патĕнђе турĕç. Хăй килте çук. Микул-пай та çук. Таçта тарса ĕлкĕрнĕ.

— Штапа Наçтук ђупса кĕђĕ.

— Трофим Петров кунта-и?

— Ретĕмри пӳлĕмре выртаť. Хаљ ун патне кĕме йурамаст, вăл раненнăй.

Ак ӳкес пек тăраť Наçтук... Тӳсрĕ. Хăй ђĕрине çаксене кăтартмарĕ. Астурĕ.

— Пирĕн потвала çĕрле Ђакак Миккуљне хупса хуђĕç, ăна ђасрах кăларас пулаť.

Комантир икĕ салтакпа теçетнике Ђакак Миккуљне кăларма йађĕ.

Тухтăрĕ пӳлĕмрен тухсан, Наçтук ун патне пырса тăђĕ:

— Мĕнле, суранĕ йывăр-и?

— Хăрамалли çук. Уйăхран саççимех сывалса çитет. Наçтук—комантир патне.

— Хĕрарăм аванрах пăхаť, мана йарăр-ха ун патне.

— Епĕр сана пĕлместĕпĕр, такам-ха есĕ.

Наçтук куçне уçса темĕскер калама хатĕрленнĕђђĕ.

— Ну, йурĕ, терĕ комантирĕ. Ăна такăшĕ хăлхаран: савнийĕ, терĕ.

Ак Наçтук пӳлĕмре пĕђђенех. Алăкне хупрĕ. Трашук выртаť. Тăнсăр пулмалла. Вĕçĕмсĕр ђуп тăваť савнийĕ ун питне, куçне, аллине...

— Ăçта пирĕн Муштанăв?—терĕ комантир астуса илсе,—лере те йулмарĕ, таврăнмарĕ, кунтан та тухмарĕ. Калапă çĕрех килсе кĕҗĕ хай çĕрле приккас çитернĕ курйер.

— Пит тутлă çывăрса илтĕм, çĕрле кустарнă хыççăн. Комантирсем кулса шўт тăва пуçларĕç.

— Мĕнле, охвитсерсем сана җей ĕçтермерĕç-и?

— Пулҗĕ ĕç. Ерех те ĕçтерҗĕç.

— Мухмăр пулĕ пайан?

— Мухмăрĕ пур çав.

— Ну вот, Муштанăв й-ш, мухмăр уçмалла, ме-ха, кустар кайалла Тутскине. Полкăн йулашки пайĕ кунта килтĕр. Ху вĕçтер татах малалла, тивиçипе çыхăнма. Тонеççени çине çапла çырнă пулнă:

„Пирĕн алла җехсен отступатĭ тăвакан тивиçин курйерĕ ленкрĕ. Вăл сапĕрнăй роттăна отступатĭ тума приккас илсе пыратĭҗĕ. Епĕр ăна улăштарса, хамăрăнне йатăмăр. Хамăр ирхине, калла җакакан роттăна хирĕç тухса, пĕр йунсăр плена илтĕмĕр“.

## ҖУХĂНСЕМ.

Пăртак пурăнҗĕç те, хĕрлисем те йалтан тапранса карĕç. Малалла, җехсене хăвалама.

Трашук Җакак Микуҗ патĕнҗе выртӑт. Тăнĕ кĕҗĕ. Җĕрĕле пуçлӑт. Наçтук кулленех ашшĕсенҗен вăрттăн Трашук патне кайса килет.

Пăсăлăк хулинҗен хут килҗĕ. Советсене каллах суйламалла. Суйларĕç. Пăсара Çимунĕ хронтран таврăнса ĕлкĕрҗĕ. Шăп совета лексе йулҗĕ.

Ку çитмерĕ. Тата темле җухăн комитте̇җĕсем тумалла хут килнĕ. Җухăнсем пухăнса комиттет суйламалла. Ку комиттет пуйансенҗен лашасем, тырă та иле-иле тухса җухăнсене памалла, тет. Пит хавасланса суйларĕç. Со-

вета суйланă ђух сывмар пирки йулђĕ пулсан та, Трашук кунта лекрĕ. Сывалса çитеђђен Пăсара Çимунĕ ĕçлемелле.

Наçтук ашшĕсене халиђђен систерменђĕ. Хаљ пĕлђĕç. Ашшĕ ăна ђĕнтерђĕ:

— Ну, ес мĕн тăван?! Мĕн ман пуçа мăшкăлан, çав усал патне çÿресе!..

— Атте, есĕ хăвăн хĕрне йуратан пулсан, йерипентерех калаçма пултарăттăнђĕ... Еп... ăна йурататăп. Сан мĕн ĕç унта?!.

— Ман мĕн ĕç-и? е-е-е çын кулли! Кай ман куç умĕнђен. Кай! Савçемех кай ман кил çуртран. Куç умне штупă ан курăн урăх.

Наçтук ђĕри çăмăлланђĕ. Ашшĕ ăна, хăйĕн хĕрне, йуратмасŏ, хĕрхенмест пулсан, ăна та ашшĕ шел мар. Çав каçах Трашук патне кайрĕ те:

— Трашук мана атте хăваласа йађĕ...

Трашук тути савни çăварне хупласа илме ĕлкĕрђĕ.

— Вăл пит лайăх! Апла пулсан пĕрле пурнатпăр. Миккуљ пиђђен шалти пÿрђĕ хаљ пушах. Çимелли тупăпăр. Урăх пире нимĕн те кирлĕ мар. Пĕрле ĕçлер.

— Йурĕ.

-- Анђах, шухăшла-ха, Наçтук, есĕ венђет тăвасшăн пулĕ, йе тата ман ĕç сан кăмăлна каймĕ?

— Ан калаç, ђунăм! Еп сана йурататăп. Ес мĕн тăван çав лайăх...

Икĕ типсе çунса пурăннă ђĕре пĕрлешрĕç. Миçе çул пĕрин ђĕрине пĕри пĕлмесĕр çуннă. Мĕншĕн? Пĕрине пĕри калама хăйайман.

Пурнăç шăваŏ.

Трашук сывалсах çитнĕ çĕре пĕр каçхине Пăсара Çимунĕ килђĕ те:

— Çитĕ, сана ађа, улпутла выртма. Çитменне çĕнĕ çынпа. Ме-ха сана хутсем. Ырантан есĕ комиттет претçетаттĕлĕ... терĕ.

Астурĕ Трашук хăй камне, хăйне малалла мĕнле ĕç кĕтнине.

Ирхине ĕç. Вăрман валеçнĕ. Ђухăнсем ваљђи лашасем тупмалла. Комиттет ларăвĕ. Паллă тăваççĕ:

Микул-пайăнне—пилĕк лаша.

Пуйан Тађушăнне — тăваттă.

Ваççили Карпђăнне — икĕ лаша.

Ђейе Миттанне — икĕ лаша.

Ĕç пуçланса кайрĕ. Кĕрлет.

Ак çимелли çукран Çеркей Салтак арăмĕ килет.

Икĕ пăт çăнăх Пуйан Тађушран.

Пĕр теçетник, пĕр комиттет ђленĕ Пуйан Тађуш патне...

Каççем тĕттĕм. Хура. Пĕлтĕр Киççељов именине çаратма кайнă ђухнехи пекех. Усал кĕрхи çĕр ђўређерен шиклентерсе пăхаť. Çакăн пек каç, çĕрле пухăнаççĕ йалти çăхансем йе Микул-пай патне, йе Пуйан Тађуш патне.

Вĕсен ђĕрисем кĕрхи хура куçран та хурарах, тĕттĕмрех, усалрах.

— Илеççĕ вĕт!.. Пирĕнне илеççĕ...

— Илеççĕ çав...

## КĂНТРИПУТСИ.

Пурнăç йăрана кĕре пуçларĕ. Йахруш хронтран «наступпаť тăватпăр», тесе çыраť. Йалта ђухăнсем Совет влаçне мухтаççĕ. Вăтам пурнакансем шарламаççĕ. Пуйансем шăл хăйраççĕ.

Трашукăн та шăлĕ çивĕђ. Тарçăра пурăннă ђух ăна

хайрани йурарĕ. Вăхăтăн-вăхăтăн Микул-пай тирне аванах сӳсе илет.

Хуларан — пуйансем çине кăнтрипутси хумалла, теççĕ. Пурлăхне кура: пин, пилĕк пин, вунă пин. Кăнтрипутси пухас комиççире пиллĕкĕн. Ђиркӳллĕ йалтан — виççĕ, ђăвашсенђен иккĕн – Темен Иванĕпе Трашук. Икĕ йала пĕр комиççи.

Пуçтарасси çăмăл ĕç мар. Кашнă килте харкашса илес пулаť. Кунĕн-çĕрĕн çӳресе те çирĕм çех çитрĕç. Пуп патне те кĕрсе тухмалла пулђĕ. Малтан кăшкăра пуçланăђђĕ, унтан макăрса йађĕ. Йулашкинђен. Парап, терĕ.

Каçхине темле ĕçпе пуху. Пуху пĕтнĕ çĕре Васçили Карпђă сăмах илђĕ.

— Стариксем! Мĕн намăс кăтартаççĕ пире?! Манран пин тенкĕ илмелле. Микул-пай Ваççилђăран вунă пин. Танил Йехремђран сакăр пин. Мăшкăл вĕт ку...

Пĕр минут хушши пуху хытса тăђĕ, кап хытса:

— Мошшенĕксем!

— Шулĕксем!

— Е-е-е... а-а, у-у-у!..

Шаккаť сĕтеле Трашук, ђарасшăн. Кăшт лăпланђĕç. Ђухăнсем кăшкăра пуçларĕç тата.

— Хырăмсене пушата пуçларĕç-им! Ытла пысăкђĕ-ха! Пирĕн тара нумай пăђăртаса йухтартăр.

— Е-е-е... у-у-у...

Пуху — хуран. Вĕрет. Хура кăпăкне çийеле пухса вĕрет. Хура кăпăк айккипе шурă кăпăк пухăнаť. Шывĕ сикет. Кăпăкне хурантан хăвалаť.

Таçтан Хăйра Йаккăвĕ пукан çине сиксе тăђĕ.

— Стариксем! Пуйансăр йал пурнаймасť. Пуйантан хӳтĕ шыратпăр... Совет влаçĕ пĕлет пĕр илме пуйансенђен шыйăрма, хăй ним те памасť...

Кутӑнти йӗмне хывса илеҫҫӗ вӗт пуйансем! Вӗсем майлӑ сикетӗн.

— Хӑвӑн мӗн пур?

— Миҫе теҫеттин ҫӗрӳ пур?

Халиђђен ҫухалса пурӑннӑ Ђейе Миттапа уђитлӗ килсе тухрӗҫ.

Пӗђӗккӗн-пӗђӗккӗн хыҫала пуйансем тулса ларнӑ. Вӑттаммисем ку ӗҫрен айӑккарах шунӑ. Малта ђухӑнсем пӗр вунӑ ҫын ҫех.

Ђейе Миттіа тӑђӗ.

— Итлӗр-ха, стариксем! Итлӗр! Ку влаҫе — комун влаҫӗ, теҫҫӗ. Комун турра хирӗҫ. Вӑн кураттӑри, пуп ҫине вунӑ пин хунӑ. Хӑҫан турӑ укҫине крапӗт туса илни пур?..

Малтисем:

— Суйат, шуйттан. Ҫитӗ!

— Толой Ђейе таврашсене, ӗмӗрсх улталаса пурӑнаҫҫӗ.

Кайрисем вӗсене хирӗҫ:

— О-о-о... уо-у-у!..

Татах шаккат, Трашук сӗтеле.

— Ђарӑнӑр, ђарӑнӑр!

— Хресђенсем! — Уђитлӗ сиксе тӑђӗ.

— Толой, толой! Ђейе таврашсен хыҫне ҫуласа ҫӳрекен.

Татах кӗрлет пуху.

Татах шаккат Трашук.

— Ђимӗр, ђарӑнӑр, йулташсем! Капла йурамаст. Йулташсем! Епӗр пуйансенне пӗр пӗрђӗк те илместпӗр. Пӗтӗмпе хамӑрӗнне илетпӗр. Микул-пайӑн ним те ҫук. Пӗтӗмпе пирӗн, ђухӑнсен. Ун патӗнђе ӗҫленӗ тарҫӑсен, ђурасен.

Труках урса карӗ пуху хыҫӗ.

— Мĕн нумай каласмалли! Тыт вĕсене! Туртса антар!

Малти ĕретсене сĕтел патнелле хĕстерҫĕс, хысалтах тытăçу пусланнă. Кашкăрăнни пек йалтăртатаççĕ кусĕсем.

— Кăтартар вĕсене кăнтрипутси... тыт комун пусlăхне!

Хысалтан йăвантарса сĕтел патнелле уткăнҫĕс.

Трашук пусĕнҫе вĕсрĕ: ҫиркўллĕ йала караттĕлнăй отрет килнĕ, ухмах, систермеллеҫҫĕ. Револьверне кăларса персе йаҫĕ. Лăшах пулҫĕс пурте. Сав вăхăтрах алăкран салтаксем килсе кĕҫĕс. Хăвăрт сисрĕс. Ҫейе Миттапа уҫитлĕ алăкпатнелле шунăҫҫĕ. Салтаксенҫен пĕри, ҫарса:

— Никам та пўртрен тухма ан хăтланăр!

Иккĕн тул йенне тăрса йулҫĕс. Тăваттăн алăк патне тăҫĕс. Тăваттăн сĕтел патнелле.

Асли хавассăн сасă паҫĕ:

— Е-е, Петров кунта, аван-и?

— Аван та-ха, вăн мĕн хăтланаççĕ.

— Есĕ ăçтан кунта?

— Еп ку йалсем.

— Ну, йурĕ. Ёсе пĕтерер-ха. Мĕн пулҫĕ-ха сирĕн кунта?

Трашук йĕркипе каласа паҫĕ.

Пĕрерĕн-пĕрерĕн илсе тухрĕс салтаксем: Микул-пайа, пуйан Таҫуша, Васçили Карпҫа, Хăйма Йаккуне... татах нумай. Уҫитлĕпе Ҫейе Миттана илсе тухнă ҫухне Трашук:

— Кăсем иккĕш ессерсем,—терĕ.

— Аха!..

Пурте тухса пĕтсен Трашук кăмантире ҫĕнҫĕ.

— Мĕнле пĕлтĕр ара есĕр?

— Пĕр хĕрарăм пырса каларĕ. Ак тăрат вăл.

Трашук кусĕсене сылтăмалла çавăрҫĕ. Настук тăрат. Трашук:

— Ес тата ăçтан шухăшласа илтĕн ăна?

— Хăвах ирхине каларăн вĕт, караттĕлнăй отрет килн
тесе. Мана Çимун тухса: ку вăхăт пытан. Трашукшăн а
хăра: ăна ним те пулас çук, терĕ. Епĕ пуху пӳрђĕ патн
пырса итлерĕм. Пит пăлханаççĕ. Çав вăхăтра пиђђен ађ
лашапа килетђĕ, ăна улталакаласа кустартăм.

Трашукăн куçĕ Наçтук ђĕри вĕçне ђуп-турĕ.

Ирхине пурне те хулана илсе карĕç.

Йал

вĕреме

ђарăнђĕ.

Ӣӳçе пуçларĕ.

## ВĂТАММИСЕМ.

Йал иккĕленђĕ. Варринђе сахалтан сахал тăрса йул
пуçларĕç.

Пĕр хĕрри пуйан Микул-пайсем майлă, тепĕр хĕрр
ђухăн Трашуксем майлă.

Микул-пайсем хулара лараççĕ.

Вĕсем майлă ĕçлекенсем йалта сас паркалаççĕ. Вĕсе
нумайăн мар. Вăтам хресђенсенђен çурри ытла ђухăнсе
йенђе. Тепĕр çурри татах çурмалла çурăлат.

Пĕри — кулаксем çумне çыпçăннисем.

Тепри — варĕнђе тăрса йулнисем.

Кам çĕнтерет, — çавăн майлă.

Йерипе, шăши пек, пурăнкалат Селĕп Кириле. Ĕлĕ
слушпăра унтĕр пулнă, унтан каптинармс пулса т
пăхнă.

Таврăннă ђух укçа, сукнасем, татах хаклă йапаласе
илсе тултарнă. Анђах кун çинђен пĕлекенсем ђирешк
арăмĕ те, мăнтăр тăптулли арђи.

Çимун вуçĕ уйăх çӳресе иртерђĕ претçетаттĕлте. Тепĕ
суйлавра вăтам хресђенсен сассипе претçетаттĕле Селĕ

Кириле кĕрсе ларђĕ. Хĕлип писсăра «çеклеттар» йатлă куђĕç.

Малалла паллă. Вăтамрах, йе пуйанрах хресђенсем мĕн ĕç пулсассăнах — претçетаттĕл патне.

— Кириле патне кайас. Вăл туса парĕ.

Тулă авăртмалла — хут татăкĕсĕр çук. Советран хут илмелле. Ĕлĕк пĕр лавран ытла авăртма памастђĕç, халђ хуť те пилĕк ăлав пултăр — пурĕпĕрех çырса параť. «Лайăх претçетаттĕл».

Ђухăнсем — Трашук патне. Вăл тем те туса пама пултараť. Ăна комун теççĕ те-ха, комун пулиң, кирек мĕн пултăр, — ђухăнсемшĕн çеç лайăх тăваť.

Трашук кашни ернерех вулăса ђуптараť. Унта темле пађейккă тунă, теççĕ. Пăсара Çимунĕсем те комунлана пуçларĕç. Комунĕсем Кирилене йуратмаççĕ.

Пĕрре салтак арăмĕ пырса кĕђĕ Трашук патне:

— Трашук пиђђе, сана калама та намăс та-ха...

— Кала, кала. Мĕн пулђĕ? Ирт, лар...

— Армана ваљђи хут çыртарма пытăм та ĕнер Кириле патне, вĕсем мана: халђ вăхăт çук, каçхине кил, — терĕç. Каçхине карăм, — пĕтĕм намăслантарса пĕтерђĕç.

Çак кунран Трашукпа Кириле хушшинђе пысăк çтена ӳссе тăђĕ. Кириле çтенин пĕр йенĕпе утаť, Трашук — тепĕр йенĕпе.

Кирилен утти сулăнкăллă: хăракалаť Трашукран.

Çур йеннелле йалта ђиттаљнĕ уçрĕç. Ђăвашла, вырăсла кĕнекесем нумай. Ђăвашла кĕнекесем çинђе ăнланас çук сăмахсем: «Инттернатсионал», «Авкуст Пепĕл», «Карл Маркăспа Хритрĕх Енкĕлс»...

Пĕђĕккĕн-пĕђĕккĕн тапрана пуçларĕ вĕренме йал ђакаланса тухаççĕ вулакансем.

Акă иккĕн лараççĕ. Пĕри — ватă Кришша старик,

пуп тарçи пулсап уранна ђух вулама вĕреннĕскер, тепри — кăçал шкулта вулама вĕреннĕ вунпĕрти Вађук. Пĕлмен çĕрте пĕрне-пĕри кăтарткалаççĕ.

Пĕрре Ђейе Миттă ашшĕ пырса кĕђĕ вуламалли çурта. Пăхкаларĕ, пăхкаларĕ те пĕр-ик сăмах ђĕнсе тухса кайрĕ. Ыттисем пăхкаласа йулђĕç.

— Мĕншĕн килсе кĕђĕ-ха ку?

— Вађука шырат пулмалла.

Вăл ун патĕнђе тарçăра пурăнат вĕт.

— Сана шырат-им, Вађук?

— Елле, пĕлместĕп.

Тепĕр ирхине ирех Трашук патне Вађук ђупса пыђĕ:

— Трашук пиђђе, мана Тимук муђи касхине ђиттаљна найса ларнăшăн хăваласа йађĕ.

— Ес татах ун патĕнђе пурăнма хăрамастăн-и? Еп кайаллах сана илтерĕп.

— Хăрамастăп.

Кун хыççăн Ђейе Миттăн ашшĕ сăмах та ђĕнми пулђĕ Вађука.

## КОЛЂАК КИЛЕТ.

Туттăв килет.

Петљурă килет.

Туттăва хăвалаççĕ.

Петљура хăвалаççĕ.

Колђак те килет, те кайат. Петљурă Колђака хăвалат.

Уйăх иртрĕ...

Колђак хĕрлисене хăвалат. Мĕнле ку? Колђак Петљура хăвалат?!

Суйеççĕ. Колђак Çĕпĕрте. Петљурă Украйнăра. Ак Теникккинпа Петљурă çапăçмалла, теççĕ. Теникккин хĕрлисене хăвалат, теççĕ.

Çакăн пек хыпарсемпе сывлаŤ йал.

Çĕрĕ шур виткĕђĕ айĕнђен çур сывлăшĕпе сывлаŤ. Кĕтет. Акă йур кайса пĕтĕ. Йур пĕтсенех, малтан хĕвел ăшшăн ђуптăвĕ. Унтан, çĕре шăйăрса, тырă пĕрђисем витсе хăварĕç. Выђăх сисет ăшша, çатансем урлă савнă хирне, улăхне пăхаŤ. Шăнкăрђăсем шăнкăртатса йал сассине илемлентереççĕ.

Çуркунне килет, пурне те савăнтараŤ.

Колђак килет (пурне те мар) куђантараŤ.

Килет, теççĕ. Акă кунтан инçе мар, Стерлитамакра, терĕç ĕнер. Таллăра, теççĕ пайан.

Кириле Ваççили Карпђа лавккара хирĕç пулђĕ. Ваççили Карпђă куçне хĕссе.

— Мĕнле, Таллăран советђăксем тарнă, теççĕ. Есĕр те тараттăр пулĕ. Кирлĕ пулсан, — ман пата: лашасем лайăх.

— Çапла çав. Тармалла. Тала пиртен 25 çухрăм çеç. Иккĕшĕ те урама тухсан, Ваççили Карпђă, йеррипе:

— Трашукне сыхлăр. Лешсем таçтах кайаймĕç. Труйккă, йе йуланут, хăваласа тытас тесен, хатĕр.

Çав вăхăтрах урăх çĕрте урăх самахсем:

— Ну, Трашук, тармасан лекетпĕр вĕт. Колђак çитсе килет.

— Ёлкĕрĕпĕр. Еп йалтах йулма шухăш тытап. Пытаракансем пулĕç. Кунта Колђакĕ çитейес çук. Çитсен те, кутăн çаврăнмалла.

— Ăçтан пĕлен ара ес?

Йахруш: — Ђаппайĕв тивиçине кунта йараççĕ, тет. Вăл килсен, Колђак тўсейес çук.

— Асту, Микул-пай таврашсем пит шăллă сан çине. Лексен ыррине тупаймăн.

— Курăпăр-ха! Куçĕ тимĕр пайăрка кăлараŤ. Куç харшине пусса, тутисем уçăлмасăрах: «курăпăр», теççĕ.

Çав вăхăтрах теçетник айăккалла пăхакан куçěсемпе такама, темскер систерет.

— Трашук пиђђе! Сана пухăва ђěнтереççě. Шкул патне пухăннă.

Трашук ђěри сисет мěн пуласса, анђах шикленмест; урисем тěрěс пусаççě шкул патнелле. Шухăшě çаврăнаť: Колђаксем килмен-ха, ђухăнсем ђылай, — кулаксене парăнмěç.

Пысăк, хулăм ункă пек халăх. Варринђе — уйăх çех пулаť-ха тěрмерен таврăннă — кулаксем. Трашук пынине Микул-пай курђě:

— Çул парăр, çул парăр комуна.

— Сире Пăсăлăкра аван йакатнă иккен. Камуниссене çул паракан тунă, терě Трашук тăрăхларах пăхса.

Кул, кул! — шăл йěресшěн Микул-пай та, — халě кулни малалла йурě. Мěнле-ха сирěн ěçсем?

— Пирěн аван, сирěн темле? Колђака хăнана кěтеттěрим-ха? Аван. Праçнăка хăнасем килекен. Епěр те Ђаппайăва кěтетпěр.

Куçěсем йěри-тавра, шухăшě пуç тавра: ђухăнсем пур та, сахал, пурте кайра тăраççě.

Пуйан ђăмăркки пит шăрăшлă. Кириле те вěсен ушкăнěнђе шуçăммăн пăхса илет.

Сурђăкě сирпěнет Микул-пайăн:

— Ну, савнă кěрў, аťа килěшер ěнтě. Ес ман хěре илěртсе вăрларăн. Ес ман икě ака вăкăра сутса кăнтрипутси тўлеттертěн, ес мана Пăсăлăк тěрминђе пыйтă çитертěн—пěтěмпех астăвăп. Ну, тўле пуçлас-им?! Ђышки Трашук пиђě патěнђе.

— Йерриперех, Микул-пиђђе! Аллу кěске-ха! — сăмахне ывăтрě тахшин хыçалтан.

— Кам унта калаçаť тата? Ей! кил кунта, тух! Санпа та хĕсеп тытар.

Трашук йеррипе, сăмахсене ђăсса, куçĕсемпе вут ывăтса:

— Ђăнахах та, Микул-пай, йерриперех. Ир сике пуçларăн. Колђак те çитĕ, те çитмĕ йала. Çитеймесен мĕн тăвăн вара? Татах Пăсăлăк тĕрминђе хĕсепленмелле пулмĕ-и?

— Хыçалти ĕрет кулаť.

— Çапла, çапла, Трашук!

Микул-пай пăхса илђĕ. Куçĕ сӳне пуçларĕ. Шухăшлаť хăй ăшĕнђе, мурсем ђыллайăн, кăшт хыпалантăм пулĕ...

Çурăк ђан сасси пурне те мĕн кунне астутарђĕ.

Кириле уткаласа, ђĕтрекелесе:

— Стариксем, пасхă çветтит тума вăхăт çитнĕ. Пађăшкă слушпине пуçланă. Пурте пĕрерĕн кĕлле пырса тăрăр.

Çутă атăсем уйрăлса кайрĕç айăккалла. Çăпатасем ахăлтатса тăрса йулђĕç.

## Т У К.

Икĕ Тук: йалĕ те Тук, шывĕ те Тук.

Шывĕ çинђе йал. Хула тейĕн — шывĕ йађĕпе йал.

Тукăн ђиркӳ çук. Пулман та, пулас та çук.

Тукăн пĕр айăккинђе, сылтăм йенђе, ђиркӳсĕр Тук, тепĕр айăккинђе, сулахай йенђе, ђиркӳллĕ йал—Йăкăнат йалĕ. Тукра — ђăвашсем. Йăкăна тйалĕнђе вырăс. Йалсем хушши çухрăм. Тук куђђанмасť. Йăкăнат йађ турри те вĕсене çитĕ. Çитмесен, хăйсен те пур. Киремет пур, — турăран аслă, ђаплă, мухтавлă. Анђах вырăс турри çĕнтерсе илет. Йăкăнат йалĕнђи вырăссенни пекех, Тукăн та аслă праçнăкĕ — мăнкун.

Пĕр Тукĕ мăнкун тăвасшăн, тепĕр Тукĕ ăна ҫăрмантарать. Ҫыранĕсенҫен тухса икĕ йенелле сарăлса кайать те, икĕ йалне те ҫаннисемпе ҫавăрса илет. Ҫиркўве каймалли ҫук, кимĕпе ҫеҫ каҫма пулать. Пасхă ҫветтит тумасан йурамасть тата. Тук халăхĕ ҫейе. Мĕншĕн Христоса шăмат кун ҫĕртес мар? Мĕншĕн мăнкуна шàматкунах туса хĕрлĕ кăвак ҫăмартасем ҫийес мар? Кăҫал та ҫапла.

Тука ҫĕр ирĕк. Йери-тавра сарăлҫĕ. Шăмат кун пупа кимпе илсе каҫрĕҫ. Шкул патĕнҫе вырăн нумай. Пĕр сехетрех хĕрлĕ-кăвак ҫăмартасем ҫĕре ҫеҫеклентерҫĕҫ. Йурлакансем хатĕр.

Пупăн сасси ерехпе ҫурăлнă. Ҫав сасă хăтарҫĕ те — те Микул-пайран Трашука, те Трашукран Микулпайа.

Икĕ Тук.

Пĕр Тукĕ вилĕме сыхлать. Тепĕр Тукĕ пурнăҫ сунать.

Трашук йерипе сапур тăрăх йăпшăнса пыҫĕ. Тук хĕрринҫе кимĕ кĕтет. Трашук хыҫĕнҫен иккĕн айăккалла пăхкаласа килеҫҫĕ.

Акă кимми, — сикрĕҫ. Трашук йулашкинҫен.

— Епĕр ҫас ҫитĕпĕр. Ҫирĕпрех тăрăр. Колҫак Тук урлă каҫайас ҫук.

Икĕ кĕсмен ик йенҫен. Ким ирĕлҫĕ тăрă тĕттĕмре. Йăван кайалла ҫаврăнҫĕ. Ăна хирĕҫ Ваҫҫили Карпҫă Микул-пайăн икĕ тарҫипе.

— Трашука курмарăн-и, ăна совета ҫĕнеҫҫĕ.

— Ҫук, курман. Вăл сыврать пулмалла.

— Каккуй ҫыврать. Е-е-е вĕҫнĕ пулмалла.

Вăйсăр ҫил. Сасă хуллен йанăраса сĕвĕрĕлҫĕ.

Тук илтет... шарламасть. Хăй ҫех пĕлет вăл Трашук ăҫта кайнине.

# КОЛЂАК.

Кăнтăр хěвелě пайан савăнăçлă, кěлтисемпе çӳлтен шăваť. Çěре анса çăваť ылттăн пайăркипе.

Урам тăрăх: кăвак кěпе, сарă тутăр, симěс тутăр, шурă кěпе, сарă пиçиххи, хěрлě тутăр. Кăвак-симěс, симěс-кăвак, сарă-хěрлě, хěрлě-сарă, вěçрен вěçе вěçкелет.

Мăнкун.

Ту çинђен, Хаххул (йал йађě) йенђен — çирěм йуланут. Кам?

Пуйан хăраť: «хěрли мар-ши?»

Ђухăн хăраť: «шурри мар-ши?»

— Шуррисем, шуррисем... Сăмах вěçет урам тăрăх.

Хапхасем патěнђе, пуйан тăраť çăкăр-тăварпа, хěрлě çăмартапа.

Ђухăн тăраť хытă ђěрипе, шурă пит çăмартипе.

Анђěç: ђынлă, ретлě. Претçетаттěле ыйтаççě. Кашнă салтак ик йенěпе хěрлě çăмарта, сăра, кăмăшка. Тěлěнмелле: — салтаксем çăмартине илеççě, сăрине кăвасне ěçеççě, кăмăшкине тытасшăн та мар.

Халăх Селěп Кириле тěлне пухăнђě. Çěртен пăхсан — çара атă. Çӳлтен пăхсан — çара çӳç. Ђăн сăмахпа — пур те пуйан. Тата çăлăнăç кӳрекенсем умěнђе çěлěксене хывнă.

Варринђе çирěм йуланут. Йуланут тавра, патěнђех йал пуйанěсем: Кириле, Микул-пай, Пуйан Таңуш, Васли Карпђă, Ђейе Миťťа ашшě.

Малтан офитсерěсем хăйсем хушшинђе:

— Ну, хěрлисене пурăнма нумай йулмарě.

— Ури тупанěсене çу сěрсе тăраççě...

Унтан халăха пуç тайса сăмахлама пуçларĕç:

— Ну, стариксем, икĕ çăлтăрли, Совет влаçĕ, лайăхђи?

— Мĕн лайăххи, — йанăраса кайрĕ халăх: Кăнтрипутси, кăнтрипутси, пин, пилĕк пин... вунă... Лайăхђĕ!.. Кăнтрипутси пин...

— Ђимĕр-ха, ђарăнăр! Ним те илтĕнмест. Претçетаттĕл, есĕ кала.

— Вашĕ пăлхароти! (Аллине салтак пекех тытса. Унтĕр пулнă вĕт!) Еп претçетаттĕл та-ха, анђах епĕ пуйансемшĕн çех лайăх претçетаттĕл пултăм. Пĕтĕмпе хамăр майпа туса пытăм. Советски влаç пирĕншĕн лайăх мар: кăнтрипутси нумай илђĕç.

— Лайăх, лайăх ăнлантар! Есĕр кăнтрипутси илнĕшĕн ӳпкелеттĕр. Пирĕн пуçлăх атмирал Колђак пурне те кăнтрипутси кайалла таврат̆. Епĕр камран мĕн ђул илнине, лере пĕлсе тăратпăр. Акă списăк:

1. Микул-пайран — вунă пин.

2. Пуйан Таңушран — сакăр пин... Пурте пур.

— Манне пăх-ха, вашĕ пăлхароти, манне...

— Вот Колђак, вот атте!.. Пирĕн патша... патша — пуйансем вĕре пуçланăђђĕ, офитсерĕ ђарђĕ.

— Кама еп асăнтăм, спискăра вуларăм, çавсем пурте ларăр лашасем çине, ат̆ăр пирĕнпе, кăнтрипутси укçине тавăрма.

Икĕ минутран вунтăхăр çын шурри, вуникĕ кулак, мĕн пурĕ вăтăр пĕр йуланут ту çине хăпарса кайрĕç.

Тепĕр минутран тăрса йулнă офитсер патне Трашук пырса тăђĕ. Утрĕç шкул патне. Çитсенех офитсерĕ пухăнса тăнă ђухăнсене каласа тĕлĕнтерђĕ:

— Йулташсем, епĕр Колђак мар — хĕрлисем...

Револӡутсийе хирӗç пыракан йал çурри пуçсӑр йулӡӗ. Вунпӗр кулака, пӗр претçетаттӗле хӗрлисем илсе кайрӗç. Тукра Колӡака кӗтекен çукпа пӗр.

Каçпа Колӡак çитсе кӗӡӗ йала. Урамра никам та çук. Никам та хирӗç тухмаст̆. Пӗртен пӗр йал Колӡака хирӗç тухманни. Урамсем тӑрӑх уткӑнтараççӗ лашисене, ылттӑн пакунӗсем йӑлтӑртатса пыраççӗ.

Ӡи малтан пуху пухрӗç. Офитсерӗ Колӡак йаӡӗпе мопилисатси опйавит турӗ. Халӑх хушшинӡен пӗр сӑмах та çук. Сиксе тухрӗ офитсер:

— Мӗн ӡӗнместӗр, сурӑхсем?! Ыран ирхине пурте, çирӗмрен пуçласа вӑтӑр пилӗк çулхи хушшисем, хатӗр пулӑр.

Мӗнле ӡӗмсӗр пухӑнӡӗç, çапла ӡӗмсӗрех саланӡӗç. Ӡухӑнӗ те ӡӗнмест, пуйанни те шарламаст̆.

Пуху хыççӑн ирсӗрлеме тытӑнӡӗç. Малтан килкартинӡен килкартине, витерен витене—лайӑх лаша шырама; унтан анкартинӡен анкартине, рикаран рикана.

Такамӑн икӗ вӑкӑрне пусрӗç.

Каçхине салтаксем урама тухрӗç, — никам та çук.

Мӗнле апла хӗрсем Колӡак салтакӗсене йӑпатма тухман? Аӑ̆а килӗрен! Çакӑнтан пуçланӡӗ...

Трашук пухрӗ хӑй патне пӗтӗм шанӡӑклисене.

— Илтрӗр-и? Ыран пире хамӑр влаçе хирӗç вӑрçма илсе каймалла. Ку ескатрон çавӑншӑн çеç килнӗ пирӗн йала. Кӗçӗр пирӗн ӗçлес пулат̆. Пирӗн йала Колӡак хӑйӗн полккисемпе килейес çук. Хаххултан Тутски çине каймалла. Унтан пуçне çывӑха Ӡаппайӗв тивиçийӗ килсе çитнӗ. Унта ӡӑваш аӡисем те пур. Халӗ ӗнтӗ Колӡак Хаххултан кайалла ӡакмалла. Йӑван, ме сана списсӑк — салтаксем ӑçта-ӑçта вырнаçнине пӗлтӗмӗр, вуник сехетре пуçлар.

Çав вăхăтрах сарайĕнђе, Настук кровађĕ патĕнђе, икĕ салтак. Пĕри урисенђен тытнă Настука, теприаллинђен. Пĕр сикўпе Трашук кроваŤ патĕнђе. Пĕрне тытса ывăтрĕ пўртрен тухнă çынсем патне, ăна лешсем çавăрса илђĕç, теприне хăй çавăрса илђĕ. Ђакак Микулĕ хăй арăмĕпе Настука кĕлете питĕрсе илђĕ. Трашук пăвса илнĕђђĕ салтака, çиллипе тўсеймерĕ, револђвĕрне кăларса персе йађĕ. Пăшал сассине илтсен, иртсе пыракан патруљ ђупса кĕђĕ.

Трашук курмасŤ вĕсене, уткăнђĕ кроваŤ патне, Настук унта тесе. Çук. Çав вăхăтрах ăна çавăрса илђĕç. Икĕ салтак икĕ йенђен.

Тата иккĕш Йăвана тытнă. Ыттисем саланса пĕтнĕ патруљ кĕрсенех.

— Ну, ăçта кусене? тет пĕри.

— АŤа штапа...

Штапĕ Пуйан Таңуш патĕнђе. Офитсерĕ, Трашук комун иккенне пĕлсен:

— Хупса хурас иккĕшне те, ыран ђĕрĕллех Колђак патне кайăпăр. Куна путвала, куна—кĕлете... Илсе кайрĕç.

Трашук потвалта, Йăван кĕлетре. Мĕн тăвас? Кĕçĕр, Йăван тухаймасан, пĕтĕм ĕç пĕтрĕ! Ыран мопилисатси пулаŤ. Алăк патне пырса итлерĕ, ђассовойĕ харлаттараŤ. Ку майлă.

Пăхрĕ çўлелле: виткĕђи улăм пулмалла. Пўлмесем тăрăх хăпарса кайрĕ, —улăм... Пĕђĕккĕн-пĕђĕккĕн, пĕрђĕккĕн-пĕрђĕкĕн виткĕђе тăпăлтарђĕ, кĕлет тăрне тухса ларђĕ.

— Мĕн тăвас хаљ ĕнтĕ? Ђи малтан пăшал кирлĕ. Тўрех сиксе анђĕ хăрлаттаракан ђассовой çине. Пăвса пăрахрĕ. Пăшал, киншал, пĕр пумпă пур. Кунтан потвал патне ђупрĕ, Трашук патне. Йăпшăна-йăпшăна пырса

çитрĕ, ђассовăй винтовкипе тайăнса тăрат. Хыçалтан сикрĕ те, тӳрех мăйран. Куна та пăвса пăрахрĕ. Киншалпа хайăрса уçрĕ. Трашук ђупса кĕђĕ.

— Ђасрах, хăвăрт!..

Каçĕ тĕттĕм. Тĕттĕмрен тĕттĕм мĕлкесем 12 сехетре пӳртсем çуммипе йăпшăнса килтен киле саланђĕç.

Трашук тăватă çынпа — Пуйан Таңуш патне. Алăк патĕнђе ђассовой харлаттарат. Ун çине пăхмаççĕ, тӳрех шала. Виçĕ офитсер хывăнмасăрах выртнă, пăшалĕсем, шашкисем кĕтесре.

— Çых!..

Çывраканскерсене çыхса хуђĕç. Ыттисем тӳсеймен — Трашук çыхса тухма хушнăђђĕ — пурне те вакласа пĕтернĕ.

Ирхине халăха пуçтарса виçĕ офитсере персе вĕлермелле сут турĕç.

Халăх умĕнђех Тук шывĕ хĕрне илсе тухса персе вĕлерђĕç. Халăх тăранђĕ. Салтак йулашкисене турттарнă ђух, хăшĕ-хăшĕ виллисене таптаççĕ, хăпарса çикеççĕ.

— Лашашăн, вăкăршăн... арăмшăн!

Колђак ескатронĕ хĕрлĕ ескатрон пулса тăђĕ: хĕçпăшалсемпе, лашасемпе, пулеметпа.

Ту çине хурал тăратрĕç.

Кăнтăрлапа пĕри ту çинђен кустарса килђĕ:

— Хаххол йенђен кунталла çар килет, Тутски йенђен — ăна хирĕç тепĕр çар: хĕрлисем пулмалла. Çавăнтах тупă сасси илтĕнђĕ.

Пилĕк минутран Трашук ескатронĕ пуçтарăнђĕ.

Ну, йулташсем, кĕçĕр çывракан салтаксене вĕлертĕмĕр, пайан ђĕрĕ салтаксемпе вăрçма вăхăт çитрĕ. Пурте хатĕри халех хĕрлисене пулăшма кайма?..

— Хатĕр.

Харăс, салтаксем пекех, каларĕç.

— Пурте салтак ĕçне пĕлеççĕ-и?

— Пурте.

— Халĕ ĕнтĕ командир суйлас пулаť.

— Трашука, Трашук пулаť.

— Йурĕ, йулташсем, сирĕн кăмăлăр пулсассăн пулăп.

Урамра ескатрон ӳссе тăђĕ, хатĕр.

Халиђђен çирĕпђђĕ Настук, уйăрлас ђухне макăрса йађĕ.

— Ма хăвăратăн есĕ мана? Епĕ те санпа пыратăп.

— Ухмах, мĕн тăван ес унта? Вăрçă ĕçне пĕлместĕн, вырăнсăрах вĕлерĕç. Йул!.. Йул!..

Настука вăл крова̌т çине хуђĕ те, ђупса тухса кайрĕ.

Ескатрон кустарђĕ ту çине.

Хаххолпа Тутски йалĕсем хушшинђе Ђаппайĕвăн икĕ полкки Колђакăн виçĕ полккипе хире-хирĕç пулнă. Лешсен те, кусен те снаретсем те çук, патронсем те çук. Перкелерĕç-перкелерĕç те, тӳсеймерĕç. Ђаппайĕв салтакĕсем:

— Ура! ура!!!

Кайрĕç малалла вĕçсе. Лешсем кураççĕ кусем сахалне, ђакмарĕç. Пĕр минутран пăтранса пĕтрĕç. Ђаппайĕв утлă çарĕ вĕçет, ђикет, каса̌т. Колђак утлă çарĕ çурранланђĕ темĕншĕн.

Кам çĕнтерет?

Акă ту хыçĕнђен Колђак айккинђен ура кăшкăрса тепĕр ескатрон килсе тухрĕ. Колђак сылтăм çунаттине лутăркаса тăкрĕ. Пăтранайманнисем тара пуçларĕç.

Тараймăн!

Çур сехетре вăрçă пĕтсе тăђĕ.

Икĕ ђăваш ескатронĕ ĕретĕн кĕђĕç Хаххол йалне.

Пĕри — Трашук, тепри — Йахруш. Калаçса тăранаймаççĕ. Йахруш Ђаппайĕв тививçинђе пулнă.

Тепĕр кунне полккă комантирĕ Ђаппайĕв патне — Сан çумна тепĕр топроволђђĕски парттисански ескатрон, пур салтак хатĕрĕ, пурлăхĕ мĕнĕпех хутшăнасшăн, тесе тонесçени йађĕ.

Тук лăпланђĕ. Çĕр вунвиççĕ çынна йахăн сахалланђĕ. Вуникĕшĕ контрипутси илме кайнă, çĕр те пĕр çын Колђака хирĕç вăрçма. Йулнисем мăнкун тăваттăмăш кунне хура хире çур акине саланђĕç: сӳрене, акана.

Икĕ йуланут çех ту çинелле кустарђĕç Трашука шырама.

Пĕри Наçтук, тепри Вађук.

---

Крађђух вулăсĕнђе 1921-мĕш çул раçверсткă ĕçĕ хăш-хăш претçетаттĕл нађар пирки нађар ирткелерĕ. Кăшкăрашаççĕ, памаççĕ. Ђас-ђасах вăйпа та илмелле пулкаларĕ. Çитсе кĕтĕмĕр Тук йалне. Унта ђăвашсем пурăнаççĕ тет, претçетаттĕлĕ Петров Трофим — комунис.

Манăн ђĕре кăртах сикрĕ.

Илсе пыђĕç тӳрех йалсовет çурђĕ патне. Унта пуху. Пухура ђăвашла тухса каларăм. Пурте хĕпĕртерĕç.

— Тултарасса тултартăмăр та пĕрне, татах хураççĕ-и ĕнтĕ, терĕ пĕри пуçне хыçкаласа.

Пăхатăп — пĕтĕмпех тултарнă. Кун пекки пĕртен пĕр йал тĕл пултăм, хам çӳренĕ ђух.

Вĕсем, хăйсен йалĕнђе мĕн пулни çинђен каласа кăтартрĕç. Ку пухурисем, çурри ытла тенĕ пекех, Трашук ескатронĕнђе пулнăскерсем.

— Хĕрлĕ çар вађђи, хамăра вађђи илеççĕ, çавăнпа патăмăр, теççĕ.

Кайалла таваранна ђух, Трашук патне кётём. Хăй хура: пиђĕ те, çÿçĕ те, куç харшисем те; куçĕ кăвак. Куçĕнђе вăй нумай. Епĕ ăна хам мĕн пулнине каларăм, вăл мана ыттисене каласа кăтартрĕ.

— Колђака Омски леш йенне хăваласа йарсан, пирĕн ескатрона киле йађĕç. Ултă çын çех пĕтрĕ.

Вĕсен хушшинђе Темен Йăванĕ. Шел Вађука, — терĕ Трашук.

Кулаксене тĕрмере кĕркуннеђђен тытса усранă. Пилĕк çул хушшинђе Совета хирĕç пĕр сăмах тухсан, сăмахсăрах персе вĕлермелле хут панă Трашука. Хаљ пурте шăпăрт. Ессерсен уђитли таçта çухалнă. Ђейе Миттă вулăсра переписђĕкра ĕçлет.

Вађукне Самара вĕренме йанă.

Хĕрлĕ çĕпре хĕрлĕ йала йÿçĕтрĕ.

**Хăшпĕр сăмахсене ăнлантарса пани.**

1. Уçминник — анан сакăрăмĕш пайĕ.
2. Палтушка — ханкăрма, шăнкăрма.
3. Мăйа — хĕрсен кĕмĕл тенкĕсем çакса тунă мăй çыххи.
4. Хÿре — хĕрарăмсем çакакан сарă.
5. Кăмăшкă — самокон.
6. Кĕсмен — весла.

ЫЙТУСЕМ:

*1. Çак проиçвестенин тĕп шухăшне кăтартăр.*

*2. Кам вăл Трашук, вăл камшăн кĕрешет?*

*3. Ђухăнсем мĕншĕн Совет влаçĕшĕн, алла пăшал тытса, вăрçма кайаççĕ?*

*4. Микул-пайсем — камсем, вĕсем мĕншĕн Совет влаçне кураймаççĕ?*

*5. Автăр ђĕлхин пуйанлăхĕпе çитменлĕхĕсене кăтартса парăр.*

Паҫура Иванĕ.

# ВЫÇЛĂХ ÇУЛ.

I

Хĕвел кăшт пуçне кăларнă та, хĕп-хĕрлĕ пушар йеверлĕ çанталăка хуйăха йертнĕ пек, илемсĕррĕн пăхса тăрат. Лăпкă çанталăк. Ним сас-ҫĕвĕ те çук: пурте çывраççĕ. Хаљҫен сат пахҫинҫе шăпҫăк хăй йурринешăрантарса ларатҫĕ, — хаљ вăл та çук. Автансем те ирпеле, пĕр-пĕринҫен ăмăртса хытă, савăнăçлă авăтаканҫҫĕ — хаљ вĕсем те, темрен вăтаннă пек пулса, урисене çăмăллăн пусса çеç утса çӳреççĕ. Вĕсем урисене çĕклесе, çунаҫĕсене сарса талтлаттарса ҫупма темрен именеççĕ. Йăтăсем те пайан хӳрисене хырăм айне çавăрса ҫикнĕ. Çын куçĕнҫен, тем тилмĕрсе ыйтнă пек, йăвашшăн пăхса тăраççĕ. Ăçта пăхан — унта ӳрĕк-сӳрĕк, хăйусăр, хурлăхлă çӳрекенсене анҫах куратăн.

Хырăмра темскер пăкăр-пакăр туса çӳлелле хăпарҫĕ. Пырăшсене такам аллипе йарса илнĕ те, тăпăлтарса илес пекех туртат. Манăн çийес килет. Анҫах мĕн çийес, камран ыйтас? Никамран ыйтма пĕлместĕп. Аннене ĕнер масар (çăва) çине шăтăка кайса ҫикрĕмĕр. Атте ăна кура çĕрĕпе те çывăрмарĕ: ҫӳреҫе умĕнҫи çутă уйăх çине пăхса, çĕрĕпех ҫĕлĕмне çăвартан кăлармасăр паклаттарса, тем шухăша кайса ларҫĕ. Пайан тата карташне тухнă та, пĕр муклашка çинҫе ним ҫĕнмесĕр ларат.

— Атте! çийес килет. Вар ыратат, — терĕм те:

— Ах, аҫам, выçă вилетпĕр пуљ ĕнтĕ, мĕн тупса çийĕпĕрши? — тесе вăрăммăн, ĕмĕр хуйăх айĕнҫе пурăннă çын пек каларĕ.

Ăна илтнĕ хыççăн еп ҫăтаймарăм. Ман кăмăл хуçăлса кайрĕ те, еп йĕрсе йатăм. Мана курса атте те, (унҫҫен епĕ вăл йĕнине курманҫҫĕ) пĕҫĕк аҫа пек, ĕсĕклесех йĕрсе йаҫĕ.

— Аҫамăрсене шел... Тăлăха хăварҫĕ сире аҫҫӳ. Сире пăхса ӳстересрен хăраса вилсе выртрĕ пулĕ вăл,— терĕ те атте, еп пушшех хытă йĕре пуçларăм. Атте куççуллине кĕпе çаннипе шăлса илҫĕ те ҫĕлĕмне тивертсе йаҫĕ. Епĕ çапах йĕретĕп. Ман çийес килет, ăшра тем пакăртатса çӳрет, çимелли ыйтат.

Атте шухăшласа ларҫĕ те мана:

— Аҫам, çавăнта пĕрер ҫăххине картана хупăрласа тытса кил-ха. Пĕрер ҫăххине пусса çийер. Çынсем авă мăйан çăкрисем пĕçерсе çийе пуçланă, тет. Пирĕн пĕр-ик пăт пăри хывлăхĕ пур ĕнтĕ те, те çавна ырашпа авăртас ĕнтĕ? Ырашĕ тепĕр пилĕк пăт пулайĕши унта? Ăçта-ха, пĕрер ҫăххине тытса кил,— терĕ вăл мана.

Епĕ хавасланнипе урана çĕре тивертми карталла ҫупрăм, картана кĕтĕм те ҫăхсене: ҫип-ҫип-ҫип-ҫиип! — тесе йăхăратăп. Пĕр ик ҫăххи ман умма пырса тăҫĕç те, пĕҫĕк аҫа пек йăвашшăн, мĕскĕн пăхса тăраççĕ. Пĕрне тытрăм та кăшкăрма та пĕлмест: — кăрк, кăрк,— терĕ те йăваш сассипе, куçĕсене сиввĕн çавăрса илсе, ман ал çине лăштăрр сарăлса выртрĕ.

— Атте! Алрах вилсе кайрĕ пуҫ ку. Куçĕсене хупса выртрĕ! — тесе кăшкăртăм.

— Илсе кил кунта, йунĕ сивĕнеҫҫен пусса пăрахар,— терĕ мана хирĕç атте. Епĕ ҫăхха çĕклесе атте патне илсе пытăм. Атте пуртă илҫĕ те ҫăхха мăйĕнҫен касса пăрахрĕ. Вара тасаткаласа йашка пĕçерсе çирĕмĕр.

Пайан пурăнатпăр ĕнтĕ, ыран тепĕр кун мĕнпе пурăнмалла? Пилĕк пăт ырашпа, икĕ пăт хывлăхпа нумайах

тăранса пурăнас çук. Темшĕн пуçра та тăн çук, ним шухăшлама та пĕлмест. Епĕ хамшăн татах куђанмастăп. Манран кĕçĕнни тата виççĕн-çке-ха: икĕ йăмăк та пĕр шăллăм. Ђи кĕçĕнни, Улђкка, çулталăк та тултарайман. Çавсене шеллетĕп. Вĕсем, пĕђĕккĕскерсем, йĕме те пĕлмеççĕ, çын куçĕнђен ўрĕк-сўрĕк пăхкаласа лараççĕ. Вĕсене курсан, вĕсен мĕскĕн, вăйсăр сăнĕсене пăхсан ирĕксĕр макăрса йаратăн. Çын макăрнине крсан тин вара вĕсем çын куçĕнђен пăхса йĕрсе йараççĕ. Пĕр йĕме пуçласасса



Çурăмĕ хыçне хăй така тирĕ çакса йанă, витрепе така какайĕ йатнă.—Епĕ вăрă! Така вăрласа пусрăм!—тесе çухăрса пыраť.

тăватсăмăр та йĕретпĕр, ђарăнма та пĕлместпĕр. Атте вăл пĕрмайах тулта кăштăртатса çўрет. Йе пўртре те, ђўређе çине тайанса лараť те, ђĕлĕмне пашлаттарса тем шухăшласа лараť.

— Кўрĕшсем мĕнле пурăнаççĕ-ши? Вĕсем те пирĕн пекех выçă лараççĕ-ши?—тесе шухăша кайса ларатăп. Çав вăхăтрах атте:

— Ай, тур, урампа халăх пуçтаранса килет. Мĕн йапала-ши? Советран тырă памалла тетђĕç, çавна валеçме пухăнманши унта?—тесе урама тухса кайрĕ. Епĕ хавасланса кайрăм.

— Тырă парсан таса çăкăр пĕçерсе çиеттĕмĕр-ха ĕнтĕ,—тесе атте хыççăн урамалла ђупса тухрăм.

Урам тăрăх тăптулли халăх сĕрлесе пырат. Халăх варринђе пирĕн кўрĕшĕ çынни пырат. Çурăмĕ хыçне хăй така тирĕ çакса йанă, витрепе така какайĕ (ашĕ) йатнă хăй.

— Епĕ—вăрă! Така вăрласа пусрăм!—тесе çухăрса пырат. Çухăрмасассăн хĕнеççĕ ăна çынсем, патаксемпе çапаççĕ. Пўрте кĕрсен аттерен:

— Мĕншĕн хĕнеççĕ вара ăна?—терĕм те, атте:

— Выçăпа така вăрласа пуснă та вăл, çавăнпа хĕнеççĕ ăна,—терĕ. Тем кăтартĕ-ха ку выçлăх. Халђђен кам вăрă тесе каланă ăна? Çын йапалине пўрнепе те тĕртсе пăхман пулĕ, халђ ав вăрăпа тытăнђĕ. Ай-йай-ай! Тем курса вилмелле пулĕ-ха?—терĕ те, нумайђђен ним ђĕнмесĕр ларђĕ. Унтан сўннĕ ђĕлĕмне ђĕртсе йађĕ те, каллех асăнма пуçларĕ:

— Ав унта, Анаткасра темĕнђул пуйансем, вĕсем те çимелли çитмест, теççĕ. Тата вилĕ какайсем çиме пуçланисем те нумай, теççĕ. Те ђăн çак тата: Шăхалре выçлăхпа пĕри хăй ађине пусса çинĕ, теççĕ? Тата Пеťук Хветли йыт виллисене пуçтарса çўрет... Ах, çан çурăм ђĕтресе кайрĕ! Калама та хăрушă—тесе пĕтерђĕ вăл. Хăй пĕр куç сиктермесĕр ђўређерен пăхса шухăшласа ларат.

Атте—ађине пусса çинĕ—тенине илтсенех мана, атте пире пусса çийес тенĕ пекех туйăнса кайрĕ. Ђĕрене çĕçĕ кĕрсе кайнă пек пулса кайрĕ те, хам та пĕлместĕп—темшĕн, кăшкăрса йĕрсе йатăм. Куç-пуç хуралса кайрĕ

те, куҫа темтепĕр курăна пуҫларĕ: ав унта пĕри хуран ҫинђе хăйĕн ађине хĕртет, ав кунталла килет!..

— Ай, ай!.. Аллине тăсать, тытать! Атте!.. Ђар, ђар — тесе хайар сасăпа кăшкăрса йатăм.

Куҫа лайăхрах уҫса пăхатăп та, ман ҫумра аттерен пуҫне никам та ҫук. Ман йăмăксем тĕпелте сак ҫине пуҫтарăнса, еп ҫухăрнинђен тĕлĕнсе лараҫҫĕ. Атте мана ыталаса илнĕ те:

— Мĕн, мĕн пулђĕ, мĕн куртăн? Никам та ҫук-ҫке, лăплан. Ав уҫăлмалла тула тухса ларар, — терĕ те, пĕђĕк йăмăка ҫĕклесе тула илсе тухрĕ. Вĕсен хыҫҫăн епĕр те тула тухса кайрăмăр. Анђах ҫапах та ман умран усал курăнни сирĕлсе каймасть. Карташĕнђе те вăл ман пуҫри мимесене хускатма ђарăнмарĕ.

Атте куҫĕнђен пăхсассăнах: „ађине пусса ҫинĕ“ тени аса килсе кайса пуҫа ҫавăра пуҫлать. Ҫыварнă ђух та тĕлĕкре курăнкалать.

Ҫакăн пек, кашни кунах пурнăҫ малалла шуса пырать. Йалта, урамра, кӳрĕшре, хуть ăҫта кайсан та: „ах!“ тесе кућаннине ҫеҫ курма пулать. Савăнăҫ йалтан такҫанах тухса тарнă. Йалта хаћ савăнăҫ ҫук. Урамра йытă сасси илтĕнмест. Ĕлĕк пĕђĕк ађасем урамра ђупса, выћаса, ҫухăрса ҫӳрекенђђĕ, хаћ вĕсем пӳртрен те тухмасăр лараҫҫĕ. Кайăк-кĕшĕксем те курăнмаҫҫĕ хаћ йалта. Вĕсем те выҫлăхран хăраса тарса пĕтнĕ. Йалĕпе те тăват кăвакарђăн анђах курăнкалаҫҫĕ. Ҫынсем те хаћ урамра пухăнса лармаҫҫĕ. Килте ним тума пĕлмесĕр лараҫҫĕ. Ҫавăн пек вăхăт шуса пырать, кĕркунне пĕтсе килсе хĕл патнелле ҫывхарать.

Пĕрре, ирхине, пирĕн патра хам пекех пĕђĕк йулташ пырса кĕђĕ те:

— Ваңђук килте пури? — терĕ.

Атте ӑна хирӗҫ шӳт тумалла пек:

— Пирӗн Ваҥуш Мускава ҫӑкӑр илме кайрӗ! Есӗ кайман-им вара? — тесе йӑл кулса илҭӗ.

Манӑн йулташ кӑмӑлсӑр пулса кайнӑ пек пулса пуҫне ҭиксе тӑрат̆. Унтан атте каланӑ сӑмахсене ӗненмен пек пулҭӗ те, куҫӗсемпе мана шыра пуҫларӗ. Епӗ, кӑмака ҫинҭе ура сырса лараканскер, йулташа кӑмӑлсӑр хӑварас мар тесе:

— Мӗн есӗ хӑраса ӳкрӗн, Ванущ? Ахаљ калат̆ вӗт вӑл атте, — терӗм те кӑмака ҫинҭен сиксе антӑм.

— Е, кайманҫке, пиҭҭе, мӗн суйатӑн вара есӗ мана. Епӗ хӑрасах ӳкрӗм, — тесе мана курнипе кулса йаҭӗ. Унтан мана кӑҭӑк туртса карташне тухса кайрӗ. Епӗ те ун хыҫӗнҭен йулмарӑм.

— Мӗнле, есӗ ҭӑнах та Мускава кайас тетне вара? — тесе калаҫу пуҫласа йаҭӗ вӑл.

— Ахаљ, кулса анҭах каларӗ вӗт вӑл атте. Кам йертсе кайтӑр унта мана? тетӗп.

— Апла пулсан, Ваҥуш, Ҫӗпӗре кайатпӑр. Хаљ ҫур йал ытла Ҫӗпӗре кайма хатӗрленнӗ. Авӑ, хаљ, Елекҫей пиҭҭесен Анни, Мирун, Йакӑп, Аљти, тата ыттисем те кайаҫҫӗ. Ат̆а епӗр те пӗрле кайатпӑр, — тесе пысӑк ҫынсем пекех шакӑлтатса ларатпӑр.

— Ҫӗпӗре? Унта пит лайӑх теҫҫӗ те!.. Мӗнле кайасха унта, пит инҫе пуљ вӑл Ҫӗпӗр?

— Мӗн хӑрамалли пултӑр унта: инҫе-и, ҫывӑх-и — пурӗ пӗрех пирӗн, килте пурӑнсассӑн, выҫӑ вилес пулат̆. Пире, пӗҭӗк аҭасене, Ҫӗпӗрте лайӑх пулат̆, пире такам та усрама пултарат̆, — терӗ вӑл.

Епӗ савӑннипе ним тума пӗлмесӗр тӑратӑп. Манӑн пайанах вӗҫсе кайас килсе кайрӗ. Хавасланнипе, хам та сисмерӗм, ман тутасем ҫемҫелсе кайса, кулас килмен ҫӗртен кулса илҭӗҫ. Унтан:

— Пире кам йертсе кайё-ши унта? тетёп.

— Талне Петёр пиђђе илсе кайас терё. Епё ăна: Вађушпа пыратпăр терём. Хăй çăкăрнех çитерсе илсе кайатăп, тет.

Епё ăна хирёç ним калама пёлмесёр тăратăп. Пёр:

— Ай, ађа, кайсан пит те лайăх пулаť-çке вара, — тетёп. — Есё каçпа тата килсе пăх-ха, еп унђђен аттерен ыйтса пăхам, — терём те, пўрте кётём. Вăл килне кайрё.

— Ăçта кайнă есё, Вађуш? Епёр апат çийес тетпёр. Хаљ ёнтё пёђђен-иккён ларса çиме йурамасť. Пурте пёрле ларса çийес пулаť. Малашне вăхăтра анђах çисе пурăнмалла пулаť ёнтё, — терё мана атте. Епё ним ђёнмесёрех апат çиме кёрсе лартăм.

Сётел хушшинђе аттене Çёпёре кайма шут тытни çинђен каласа патăм та, манран атте кула пуçларё:

— Шăхран стантсинђен те малалла кайас çук вёт есёр ађамсем. Сирён пек пёђёк ађасене машшин çинђен ывăтайса хăвараççё унта, — тесе йёкёлте пуçларё.

— Епёр хамăр çеç мар вёт. Пире Талне Петёр пиђђе илсе кайас тет. Мёнле çитеймёпёр вара епёр? Сăмахлама пёлетёп вёт епё. Пăртак çырма-вулама та пёлетёп, — терём епё аттене хирёç.

— Сан вулама пёлнипе нумайах Çёпёре кайаймăн, — терё. Унтан ђылай шухăшласа ларсан хăй ёлёк ёçлеме кайса пурăннă вырăнсем çинђен кала пуçларё: „Хапаровски, Влативосток, Камђаткă, Амур“ — тем, тем мурё те каласа пётерђё пуљ унта. Унта тырă йўнёђђё, унта ку йўнё, ку хаклă, тет. Тем те каласа кăтартрё пуљ унта, пурне аса та илес çук. Йулашкинђен вăл:

— Епё Петёр Танилђ патне кайса калаçса килем-ха кёçёр, вара кайсан та кайăр, — тесе пётерђё.

Епё хавасланнипе ним тума пёлмесёр ларатăп. Пуçра

пěр: „Хапаровски, Амур“ тенě сăмахсем анђах выљанаççě. Каçпа çывăрма выртсан та вěсемпех аташса выртнă.

Тепěр ирхине епě пуринђен малтан вырăн çинђен сиксе тăтăм. Пурте йăвăр ыйăхпа çывăраççě. Атте те ним хусканмасăр харлаттарса çывăрат. Мана пěђђен çеç утса çӳреме киђем пек туйăнса кайрě. Çавăнпа та атте пуç вěçне атте вăранасса кěтме пырса лартăм. Пуçа пысăк шухăшсем пырса кěреççě. Куç-пуç хуралса кайат. Тем те пěр куç умěнђе выљанаççě: выçлăх карланкăран йарса илсе ђăмăртат, пирěн йалсем вилсе пěтнě пек. Ай! калама та киђем.

Атте пуç вěçěнђе ларнă çěртех епě çывăрса кайнă пулнă. Атте мана:

— Тăрах, ађам. Авă унта сан патна, Иван килнě, — тесе тăратрě. Еп унтан: епěр Çěпěре кайас пирки вăл мěн шухăшланине ыйтса пěлтěм. Вăл мана:

— Йаратăп. Тухса курса, уçăлса çӳрěрех. Сывă пулсан вилмěр-ха. Йăмăкусене шел, вěсем пěђěккě: тухса çӳреймеççě. Есěр хаљ пăртак пěлекен пулнă, кайса курăрах. Епěр кунта майěпе пурăнкалăпăр, — терě те, куç-çӳлсемпех йěрсе йађě. — Çак Уљккана ӳстерсе амăшě вырăнне хěр тăвасђě. Унтан пěђěк йăмăк Уљккана тытса ђуптуса илђě те пушшех хытă йěрсе йађě. Уљкка та, аттен шывлă куçěсене курса ěсěклетсех йěре пуçларě. Епěр Иванпа Петěр Танилђ патне, Çěпěре хăçан кайасси çинђен ыйтма кайрăмăр. Вăл пире:

— Проппăск хатěр, вăкунсем çуккипе çеç ђарăнса тăратпăр, — терě. Хаљ вакунсене пěтěмпех Украйнăна вăрлăх тийесе килме йанă. Ыраш вăрлăхě çак кунсенђех Шăхрана çитмелле, теççě. Хаљ Мускава кайса килтěм те, хěрěх вакун йаратпăр, терěç. Ыран мар, тепěр

кун Шăхран стантсине тухăпăр. Унта вара вакунсем кĕтĕпĕр, — тесе пĕтерђĕ вăл.

Епĕр иксĕмĕр те савăнса тухса ђупрăмăр. Хамăр йулташсене, курнине пĕрне:

— Епĕр Çĕпĕре кайатпăр, — тесе каласа кăтартатпăр.

Октăпĕр уйăхĕн 14-мĕш кунĕ, пирĕн Çĕпĕре кайма Шăхран стантсине тухмалла. Пайан епĕ халђђенхинђен те ир тăнă. Çапах та атте манран маларах тăрса Петĕр Танилђ патне кайнă. Епĕ тăнă çĕре вăл таврăнаť те.



Петĕр Танилђ тĕлĕнђе пĕр 50 лав пухăнса тăраççĕ. Пурте арђасем лартса вĕренсемпе çыхса пĕтернĕ.

— Ну, ывăлăм, ђипер пурăн. Çын йапалине ыйтмасăр ан ил. Йăваш пул. Ваттисен сăмахсене итлесе пурăн. Çыру çыркаласах тăр, — тесе пиллерĕ те, ыталаса ђуптурĕ.

— Акă сана икĕ мăйан çăкри. Кăна Петĕр Танилђă арђине ђик. Унтан ыйтмасăр апат ан çи. Ун сăмаххине итлесе пурăн, — тесе мана Петĕр Танилђă патне ăсатса хăварђĕ.

Петĕр Танилђ тĕлĕнђе пĕр аллă лав пухăнса тăраççĕ. Пурте арђасем лартса вĕренсемпе çыхса пĕтернĕ. Арђасем тăрринђе пирĕн пекех пĕђĕк ађасем кулкаласа лараççĕ.

Хĕвел те пайан çуттăн, ăшăрах пăхат. Çерçисем ђĕликлетни те пайан тăри сасси пекех илемлĕн илтĕнет. Ађасем, йалти хуйхă çинђен манса, йурлаççĕ, кулаççĕ, çухрашаççĕ. Анђах ваттисем пайан та пит те хурлăхлă. Ваттисен пиђĕсем çинђе пĕр савăнăç та курăнмаст. Вĕсем хăшĕ йĕреççĕ, хăшĕ-пĕри кўрĕшĕсемпе ал тытса уйăрлаççĕ. Унтан пурте йал варнелле çавăрăнса кал-пакĕсене хыврĕç те:

— Сывă пулăр, йалйышсем! Сывă пулăр, кўрĕш-арăшсем, — тесе лашисене туртрĕç. Йала йулакансем кайра аллисене сулкаласа кăшкăраççĕ.

— Ђипер çитсе, ђипер вырнаçмалла пултăр, — тесе ыр сунса ăсатса йараççĕ.

Тийенĕ лавсем латăртатса пыраççĕ. Пĕђĕк ађасем лав тăррисенђе, йăвари кайăк ђĕпписем пек, çуйăхаççĕ. Пысăкрах, çитĕннĕ ађасем ĕретĕн-ĕретĕн тăрса, купăспа салтака кайакан ађасем пек, хурлăхлă салтак йуррисем йурласа пыраççĕ. Хĕрупраçсем йĕреççĕ. Вĕсен йалтан кайас килмест. Вĕсен савнисенђен йала йулаканнисем те пурĕçкс-ха. Ватăраххисем малашнехи пурнăç çинђен сўтсе-йавса, калаçса пыраççĕ. Сасă, йурă, кăшкăрашу, купăс сасси, урапасем лăтăртатнипе лашасем тулхăрни — пурте пĕрле пĕрлешсе, пĕр кĕтў сĕрленĕ сасă пек, тĕнђене сарăлаççĕ.

Каçа хирĕç епĕр Шăхрана пырса çитрĕмĕр. Шăхранта пирĕн пек Çĕпĕре кайма тухнă çынсем туллийех. Ђукун çул тăрăх пĕр çухрăма йахăн тăсăлса, ўплесем туса вакунсем кĕтсе лараççĕ. Епĕр çитнĕ çĕре ђукун çул тăрăх пĕр çĕр тĕлте çеç те мар — кăвайт ђĕртсе апатсем пĕçереççĕ. Ађапăђасем йĕреççĕ, çухăрашаççĕ.

II

Епӗр йалйышсене, лавӑçсене, кайалла йатӑмӑр та
кунсем çине улӑхса лартӑмӑр. Петӗр Танилђӑпа епӗ
р вакун çине кӗрсе лартӑм. Пирӗнпе пӗрле пӗр шалун
нђе вунӑ йал çынни те пулӗ. Вӗсен пуçлӑхӗ, вӗсене
ртсе кайакан — Петӗр Танилђӑ.

Епӗр вырнаçса ларнӑ-ларманах пирӗн вакун çине
реçелентсӑсене ӑсатса тӑракан уполномођӗннӑй пыр-
кӗђӗ те, Петӗр Танилђӑран:

— Кам кунта шалун пуçлӑхӗ? — терӗ.

— Епӗ, — тет Петӗр Танилђӑ.

— Аха, ман єирӗнпе калаçмалли пур. Епӗ переçе-
нтсене ӑсатса тӑракан уполномођӗннӑй.

— Мӗн çинђен калаçмалла?

— Мӗн çинђен пултӑр, сире кӑларса йарасси çинђен.
ирӗн халех кайас килет-и, йе пӗрер ерне ларатӑра?..
т хайхи уполномођђнӑй.

— Пирӗн йепле те пулсассӑн халтерех тухса кайасђӗ,
аллӗн пирӗн халӑх выçӑ вилсе пӗтме пултарать, —
т Петӗр Танилђӑ

— Аха, тӗрӗс ӗнтӗ вӑл. Хам та сире ђасрах йарас
тӗп те, пӗрер пӑт çӑнӑх кирлӗ пулать-çке-ха. Выçӑ
ратпӑр вӗт, — тет уполномођӗнӑй.

Петӗр Танилђ унпа килӗшмерӗ.

— Сирӗн пек вçаткӑ ыйтакансене Мускава пӗлтерӗп!
рӗ. Вара леш вакун çинђен пӗр сасӑсӑрах тухса шурӗ.

Петӗр Танилђӑ та ун хыççӑн кашни вакун çинђех
рер асли суйласа хума хушрӗ те, стантсӑна тухса
йрӗ. Унтан нумай та пулмарӗ, килсе:

— Пире сӗлӗ çӑнӑхӗ параççӗ, атӑр кашни вакунран
рер çын, — тесе ђӗнђӗ. Хӑй каллех тухса кайрӗ. Мана:

— Есĕ, Ваӈуш, ҫыруҫ пекки пул. Мĕн илнине, мĕн ђул илнине пурне те ҫырса пыр,— тесе хăварђĕ.

Октăперĕн 16-мĕш кунĕнђе, каҫ пулсассăн, епĕр вакун сене тимĕр кăмака майлаштарса тăратпăр.

Ту-у-у-уут! — тутарђĕ машшин вăрăммăн. Унђђен те пулмарĕ «ђăш-тăк, шăлтăр-шалтăр, ђăш-тăк» тутарса малалла тапранса кайрĕ. Епĕр, ура ҫинђе тăракансем машшин тапранса кайнипе пĕтĕмпех кутăн йăванса карăмăр.

— Ах-хах-ха-ха! Пултарать ку păравус, маттур. Кăл ҫеҫ туртрĕ, пĕтĕмпех йăшăлтатса кайрĕ,— тенĕ сассем вакун урасисем шăлтăртатнипе пĕрлешсе кайрĕҫ.

Вакун ҫине ҫакса йанă витресем, хурансем ђейник сем, т. ыт. кăпăр-капăр йапаласем те вакун урапи кусна май силленсе, ташласа пыраҫҫĕ. Вакунсем айĕнђи ђуку ҫулсем вăхăђĕ-вăхăђĕпе „лăп-лап, шăт-шат" туса илеҫҫĕ Хăвăртрах кайнă вăхăтра вара: „ђĕрик-ђарик, тинкилти танкăљ, лăт та лат, шăт-шат" туса кăна пырать. Епĕ хаљ кунран-кунах малалла шăватпăр.

Пурнăҫ лайăхланса кайрĕ пирĕн. Кашни пысăкрах условой стантсасенђе пире ҫăкăр, ҫăмарта, ҫу, какай т. ыт. йапаласем те параҫҫĕ. Хăш-хăш стантсара йашка та пĕҫерсе ҫитереҫҫĕ. Йашкана вара витрепе вакун тăрă парса ҫӳретпĕр.

Ҫимеллирен епĕр аптрамастпăр. Мĕншĕн тесессĕн кашни стантсарах пире ҫителĕклех тăрантараҫҫĕ. Пысăк стантсасенђе хаҫатсем те параҫҫĕ пире, ăна та вакун тăрăх валеҫсе тухатпăр. Вунă ҫынна пĕрер № хаҫат парађђĕҫ. Пур йенђен те лайăх. Анђах, кашни пысăк стантсăрах пире кăшт та пулин ђарса тăраҫҫĕ. Стантсари тешурнăйа кăшт та пулин „сĕрмесĕр" нийепле те тухса каймалла мар.

— Хаӑ çул пушӑ мар, йе çул ваннӑ, — тесе туппике ёртсе лартаççӗ те пӗрер ерне тапратмасӑр тӑратаççӗ. Пире хуҫ нумайах тытса тӑмасҫӗҫ, мӗншӗн тесессӗн ирӗн Петӗр Танилҫӑ:

— Нуккӑ, мана Мускавпа калаçса илме парӑр-ха, еп ире кӑтартам, — тесе проппӑск кӑларса параҫҫӗ. Пропӑск пире Мускавран панӑҫҫӗ, çавӑнпа пире нумайах ытса тӑмасҫӗҫ. Хӑш-хӑш стантсӑра пиртен пӗр ерне аларах çитнисем те пирӗнтен кайа йулаҫҫӗҫ.

Анҫах епӗр те пӗр Куломçинӑ йатлӑ пӗҫӗк стантсара акӑр талӑк лартӑмӑр. Вӑл стантса Ирттыш шывӗ ку енҫе лараҫ, шывӑн тепер йенҫе Омск хули. Вӑл пӗҫӗк тантсара пире апат-çимӗç те памарӗç. Çавӑнпа та вара акӑр талӑк хушшинҫе пирӗнпе пӗрле лыракансем хӑшӗр йапалисене: кӗпи-йӗмӗ, пир-авӑр таврашсене пит умай сутса пӗтерҫӗç. Сивӗ çумӑр пӗр ҫарӑнмасӑр ӑкса тӑраҫ. Пӗҫӗк аҫасем ҫирлесе пӗтрӗç. Нумайӗшӗн ҫисем вӑл стантсара вилсе йулҫӗç. Такçан та вӑл тантса ман асран кайас çук. Çав стантсарах тата пӗр упӑшкасӑр арӑм хӑй аҫине пӑрахса хӑварҫӗ.

— Ес кунта лар-ха, епӗ сан ваҫҫи кулаç илсе килем, есе лартса хӑвартӑм еп ӑна, — тет. — Прийута илсе айса усрӗç, хампа пӗрле пулсан пур пӗрех выçӑ вилет ӑл, — тет.

Çавӑн пек аппаланкаласа епӗр малалла шӑватпӑр. Ново-Никколайӗвск стантсинҫе ҫарса мунҫа кӗртмесӗр е йамарӗç. Кайран вара, Н.-Никколайӗвск стантсинҫен иртсен, пӗр ҫарӑнмасӑр вӗçтере пуçларӑмӑр. Пойӗссем унталла пит хӑвӑрт çӳреççӗ.

Томск кӗпӗрнинҫе пирӗн шалунран кашни стантсӑра енӗ пекех ана-ана йула пуçларӗç. Çавӑнпа та Красноарск стантсине епӗр виç ҫӗрӗкӗ анҫах пырса çитрӗмӗр.

Краснойарскра епĕр те ҫарăнтăмăр. Ҫак хуларан пирĕн Йениҫҫей хули йенелле Йениҫҫей шывĕ тăрăх лашапа кĕмелле. Епĕр ҫитнĕ вăхăтра Йениҫҫей шывĕ шăнса ларнă, ҫавăнпа пирĕн лав ыйтмалла пулҫĕ.

Епĕр, ҫамрăксем, пĕр вунă аҫа, лав парасса кĕтсе тăрас мар тесе, ҫуран тухса утма шут тытрăмăр. Ҫавăнпа тепĕр куннех, ирпеле, Краснойарск хулинҫен тухрăмăр та, Йениҫҫей хули йенелле шартлаттартăмăр.

Йур. Йениҫҫей шывĕ ҫинҫен сивĕ ҫил вĕрет, пит ҫăмартисене, вĕлтрен вĕтеленĕ пек, ҫĕпетет Ҫула йур шăлса кайнă, пĕр ҫын йĕрри те ҫук. Телехвун йупи тăрăх аран пĕр вунсакăр ҫухрăмри йала пырса ҫитрĕмĕр. Унта пĕр ҫĕр каҫрăмăр та, тепĕр кунне каллех тепĕр йала ҫитрĕмĕр, унтан тата тепĕр йала. Ҫавăн пек, кашни кунах 25—30 ҫухрăм утса, епĕр йерипен шаларах кĕретпĕр. Краснойарскран 20—25 ҫухрăм кĕрсессĕнех, вăрман пуҫланса кайрĕ. Вăл вăрман тăрăх вĕҫĕ-хĕррисĕр пĕр 150 ҫухрăм утмалла пулҫĕ.

Йалсенҫе пире пит лайăх пăхаҫҫĕ: апат ҫитереҫҫĕ, ирпе те ҫул ҫине ҫăкăр парса кăларса йараҫҫĕ. Раҫҫейри выҫлăх ҫинҫен йытса пĕлеҫҫĕ:

— Йепле есĕр, пĕҫĕккĕскерсем, аҫу-аҫҫусене пăрахса тухнă-ха? — теҫҫĕ.

Выҫлăх тем те тутарĕ. Хаљ унта пирĕн аҫи-пăҫисене пусса ҫинисем те илтĕнкелеҫҫĕ-ха — тетпĕр те, тата пушшех вĕсем пире хĕрхенеҫҫĕ.

— Ай-йуй, мĕскĕнсем йепле, вĕсем маттур, — теҫҫĕ.

Пирĕн Попровски вулăсри Ҫорнай йатлă йала ҫарăнмалла. Унта пирĕн йалсем пурăнаҫҫĕ. 1915-мĕш ҫултах килсе вырнаҫнă вĕсем унта. Ҫорнайра пĕтĕмĕшпех ҫăвашсем пурăнаҫҫĕ, вырăссем мĕн пурĕ те пĕр пилĕк кил анҫах. Вăл йала ҫитесси тата сăкăр ҫухрăм йулҫĕ. Анҫах

каç пулса çитрĕ. Хĕвел анни ĕнтĕ пĕр сехет çеç те иртмерĕ пуљ. Епĕр Йениççей шывĕ хĕррине, пĕр вырăс йалне пырса ђарăнтăмăр. Пирĕн йулташпа Йениçеçй шывĕ урлă каçса тата сакăр çухрăм хыр вăрманĕ витĕр каймалла.




Епĕр хаљ кунран-кунах малалла шăватпăр. Пурăнăç лайăхланса кайрĕ.

Çапах та епĕр, каç пулнине пăхмасăрах, çул ыйтса пĕлтĕмĕр те, Йениççей шывĕ çине анса кайрăмăр. Анђах ман йулташ мана:

— Çук, кĕçĕр каймастăпăр. Çулне те лайăх пĕлместпĕр, тата çĕрле пулса çитрĕ. Çак йала кĕрсе çывăрар та, тет, ыран вара çутăлнă-çутăлманах тухса утăпăр, тет.

Епĕ унпа нийепле те килĕшеймерĕм. Ђылай калаçса тăрсан, вăл кутăн çавăрăнса утрĕ. Епĕ малалла Йениççей шывĕ урлă каçса Ђорнăй йал йенелле утрăм.

Хыр вăрманĕ. Йăвăçсем пĕлĕте перĕнсе тăнă пекех курăнаççĕ, çўлелле пăхсассăн нимĕн те курăнмасť. Тĕп сакайĕнђе пынă пек пыратăп, пĕр ура айĕнђи йур анђах

шуррӑн курӑнса кайаҫ̆. Йӑвӑҫсен хушшипе курӑнака шурӑ пуҫлӑ тункатасем ман паталла утнӑ пекех курӑн са кайаҫҫӗ. Ҫан-ҫурӑм сӑрлатса кайса, пуҫри ҫӳҫ вирелл тӑрса, пуҫри калпака ҫӗклет. Вара, хӑранипе ђарӑнс тӑрса тунката иккенне тинкерсе пӑхса илетӗп те ти малалла утатӑп. Хам йӗп-йӗпе шывра пыратӑп; пит т рӑх тар тумла йухнӑ пек, тумлаҫ̆. Ҫӗр ҫухрӑм утнӑ пе



Йӑвӑҫсен хушшипе курӑнакан шур пуҫлӑ тункатасем ман паталла утнӑ пекех курӑнса кайаҫҫӗ. Ҫан-ҫурӑм сӑрлатса кайса, пуҫри ҫӳҫ вӗрилле тӑрса пуҫри калпака ҫӗклет.

пулђӗ, нийепл те ҫитмелле мар. Пырсан-пырсан вӑрма уҫланкисенђе утӑ капанӗсем ларни курӑнса кайаҫ̆ те, йал ҫитнӗ пекех туйӑнса кайаҫ̆. Анђах татах инҫе... Акӑ ёнт йалӑн уй хапхинђен те пырса кӗтӗм. Йала ҫитрӗм-ха тетӗ Ҫук. Йал татах курӑнмасҫ̆. Вӑрман. Тепӗр ҫур ҫухрӑ кайсан тин йала пырса кӗтӗм.

Акӑ ёнтӗ йал. Ҫа́мӑллӑн сывласа илтӗм те, пӗр ђӳ ређе айне пырса:

— Пушкăрт Васлей Сымунĕ çак йалта пуранат-и? —
çсе ыйтатăп.

Хăш тĕлте пурăннине ыйтса пĕлтĕм те, малалла утрăм.
ушкăрт Васлей Сымунĕ тĕлне çитрĕм те, ҫӳреҫе айне
ырса:

— Шак, шак, шак! — тутартăм.

— Кам унта? Кам кирлĕ? — тенĕ сас илтĕнҫĕ пӳртрен.

— Епĕ, тăвансем, Раççейрен килетĕп, — тетĕп.

— Çемен Пашкирăв çаки?

— Çак, çак. Ата, кĕрех пӳрте! — терĕç те, мана хирĕç
хса илҫĕç.

Пӳрте кĕрсен ал тытса тухрăм та, хывăнса алăк
тне лартăм. Пӳртре пит çутă, уçă, анҫах краççин çун-
курăнмаст. Кăмака умнелле тайăлса пăхрăм та, тĕлĕн-
х кайрăм: краççин вырăнне кăмака умĕнҫе сухăрлă
ыра пĕрер шит тăрăш тата-тата çунтарса лараççĕ.
ухăрлă хыр пит çутă çунат, шăрши те çук, краççин
ырăнне аванах усă парат.

Епĕ пит ывăннипе ҫей ĕçсе апат çинĕ хыççăнах çы-
рма выртрăм. Калаçса выртнă çĕртех сывăрса кайнă.

Ирхине. Хĕвел таса ылттăн тĕслĕ çутăпа, йĕри-тавра
т хĕлхемĕ пек хĕрлĕ çутă сарса, çын кулнă йеверлĕ
хса тăрат. Ăшă çил йăвăç тăррисене хумхатса, йăвăç
раҫĕсем çине ларнă çут шăрçа йеверлĕ йур ҫăмак-
сене, вăхăҫĕ-вăхăҫĕпе тимĕрĕç сунталли çинҫе ывтă-
кан çутă хĕлхем пек, сывлăш çине салатса йарат.
ерçисем çуна йĕррисенҫе улăм пĕрҫисене сиктеркелесе,
ша тирĕслĕкне ҫакаласа транкки-транкки сиккелесе,
ҫил-ҫил-ҫил“ туса çӳреççĕ. Сайра хутра йытă вĕрсе
ни, кайăк-кĕшĕк сасси — пурте пĕрле çыхăнса савă-
çлăн, илемлĕн илтĕнеççĕ. Çав тĕрлĕ лайăх, ырă, савăнăç-
; çула пулсассăн улма пахҫинҫе тăратăп, темелле.

Пакшасем унта ҫӳлӗ хырсем тăрринђе сиккелесе ҫӳреҫҫӗ, вӗсен хыҫҫăн йытăсем вӗре-вӗре ђупаҫҫӗ. Анђах вӗсене тытас ҫук. Вӗсем ҫӳлте.

Ҫуртсем пысăк, хуралтсене хăма витсе ҫавăрнна. Пирӗн йалти пек хура пӳрт пӗрре те ҫук. Сайра, пӗрпӗр кӗтесре, тин ҫеҫ килсе вырнаҫнă ђăвашсен, йе ӗҫке йернӗ ҫынсен хуралтисем анђах, пирӗн йалти нађар хуралтсем пек кăмăлсăр лараҫҫӗ. Ăҫта пăхан унта илемлӗ, кăмăллă ҫуртсем тăраҫҫӗ. Ҫыннисем те кăмăллă йăваш ҫынсем. Тем те ыйтса пуплеҫҫӗ, пурте хăй патне пырса курма ђӗнеҫҫӗ.

Тепӗр ернерен епӗ Попровкăри вулӗҫтăвкома пырса вырнаҫрăм. Мана хăваттер тупса пађӗҫ, тата малтанлăха пăт ҫуршар ҫăнăх парса тăма пулђӗҫ. Пӗр уйăх ӗҫлесен 6 пăт та пара пуҫларӗҫ. Хам вулӗҫтовкома кӗрсессӗн хам йулташ Ивана та вулӗҫтăвкома сторăша ђӗнсе илтӗм. Тепӗр ернерен — ӗлӗк те вулӗҫтăвкомра ӗҫлене хамăр йалсене ӗҫлем илтертӗм. Ҫавăн пек вара Попровкăри вулӗҫтăвкомра хамăр йалсемех виҫҫӗн пултăмăр. Петӗр Танилђă вăл кайарахпа ҫеҫ ҫитрӗ. Вăл Красноярскран мӗн пур ҫынсене кăларса йарса пӗтерсен тин тухнă мӗн.

Ҫул ҫинђе вăл мана пулăшса пыђӗ, хаљ ӗнтӗ епӗ ăна тавăра пуҫларăм: вулӗҫтăвком урлă епӗ вӗсене, 5 кил таран, пӗр Тукăн йатлă йала вырнаҫтартăм. Вӗсем ваљљи протоводљствисем тупаттăм, переҫелентсăсен нађаљнӗкӗ патне ҫӳреттӗм. Мӗнле майпе пулăшма пултараттăм ҫавăнпа пулăшаттăм. Анђах Ҫӗпӗрти вырăссен ђӗлхине лайăхах пӗлместтӗм епӗ. Пӗрре ҫавăн пек хваттер хуҫи арăмӗ мана:

— Ваџа, располакайсă! — тет. Нумайђђен епӗ ăнланаймасăр лартăм. Еп ăнланайманнине кура вăл мана

— Лаппоттину сними, лаппоттину сними! — тет. Епĕ ђăнах та çăпата сырнă пулнă.

— Мĕншĕн ку мана çăпатана салттарасшăн-ши? — тесе шухăшласа ларатăп. Кайран тин пĕлтĕм вара: „лаппоттина“ тесе тумтире калаççĕ мĕн вĕсем, „располакайсă“ тени — „растевайсă“ тени пулаť мĕн. Тата нумай вăл ђалтон хушшинђе çавăн пек урăхла сăмахсем; кайран-кайран вара пĕтĕмпех вĕренсе çитрĕм. Анђах, çава тухна çĕре мана вулĕçтăвкомран кăларђĕç. Штатсене сахаллатмалла пулса тухрĕ те, манăн тухса каймалла пулђĕ.

Мĕншĕн тесессĕн, епĕ, халиђђен кĕнђђелерте ĕçлесе курманскер, нимĕн те ĕçлеме пĕлместĕп. Хамăр йалсем пулăшнипе çеç ĕçлекелесе пурăнтăм. Вулĕçтăвкомран тухсан епĕ Тукăн йалне Петĕр Танилђсем патне пырса вырнаçрăм. Унта вулĕçтăвкомра ĕçлесе тупнă тырра çисе йарађђен пит те аван пурăнтăмăр. Анђах ăна çисе йарсан, пурнăç нађарланса çитрĕ. Тыр тупма питĕ хĕнђђĕ: кашни йалта пекех Раççейрен килнĕ ђăвашсем пурăнаťђĕç. Çавăнпа ђалтонсенђен çăкăр ыйтса илме те хĕн пула пуçларĕ.

Епĕр пурнакан уђђаскă хĕрринђе лађакасенђе „ђеремша“ йатлă курăк ӳсетђĕ. Вил курăка Çĕпĕрте сухан çулçи вырăнне çийетђĕç, купăста вырăнне те тăварлаťђĕç. Анђах, вăл курăк та пур çĕртре те ӳсместђĕ, лађакаллă вырăнсенђе, шыв хĕррисенђе анђах ӳсетђĕ. Çавăнпе епĕр çав ђеремшана йал тăрăх сутса, çăкăрпа улăштарса çӳреттĕмĕр. Çăва тухсассăн тата çеткă тăхăнмасăр, йе аласене тикĕтпе сĕрмесĕр урама тухма та çукђĕ, ӳпресем ђĕпĕтсе пĕтеретђĕç.

Çакăн пек пĕр йеверлĕ пурăнăç йăлăхтарса çитерђĕ мана. Пуринђен ытла çимелли çукки. Çавăнпе та епĕ Красноймарск хулине пĕр-пĕр вырăн шырама тесе кайма

шут тытрăм. Хам йулташа систеретĕп те, пĕр ирхин
вырсарникун, ыттине никама систермесĕрех Краснойарск
тухса утатпăр. Йункун, каçа хирĕç, хулана пырса çи
рĕмĕр.

Хулара, пасар урамĕпе иртсе пынă ђух, хамăр йа
çыннине курах кайрăм. Хамăр йалсем Тăрна Ваç
арăмĕпе иккĕш пасар варринђе, хулсем çине ђăва
çипписем çакса сутса çÿреççĕ.

— Аван-и, Ваçлей пиђђе? Ăçта кайма тухнă вар
есĕр? — тесе ал тытрăмăр.

— Раççейе, киле кайма тухрăмăр та ха, çул ваљ
йулашки çипсене сутса çăкăр тăвас тетпĕр-ха, — теç

„Раççейе“ тесе каланă хыççăн мана та кил, хам
йал, кÿрш-аршсем, манран йулнă пĕђĕк йăмăксем а
килсе кайрĕç.

— Аћа, Иван, епĕр те киле кайар: мĕн туса пурн
кунта? Хаљ выçлăх иртсе кайнă ĕнтĕ унта, — тетĕп е
хам йулташа. Вăл ман пекех шухăшланă мĕн:

— Епĕ те çакна каласшăнђђĕ вĕт, — тесе хуђĕ в
мана хирĕç. Нумай шухăшласа тăмарăмăр, кайас терĕм

Çавăн пекех вара машшин çине улăхса лартăмăр
вĕçтере паратпăр килелле. Проппуск таврашĕ илес
çук пирĕн, йапаласем те çук. Çул çинђе тăранса пы
хамăр çири кĕпе-йĕмсене сутса пĕтертĕмĕр те, айал
кĕпе-йĕмсемпе анђах тăрса йултăмăр.

Ђасах манăн йулташран та уйрăлмалла пулђĕ. Пĕр
вăл аттине сутрĕ те, мана: „укçана вăрласа кайрĕ
тесе суйрĕ. Унђђен пĕрлех мĕн тупнине çикелесе пыра
тăмăр. Çавăнтан вара епĕр пĕрле çиме пăрахрăмă
Вара вăл, выçăпа аптраса, Томски кĕпĕрнинђе Пери
куљ йатлă стантсăра анса йулђĕ. Епĕ хамăр йалсенђ
10 кĕрепенкĕ çăнăх кивçен илтĕм те, кашни пыс

стантсарах анса вĕри шывпа пăтратса çиетĕп; йе тата хăрăк витре тĕпĕсем çинђе пашалу пек туса аппаланатăп. Йулташ çинђен нимĕн те пĕлместĕп. Таçта, манран уйăрălса йулсан, вăрăпа тытăнса вĕлернĕ те терĕç ăна, хăшĕ-пĕри пуйĕс айне кĕрсе вилнĕ, терĕç. Тахăш ђăн? Пĕлме çук. Тен халиђђенех пурăнаť.

Унтан уйăрлсассăн епĕ хамăр вулăс ађине тĕл пултăм та, унпа пĕрлешрĕмĕр. Пĕрре çавна:

— Пурис, аťа епĕр скорăй пойĕспе ларса кайар! Кунпа кайсассăн епĕр киле ђас çитес çук, — тетĕп.

— А мĕнле, кайма пулати апла? — тет çак мана.

— Йепле май çук пултăр-ха, — тетĕп епĕ ăна. — Пĕрпĕр стантсара çак пуйĕс çинђен анса йулатпăр та, пуйĕс стантсаран тухса кайсассăнах стантсăри нађђаљнĕк патне кĕрсе:

— Пуйĕсран йултăмăр. Пирĕн аттесем çав пуйĕспа ларса кайрĕç, тесе йĕретпĕр, — тетĕп. — Вара вĕсем пире — скорăйпа хамăр шалуна хăваласа çитме тесе справккă туса параççĕ пире, — тетĕп.

Шухăшларăмăр та турăмăр. Анђах справккине питĕ кĕнпе илкелерĕмĕр, нумай нушаланмалла пулђĕ. Ун вырăнне вара пођтовăй пуйĕс çине лартăмăр та, шатлатарса çеç пыратпăр. Хĕрлĕ çар салтакĕсемпе пĕр вакун çине кĕрсе лармалла пулђĕ те пирĕн, вĕсем пире пит пайăх пăхса илсе кайрĕç. Анђах Йеккатеринпурка çитессĕн, пирĕн вăл пуйĕс çинђен анса йулмалла пулђĕ. Мĕншĕн тесессĕн вăл пуйĕс Перм хули урлă Мускава кайаť, пирĕн Сараппул урлă Хусана анмалла.

Йеккатеринпуркра переçелентсăсен пуктне кайса: епĕр шалунтан йулнă çынсем, — тесе улталаса 10 кĕренкке çăкăр, 4 кĕр. пулă, 2 кĕр. сахăр илтĕмĕр. Унтан хăш пуйĕс Хусана кайассине ыйтса пĕлетпĕр те, пĕр

вакун çине кĕрсе лартăмăр. Çул çинђе пире тытрĕç т
Красноуфимск хулине антарса хăварђĕç. Унтан ту
çутăлнă-çутăлман тухса тартăмăр та, 20 çухрăм ђукă
çул тăрăх çурран утрăмăр. 20 çухрăм çурран утнă çĕрт
тем амак та тĕл пултăмăр пуђ унта. Пĕр туннел ăшн
кĕрсе кайрăмăр та хăраса ђун ђут çеç тухмарĕ. Те
тăрăщшĕ те пулĕ вăл. Пĕр-пĕрне те курмасăр утса пы
ратпăр. Машшин пырса таптаса та кайасран ђун йул
марĕ унта. Тата пĕр туннел тăрне улăхса кайрăмăр т
хăмла çырли çисе ђут ђирлесе вилеттĕмĕр. Ӳсĕрĕлсе ка
рăмăр та аран çеç тайкаланса пыратпăр. Çапла çапкаланс
аран пĕр 20 çухрăмри пĕђĕк стантсана пырса çитрĕмĕ

Вăл стантсара стантса нађђаљнĕкĕн утине пуçтарт
мăр та, вăл пире апат çитерсе 101-мĕш №-лĕ пуйĕ
çине лартсах йађĕ. Çавăн пек ĕнтĕ епĕр тата малара
шуса пыратпăр.

101-мĕш №-лĕ пуйĕс çинђе пирĕн пек киле тавăрăна
кан ађасем туллиех. Пуйĕс стантсана çитнĕ-çитмене
сиксе анса пытанса çӳреççĕ. Йепле пуйĕс тапранса кайн
çемĕнех тата, вакунсем çинелле тапаланма тăраççĕ, то
мăссемпе пуфферсем çинђе туллийех ларса пыраçç
Çавăн пек пытанкаласа çӳресе мĕн ђул ађа-пăђа ваку
айне кĕрсе вилђĕç пуђ унта. Пĕр стантсара пуйĕс ти
çеç тапранса кайнăђђĕ (епĕ ăна пайанхи пекех астăватăп
контуктăрсем „ший-шăй“ тутара пуçларĕç.

Пуйĕс ђарăнђĕ. Пурте кайри вакун патнелле ђупаç
Епĕ те çынсенђен йулмастăп. Пăхатăп та, пĕр çамрă
16—17 çулхи ђăваш ађи вакун çине пуйĕс тапран
кайсан ларас тесе пынă та, пуйĕс айне çакăнса ђĕрку
çи таранах ик урине те татса пăрахнă. Сăнĕ-пуçĕ хăй
кăвакарса кайнă, сăмахлаймасť та; „Ах! ох, ох!“ — те
çухăрса выртаť. Ăна наçилккăпа çĕклесе кайрĕç те, пуй

апранса кайрё. Çаплах епĕр малалла шăватăпăр. Йулашкинђен Мускавпа Хусан хушшинђи ђукун çул ине те çитсе тухрăмăр.

Йутĕнă стантсинђе епĕр хамăр ларса килнĕ пуйĕс инђен анса, тађнăй пуйĕспа Сĕве стантсине каçрăмăр. к мана, Атăл урлă каçнă ђух, тытрĕç те. Сĕвере стантса нађђаљнĕкĕ патне илсе кĕђĕç.



Пĕр тунел ăшне кĕрсе кайрăмăр та, хăраса ђун ђут çеç тухмарĕ.

— Пĕрер ерне вĕсене ђукăн çул çинђе ĕçлеттерес, — т, стантса нађђаљнĕкĕ. Ман пек тытнисем пĕр пилĕк ђа пухăннă.

— Çук, пире ĕçлеттерес пулсассăн пĕрер ерне çитерĕр- малтан, вара тин пире ĕçлеттересси çинђен шухăшла- пăхăр! — терĕм те, çынсен хÿттипе майĕпе стантсаран хса шурăм. Йулташпа тĕл пултăм та, çĕрле 11 сехетре ђтовăй пуйĕс килет тенипе, çавна кĕтсе выртатпăр.

Пирĕн хыçа татах та çынсем пырса ларнă. Çавă- нса пăхатăп та, хамăр йалсем пулах кайрĕç. Вĕсем

Хусантан тађнăйпа тухнă та, пирĕн пекех пођтовăй пуласса кĕтеççĕ.

— Аван пурнатра-ха, Никколай Ваççилђ, ăçта кайнă есĕр? — тесе ал тытатăп.

— Аван та-ха, кам пултăн-ха есĕ? Тавçарса илеймерĕмçке епĕ сана, — тет пĕри. Унтан епĕ каммине палаштартăм та:

— Çийес килмести санăн? — тесе ыйтрĕ, хутаççинђен çăкăрпа пулă кăларса пађĕ. Епĕ, выçăскер, пулла хуппишăмми мĕнĕпех çисе йатăм. Унтан йалти пурнăç çинђен ытса пĕлме пуçларăм.

— Ă-ух! питĕ нумай вилсе пĕтрĕç выçлăхпа. Выђăхђĕрлĕхсене пусса пĕтерђĕç. Советран паман пулсассăн йалĕпех вилсе пететђĕç пуђ. Ырă та Советран пулăшрĕç, — тет.

Çапла сăмахласа ларнă çĕртех пуйĕс пырса çитрĕ. Анђах манăн пилет илме укçа çук Никколай Ваççилђ хăйне вађђи пилет илђĕ те мана:

— Есĕ вакун ђӳређи айне пырса тăр. Епĕ сана хам пилета тыттарăп унта, вакун çине кĕме, терĕ.

Ђăнах та çавăн пек турăмăр. Вакуна кĕрсе кайрăм та, контуктăр ман пилета пăхса мана вырăн тупса пађĕ. Кантуктăр пăртак ман çумран пăрăнсассăнах епĕ Никколай Ваççилђа пилетне тыттаратăп та, çӳле улăхса выртатăп.

Унђђен те пулмарĕ, контрођорсем пилет пăхса çӳреççĕ.

— Краштанин, тăр, пилетна пар ђасрах! — тесе, мана ураран турткала пуçларĕç. Епĕ ним ђĕнмесĕр, çывран пек, туса выртатăп.

— Краштанин, пилетна кăтарт! — тесе, пĕри ураран хытах турта пуçларĕ. Епĕ кăшт ыйăхран вăраннă пек пулса

— Мĕн тăватăн унта? — тетĕп те вĕсене хирĕç: „хр-хр-хрр“ — каллех çывăрса кайатăп.

— Пилету пур-и сан? — тет тепри çиленсе.

— Е, пилет?.. Пур, пур, — тетĕп те каллех çывăрма выртатăп.

— Пар, теççĕ сана пилетна! Сăнаса тухмалла вĕсене. Сĕтĕрсе антарăр ăна! — тет çавах, асли пулмалла.

Епĕ тăрса антăм та, алла хĕвве ђиксе „кăтăр-кăтăр“ хыçса тăратăп.

— Ну, ђас пулаŤ-и санăн? — тет пĕри.

— Мĕн? — тетĕп.

— Пилетна пар, теççĕ! — тет асли ман умра. Хăй аллине тем, хĕскĕђ йевĕрлĕскерне тытнă та, ман çук пилета шăтарма хатĕрленсе тăраŤ.

— Е, пилет, — тесе, ыйăхран вăранса, вĕсем ман патна мĕншĕн килнине ăнланса илнĕ пек туса, хăпăл-хапăл кăсйесенђе пилет шырама пуçларăм. Алла кĕсйене ђиксе йатăм та, хут татăкĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн илсе тепĕр алă çине кăларса хуратăп. Хам пит ђейийе хăтланатăп, ыйăх тăранман пек пулса, хыçаланса куç пўрĕсене шăлса илетĕп те, каллех шырама пуçлатăп. Мана вĕсем хыпалантараççĕ. Епĕ шырарăм-шырарăм та пилет çуккине сиснĕ пек пулса, ыйăхран та вăрансах кайрăм. Тата пушшех хыпаланса пилета шыра пуçларăм. Хам çывăрнă вырăна та, ларнă вырăна та пăхатăп, пилет çук.

— Хăш стантсана çитиђђен кайатăн есĕ? терĕ унтан пĕри вырăсла.

— Çĕпĕртен тавăрнатăп епĕ, — тетĕп ăна ăнланман пек пулса.

— Ăна ыйтмаспăр санран, хăш стантсаран анмаллине ыйтатпăр!

— Е, ăна! Йениççей кĕпĕрнинђен килетĕп çав.

— Ĭху, ђăваш! Санран ăна ыйтмаççĕ вĕт, — вăрçа пуçларĕ.

Вара Никколай Василђĕсем:

— Урмар стантсине çитиђђен, тесе илђĕ вăл пилет. Епĕр пĕрлех илтĕмĕр унпа — терĕç.

— Йе, йе. Урмара çитиђђен каймалла çав, — тетĕп мĕн ыйтнине ăнланса илнĕ пек пулса.

— Есĕ, переçелентсă тетне-ха? — терĕ унтан пĕри.

— Çапла çав, Çĕпĕртен таврăнатăп, — тетĕп. Хам, кĕçĕллĕ çын пек, çанçурăма хыçкаласа тăратăп.

— Аха, есĕ пыйтлă пулмалла. Вон плошђаткă çине тухса тăр, — терĕç мана кĕсем. Епĕ: куçран çухалђђăр кăсем хăвăртрах, тесе плошђаткă çине тухса тăтăм. Вара Урмар стантсине мар. Шуркĕсре расйесне çитиђђенех кайрăм. Шуркĕсре расйесĕнђен пирĕн йал вунă çухрăм анђах. Йала мĕнле пырса çитнине те сисмерĕм.

Йала пырса кĕтĕм те, йалта пĕр ђĕрĕ ђун та курăнмасť. Пурте ыраш вырма кайса пĕтнĕ. Пĕр сасђĕвĕ те çук, пĕтĕмпех вилсе пĕтнĕ, темелле. Çил те пулин йăвăç тăррисене силлемест. Йăмра турађĕсене касса пĕтернĕ, улăм вырăнне сурăхсене хĕлле çитернĕ курнаť. Пĕрре те хамăр йал пек мар.

— Пĕр ђĕр-ђун та пулса пур-ши кунта? — тесе урампа пыратăп.

Çапла шухăшласа пынă çĕртех, пĕр ула кушак шăлĕсемпе шăшине çаклатнă та, хўме çуммипе йăпшăнса пыраť.

— Е, вилсе пĕтмен-ха, — тесе шухăшланă ђухне хамăр хапха айне пырса çитрĕм. Унталла-кунталла пăхкаларăм та, пўрте кĕрсе кайрăм.

Пўртре, алăк патĕнђи сак çинђе, атте сывăраť. Кĕçĕн

йăмăк Уљкка урайĕнђе пуканесемпе выљаса çÿрет. Урайне пайан шăлайман пулмалла: таса мар. Йăмăкпа шăллăм тыр вырма кайнă, атте урай шăлма ĕлкĕреймен пулас, ĕçлесе ывăннă та выртса çывăрнă. Кĕçĕн йăмăк патне пытăм та:

— Ай, йăмăкăм, сана аппу пĕђђенех хăварнă-им? — тесе ал тытма тăтăм.

Уљкка ман çине çавăрăнса пăхрĕ те, йĕђĕ йађĕ.



Е, вилсе пĕтменха, — тесе шухăшланă ђухне хамăр хапха айне пырса çитрĕм.

— Мĕншĕн йĕрен, Уљкка? Ан йĕр, епĕ вĕт вăл, — тесе йăпатма тăтăм, вăл пушшех хытă йĕре пуçларĕ.

Вăл йĕнĕ саспа атте те вăранђĕ. Мана курђĕ те, Уљккана йăпата пуçларĕ.

— Ан йĕр, хĕрĕм! Сан пиђђу вĕт вăл, — терĕ те мана пырса ал тытрĕ.

— Ах, ывăлăм, йепле киле таврăнма пĕлтĕн-ши? Мĕнле çул çинђе çухалса кайман-ши есĕ? — тесе мана ыталаса ђуп тăваҭ.

— Пит лайӑх кайса килтӗм, атте! Нимӗн те хӑрамалли ҫук... Ман ҫийес килет, ҫимелли пур-и? — тетӗп.

— Ҫимели-и? Пурђђӗ-ха. Ӑҫта-ха куккурус нимри пӗҫерсе ҫитерем сана, — терӗ те атте, хуран айне кӑвайт ђӗртсе йађӗ.

— Ӑҫтан тупнӑ есӗр кӑна? Пит те лайӑх йапала-ҫке ку, — тетӗп апат тума ларсан.

— Советран пађӗҫ, ывӑлӑм, советран пађӗҫ, — тет атте. — Есӗр кайсассӑнах ыраш вӑрлӑхӗ пађӗҫ. Ахаљђӗн пуссене шуратса хӑварасси те пулас ҫукђӗ. Вара тата ҫиме куккурус ҫӑнӑхӗ илсе киле-киле паркаларӗҫ. Ҫавӑнпа хӗл каҫрӑмӑр вара. Пӗр ҫава тухсан питех аптрамарӗҫ ҫынсем. Пултран, серте, тата ытти курӑксемпе тӑранкаласа пурӑнђӗҫ.

— Кӳрӗш-арӑшсем мӗнле пурӑнкалаҫҫӗ?

— Кӳрӗшсем-и? Кӳрӗшсем кунта аван пурӑнаканнисем те пур, выҫӑпа вилкеленисем те пур. Хамӑр та, хаљ те... тепле хӗл каҫкаларӑмӑр? Уљкка хӗлле питӗ нађарланса ҫитнӗђђӗ те, ҫав Советран куккурус ҫӑнӑхӗ парсан, тата копператтивран пӗр пӑт ыраш кивҫен илсе ҫӑкӑр туса ҫийе пуҫласан самайланђӗ. Хам хаљ те арантарах ҫӳретӗп, — тет.

Йӑмӑк та, шӑллӑм та тыр вырмаран таврӑнђӗҫ. Вӗсем мана курсассӑнах, ман патна ђупса пырса ыталаса илђӗҫ те:

— Сана епӗр ӗмӗрне те таврӑнмаст пуљ, тенӗђђӗ. Тек каймастна ӗнтӗ? — тесе йӗре пуҫларӗҫ.

— Ан йӗрӗр, тек каймастӑп ӗнтӗ. Ыран сирӗнпе пӗрле тыр вырма пыратӑп, — тесе йӑпата пуҫларӑм вӗсене. Йӑмӑк: — йепле иккӗн ҫеҫ тыр вырса пӗтерес, тесе хӑранӑђђӗ-ха. Хаљ ӗнтӗ ҫынсемпе пӗрлех вырса пӗтерӗпӗр, — тесе куҫҫулне шӑлса илђӗ. Унтан хӑйӗн

йулташӗсем çинђен ыйтма пуçларӗ. Еп таварӑннӑшӑн пит хавасланђӗç.

— Такçанах сана кӗтеттӗмӗр, аран таврӑнтӑн,—теççӗ. Таврӑннӑ кун ман çумран пӗри те хӑпмареç. Çӗпӗрти ђӑвашсем çинђен ыйтса пӗлеççӗ, йалта хӑйсем мӗнле пурӑнни çинђен, советран тыр пани çинђен каласа параççӗ. Вӗсем те: Совет пулӑшрӗ. Ахаллӗн вилсе пӗтеттӗмӗр, — теççӗ.

Çавӑн пек вара çурçӗрђђенех калаçса выртрӑмӑр. Тепӗр кунне епӗ те йӑмӑксемпе пӗрле тыр вырма кайрӑм.

**Хӑшпӗр сӑмахсене ӑнлантарса пани.**

1. Ӱрӗк-сӱрӗк — аран-аран, халран кайса.
2. Ӱпле — хушӑ, шалаш, арпалӑх.

ЫЙТУСЕМ:

*1. Тӗп шухӑша авттӑр мӗнле çыхӑнтарса пырать?*

*2. Çак просветени шухӑш йентђен мӗнле вырӑсла просветенийе аса илтерет?*

*3. Авттӑр вулакансене мӗнле интереслентерет?*

Ç. Йаккăвлĕв (Йалавин).

# ÇУТТАЛЛА.

МАРЙЕ пÿрт алăкне уçса йарсанах, тултан сивĕпе пĕрле ђан сасси килсе кĕђĕ.

— Танн-танн-танн! — йан кайаť урамран.

Пайан кăђкă праçникĕ, ернерен мункун. Иван пиђђе кĕлле кайма васкаť. Ватă пулсан та, хĕлĕн-çăвĕн пĕр канмасăр ĕçлет вăл: хĕлле вăрман турттараť, йур хыраť, карта тасатаť; кас пулсан вара, çемйе вађђи çăпата тăваť.

— Мур пек çийеççĕ çăпатана! — тарăхса вăрçаť вара вăл ађисене, — туса ĕлкĕрме çук.

Çулла пулсан пахђара, сатра кăштăртатса ĕçлесе çÿрет. Хирти ĕçе пĕр-ик çултанпа ĕçлейми пулђĕ, кусĕсем нађарланђĕç. Аслă праçниксенђе кĕлле çÿрет, çулне перре типĕ тытса çылăх каçарттарса килет. Кăçал та çăварни иртнĕренпех çемйере пĕр хăй анђах типĕ тытаť. Ыттисенђен уйрăм çийет. Çамрăксем кăђухне питех типĕ тытасшăн мар, сĕт-турăх çиме йуратаççĕ.

— Хуп ђасрах алăкна, хуп, сивĕ кĕрет! — тесе тăлхăраť вăл Марйене. Марйе кăвас ђĕресĕ йăтса кĕнипе алăкне йарах уçса йанă та, ђас хупаймасť. Алăк уçă тăнипе ђан сасси йан кайаť.

Марйе алăка хупсанах пÿртре лăп пулђĕ. Иван пиђђе мăйракаран тунă турапа шурала пуçланă çÿçне тураса пĕтерсенех, пăтаран саплăклă кĕрĕкне илсе тăхăниђђен малтан ăна çавăркаласа пăхрĕ. Унăн çулла тăхăнма пĕр

сăкманĕ пур, хĕлле çак кивĕ кĕрĕкпе çӳрет. Тулта хађ ни çулла мар, ни хĕлле мар — çуркунне. Ватă шăмшак пит ђас шăнаť, çавăнпа вăл пайан, çуркунне пулсан та, кĕрĕкне тăхăнђĕ. Кĕпи-йĕмĕ те çĕнĕ, çĕлĕкĕ те кивелсех кайман-ха, пĕр кĕрĕкĕ анђах саплăклă.

— Турă капла та айăп тумĕ-ха, — шухăшлаť вăл кĕтесрен кукăр вĕçлĕ туйине илсе.

— Ну, Илђкка, тăхăнас пеккине тăхăнтăн-и есĕ? — тет вăл ывăлĕн 12 çулхи ађине. — Айта уттарăпăр йерипен.

Аслашшĕ Илђккана пит йуратаť. Петĕре питех йуратми пулђĕ. — Шухха кайрĕ, кĕлле çӳремест, — тет вара вăл ун çинђен. Петĕр вунтăххăрта, ик çултанпа ĕнтĕ комсомолта тăраť. Турă çинђен хăрушă сăмахсем каласа аслашшин ăшне вĕркеттерет.

— Турă çук, ăна çынсем анђах шухăшласа кăларнă! — терĕ вăл пĕрре пухуран килсен. — Ăна çынсене улталама анђах шухăшласа кăларнă!..

Аслашшĕ ăна уншăн ђут кăна хĕнесе илмерĕ, кайран, çĕрĕпе тавлашрĕ. Çавăнтан вара аслашшĕ те турă çинђен тĕрлĕ шухăшсем шухăшлама пуçларĕ, анђах мĕн ђул шухăшласан та шухăшăн вĕçне тухаймасť. Тĕплĕрех шухăшлама хăраса, ĕлĕкхин пекех аслă праçниксенђе кĕлле кайса килет. Иккĕлĕ шухăшсем кĕрсен, тем пек хăраса вăл шухăшсене пуçĕнђен сирсе йама тăрăшаť.

— Каçар, турă, ман пуçран усал шухăшсене сир, — тесе сăхсăхаť вара вăл ун пек ђухне. Халĕ те, кĕлле кайас умĕн, турра кӳрентерес мар тесе, ђасрах тухса кайасшăн хыпаланаť.

— Ну, ђас пулатăн-и ес пайан? —васкатаť вăл халатне тăхăнса тăракан Илђккана.

— Ђим-ха ĕнтĕ, асатте, тӳме татăлса кайрĕ, — тесе

таваӑрса калаť Иђкка. — Çаклатма тытӑнтӑм та, çиппи татӑлса та кайрĕ.

Марйе ĕçпе васкаса каллĕ-маллĕ çӳрет. Вӑл пĕр кĕрет, пĕр тухаť. Тултан тепĕр хут кĕнĕ ђух, алӑк уçса йарсанах, пӳрте каллех ђан сасси çĕмĕрĕлсе кĕђĕ:

— Тан-тан-таннн! — кĕмсĕртетрĕ те илтĕнми пулђĕ; çапма та ђарӑнђĕ, алӑк та çав вӑхӑтрах хупӑнђĕ.

— Айта, сана пула кайа йулӑпӑр, кĕлĕрен килсен, ѣннў лартса парĕ, — терĕ вӑл алӑк хӑлӑпне тытса.

Иђкка таçтан кантра тупса пилĕкне туртса çыхрĕ те, иккĕш кĕлле тухса кайрĕç.

Хĕвел тухса ђылай хӑпарнӑ пулсан та, тулта сулхӑн Çӳлте хура çӑмӑр пĕлђĕсем шуса çӳреççĕ. Те çӑмӑр çăвĕ, те йур — паллӑ мар. Çуркунне пĕртте пĕлме çук, йурĕ те, çӑмӑрĕ те пĕрлех анаççĕ. Ĕнер те ав, йĕпе йур лапки-лапкипе çуса пĕр-ик сехетрех урама шуратса хуђĕ. Çавӑнпа пайан ниçта пусма çук пылђӑк. Хапха патне хӑма тӑрӑх тайкаланса утса çитрĕç.

— Ес малтан ут, еп сан хыççӑн пырӑп, — тет аслашшĕ Иђккана хӑйĕн шурала пуçланӑ куçĕсене шанмасӑр. Иђкка малта таканпа шартлаттарса пыраť, ун хыçĕнђен аслашшĕ туйи çине тайанкаласа, типĕ çĕре пусас тесе, кукӑр-макӑр утса пыраť. Хура çӑмӑр пĕлĕђĕсем те, Иван пиђђене çул кӑтартас тесе, хĕвелтен пӑрӑнђĕç те, хĕвел çӳлтен савӑнса кулса йађĕ. Пите ӑшшӑн çапса кайрĕ.

— Ӑшӑтаť, çанталӑк аванах ӑшӑтаť, — тесе мӑкӑртатса пыраť аслашшĕ Иђкка хыçĕнђен.

— Каррр, каррр! — кӑшкӑрса лараť çара ӑвӑс çинђе хура-курак, — карр-каррр!

Кураксем те килнĕ вӑн, çитрĕ çуркунне, — савӑнаť Иван пиђђе.

Çатан хӳтлĕхĕнђе хĕвелтен пытанса хулăн йур кĕмĕркки выртатӑ. Çийĕ унăн та хурала пуçланă. Вăл вărттăн ирĕлнипе çулпа пыма çук пылђăк.

— Сана аван, есĕ таканпа шалаттарса кăна пыратăн,— тесе йăвашшă калатӑ вăл Илђккана патаккипе типĕрех вырăн шыраса. — Мана нуша кунта.

Вăл çăпати тĕпне сăран хунă та, анђах çурхи шыв çăпати айккинђен кĕрсе ăна çӳçентерет.

Ђас типĕтĕ ĕнтĕ, çӳреме аван пулĕ, — мăкăртататӑ вăл утнă майпа.

— Мĕн тетĕн есĕ, мĕн калатăн? — шăнкăравă пек сассипе шăнкăртататӑ малта Илђкка.

— Ут, ут есĕ малалла, утăва пĕл, санпа калаçмастăп епĕ — тет Илђкка аслашшĕ хытă йур çинелле тухса.

Мирун сађĕ патĕнђе, типĕ çĕрте, ађасем кусналла выљаççĕ. Выљăх-ђĕрлĕхсем те, хур-кăвакалсем те çуркунне çитнине сиссе савăнаççĕ. Пралукра виç-тăват ĕне пылђăк ашса çӳреççĕ.

— Мму-у-у! м-у-у! мĕкĕрет пĕри. Ђупасшăн, вăкăр шыратӑ. Йухса выртакан пылђăклă шывра хурсем какăлтатса çӳреççĕ. Шыв тарăн мар, ишмелĕх çук.

— Асатте, кусналла выљама йулами? — ыйтатӑ аслашшĕнђен Илђкка. — Инçе мар вĕт ĕнтĕ, ху та çитĕн. Кĕлĕ пĕтсен пырса илĕп.

— Ут, ут, ан ђарăн, пайан аслă праçник, — тесе йăпататӑ ăна аслашшĕ.

Илђккан пĕр те ђиркĕве кайасси килмест. Урамра йулташсем выљаççĕ, савăнаççĕ. Ђиркӳре унта тăма çук пăђă, ăйха йаратӑ, ывантаратӑ. Канма ларсан вăрçаççĕ. Нуша ку асаттепеле! — тесе çиленет Илђкка хăй ăшĕнђе. Аслашшĕ пурĕ пĕрех васкататӑ.

— Кӗлӗ пӗтсен выҫама тухӑн, — тет вӑл йӗтӗн ҫӗлӗкне хӑлхи таранах пусса лартса.

Пыраҫҫӗ. Хӗвел тата таҫта пытанҫӗ. Сасартӑк сивӗ ҫил вӗрсе илҫӗ. Ҫиркӳ йал хӗрӗнҫе ларать. Ҫавӑнпах та унта кайма Илҫкан ҫун туртмасть пулӗ. Тата пӗр урам кӑна ӗнтӗ, анҫах ку лап урамра ытти урамсенҫен уйрӑмах пылҫӑк.

Иван пиҫҫене каллех турӑ шухӑшӗ пӑшӑрхантарма пуҫларӗ:

— Вӑт хура курак карклатса ларать, — шухӑшлать Иван пиҫҫе. — Турра та кӗл тумасть, типӗ те тытмасть, — аса илет вӑл Петӗр сӑмахне. — Кам ҫуратнӑ ӑна? ҫамкине пӗрсе шухӑшлать вӑл. — Турӑ тейӗпӗр. Ҫапла ҫынна та турӑ тунӑ. Ҫапла... Ҫав вӑхӑтра Иван пиҫҫе ури курпил хӑма ҫинҫен шуса кайрӗ те, хӑранипе ун ҫурӑмӗ сӑрӑлтатрӗ, шухӑшне те сасартӑк манса кайрӗ.

— Ӑҫта мура вӑл тери хытӑ утатӑн, — тесе кӑшкӑрать вӑл ҫиллипе Илҫкана. — Ҫул кӑтартса пыр мана, каҫака ҫӑмӑртан тарнӑ пек ан тар.

— Пӑх-ха, асатте, пӑх-ха, шӑнкӑрҫӑ килнӗ! — тесе ҫарӑнать Илҫкка аслашшӗне кӗтсе. — Йепле йурлать, итле-ха.

— Килнӗ-им? — пуҫне хӑпартать аслашшӗ шӑнкӑрҫа ҫеннелле, — килме вӑхӑт ҫав ӗнтӗ. Ут, ӑҫта пылҫӑк тарӑн ҫӗрте мана систер, — тет вӑл пуҫне ӗлӗкхи пекех ҫӗрелле усса.

Кукӑр-макӑр уткаласа пыраҫҫӗ.

— Ҫим-ха, Илҫкка! — сасартӑк кӑшкӑрса йаҫӗ Иван пиҫҫе, — ҫим-ха! Илҫкка хӑранипе, тата васкаса ҫаврӑннипе ҫут пылҫӑк ҫине йӑванса кайатҫӗ.

— Мӗн пулҫӗ асатте?

— Кӑҫкӑ ӑҫта, кӑҫкӑ, пайан кӑҫкӑ праҫникӗ вӗт! — ахӑрашать вӑл ҫиллипеле. Йулашки вӑхӑтра Иван

пиђђе, çав Петĕрпе турă çинђен калаçнă хыççăн, ђасђасах тăвас ĕçне те манма пуçларĕ. Йапалине хурсанах çавăнтах ăçта хунине манса кайаť. Хаљ те çапла. Ĕнер йури кĕлле илсе кайма пĕр çыхă папкаланнă кăђкă хатĕрлесе хурсађђĕ. Пайан тата, мур, мĕн тухса килиђђен те аса илмен.

— Мĕн тăвас-ха? — аптăраť вăл, — ăçтан илĕпĕр?

Иљкка ђĕнмест, вăл аслашшĕне çилленме те пуçларĕ ĕнтĕ. Йулташĕсем урамра савăнаççĕ; аслашшĕ ăна ђиркĕве çӳретсе нушалантараť. Çилли çав тери капланса килђĕ.

— Ху та çав, васкатăн, тĕпĕртететĕн, мĕн кирлине манса хăвараtăн, — тесе шăмарса хуђĕ Иљкка. Çиллипе ђут кăна куççуљĕсем тухаťђĕç.

— Пурĕпĕр каллĕ-маллĕ çӳреместĕп, кай ху, — тесе йĕрес пек калаť вăл, аслашшĕ çавăн пек ђухне ăна ђуптарнине аса илсе. Халĕ вăл ун патĕнђен выљама пăрахса та тарĕђђĕ, анђах аслашшĕ ăна çилленсен çăпата туса памасран хăраť.

— Çук, çук, калле йамăп, инçе каймалла, — тет аслашшĕ вырăнĕнђен хускалса. — Кĕркуриреn илĕпĕр. Аранђă парĕ-ха. Айта ут.

— Мĕн илесшĕн Кĕркуриреn? — тенĕ хулăм сасă илтĕнет хыçалтан. — Хытăрах утăр, паçăрах ђан çапса ђарăнђĕ вĕт, — тесе Мирун хĕррипеле иртме хăтланаť.

Мирун вăл Иван пиђђепе пĕр вăхăтрах çуралнă, кађђă ђухне те пĕрле алхасса ӳснĕ. Ун ђухне пит шухă çӳређђĕ вара вăл. Халĕ вĕсене иккĕшне те пĕр-икĕ çултан утмăл тулаť. Иван пиђђе икĕ çул анђах аслăрах унтан. Çулсем пур. Анђах Мирун: те нуша сахалтарах курнă (вĕсем ытла та пуйан пурăнаççĕ), те „турă йуратнă ăна“, вăл халĕ те паттăр çӳрет-ха, аптрамалла мар.

— Ак çак манка сурӑхпа йавӑçса, — çиллипеле Иљккана айӑпласа калаҭ Иван пиђђе, — кӑђкӑ мантарса хӑварнӑ. Сан нумай никак, уйӑр пире те аранђӑ, — тет вӑл Мирун аллинђи кӑђка курса.

— Нумайах мар та, парас, — тет Мирун пӗр пайӑркине уйӑрса. Çуммӑн утса пыраççӗ.

Айӑпсӑрах вӑрçнипе Иљкка аслашшӗне тата та ытларах çиленђӗ. Йурӗ-ха сана, тепӗринђе ђӗнӗн, пырӑп санпа, — шухӑшлаҭ вӑл пылђӑк ишсе.

— Те манакан пултӑм, те ватӑлса çитрӗм? — тесе каллех хускатса йараҭ Иван пиђђе.

— Ватӑлатпӑр та пуљ çав ӗнтӗ, — тет хуйхӑрма тытӑнса Мирун пиђђе. — Çул пӗрмай иртет вӑл. Ир пулаҭ те, каç пулаҭ... Хаљ кӑна кађђӑ пулса асса çӳренӗ пек. Сисместӗн те ӗмӗр иртнине, — тесе хӑй сӑмахӗпе хӑйне йӑпатса пыраҭ Мирун. — Шыв кӑçал пит нумайах мар, пӗлтӗрхи пекех мар. Пӗлтӗр шыв пусса илнӗђђӗ.

— Пулӗ-ха вӑл, ан та калаç, — тесе тавӑрса хураҭ Иван пиђђе. — Ак ӑшӑтсанах капланса килсе анӗ. Çапла пулаҭ вӑл. Пӑр кайса пӗтрӗ-и-ха?

— Пӗтнӗпе пӗрех, — тет Мирун кӑђкине хӗвне ђиксе.

— Тепӗр шӑнкӑрђи йурласа лараҭ, пӑх-ха асатте пӑх-ха! — савӑнаҭ Иљкка.

— Ђарӑн-ха есӗ, илтетӗп, — тесе ђараҭ ӑна аслашшӗ.

Хапха уçӑлса кайрӗ те, урапа кӳлнӗ лаша тухрӗ. Ђарӑнса ӑна çул пађӗç. Урапа çинђе Макар таçта тухса кайрӗ.

— Праçникре ӑçта кӗлле каймасӑр çӳретӗн тата? — кӑшкӑраҭ ӑна çӗлӗкне илсе Мирун.

— А-а-а, сывӑ-и-ха? — тесе Макар та хирӗç çӗлӗкне илет. — Кӗлле çӳреме вӑхӑт çук-ха, — тет те, лашине ђуптараҭ урампа.

— Ех, кёлле çӳреме те пӑрахрёç! — хашлатаҫ ывӑннипе Иван пиђђе, — турра манђёç.

— Ан кала та ёнтӗ, — аллине сулаҫ Мирун — ваттисем те пурте çӳремеççӗ. Тимуç виç султанпа пыман пуђ ёнтӗ ђиркёве.

— Епӗ те аптраса пӗтрём-ха, — тет хӑй шухӑшне тавӑрса Иван пиђђе, — çӗрӗ çӗрӗпе шухӑшлатӑп.

— Мӗн çинђен? Ђим-ха, ку хӗринелле кил, путса ларӑн унта, — тесе тытаҫ ӑна аллинђен Мирун. Малта пӗр шӑтӑка шыв тулнӑ, Иван пиђђе ђут пырса пусаҫђӗ.

— Мӗн çинђен? Пӗрре Петӗрпе тавлашрӑмӑр, пирӗн комсомолӗс вӑл. Пухуран килђӗ те, турӑ çинђен калаçма тытӑнђӗ. Çамрӑкскер мӗн пӗлет вӑл? Калаçаҫ анђах. Тавлашса кайрӑмӑр. Çӗнтерме çук, мура! тет Иван пиђђе Мирун куçӗнђен пӑхса. — Аптраса пӗтрём. Кайран çӗрӗпе сывраймарӑм. Çав „свешђени писсани" текен йапалана шухӑшласа, нийепле те вӗçне-хӗрне тупаймастӑп...

— Комсомола ан сырӑн ес? — шӑлне йӗрет Мирун.

— Кулӑ мар вӑл, — ђараҫ ӑна Иван пиђђе, — шухӑшласан тӗлӗнмелле. Акӑ итле-ха: „саккун поши" çинђе Атамӑн икӗ ывӑл пулнӑ, тенӗ. Йурӗ, иккӗ пултӑр. Кайӗн Авӗлне вӗлернӗ. Çапла-и? — тесе калаçма тытӑнаҫ вӑл хӗрсе кайса. — Пурӑнсан, пурӑнсан Атампа Йевӑ вилнӗ. Авӗле Кайӗн вӗлернӗ терӗмӗр-ха. Ну... Авӗл вырӑнне вӗсен Çиф çуралнӑ. Çапла-и? Çапла. Вара ёнтӗ çӗр çине Кайӗнпа Çиф анђах йулнӑ. Малалла вара сынсем йепле ӗрђесе кайнӑ пулаҫ? Кала-ха мана çавна? — тет Иван пиђђе Мирун пиђђе çине сывласа. — Çав мана ӑсран йаđӗ. Пупран ыйтасшӑнђђӗ те-ха, тӳрӗ килмест...

— Кӑтартӗ вӑл сана Кайӗн! — тесе шӑмарса калаҫ Мирун... Ну, çитрӗмӗр ёнтӗ, — терӗ вӑл; иккӗш те çӗлӗкӗсене илсе, виç-тӑват хут сӑхсӑхса илђӗç.

— Иљкка ăçта пирĕн, Иљкка ăçта? — тесе пăхкалаť Иван пиђђе унта-кунта.

— Вăл паçăрах тепĕр йеннипе калле кайрĕ вĕт, — тет Мирун кăђкине хĕвĕнђен кăларса.

— Ей, мур илешшĕ ађуна-пăђуна, тесе мăкăртатаť Иван пиђђе ђиркў пусми çине туйипе шакăлтаттарса улăхса. — Киле таврăнсан лектереп-ха ăна!

II

Çав тери аслă праçник пулсан та, ђиркўре çын сахал. Çамрăксем питех курăнмаççĕ. „Турамăш“ патĕнђе Униç карђăк ўке-ўке пуççапса кĕлтăваť. Те çамрăк ђухнехи çылăхĕсене вилиђђен каçарттарса йуласшăн, те ватă пулсан та тата аранђă пурăнас тесе, турă амăшĕнђен кунçул ыйтаť? Униç карђăк пек кĕлле çўрекен çын, йалĕпе шырасан та, урăх тупас çук: пĕр праçникрен те йулмасť.

— Айта сылтăм йеннелле кайса тăрар, — ђĕнет Иван пиђђене Мирун сăхсăхса ђарăнсан. Сылтăм йенђе арçынсем тутисене сиктеркелесе тăраççĕ, сулахай йенђе — хĕрарăмсем. Хутра-ситре çамрăк хĕрсем алттар йеннелле куçĕсене пĕр илмесĕр, турă тем каласса кĕтнĕ пек кĕтсе тăраççĕ.

— Кўр-ха мана, пилĕк пуслăх çурта пар, — тесе тăсаť Иван пиђђе пайана ваљђи йури хатĕрлесе хунă укçине ђиркў старăстине.

Клирăс çинђе йурлани илтĕнсе кайрĕ. Пĕри тийеђук сасси, тепри хĕрарăм çинçе сасси.

— Уљйуна карђăк пулас, — шухăшлаť Иван пиђђе, — çав йурлама ăста. Ĕлĕк ђиркўре шкул ађисене йурлаттараканђђĕ, хаљ вĕсем те çук. Ђиркўре илем пĕтрĕ, çавăнпа та çынсем çўреме пăрахрĕç пулĕ, — тесе шухăшлаť

вăл старăстăн сарлака çурăмне пăхса. Ёлёк те çуртапа çав сут тăватђё, халё те çавах.

Иван пиђђе çуртине илђё те, Христуса пăталанă хёрес патнелле утрё. Ђиркў хуралçи çунса кёскелнё çуртасене сўнтерсе çўрет. Хăшё çурри те çунман, вăл вёсене те лартакан шăтăкне вуђё май ђиксе сўнтерет те, пуçтарса илсе кайат.

— Çунса пётиђђен тарасђё ёнтё! Мён çунса пётиђђенех сўнтерет-ши? — тесе çиленет Иван пиђђе. Урамра пулсан калас сăмаха калёђђё, кунта калаçма йурамасť. Иван пиђђе, çуртине хёрес патне лартас тесе, урине пуснăђђё кăна, ђиркў хуралçи те унта пырса çитрё те, пуçтарма та тытăнђё. Ăна кансёрлес мар тесе, Иван пиђђе ђарăнса тăђё. Ним тума аптраса сăхсăхма пуçларё. Йепле кăмăлпа кёл тăвас тесен те, хăш вăхăтра пуçне ёнерхи хăрушă шухăшсем килсе ṅерёнеççё те, Иван пиђђе вёсене темрен хăранă пек пуçне силлесе хăваласа йаратť.

— Усала сир ман патăмран, каçар мана, турă, — тет вăл шухăшсем пуçне килсе кёрсен. Хуралçă ёçне пётерсе кайсанах, вăл пёр çуртаран хăй илсе пынă çуртине тивретрё те, тепёр майне вутпа ăшăтса, çурта лартма тунă пёр шăтăка пусса лартрё. Ватă алли ђётреннипе çурти те ђётрет.

Клирăс çинђе темле хурлăхлă йурă йурласа йађёç. Халё ёнтё тепёр çёнё хулăн сасă илтёнет.

Иван пиђђе ёлёкхин пекех çурта лартнă хыççăн ўксе пуççапрё. Çамки урайне тивсенех, урай сиввипе ун пуçне темле шухăш килсе перёнђё. Иван пиђђе çамрăк ђухне çыру вёренмен, ун ђух çирём йала та пёр шкул пулман. Хăш вăхăтра мёнле кёлё пулмаллине пёлмест.

— Турă, пире ан пăрах, пулăш пире, турă, — тет вăл пĕрмай кĕл тума тытăнсан. Мĕн ĕçре пулăшмалла, тесе ыйтас пулсан, вăл хăй те каласа пама пултараймасть.

„Саккун поши“ текен йапалана тийеђук патне кайкаласан вăл вулакаласа паратђĕ. Вăл вуланă ђухнĕ Иван пиђђе нихăçан та: тĕрĕс-ши вăл кунта çырнисем, йе тĕрĕсех мар-ши, тесе шухăшламан. Турă кĕнекинђе йăнăш çук пуљ тесе, ĕлĕкренпех шаннă вăл. Çавăнпа ун çинђен тĕплĕрех шухăшлама мар, вуласа парсанах, ăна манса кайнă. Петĕрпе тавлашнă хыççăн вăл тийеђук вуласа панине аса илсе тĕплĕрех шухăшларĕ те, унта йăнăш вырăнсем тупрĕ. Çавăнтан вара Иван пиђђен ђунĕ пăшăрханма тытăнђĕ. Ђăнахах та çав, турă çырнă текен кĕнекесем пурте тĕрĕс пулмалла. Унта хăш-пĕр тĕлте йăнăшсем пулсан... пурте йăнăш пулма пултарать. Йăнăш пурри паллах. Çав Кайĕнпа Çифах тĕлĕнтерет. Унтан, Петĕр калашле, Ной хăйĕн пĕр карапĕ çине йепле пĕтĕм тĕнђери ђĕрĕ-ђуна пухнă-ха вăл? Ăçтан вĕсене апат тупса çитермелле? Çаксене тĕплĕрех шухăшласа, çамрăк çын мар, ватă çын та аптрамалла.

Иван пиђђе, ĕлĕкренпе турра ĕненсе ўснĕскер, апла шухăшлама хăрать. Турă пурах, тенĕ шухăш тепĕр йенђен ун пуçне килсе кĕрет. Вара тамăка кайан вĕт усал шухăшсемшĕн. Çавăнпа Иван пиђђе иккĕллĕ шухăшсене хăваласа йарать. Анђах, çурхи пăр хускалсан ăна нимпе те тытса ђарма çук, çавăн пекех, пуçа пĕр пысăк шухăш кĕрсен те ăна хăваласа йама çук.

Пĕри кайалла туртать: тамăкра çунăн, — тесе хăратать; тепри: — тамăкĕ те, нимĕн те çук, турри хăй те — те пур, те çук, — тесе илĕртет.

— Ма калаçрăм-ха епĕ Петĕрпеле? тесе вăрçать Иван пиђђе хăйне ăшĕнђе. — Мĕне кирлĕ?

Пурте ђăркуçланса ларђĕç, йурлаççĕ. Иван пиђђе те çынсемпе пĕрле ђăркуçланса ларђĕ.

— Каласа пар мана, Христус, — кĕл тăвак̆ вăл пуçне тайса хунă Христус сăнне шывлă куçĕсемпе пăхса: — ăнлантарса пар мана!



Çав вăхăтрах Иван пиђђе, тилмĕрсе пăхнипе, Христус пуçĕ тĕлĕнђе пĕр шурă йапала курах кайрĕ.

Çук, Христус сиккеленмест. Никам та нимĕн те каламаст̆. Йурласа пĕтерсен пурте ура çине тăђĕç. Иван пиђђе те вată шăмшаккине хуçкаласа тăђĕ

— Кăђкăна ма халиђђен леççе памастăн? тенĕ сасă илтет вăл. Мирун пырса унăн кăђкине илђĕ те, „таса шывпа“ саптарма леççе хуђĕ.

Çав вăхăтрах Иван пиђђе, тилмĕрсе пăхнипе, Христус

пуҫӗ тӗлӗнђе пӗр шурӑ йапала курах кайрӗ. Хӗрлӗ хӗрес ҫинђе пӗђӗкҫеҫ шурӑ вырӑн тӑраҭ.

— Мӗн ку?—тилмӗрсе пӑхаҭ Иван пиђђе.

Ҫийелти сӑрӑ хӑйпӑннипе, сӑрӑ айӗнђен шурӑ пур курӑнса тӑраҭ, тата хӗрринерех пӳрне пусӑмӗш йӑвӑҫӗ палӑраҭ. Вӑл хӑйпӑнса ӳкнипе Христусӑн пӗр пиђӗ катӑкӑн курӑнаҭ.

Иван пиђђе шартах сикет. Христус-Христус теҫҫӗ, краскине сӑтӑрса пӑрахсан, айалта шурӑ пурпа йӑвӑҫ анђах...

— Краскине хӑпӑтса пӑрахсан нимӗн те йулмасҭ. Йӑвӑҫ анђахӗҫке?—тенӗ ђейе шухӑш кӗрет ун пуҫне.

Ҫамки ҫине унӑн тар тухрӗ. Ҫурӑмӗ те йӗпен туйӑнса кайрӗ. Халиђђен вӑл икӗ майлӑ шухӑшлаҭђӗ, хађ ӗнтӗ пӗр майӗ туртса тайӑлтарђӗ.

... Кӗлӗ пӗтсе килет. Ҫуртасене сӳнтерме пуҫларӗҫ. Клирӑс ҫинђе те, те кӗлӗ пӗтнипе савӑннӑ пек, хавассӑн йурлама пуҫларӗҫ. Ҫынсем малалла утаҫҫӗ. Иван пиђђе, Мирун панӑ кӑђкине илмесӗрех, ҫаврӑнђӗ те, васкаса килелле тухса утрӗ. Мируна та кӗтмерӗ...

## III

Иван пиђђе Мирунпа хӗрсе калаҫма тытӑнсанах, Иђкка урамӑн тепӗр йеннипе калле тарнӑ.

— Хӑй манса хӑварђӗ те, манах айӑплаҭ,—шухӑшлаҭ вӑл аслашшӗне ҫиленсе.

Хӗвел ҫӳлелле хӑпарнӑ ҫемӗн урам илемленет. Хура пӗлӗтсем тӗрлӗ тӗле саланса пӗтнӗ. Хӗвел ҫывӑхӗнђе тӗгӗм пек витӗр курнакан пӗлӗтсем шуса ҫӳреҫҫӗ. Анђах, хӗвел тӗлне пулсанах ҫухалаҫҫӗ вӗсем.

Йӑкӑнатсен улӑм витнӗ ҫурђӗ ҫинђен, тепле хӗвелтен пытанса йулнӑ йур кӗмеркки ирӗлнипе, тумла йухаҭ.

— Пат, пат, пат! — тумлат̆ тумла Иљаккан хуралнă алли çине. Ывăç тупанне шыв пухăннипе, пěр пысăкрах тумлам ўксенех, куçне пěр пěђěк тумлам сирпěнсе кěђě. Иљкка куçне аллипеле сăтăркаларě те, малалла утрě.

Сылтăм уринђи таканě урине ыраттарат̆, çěлеме мелсěртерех çěленě. Пушăђě хулăн хăпарса тăртат̆, пуссанах çав урана ыраттарат̆.

Сантăрсен пахђинђен пылђăклă шыв йухса выртат̆. Сарлакăшě питех сарлака мар. Иљкка siksе каçма çеç тытăннăђђě, çав вăхăтрах кěссинђе хутран тунă кимми пуррине аса илђě.

Киммине тўрлеткелерě те йухакан шыва пăрахрě. Кимми унта ђарăнкалат̆, кунта ђарăнкалат̆. Ђарăннă вăхăтра Иљкка ăна аллипе хускатса йарат̆.

Киммине хускатса йарас тесе, Иљкка пěшкěннěђђě кăна, хыçалта ура сасси, пылђăк ашса килни сисěнђě.

— Кимě манăн та пур, ман саннинђен авантарах! — тет Пантти ун патнелле пырса.

— Кам туса пађě вара сана? — тесе ыйтат̆ унтан Иљкка. Киммине, вăрласа кайасран хăраса, аллипе илсе кăсйине ђикет.

Иљкка унтан аслăрах пулсан та, Панттирен вăл шикленет. Вăрлě те, тарса кěрсе кайě. Мěн тăвăн ăна? Хайсен кассинђе пулсан урăхђě те, ку Панттисен касси.

— Пиђђе туса пађě, — тавăрса калат̆ Пантти. Вăл пысăк атăпа, çěтěк кěрěкпе. Çěлěкěн çиййě çěтěлнипе мамăкě курăнат̆. Пěр йенни йури тасатнă пек, йап-йака çаралнă.

— Айта, иксěмěр выљар, — тет вăл Иљккана йăвашшăн кăна.

Ку усал мар иккен, хěнесшěн мар, — савăнат̆ Иљкка.

Кимěлле выљас пулсан калле каймалла. Анђах

Иљккан хӑйсен кассинелле кайасси килет. Унта хӑйсен йулташӗсем выљаҫҫӗ.

— Айта пирӗн касса, унта выљӑпӑр, — тесе тавӑрса калаҭ ӑна Иљкка.

— Ҫук, унта сирӗн ађасем усал.

— Айта, хам хӗнеттермӗп, — ђӗнет Иљкка. Ҫав вӑхӑтрах, Пантти йӑваш калаҫнипе вӑл ун киммине вӑрласа тарманнине сисрӗ те, Иљкка киммине кӑсйинђен кӑларса тӳрлетме тытӑнђӗ.

— Мана атте мункуна карттус илсе пађӗ! — мухтанаҭ Пантти.

— Ма тӑхӑнмастӑн тата илсе панӑ пулсан?

— Мункунта тӑхӑнма пуҫлатӑп.

— Ей, ун пек карттус манӑн та пур-ҫке! — тет Иљкка аллине сӑкманӗ ҫумне сӑтӑрса. Йулташӗсене аса илђӗ те, ђупрӗ малалла.

— Ка-ка-ка-ка! — тенӗ сасӑ илтӗт Иљкка хыҫалта. Вӑл ђупнипе ӑна хураҫи хӑваласа пыраҭ иккен. Ӑна илтсен, Иљкка тата васкарах ђупма пуҫларӗ.

Кӗтессе ҫитсен ђупма ђарӑнђӗ. Кайра хураҫи какӑлтатса тӑракан ами йеннелле мухтанса пыраҭ. Иљккана хӑваланипе мухтанаҭ пулмалла.

Паҫӑрхи вырӑнта йулташӗсем ҫук, таҫта кайнӑ. Ах, мурсем, Иљкка килессе кӗтмен!

— Паҫӑрах йулмаллађђӗ иккен, — тесе ӳкӗнет Иљкка.

— Ӑҫтан килен Иљкка? — ђӗнет Иљккана Исевет.

— Асаттене ђиркӗве леҫме кайрӑм.

— Ђирлемен пулҫке аслаҫу?

— Ҫу-у-ук, ђирлемен те, темме йалан мана илсе кайаҭ, — тесе ӳркенкелесе тавӑрса хураҭ Иљкка. Шухӑшласа тӑђӗ, тӑђӗ те, кукамӑшсем патне ђупрӗ. Вӗсен патӗнђе выљама аван, пӳрђӗ пысӑк.

## IV

Кирлĕ вăхăтра Петĕрĕ те килте тăмасť іçмаçин, каç çывăрма анђах таврăнаť. Çывăрма выртсан та, мĕн çывăрса кайиђђенех кĕнеке вуласа выртаť. Иван пиђђен хаљ унпа тем пек калаçасси килет, анђах лешин вăхăђĕ çуккипе, Иван пиђђе хускатса йама сăлтав тупаймасť. Кампа та пулсан ђунтан вартан калаçасах пулаť, хăй йепле тăрăшсан та, пĕр-пĕђђен çул тупас çук.

Пĕрре, каçхи апат хыççăн, вăл кĕнеке вуласа ларакан Петĕр патне пырса пĕр-ик сăмах хушса хуђĕ те леш аллипе анђах сулђĕ.

— Сана, ват çынна, пурĕпĕрех çĕнĕ çула çавăраймăн, вăхăтăм та çук,— терĕ вăл çӳçĕсене типшĕм аллисемпе сăтăркаласа.— Комсомолсен мункуна хатĕрленмелле. Унтан Май праçникĕ çитет, унта та хатĕрленмелле,— тесе хушса хураť вăл.

— Пĕр йапала çинђен анђах ыйтас тетĕп,— тесе куçĕсене тутăрпа шăлса калаť аслашшĕ.

Петĕрĕн — те çилленнĕ вăхăт пулнă, те ђăнахах çав тери вăхăђĕ çуккипе, пайан вăл калаçашшăнах мар.

— Ыран мункун çинђен токлат пулаť, пĕлессӳ килессĕн çавăнта пыр, анђах пырсан та усси пулĕши вара?

Петĕр вырăнĕ çине кайса выртрĕ те, вуласа выртаť. Иван пиђђе те ăшă кăмака çине ватă шăмми-шаккине ăшăтма хăпарса выртрĕ. Анђах тарăн шухăш ăна ăйхă памасť.

— Пурăнсан-пурăнсан вилен,— тесе шухăшлаť вăл.

— Ăçта райĕ, ăçта тамăкĕ, кам курнă вĕсене?.. Ма турă никама та курăнмасť?— тесе шухăшлаť вăл.

Кăмака айĕнђе шăрђăк ђĕриклетсе ђуна хурлантараť. Пурте çывăраççĕ.

— Тӗнђере турӑ пулсан, хуҫ пайан тӗлӗкре курӑнтӑрђђӗ, — тесе сӑнаҫ вӑл турра. — Пайан ҫӗрле курӑнмасан, ҫук вӑл тӗнђере.

— Курӑнсам турӑ мана тӗлӗкре, епӗ вара пӗр иккӗленмесӗр ӗненӗп сана, — тесе сӑхсӑхаҫ вӑл ӗлӗкхи йӑлапа. Ҫавӑрӑнкаласа выртсан-выртсан, ҫывӑрса кайрӗ.

... Ирхине куҫӗсене уҫса йађӗ те, тул ҫапҫутӑ. Сӗтел ҫинђе сӑмавар кӗрлесе ларать. Иљкка та тӑнӑ, питне ҫӑвать.

— Асатте, ђей ӗҫме тӑр! — ђӗнет вӑл аслашшӗне.

Телейлӗ вӑхӑт — ађа ђухнехи вӑхӑт, хуйхи-суйхи хӑйпе пӗрле. Акӑ апат хыҫҫӑн выљама тухать.

— Иртрӗ ӗмӗр, выљӑх ӗмӗрӗ пекех иртрӗ, — хашлатать Иван пиђђе.

— Пӗр кун ма есӗ мана пӑрахса тартӑн? — шӑмарать ӑна аслашшӗ. — Асларҫу сӑмахне итлес пулать. Е-е-еп сана! — йунать вӑл Иљккана.

Кӑштӑртатса кӑмака ҫинђен анать. Кӑмака умӗнђе кинӗ вут хутать. Турӑш умӗнђе йӑвӑҫҫу ҫунать.

— Ђиркӳре тӑма ывӑнтарать, пуҫ ыратать унта, асатте, — тесе йӑвашшӑн кӑна калать Иљкка. — Ӳлӗмрен мана унта илсе ан кай.

— Ӳлӗмрен, ӳлӗмрен... ӳлӗмрен хам та... — каласа пӗтереймерӗ вӑл. Тӗлӗкне аса илђӗ. Пуҫсӗр тӗлӗк курнӑ вӑл каҫпа. Таҫта утӑ ҫулаҫҫӗ пек, куракӗ вӑ-ӑ-ӑрӑм, ҫави витмест, аптраса пӗтрӗ. Ҫынсем нумай. Шавлаҫҫӗ, кӗрлеҫҫӗ. Ҫулса пынӑ ђухне ҫӗлен сиксе тухрӗ те, Иван пиђђен урине йавӑнђӗ. Аран ҫӑлӑнђӗ. Хаљ те Петӗр пулђӗ, темӗскерпе пырса ҫапрӗ. Иван пиђђе ирхине те ҫавӑнтан хӑранипе вӑранса кайрӗ.

— Ма пайан есӗ ирӗлсех ҫывӑрса кайнӑ, ир тӑраканђђӗ-ҫке есӗ, — тет ӑна пашалуне кӑмакаран туртса кӑларнӑ ђухне кинӗ.

— Пуç ыратнипе ђас çывăрймарăм, — тесе суйеçтерет Иван пиђђе.

Сивĕ шывпа питне сирпĕтсенех, куç-пуçĕ уçăлса кайрĕ.

— Петĕр ăçта? Мĕн кашни кун ђупма йарĕнђĕ вăл? — тесе хăй шухăшне хирĕç калаť Иван пиђђе. Çывăрнă ђухне çўçĕсем çыхланса арпашăнса пĕтнĕ. Кăмака карнисĕнђен мăйракаран йакаткаласа тунă турине илђĕ те, çўçне турама тытăнђĕ.

— Праçнике хатĕрленетпĕр, тесе, васкакаласа ĕçсе тухса кайрĕ вăл, — ерленнĕ сасăпа калаť кинĕ. — Ку ђухнехи çамрăксем çавă ĕнтĕ!

Иван пиђђе ђей ĕçме лариђђен сăхсăхас та мари тен, терĕ те, темĕскер сăхсăхмасăрах ларма хăйувĕ çитеймерĕ. Кинĕ те çатма аври çине тайанса пăхса тăраť. Кĕтесселле пăхса йăлине туса илђĕ. Турă тĕлĕкре те пулин хăват кăтартманни çиђен шухăшлаť вăл.

— Пайан кĕлле кайма та кайа йулатăн пуљ есĕ? — тесе систерсе хураť кинĕ.

— Çук, пайан кайаймăп. Ыран мункун, ыран кайăп. Пайан... пуç ыратаť, — пăрса йараť сăмаха Иван пиђђе.

Ку сăмахран кинĕ те тĕлĕнсе кайрĕ. — Ак тамаша, есĕ те çапла калаçатни? Çав вăхăтрах:

— Ĕнер епĕр кимĕпе çўрерĕмĕр! — тесе мухтанаť Иљкка

— Кам лартрĕ, кампа çўрерĕр? — тесе хушса хураť, ахаљ тăриђђен Иљккапа та пулин калаçса йăпанас, тесе аслашшĕ.

— Улйана аппасен киммипе...

Иван пиђђе Иљкка каланине илтеймест, пуçне шухăш çавăраť.

Иљкка куркине ĕçсе йађĕ те, çара уранах урама тухса ђупрĕ.

— Манăн та ђей сыпкалас-ха — тесе пырса ларђĕ кинĕ. Ĕçеççĕ. Вĕри пашалу çийеççĕ. Сĕтел айĕнђе кушак урасене сĕртĕнкелесе çӳрет. Вăйлă шухăшлă Иван пиђђе, темле ăнсăртран çаннине çаклатса, куркине йăвантарса йађĕ. Хаљ те кинĕ тытса ĕлкĕрђĕ.

Кинĕ çилленет:

— Мĕн сĕтел кутĕнђе те çывăрса ларатăн?

— Ватăлтăм пуљ çавă, куçăмсем курсах кайаймаççĕ, — тесе айăпне хăй çинђен сирет Иван пиђђе. Вăл кинĕпе унђђен кăна хăй шухăшĕ çинђен сăмах хускатса йараcшăнђђĕ. Халĕ ĕнтĕ ку ĕмĕђĕ те татăлђĕ. — Пурĕпĕр вăл ăнланаймĕ, ухмах вырăнне хурĕ, тесе аллине çеç сулђĕ.

— Пайан темме ђуста ăнаймарĕ, — тесе супĕлтетсе ларатˇ кинĕ. — Йӳçсе хăпараймарĕ.

— Мăрр, мăр, мăр! — тăватˇ кушакĕ сĕтел айĕнђе.

Ђей ĕçсе тăрансан та, Иван пиђђе кинĕнђен вăтаннипех сăхсăхкаласа илђĕ. Хăрани те пур ђĕрин пĕр кĕтессинђе. Малтан вăл: Тавта пуç сана турă, текенђђĕ, хаљ ăна мĕншĕн тав тумаллине те пĕлмест. Сăхсăхкаларĕ те, кăмака умне пырса ђĕлĕмне, тапак тултарса, тивертсе йађĕ.

## V

Кăнтăрлахи кĕлĕрен çынсем саланса пĕтсенех, Иван пиђђе пуп патне утрĕ. Пуп çурђĕ ђиркӳ патĕнђе, пысăк çурт. Пӳрђĕ умĕнђе виçĕ йăвăç. Сађĕ пысăк, кĕркунне панулми пит нумай пулатˇ. Пуп вара лавĕ-лавĕпе сутатˇ. Иван пиђђе пыракан йенђен пăхсан, пӳрђĕн тăрри анђах курăнатˇ. Пĕрре, çурма çула çитсен, калле çаврăнма та шухăшларĕ те (пуп вăрçасран хăратˇ), анђах ăшĕ пăшнипе: йе пуç, йе мул, — тесе утрĕ малалла.

— Патăшкă килте-и, унăн кунта тухма вăхăђĕ пулĕши? тесе ыйтат вăл унăн çиленђĕк стрепкинђен. Стрепки ăна шăмарса пăхкаларĕ те, малти пӳртне кĕрсе кайрĕ.

Пупăн кухни те тап таса, пысăк, кухнинђе те икĕ çемйе пурăнма çитет.

Кĕтесре пысăк иккун çакăнса тăрат, тепĕр йенђе Христус сăнĕ. Ун çумĕнђе Ион Кронштатски текенскер, рамă ăшĕнђен куçĕсене хĕссе пăхат. Ăшĕ вăрканипе Иван пиђђе куçĕсене урăх тĕлелле пăрса йађĕ. Ђӳређе çинђе ђетвĕрт сĕт ларат, сугма пуђ, ĕни сĕт пит нумай парат, теççĕ. Сĕтелĕ çинђе шурă тулă çăнăхĕнђен пĕçернĕ йапаласем куçа хĕрĕнтерсе выртаççĕ.

Сăмсине тутлă шăршă кĕнипе Иван пиђђе тутисене çулласа илђĕ. Урайĕ шапшурă. Алăк патĕнђе, кĕрсенех, хресђенсем витĕнсе выртакан палас сарнă. Иван пиђђе çăпати йĕрĕ паллах тăрат.

— Е-е-е, есим-ха вăл? тесе малти пӳртĕнђен кăкăр çинђи кĕмĕл хĕресне сăтăркаласа тухат пупĕ. Вăл пит хулăм çын, алли çинђи шăнăрĕсем пĕртте палăрмаççĕ. Сăмси çинђе куçлăх, кĕнеке вуланă пулмалла.

— Мĕн ĕçпе килес терĕн-ха есĕ? тет ăна хĕрес хурса. Ыран хăнана ђĕнесшĕн ахăр, — шухăшлат вăл.

Иван пиђђе пуп аллине ђуптурĕ, пуп куçĕнђен пăхса илђĕ. Ним калама аптрарĕ. Ђĕнмест.

— Ну, ну, кала ђасрах?васкатат ăна шăлне йĕрсе тăракан пуп. Пупĕ пит уçă йапала, калаçнă вăхăтра пĕр май кулат. Ĕлĕкреннех çапла. Те нуша курманнипе, те ђейелĕхпе.

Иван пиђђен çăварĕ типсе кайрĕ.

— Епĕ патăшка санпала турă çинђен калаçма килтĕм, — тесе хуђĕ Иван пиђђе. Вăл кăна кура тухсах та

кайӗҫҫӗ, ним тума аптӑрат̆. Хускатнӑскере вӗҫне тухас тесе, вӑл тата хушса хурат̆:

— Ма-ана... пайан тӗлӗкре те турӑ курӑнмарӗ.

— Ну, вара?—ӑнланаймаст̆ вӑл мӗн каласшӑнне пуп.

— Христус ҫӑнахах хӑват тунӑ-ши? Ҫавна ыйтма килтӗм.

Сасартӑк тӗлӗннипе пуп куҫӗсем сиксе тухас пек тӑраҫҫӗ. Иван пиҫҫе пупӑн алтӑр пек куҫӗсенҫен пуҫне урӑх нимӗн те курмаст̆.

— Мӗн, ман хӑлха илтеймерӗ-и, йе есӗ йӑнӑшатнӑ-и, ҫӗнӗрен калах-а?—тесе ыйтат̆ вӑл Иван пиҫҫерен.

— Хӑшӗ-пӗри Христуса хӑват туман теҫҫӗ, тесе ӑнлантарса парат̆ ӑна Иван пиҫҫе.

Ҫав вӑхӑтра стрепки тухрӗ. Иван пиҫҫен пылҫӑклӑ ури ҫине пӑхса илҫӗ те, пуҫне сулкаларӗ:

— Урусене хырса кӗреҫҫӗ ӑна, пӗр пӑт пылҫӑк сӗтӗрсе кӗнӗ. Тасат вара сирӗн хыҫҫӑн!—мӑкӑртатат̆ вӑл кӑмаки ҫумӗнҫе. Анҫах ун сӑмахӗсене пупӗ те, Иван пиҫҫе те илтеймест. Вӗсем иккӗш те ӑнран кайнӑ: Иван пиҫҫе—хӑранипе, пупӗ—тӗлӗннипе: Иван пиҫҫе ӑсран тайӑлнӑ пуҫ тесе.

— Есӗ пайан ҫиркӳре пултӑна?—тесе патнерех пырса ыйтат̆ унтан пуп. Пуп ҫамки ҫинҫи шӑнӑрӗ ҫиллипе тулса пӳрне хулӑмӑш пулса кайнӑ.

— Пайан кайаймарӑм, пуҫ ыратрӗ,—тесе суйат̆ пупа Иван пиҫҫе.

— Типӗ тытрӑна... тытатна?—тӳрлетсе ыйтат̆ пуп.

— Ҫемйере пӗр епӗ анҫах тытатӑп.

Пупӑн кӑмӑлӗ ҫемҫелсе кайат̆.

— Ху типӗ тытатӑп тетӗн, ху кирлӗмар сӑмахсем калаҫатӑн. Кам каларӗ сана ӑна?—тесе тӗпҫет ӑна пуп

— Никам та мар, хам пуҫа ҫапла шухӑшсем кӗреҫҫӗ

— Пăрах ун пек усал шухăшусене. Çылăх, уншăн пит пысăк çылăх,—пăсăрлантарать пуп. Манăн санпа калаçма вăхăтăм та çук, кĕлле çӳре. Унта кашни праçникрех турă çинђен калаçатпăр.

— Мана... (Иван пиђђе аптăраса çĕлĕкне йăвалакалать), мана хăш ђухне тĕнђере турă çук пек туйăнать. Çавăнпа епĕ...—каласа пĕтерейменрĕ, пуп хайар сасси ăна хăратса пăрахрĕ.



— Пайан кайаймарăм, пуç ыратрĕ—тесе суйать пупа Иван пиђђе.

Аслатипе çиçĕм пек ахăрашать пуп. Йепле çиленес мар-ха? Йепле ку намăса ђăтмалла?! Çамрăксем турра пăрахрĕç. Ваттисем те кĕлле тек çӳремеççĕ. Çавăнпа пупăн ку ернере ахаљ те çилли тулса çитнĕ. Çитменнине тата шанђăклă Иван пиђђе те турă çинђен хăрушă шухăшлама тытăннă. Ытти вăхăтра вăл ăна йăвашшăн ӳкĕтлесе турă йенне çавăрма тăрăшнă пулĕђђĕ, хаљ, пайан ђăтаймарĕ. Ђăтма май çук.

— Ту-у-у-х кунтан, тух! Сана Петӗр вӗрентнӗ, ҫылӑха ан кӗрт мана аслӑ ернере! — ахӑрашаҫ пуп, калле-малле утса ҫӳресе.

— Епӗ ыйтма анђах, есӗ пӗлекен ҫын тесе...

— Ҫухал ман куҫ умӗнђен усал, сан ӑшна шуйттан кӗнӗ. Тух, ан варала ман ҫурта! — ђарӑнаймасҫ пуп. Тӗпеле кайса сӗтел ҫинђен илсе шыв ӗҫрӗ.

— Мӗн вӑл тери кӑшкӑрашатӑн, мӗн пулђӗ? — тухаҫ тепӗр пӳлӗмрен матӑшки.

— Епӗ аптранипе унтан сӑмах ыйтма килтӗм, — аллисене тӑскалаҫ Иван пиђђе, анђах вӑл каланине матӑшки те илтмест.

— Ҫак ват супнӑ йапала, — кӑтартаҫ ӑна пупӗ, — тӗттӗм пуҫӗпеле турӑ ҫинђен темӗскер калаҫаҫ, — тесе тапӑлтатса пыраҫ ун патнелле пуп.

— Йурӗ, йурӗ тухӑп, — ӑшаланаҫ Иван пиђђе. Сывӑ пулӑр! — терӗ те пуҫне тайса тухса кайрӗ. Карташӗнђе, васкаса утнипе, хӗвел ӑшшинђе ӑшӑнса выртакан сысни ҫине такӑнса ђут кӑна ђикеленсе кайађђӗ. Урама пуп кӑшкӑрашни йан кайаҫ.

## VI

— Е-е-ех, мӗн тума мана ҫамрӑк ђухне ҫыру вӗрентмен-ши? Кӗнекесем вуласа пӗлӗттӗм! — ерленет Иван пиђђе.

Пайан каҫ клупра сопрани пулаҫ тенӗђђӗ. Токлат пулмалла. Иван пиђђе хӗвел анаспа сӑкманне тӑхӑнђӗ, туйине аллине илђӗ те, утрӗ клуп патнелле.

— Ӑҫта васкаса утатӑн, Иван пиђђе? — тесе ыйтаҫ унтан Йӑкӑнаҫ.

— Кайатӑп-ха, — тесе аллине сулаҫ Иван пиђђе.

Клупра ҫын лӑк тулли. Ҫамрӑксем, ватӑраххисем те ђылай. Ҫӳлте, сӗтел йӗри тавра, ҫынсем лараҫҫӗ. Сӗтел

çинђи лампă вĕсен пиђĕсене çутатаť. Варринђе Петĕрлараť. Сулахай йенђе Шарук Михали аллисемпеле сулласа калаçаť. Иван пиђђе йерипен кăна кĕтессе пырса тăђĕ. Пăхаť: çумĕнђе Михађа арăмĕ тăраť.

— Тытăнни нумай пулаť-и?—тесе йерипен кăна тĕртет ăна айак пĕрђинђен Иван пиђђе.

— Ан кансĕрле-ха,—аллине сулаť леш.—Итле.

— Лар кунта, Иван пиђђе,—тенĕ сасă илтет вăл тĕпелтен. Иван пиђђе палламасť: такам ађи вырăнĕнђен тăђĕ те, Иван пиђђене вырăн пађĕ.

— Ытла маттурçке есĕ, кам ађи пулатăн?—тесе ыйтаť унтан Иван пиђђе сак çине ларса.

— Кайран паллăн, халĕ итле-ха—тесе пăшăлтатаť сарă ађа.

Иван пиђђе кунта калаçма йураманнине сисрĕ. Пурте шăп лараççĕ: шăна вĕçсе кайсан та илтĕнмелле. Кăшт сăмах хускатсанах пурте çаврăнса пăхаççĕ.

Нумай каларĕ Шарук Михали, пит маттур калаť. Хăш вăхăтра анђах ăна хĕрарăмсем кăшкăрашса ђараççĕ.

— Ђимĕр, есĕр калаçакан çынна ан кансĕрлĕр,—тесе тăрса калаť Петĕр:—кайран кашнинех сăмах парăпăр.

Иван пиђђе мĕн каланине пурне те астăваймасť. Пĕр тĕлтине кăна пит аван астурĕ.

— Агте турă хăй ывăлне Иссус Христуса етеме çылăхран, усалтан, хĕнхуртан çăлма йанă, теççĕ «Саккун поши» çинђе,—хытă кăшкăрса, тарне шăлса калаť Шарук Михали.—Йурĕ... Çапла пултăр. Усалпа кĕрешме, урăхла каласан, шуйттанпа кĕрешме йанă. Пупсен сăмахне итлес пулсан, еппин шуйттана кам тунă?

Итлекенсем шухăшлађђĕр тесен, йе çăварĕ типнипе, Шарук Михали шыв сыпрĕ те, ђарăнђĕ, итлекенсем çине пăхса тăђĕ. Пурте ун куçĕнђен пăхса тăраççĕ. Вăл улађа

кĕпепе, вăтам, таса çын. Çӳçĕсене çӳлелле тураса йанă, анђах тарланипе, çӳç пайракисем çамки çине персе анаççĕ, вăл вĕсене аллипе сирсе йарат̆.

— Шуйттана та турах тунă. Пупсем хăйсем те çаплах калаççĕ. Астăватăр пулĕ: малтан вăл анкĕлах пулнă, кайран турра пăхăнманшăн ăна хăваласа йанă пулат̆ вара. Халĕ ĕнтĕ, кайран, çавăнпа кĕрешме турă хăй ывăлне йанă. Ун пек турра епĕ ăслах тейеймĕп,—ухмах вăл. Хăй тунă (тунă сăмаха уйăрса хыттăн калат̆), хăй тунă шуйттанпа çапăçма хăй ывăлне йарат̆...

— Есĕ ху шуйттан! — тесе кăшкăрат̆ ăна хирĕç пĕр хĕрарăм.

Пурте кулса йађĕç. Хĕрарăм хàйĕнђен кулнине сисрĕ те, ђарăнђĕ. Шарук Михали малалла калат̆, пурте сикеленмесĕр итлесе лараççĕ. Пуринђен ытла Иван пиђђе тилмĕрсе итлесе ларат̆. Вăл тахçантанпах çул шырат̆, анђах çыру пĕлменнипе, тикĕс çул тупайманнипе аптраса пĕтрĕ.

— Тата вăл ăна усалпа кĕрешме йанă теççĕ, — йан кайат̆ токлатђĕк сасси. — Йурĕ, çапла тейĕпĕр, усалпа кĕрешме пултăр. Анђах 1927 çул кайалла та, халĕ те пурĕпĕрех тĕнђере усаллăх пур. Вăл усаллăх, пусмăрлăх пĕтĕм тĕнђипе револютси пулсан анђах пĕтет...

Шарук Михали сăмахне пĕтерђĕ те, кайса ларђĕ. Ыйтусене хирĕç тавăрса каласа пĕтерсен, тавлашу хускалса кайрĕ. Токлатђĕке хирĕç ик-виç хĕрарăм тухрĕç. Вĕсем, мĕн çуралнăранпах турра ĕненсе ӳснĕскерсем, токлатђĕк тĕнђере турă çук тенине шанасшăнах мар. Турă нихăçан та курăнман пулсан тá, вăл вĕсене пуррăнах туйăнат̆.

— Турă пулмасан тĕнђене, çак çут тĕнђене кам тунă еппин? — тесе тавлашаççĕ вĕсем. — Вĕсем çавна анђах

переççĕ. Toклатђĕкăн ун çинђен тата тепĕр хут каламалла пулђĕ.

— Вăт шан çамрăксене! — тесе шухăшласа лараť Иван пиђђе. — Вăт шан вĕсене — манка сурăхсене: пĕр хăрамасăр калаçаççĕ. Пĕлеççĕ курăнаť...

Toклатђĕк, Иван пиђђе шухăшне сиснĕ пекех, ăна пăшăрхантаракан ыйтусем çинђен пĕр шикленмесĕрех каласа кăтартаť.

— Мана сăмах парăр-ха, еп калас тетĕп, — тенĕ ват çын сасси илтĕнет кĕтесрен.

Петĕр тĕлĕнсе кайаť, — аслашшĕ сасси. Çук, хăлха йанăшрĕ пулмалла, тесе шухăшлаť вăл, ăна кун пек пухусене вĕренпе сĕтĕрсен те илсе килеймĕн.

— Тух кунталла, кунта тухса кала!

Итлекенсем тĕлĕнсе пăхса тăраççĕ. Иван пиђђе малалла тухрĕ те, малтан ним калама аптăраса урайне туйипе шаклаттарђĕ, унтан, такама шыранă пек, каллĕмаллĕ пăхкаласа илђĕ.

— Епĕ кĕскен калăп, — хăйĕн сасси ђĕтрет, — нумай калама пултараймастăп. Сассăм та уçă мар манăн, — тесе хускатса йараť вăл. — Михаља шăллăм тĕрĕс калаť, турă çук тĕнђере! — терĕ вăл хыттăн кăна туйипе тепĕр хут шаклаттарса. — Çук вăл. Шырасан та никам та, ниçта та тупас çук ăна. — Сасси ђĕтренипе, сывлăшне çавăрма ђарăнђĕ.

Пурте тĕлĕнсе, ăнтан кайса пăхса лараççĕ. Пуринђен ытла Петĕр тĕлĕннĕ. Турă çинђен хускатсанах вăл ĕлĕк вăрçма тытăнађђĕ. Хаљ хăйех мĕн калаçаť?!.

— Иккунсене те йăвăçран анђах тунă, ђиркӳри Христус хресне те йăвăçран туса краскăпа анђах пĕветнĕ. Хам пăхрăм, йури пăхрăм! — тет вăл никам пĕлмен йапала çинђен каласа кăтартнă пек.

Пурте ала́ çупнипе клуп ђётёрет. Иван пиђђе хăраса кайрё.

— Ну, мана çитё, калас пеккине каларăм. Ђёрере мён пурине пурне те каларăм,—тесе мăкăртаткаласа вырăнне кайаť вăл.

Петёр çав вăхăтрах ура çине тăђё те аллине тăратрё, пурте шăп пулђёç.

— Ну, ман асатте те тёрёс çул тупрё иккен. Кам ăна пођђетнăй песпошнёк тăвас тет, аллăрсене тăратăр!— тесе кулкалаť вăл аслашшё тӳрё çул çине тухнипе ђунё савăннипе.

— Сик-ха леререх, ларам çакăнта — тесе хёсёнет вăл пёр çын çумне; ларђё. Пурте аллисене тăратнă. Иван пиђђе тăнланаймаст:

— Ма пурте аллисене тăратнă?—тесе ыйтаť вăл хăй кӳршинђен.

— Сана «пођђетнăй песпошнёк» турăмăр вёт! — тесе шăлне йёрет кӳрши. Иван пиђђе ăна авантарах пăхрё те тин ёлёк хуралра тăнă Куçмана палларё.

— Мён аппаланасси, мёне кирлё вăл? — тесе сулаť сулахай аллине Иван пиђђе.

— Пурте пёр сăмахпа шутлаççё, — тенё Петёр сассине илтет Иван пиђђе. — Пайантан вара асаттене шефа илетёп! — тесе култараť Петёр йулташёсене. Йулашкинђен: — Ну, ыйтусем тата çуки? Вăхăт ђылай пулас, саланма та вăхăт çитрё пулё, — тет.

— Çук, çук, ыйту тавраш çук, ăнлантăмăр! — тесе кăшкăраççё итлекенсем.

Унтан револђутсиллё йурă йурларёç те ушкăнăн-ушкăнăн килелле саланђёç. Çынсемпе пёрле Иван пиђђе те тухса утрё. Тулта та вăл тухса калани çинђен шавлаççё.

Иван пиҫҫе килне таврӑнсан иккунӗсене вута пӑрахса ҫунтарҫӗ, кӑҫал мункун кӗллине те каймарӗ.

— Ҫӳреҫҫӗр ухмахсем, мана хаҫ улталаймӑн!—тесе кулкалаҭ вӑл ҫамрӑксемпе.

Халӗ ӗнтӗ, ҫук турӑ ҫинҫен шухӑшласа пуҫне те ыраттармасҭ вӑл, ҫӗри те унӑн лӑштах кайрӗ. Унҫҫен ни ӗненмесҫӗ, ни ӗненме пӑрахма хӑраҭҫӗ. Халӗ, апла мар, ӑшӗ пӑшӑрханма ҫарӑнҫӗ.

— Турӑ куҫа курӑнсан та, хыпаласа пӑхмасӑр ӗненес ҫук!—тет вӑл хаҫ ҫынсемпе калаҫнӑ ҫухне.

**Хӑшпӗр сӑмаха ӑнлантарса пани.**

1. Ахӑрашаҭ — алхасаҭ.

2. Аранҫӑ — кӑштах.

3. Тӳрӗ — май, сӑлтав.

4. Шӑмараҭ — тарӑхаҭ, ҫиллине кӑтартаҭ.

5. Йапаласем куҫа хӗрӗнҭерсе выртаҫҫӗ — йапаласем куҫ вӑйне илеҫҫӗ.

6. Палас — ҫӗтӗкрен тӗртсе тунӑскер.

ЫЙТУСЕМ:

*1. Ҫак происветенин тӗп шухӑтне кӑтартӑр.*

*2. Иван питҫҫе мӗн пирки турӑ ҫинҫен ытларах шухӑшлама тытӑнат?*

*3. Происветенире кӑтартнӑ пек пурӑнӑҫра пулма пултарат-и?*

*4. Автторӑн ҫтилӗнҫе мӗнле уйрӑмлӑх куратӑр?*

Трупина Мархви.

# ВУПĂР.

Епĕ пĕҫĕккĕ, ултта-ҫиҫҫĕре пур пулĕ... Пĕрре аттe анкартинҫе аҙăн типĕтет. Каҫ пулнă. Пўртре хăй ҫутнă. Анне каҫки апат пĕҫерет. Епĕ анне патĕнҫе вăл ĕҫленине пăхса ларатăп. Пиҫҫепе аппа урамра кўршĕ хĕрĕпе калаҫса тăраҫҫĕ. Вĕсем кулса калаҫни пўртех илтĕнет. Вуҫахри вут ҫунса пĕтме тытăнсан, анне мана:

— Йашка пиҫрĕ, аҫуна кайса ҫĕн, апат ҫийĕпĕр! — терĕ.

Епĕ хамăн сăкмана пўркентĕм те, ҫара пуҫăнах анкартине вĕҫтертĕм. Ҫĕрĕ лаша пулса, пуҫа каҫăртса сиккелесе ҫупатăп.

— Апат ҫимелле! — тесе кăшкăратăп.

Йĕтем ҫине ҫитрĕм. Пирĕн авăн ҫумĕнҫе аттепе Йакку пиҫҫе куҫкенсе ларнă та, ҫĕлĕм туртса лараҫҫĕ.

Йакку пиҫҫе, ватă старик, пирĕн кўршĕ. Вăл та хăй йĕтемми ҫинҫе авăн типĕтет. Пирĕн йĕтемсем йунашарах. Йакку пиҫҫе атте патне ҫĕлĕм туртма, калаҫса ларма пынă.

Авăнсем мăкăрланаҫҫĕ. Тырă шăршипе тĕтĕм шăрши сăмсана ҫапат̆. Ҫанталăк тўлек, уйар. Тулли уйăх тăрă пĕлĕт ҫинҫе ҫап-ҫутă курăнат̆. Капансем урлă пирĕн йĕтем ҫине ҫутатса пăхат̆.

— Ытла пит çутă. Авăн çапма пит аван, — терĕ атте. Хăй, çанталăк аван тăнипе, ăмсанса йĕри-тавра пăхкаласа илҫĕ.

— Çанталăкĕ калама çук аван! Малашне тепле пулĕ? Манăн шăмшак йăнăша пуçларĕ. Çанталăк пăсăласса сисет пуҫ, хăйамат, — терĕ Йакку пиҫҫе. Куҫкенсе ларнă çĕртен Йакку пиҫҫе аран-аран айлаткаласа тăҫĕ те, кут айне хывса ларнă аçамне илсе тăхăнҫĕ.

— Çанталăк ыран-пайанах пăсăлмасť пулĕ-ха. Уйăх карталанман-çке. Çанталăк пăсăлас умĕн уйăх йĕри-тавра карта пулаканҫҫĕ! — терĕ атте.

— Шурă пĕлĕт таткисем те çуки вара пĕлĕт çинҫе? Куçăм витĕрех курмасť те, çанталăк улшăнассине пĕлĕте пăхса ҫухламастăп, — терĕ Йакку пиҫҫе. Хăй аллипе хăрах куçне хупласа çӳлелле пăхса илҫĕ.

— Пĕлĕт тăрă, шыв пек таптаса, тăптăрă кăнкăвак. Аťа, хĕрĕм, киле, — терĕ атте. Сӳннĕ ҫĕлĕмне çăпата пуçĕ çине шаккаса кĕлне кăларҫĕ те, ларнă çĕртен тăҫĕ. Епĕр киле кайрăмăр. Йакку пиҫҫе хăй йĕтемĕ çинелле утрĕ.

Епĕ аттепе Йакку пиҫҫе калаçса тăнă ҫухнех киле хăвăртрах кайасшăн çунсă тăтăм. Халĕ аттерен иртсе кайса паçăрхи пекех сиккелесе пыратăп. Манпа йунашар манăн мĕлке сиккелесе пыраť. Сасартăк... тĕттĕм пулма пуçланă пек туйĕнҫĕ. Мĕлке те пĕтсе ларнă пекех пулҫĕ. Çав вăхтрах Йакку пиҫҫе йĕтем çинҫен:

— Ан кай-ха, Мĕтри, кил-ха кунта! — тесе кăшкăрҫĕ.

Атте, ман хыçран утса пыракансках, кайалла çаврăнҫĕ те йĕтем çинелле утрĕ. Епĕ те атте хыççăн кайалла ҫупрăм. Уйăх çути тĕттĕмленнĕçем тĕттĕмленет. Йакку пиҫҫе йĕтем варринҫе тăраť. Йĕри-тавра тĕттĕмленсе пыраť. Йĕтем хуп-хура курăна пуçларĕ. Епĕ хăраса кайрăм. Аттене сăкман аркинҫен çатăрласа йарса илтĕм.

— Мĕн çăва пулђĕ, мĕн тĕттĕмленсе килђĕ? Уйăх çутти пĕте пуçларĕçке, — терĕ атте йĕтем çине кĕрсенех. Йакку пиђђе пирĕн пата пырса тăђĕ. Вăл аттене:

— Епĕ хам та сана çавăнпа ђĕнтĕм вĕт. Уйăха вупăр çиме пуçламарĕ-ши? — тетĕп. Пăх-ха, Мĕтри, авантарах.

Епĕр виçсĕмĕр те тĕттĕмленсе пыракан уйăха пăхса тăма тытăнтăмăр. Уйăх пĕр йенђен пĕђĕкленсе пыратĕ.

— Ах, шуйттан! Уйăха вупăр çийет вĕт! — терĕ Йакку пиђђе. Хăй хăраса ўкнĕ пулас, сасси тытăнкалама пуçланă.

Атте, хытса кайнă пек пулса, пĕр ђĕнмесĕр уйăха пăхса тăратĕ. Уйăхĕ, пĕр хура йапала хупланипе, çуттине çухатнăçем çухататĕ.

— Ђим-ха! Епĕ ăна, шуйттана, вĕри кĕл сапам, — терĕ Йакку пиђђе. Аçамне хуплаштарђĕ те, авăна кĕрсе кайрĕ.

Уйăх çутти пăђах пĕтсе ларнă пек. Йакку пиђђе авăнтан ĕнĕк шăршă кăларса вĕри кĕл илсе тухрĕ. Аçам аркине тытнă. Ватăскер хыпаланса, ĕштеленсе, вĕри кĕле çўлелле сирпĕтет.

— Вĕри кĕл сан куçна, пĕтешшĕ вупăр! — терĕ.

Йакку пиђђе арăк çинђи кĕле сапса пĕтерђĕ. Вăл хушăра уйăх пĕтсех ларђĕ. Çăлтăрсем паçăр, уйăх çутатнипе, питех палăрмас-ђĕç, халĕ — шултрарах та, нумайтарах та курăна пуçларĕç.

— Пĕтрĕмĕр! Вупăр уйăха çисех йарсан тĕнђе пĕтет, теççĕ!

Çак сăмахсене Йакку пиђђе пит хăраса, хуйхăрса каларĕ. Пуçĕ çине хăрушла йапала персе анассине пĕлнĕ пек, пуçне икĕ аллипе йарса илђĕ. Ахлатса, сывласа, вăйĕ пĕтнипе авăн çумне куђкенсе ларђĕ.

— Ах, тур çырлахах, ан пăрах! Вилес пулсан та çакăнтах вилетпĕр-çке ĕнтĕ! Васпати, васпати памилăй! — Çав вăхăтрах Йакку пиђђе иккĕ-виççĕ сăхсăхса илђĕ.

— Ма питех хăрас-ха, Йакку пиђђе! Тен ђиперех иртсе кайĕ-ха. Пĕрре хĕвел хупланнăђђĕ те, çапах тĕнђе пĕтмерĕ-çке, — терĕ атте. Йакку пиђђе вăйсăрланса кайнă сасăпа:

— Ах, ађам! Ырă мар ку! Тĕнђе пĕтнĕ ђух вупăр уйăха çисе йамалла, теççĕ, — терĕ те, каллех сăхсăхма пуçларĕ.

Атте Йакку пиђђепе йунашар пырса ларђĕ. Епĕ аттепе Йакку пиђђе хушшине хĕсĕнсе кĕрсе лартăм Хăранипе, ђĕтресе, пăштик-пăштик сывласа ларатăп. Хамăр вилнине, тĕнђе пĕтнине курас мар тесе, пите алăпа хытă хупларăм. Йакку пиђђе ђавси сиккеленнипе, епĕ Йакку пиђђе сăхха персе ларнине туйатăп...

Те нумай, те сахал лартăмăр, атте сасартăк:

— Уйăх курăна пуçларĕ! — терĕ.

Епĕ пите уçрăм. Ђăнахах та уйăхăн пĕр хĕрри кĕлт курăнаť. Йакку пиђђе сăхсăхма ђарăнђĕ.

— Тĕнђе пĕтме вăхăт çитмен-ха еппин, — терĕ Йакку, пиђђе. Ларнă çĕртен авăн çумне перĕнкелесе тăђĕ те уйăха пăха пуçларĕ. Атте те тăђĕ. Епĕ аттерен йулмастăп.

Атте:

— Иртсе кайаť акă вăл. Тата пăртак тăрсан паçăрхи пекех çутă пулаť, — терĕ.

— Ĕнтĕ иртсе кайаť, — тет Йакку пиђђе. Ĕнтĕ вупăр уйăха çăварĕнђен кăларса йађĕ пуљ.

Уйăх çуталнăçем çуталаť. Йĕри тавра çуттăн курăна пуçларĕ. Хура тĕттĕм йапала уйăх çинђен сисĕнкĕсĕр шуса тухаť.

Уйăх çуталнă майĕпе Йакку пиђђен хăрасси те пĕтрĕ. Вăл аттепе пĕрле ђĕлĕм ђĕртме тытăнђĕ.

— Ăçтан çăваран тухрĕ-ха çав вупăр? — тет Йакку пиђђе. Ђĕлĕмĕ ăшне тапакне пӳрнепе пускаласа тултарать

— Те вупăр, темскер вăл? — терĕ атте.

— Ай, мĕн аташатăн! Вупăр пулмасăр, мĕн пулать тата вăл! — тет Йакку пиђђе.

Ђĕлĕмĕсене иккĕшĕ те ђĕртсе йађĕç те, Йакку пиђђе калама тытăнђĕ:

— Епĕ çамрăк ђух пурлакра çӳренĕ. Пĕрре Атăл хĕррингђе, каçхине апат пĕçернĕ ђух, уйăха вупăр çиме пуçларĕ. Ун ђухне манăн куç-пуç витĕр куратъ. Уйăха вупăр çинине хамах курса тăтăм. Вупăр вăл йытă майлах. Уйăх патне хуллен, хуллен шуса пыђĕ те, уйăха кап! йарса илсе ђăмлама та пуçларĕ. Епĕр нумайăн Атăл хĕррингђе пăхса тăратпăр. Вупăр уйăха ђăмларĕ, ђăмларĕ те, кăшт çеç çăтса йамарĕ. Пĕр ђĕрне хури ђухлĕ çеç йулђĕ.

— Вĕри кĕл сапăр, вĕри кĕл! — терĕç хăшĕ пĕрисем.

Вут хунă çĕртен вĕри кĕл илсе сапрăмăр та, уйăха вупăр çав самантрах çăварĕнђен кăларса йађĕ. Кĕл шăршине вупăр йуратмасть иккен. Кĕл вăл, çуннă йапала, таса.

— Апли апла пулĕ те ха, — тет атте, — вупăр ăçта пурăнать-ши еппин?

— Вупăр вăл тĕпсĕр çырмара сăнђăрта тăрать, тет. Çав çырмана ахаљ çын анаймасть, тет. Тухатмăшсем çеç тăмана пулса вĕçсе анаççĕ, тет. Тухатмăш пĕрер çынна усал тăвас пулсан, вупăра сăнђăртан салтса йаратъ, тет. Лешĕ кайать, тет, вара çынсене пуса-пуса выртма. Вупăр пуснă тенине илтмен-и есĕ?

— Илтесси илтнĕ те, хама вупăр пуснине курман, — тет атте.

— Ах, аҫам, вупăр пуснине никамăн та курас ан пултăр. Ҫынна вупăр пуссассăн, ҫын тĕлĕкре пит асапланаť. Ҫухăрса йама сасси тухмасť, вăранса тăрас тесен — алă-ура сиккеленмест. Пĕтĕм шăмшакка лăп хуплаcа йăвăрлантарса пăрахаť те, ҫын туртăшса вырташ. Пĕр каҫа пўрнине ҫеҫ сиккелентерсен, ҫын вăранма пултараť, ҫавăнтах ҫынна тăн та килсе кĕрет. Хăрушла вăл вупăр. Ҫынна вупăр пусмалла пĕрер курайман тухатмăш тăваť. Вупăрĕ ҫынсене пусса ҫўресен-ҫўресен усалланса кайаť те, вара уйăх патне пыраť. Пĕрре ĕлĕк-авал ҫапла пулнă, тет. Асатте калаҫҫĕ ăна. Вупăр уйăха ҫăмларĕ-ҫăмларĕ тет те, пĕлĕт ҫинҫен сĕтĕрсех антарҫĕ, тет. Тепĕр кун уйăх капан кутĕнҫе вырта параť, тет. Хăйне пĕтĕмпех вупăр ҫăмласа муталаса пĕтернĕ, тет. Каҫхине ҫынсем куриҫҫен, пĕр ҫын уйăха пĕлĕт ҫине улăхтарса йанă, тет вара.

Атте лăш кулса йаҫĕ.

— Аплах пулнă-ши вара? — терĕ.

— Ĕлĕк-авал, аҫам, пулнă та пулĕ. Пулман тес ҫук.

Атте нимĕн шарламасăр ҫĕлĕмне мăкăрлантарса авăнтан виҫĕ-тăватă улăм пĕрҫи туртса кăларҫĕ те, йăвалаcа пăхрĕ. Типĕ улăм шăтăртатса ванаť.

Калаҫкаласа тăнă вăхăтра уйăх ҫап-ҫутă пулса тăнă.

— Авăн типсе ҫитет. Апат ҫисе кăшт кансассăнах авăн ҫапма тухас, — терĕ атте.

— Ĕнтĕ тухсан та пыраť. Манăн та аҫасене кĕҫĕр, есĕ каланă пекех, авăн ҫапма кăларас пулĕ-ха.

— Йакку пиҫҫе, ҫĕлĕмне мăкăрлантарса, хăй авăнĕ патнелле хуллен утрĕ. Епĕр аттепе киле кĕтĕмĕр…

Апат ҫисе ларнă ҫухне пиҫҫе уйăх тĕттĕмленнĕ ҫухнехине калама тапратрĕ.

— Епĕр урамра тăратпăр. Сасартăк уйăх тĕттемленме

пуçларĕ. Михаља пиђђесен карташĕнђе çăри-çари тукаларĕç. Унђђен те пулмарĕ, Михаља пиђђе çӳçне-пуçне вирелле тăратнă та, çарамасах хапхинђен сирпĕнсе тухрĕ. Тĕнђе пĕтет, тенђе пĕтет! — тесе хайаррăн кăшкăрса йарса урам тăрăх ђупа пађĕ. Вăл кăшкăрнипе кӳршĕ çыннисем те урамъ сиксе тухрĕç.

— Мĕн пулнă?

— Вут тухнă-и?

— Кам аванĕ çунаť? — тесе пĕр-пĕринђен ыйтаççĕ

Уйăх тĕттĕмленсех ларма тытăнсан хĕрарăмсем сасăпах улама тытăнђĕç. Пирĕн Алтатте те пĕђĕк ађа пекех макăрђĕ, — терĕ пиђђе. Хăй кулкаласа аппа çине пăхса илђĕ.

— Есĕ ху та ђутах макăрса йамарăн, Тарйе пулман пулсан ху та çухăра-çухăрах пӳрте тарса кĕреттĕн те, Тарйерен çеç вăтанса макăрмарăн пулас, — терĕ аппа пиђђене хирĕç.

— Ђăнахах çав уйăх пĕтсе ларнă ђухне пит хăрамалла. Урам тулли çын сапаланса тăраť. Çухрашкаланипе, ђупкаланипе пушшех ђун хăраť, тискеррĕн туйăнаť, — терĕ пиђђе.

Епĕ питĕ хăранипе хаљ тин ђĕтреме ђарăнтăм. Пиђђе каланине хулхана тăратса итлесе ларатăп. Хамăн куç кантăк çинђех. Вупăр уйăха тепĕр хут çиме тытăнманши тесе, епĕ кантăкран темиçе хут та пăхса илтĕм. Манăн апат çиейс шухăш та çук.

Ыттисене кура атте те ĕлĕк ђухнех хĕвел тĕттĕмленни çинђен каласа пама тытăнђĕ.

... Иван ун ђухне алăри ађа. Пĕтĕм халăх пусăра тырă выраť. Çанталăк уйар. Пĕр çăмăр пĕлĕђĕн татăкки те курăнмасť, кăнтăрлахи апат çиейс умĕн сисмен çĕртенех хĕвел тĕттĕмленме тытăнђĕ. Хура пĕлĕт хĕвеле

хупларĕ пулĕ тесе, пăхкаларăм йĕри-тавра: пĕлĕт таврашĕ çук. Хĕвел тĕттĕмленнĕçем тĕттĕмленђĕ те — и-и... пĕтсех ларђĕ. Каç пулнă пекех тĕттĕмленђђĕ. Ах, пит хăраса ўкрĕмĕр вара! Ытла пит хрушлађђĕ-çке! Çынсем ĕçе пăрахса килелле ђупа пуçларăç. Пурте: Тĕнђе пĕтет, тĕнђе пĕтет! — тесе, ниçта кайма аптранă. Хветĕркке Йаккăвĕ лаша кўлнĕ те, вырман анасем урлах шатăртаттарат̆. Епĕ Ивана çĕклерĕм те, Хветĕркке хыççăн ђупрăм. Аннў ман хыççăн талкăшат̆. Кĕтў те кĕртсе йађĕ. Старăстă уй хапхи патне тухнă та: „Халăх, кĕрĕр йала, тĕнђе пĕтет!“ тесе хăшкăрат̆. Пурте: Киле çитсе вилесђĕ хăт̆! — тесе антраса кайса, тар йухтарса ђупаççĕ...

Атте каласа пĕтерђĕ те, сĕтел хушшинђен тухрĕ. Пурте апатланса пĕтертĕмĕр, унтан çывăрма выртрăмăр. Епĕ атте хыçне кĕрсе выртрăм. Хамăн ыйхă та килет, анђах нийепле те çывăрса каймалла мар. Куçа хупсассăнах, вупăр курăнат̆. Хура лăпсăркка йытă пек, тепĕр ђухне пĕр карттин çинђе курнă măйракаллă шуйттан ђĕппи пек. Кайран тепле çывăрса кайнă.

Çĕрле ыттисем авăн çапма тухнă. Мана пўрте пĕђђенех хупса хăварнă. Йурат̆-ха епĕ çĕрле вăранман, вăраннă пулсан, вупăртан хăраса çавăнтах вилеттĕм пуђ.

## II

Халĕ уйăха „вупăр çинĕ“ каçран 30 çул ытла иртрĕ. Епĕ ĕнтĕ пĕђĕк хĕр ађаран çитĕнсе 15—16 çул хушши уђђитлĕре пурăнатăп.

1924 çул, хĕлле. Сивĕ уйар каç. Епĕ уйăх сатменийĕ пулнине сăнама урама тухрăм. Уйăх пирĕн пахђари йăмрасенђен çўлерех хăпарнă та, çапах çутă çутатса пăхат̆. Йура симĕсĕн-кăвакăн йăлтăртаттарат̆. Таçта йал

варринђе çынсем йурлани, ађа-пăђа çуйăхни илтĕнет. Унта туй иккен. Çынсем туй курма кайаççĕ. Епĕ те урампала çынсемпе пĕрле туй йеннелле утрăм. Утнăçемĕн хам уйăха пăхсах пыратăп. Уйă:: çап çутă тăнă çĕртех пĕр хĕрри тĕттĕмленме тытăнђĕ. Такам уйăха хĕрринђен катса илнĕ пек, катăк курăна пуçларĕ. Çутти илемсĕрленсе, хĕрелсе кайрĕ. Краççын пĕтнĕ ламппă çути пек хĕрлĕн тĕксĕмĕн курăнаť.

Епĕ хам пĕђĕккĕ ђухне уйăх тĕттĕмленнине аса илтĕм. Кам та пулин халех урама сиксе тухса: уйăха вупăр çийет, тĕнђе пĕтет, тесе çухăрса йарассăнах туйăнђĕ.

Анђах урам шăпăрт. Ун пек, кун пек çухăракан никам та çук. Краççын çути кашни пӳртрех пур. Ман умри çынсем, туй курма кайакансем, ђаранса тăђĕç те, пĕр-пĕринпе уйăх сатменийĕ çинђен кăлентар ăнлантарнă тăрăх калаçма пуçларĕç. Епĕ иртсе кайрăм.

Туй çĕмĕрлет. Лаша тулхăрни, хуткупăс сасси, ӳсĕр çынсем çухăрашни айакка кайаť. Уйăх тĕттĕмленнĕçем тĕттĕмленсе пыраť. Ак тата мана хирĕç туй урамĕнђен виççĕн утса тухрĕç Калаçкаласа пыраççĕ.

— Шкулта пĕлĕт çине пăхмалли тăрпа пулмалла. Аťăр-ха хăвăртрах, тăрпапа уйăх сатменине авантарах кайса курар, — тет пĕр сасă. Ку çынна епĕ сассинђенех палларăм. Ку Корниле Иванĕ — 40-42 çулхи çын. Хут пĕлет. Шкула пырса ђăвашла кĕнекесем, хаçатсем илкелесе кайаť.

— Пур пулмалла-çке, — тет Шур Микула — 60 çулхи старик, Корниле Иванĕн кӳрши.

Ман тĕле çитрĕç. Виççĕшĕ те ђаранђĕç. Виççĕмĕш çын Алентей Кĕркурийĕ иккен. Вăл хађ кăна хĕрлĕ çартан тавăрăннă. Епĕ ăна хĕрлĕ çартан тавăрăннăранпа курманђђĕ те-ха.

— Ăçта кайатăн? — теççĕ мана.

— Уйăха „вупăр çинине“ курма тухрăм, — тетĕп.

Çынсем лăш кулса илђĕç.

— Пĕлĕт çине пăхмалли тăрпа шкулта пур-и? — тет Иван.

— Вăл çук та, пиноккăђ пур — тетĕп.

— Кунтах-и?

— Çук, шкулта, — тетĕп.

— Аĭа, пире пиноккăђ та йураĭ. Уйăх сатменине авантарах курасђĕ-ха, — тет Иван.

Çапла калаçкаласа тăнă хушăра пирĕн пата тепĕр ушкăн çынсем пыђĕç. Кунта ваттисем те, çамрăккисем те пур. Пуринђен ытла ађа-пăђа нумай. Ку çынсем те шкула кайма тухнă иккен. Уйăх сатменине тăрпапа пăхасшăн. Шкулта пĕлĕт çине пăхмалли тăрпа пур тесе, такам каланă вĕсене. Ун пек çук тесен, хăшĕ пĕри кайалла кайрĕç. Иван, Алентей Кĕркурийĕ, Шур Микула тата пилĕк-ултă ађа-пăђа шкула çитиђђенех пыђĕç.

Уйăх вăл темĕн тата ытларах тĕттĕмленђĕ. Шкулалла васкаса утатпăр. Ађа-пăђасем пирĕн хыçран кĕшĕлтетсе пыраççĕ. Шăн çăпатисемпе йура ђĕрик-ђĕрик тутарса, утнă çĕрте утаççĕ, ђупнă çĕрте ђупаççĕ.

Шкула çитрĕмĕр. Пĕлĕт çине пăхмалли тăрпа çукшăн кăмăлсăрланса, епĕ çынсене пиноккăђ илсе тухса патăм. Çынсем пит хавас. Вĕтĕ-шакăр ађасем ђерет йышăнса пăхаççĕ. Епĕ çав хушăра вĕсене уйăх сатмени мĕншĕн пулнине каласа паратăп. Пайан епĕ халăха йури шкула пухса сатменисем çинђен каласа парас тенĕђђĕ, анђах шкула хутманни кансĕрлерĕ. Пилĕк ернеренпе шкулта вутă çук.

Акă тĕксĕм уйăх хўллен çутăлма тытăнђĕ. Ађасем шкул патĕнђен пĕђĕккĕнех саланма пуçларĕç.

Хайхи виçĕ çын: Корниле Иванĕ, Алентей Кĕркурийĕ, Шур Микула ман хваттере кĕђĕç. Кĕнеке хаçат илес, теççĕ. Епĕ мĕн пур пек çĕнĕрех хаçатсене патăм. Унтан халăх ĕлĕк сатменисенђен хăрани çинђен сăмах тапратса йатăм.

— Ĕлĕкрех пулсан, кун пек ђухне пĕтĕм халăх хăраса ўкнĕ ĕнтĕ, — тет Микула пиђђе. Шурă çўçлĕ, шурă сухаллăскер, вăл мана пит авалхи çын пек туйăнаť. Хăй вăл пит ăслă. Хут пĕлет. Ађисене те вĕрентнĕ.

Епĕ пĕђĕккĕ ђухне „уйăха вупăр çинине“, Йакку пиђђе уйăха кĕлпе сапнине, хам вилсе кайас пек хăранине каласа патăм.

Кулаççĕ.

— Ĕлĕк ђăнах та çаплах пулнă çав, — теççĕ.

Унтан халăх хушшинђи тĕрлĕ суйа йапаласем çинђен каласса кайрăмăр.

— Çын, пĕрре курмасăр, суйипе ђăннине ђухлаймасť, — терĕ Микула пиђђе.

— Хыпаласа пăхса, алăпа тĕртсе пăхса тин ђухлама вĕреннĕ çав епĕр, — терĕ Алентей. Хăй хаçат çинђе кăранташпа темĕн паллă тăва хураť.

— Акă епĕ хамах йумăçа мĕнле кайма пăрахнине каласа кăтартам сире, — терĕ Микула пиђђе. Пукан илсех ларђĕ те, калама тытăнђĕ. Ыттисем те ларђĕç.

— Епĕ çамрăк, тин авланайнă. Авланса нумайах та пурăнман, арăм ђирлерĕ. Анне пур, ватăскер, тĕшмĕшлĕскер, мана пĕрмайах йумăçа кай, тесе хăвалаť. Анне йăнкăртатнипех йумăçа кайрăм. Ђаплă йумăç патне, айакка, Вăлпуçне. Çитрĕм йумăç патне. Хам мĕншĕн килнине каласа патăм. Çип çине çыхнă шăмă таткине ывăç тупанĕ тĕлне тытса суллантаркаларĕ те, калаť:

— Санăн ђўк тумалла, — тет. — Çиђĕ ђун ђўкĕ, тет.

— Мĕнле ҫӳк вара вăл, ҫиҫĕ ҫун ҫӳкĕ? — тесе ыйтрăмăр епĕр, итлесе ларакансем.

— Ҫиҫĕ ҫун ҫӳкĕ акă мĕн-мĕн пулать: пĕр тына пăру, пĕр сурăх, пĕр хур, кăвакал, ҫăх, ҫерҫи тата... темĕн пурҫĕ маннă халĕ... Пĕтрĕ пуҫ! Хупланса лартăмăрҫке, тетĕп. Киле тавăрăнтăм та, хĕрарăмсене калатăп. Вĕсем ҫӳк тăвас тесе, хатĕрленме те тытăнҫĕҫ. Пăру, кăвакалĕ, ҫăххийĕ — хамăрăн пур, анҫах тына пăрăва пусма ытла та шел. Ҫӳк тăвас каҫ тухрăм та кайрăм шкула. Ун ҫухне Кҫенефот Ваҫҫилҫă йатлă уҫитлĕ пурҫĕ. Епĕ ун майри патне тухтăр килнĕ тĕлнех пултăм. Тухтăра хамăр пата йертсе пыратăп. Анне сиввĕн пăхать. Арăм мăкăртатать. Тухтăр арăма пăхрĕ те:

— Ыран пуљнитсăна емел пырса ил, — терĕ.

Тепĕр кун тухтăртан емел кайса илтĕм те, арăма ĕҫтертĕм. Пĕр-ик кунтанах ман арăм тăрса ларакан пулҫĕ.

— Ҫӳк тумасăрах сывалҫĕ-и? — терĕмĕр епĕр Микула пиҫҫене.

— Ҫӳк тумасăрах, — тет Микула пиҫҫе.

— Ишеке Микул турра пуҫҫапма каймалла, тесе каламарĕ-и тата? — терĕ куҫне хупмасăр итлесе ларакан Корниле Иванĕ.

— Ку йумăҫ авалхи, ватă йумăҫ та, турра пĕрре те асăнмарĕ. Хаљхи йумăҫсем икĕ майлă та ҫаптараҫҫĕ. Туррине те: киремет-тӳркĕлли таврашне те кăмăл тăваҫҫĕ, — терĕ Микула пиҫҫе.

— Ишеке, Хусан хыҫне, Сĕве мăнастирне каймалла тесе йумăҫсем хĕрарăмсен пуҫне ҫавăраҫҫĕ. Пирĕн анне ҫавăн пек, епĕ пĕҫĕккĕ ҫухне йумăҫ хушнипе ҫуркунне шыв-шур тапрансан Ишеке кайнă та, лашине сĕлкĕше кӳртсе ӳкерсе вĕлернĕ, — терĕ Иван.

Алентей Кĕркурийĕ, пĕр ҫĕнмесĕр лараканскер, вас-

камасăр, сăмахсене йĕркеллĕн çыпăçтарса калаçма тытăнҌĕ.

— Тĕрлĕ тухатмăш, асамăç-йумăç таврашĕ Ҍăваш халăхне хăйсен тĕттĕм ултавĕпе вупăр пекех пусса тăнă. Çавăнпа та Ҍăваш халăхĕ пит тĕшмĕшлĕ, пуринҌен ытла хĕрарăмсем. Ҍир-Ҍĕр йерсен тухтăр патне кайас вырăнне, кил-çуртпа Ҍирлĕ çынна тасарах тытас вырăнне йумăçсемпе муталанма тытăнаççĕ. Ҍирлĕ выртаканĕ вара, турра пуççапма кайнă хушăра, йе вилĕ-Ҍĕрĕ, киремет тытнине сĕвĕрес тесе аппаланнă хушăра, вилсе те кайаť. Акă çак хаçат çинҌех ман куç тĕлне çак йапала тĕл пулҌĕ. Епĕ ăна кăранташпа паллă тусах хутăм. Пирĕн хушăра пĕр-пĕр сикекен Ҍир пулсан, Ҍăвашсем ытти халăхсенҌен: тутарсенҌен, вырăссенҌен, нимĕçсенҌен тага ыттисенҌен те темиçе хут нумайтарах вилеççĕ. Мĕншĕн вăл? Мĕншĕнни курăнсах тăраť. Пирĕн йал çинҌен тĕшмĕшлĕх, тĕттĕм пирки, сирĕлмен. Çынна вупăр пусаť, теççĕ. Пирĕн Ҍăваш халăхĕ те çав вупăр пуснă çын пек хăйĕн тĕттĕмлехĕпе çав авалхи тĕшмĕшлĕхне сирсе, хăй пурăнăçне йепле кирлĕ çапла йусаймасť. Ҍăваша тĕн сĕрĕмĕ икĕ йенҌен лекет. Пĕри Ҍиркӳрен, çĕнĕ тĕнрен, Христос тĕнĕҌен. Тепри, авалхи Ҍăваш тĕнĕнҌен. Икĕ сĕрĕм Ҍăваша хупăрланă та, хайхи вупăр пекех пусса тăраççĕ.

Алентей Кĕркурийĕ каласа пĕтерсен пĕр самантлăха никам та нимĕн те шарламарĕ. Микула пиҌҌе кăшт тăрсан вăрăммăн сывласа илсе:

— Çапла çав. Есĕ калани тĕрĕс. Суккăр куç, имшер ӳт-тир, пурлăх тĕлĕшĕнҌен те, пур йенҌен те наҌар пурăнăç — çав есĕ каланă тĕттĕмлĕхрен, вупăртан килет.

— Халĕ ĕнтĕ халăх ĕлĕкхи пекех мар пек, — тесе пуçларĕ тата Корнилĕ Иванĕ. Акă епĕ çак ултă-çиҌĕ

çул хушшинђе пулнă улшăнусене илесшĕн. Халиђђен ђиркĕве халăх пит нумай çӳретђĕ, хаљ аплах мар, сахалтарах. Хĕрарăмсем кăна кайкалаççĕ...

— Револютси пулни халăха нумай куçне уçтарђĕ. Акă пурăна киле халăх ђиркĕве те, ĕлĕкхи тĕнĕн йалисене те пăрахрĕ, — терĕ Алентей.

— Ђиркӳри хурал ђанĕ вуннă çапрĕ.

— Киле каймалла пуљ — терĕ Иван.

— Кайатпăр, — терĕç Микула пиђђепе Алентей.

— Сывă пул, пирĕн пата пырса лар, — терĕç мана çынсем. Виççĕшĕ те алă тытрĕç.

— Ӳлĕмрен хăвăр килсе ларăр, йаланах килĕр, — терĕм епĕ вĕсене.

— Епĕр килетпĕр-çке кунта, — çынсем киле кайма тухрĕç.

Епĕ те алăка питĕрсе кĕме вĕсемпе пĕрле тухрăм.

Уйăх кăвак тӳпере çап-çутă тăрат̆. Пĕлĕт таса, кăвак. Пирĕн йал вĕçĕ тĕлĕнђе кăна пĕлĕт çинђе тĕтре пек хупăрланнă, хăмăр пĕлĕт таткисем пур.

— Ай-йай, çутă! Хайхи леш, вупăр, уйăх патĕнђен саççимех тасалнă, — терĕ Алентей кулкаласа. Епĕр пурте алкум вĕçĕнђе ђарăнса тăтăмăр.

— Е-е-е! — терĕ Микула пиђђе аллине сĕлтсе. Акă ђăвашсене пусса тăракан вупăр та çавнашкалах сирĕлĕ. Пурăннăçемĕн, çутталла тухнăçемĕн халăх майĕпе шăранат̆, тасалат̆. Суйа, кирлĕ мар йапала пурăнăçран хăйех майĕпе пăрахăçа тухат̆. Хаљ кăна, ĕлĕк сатменисенђен халăх хăранă, тесе калаçса ирттертĕмĕр. Халĕ пăхăр-ха! Сатменисенђен кам хăракан пур? Вĕтĕр-шакăр ађи-пăђи те сатменине сăнаса пăхасшăн пинокkăљпе тăрмашат̆.

Йура шăтăртаттарса çынсем хуллен урам тăрăх утрĕç.

Епĕ çынсем курăнми пулађђенех алкум вĕçĕнђе

тăтăм. Тӳлек, çутă, сивĕ. Йалта хăй çути сахал, унта-кунта çеç курăнкалаť. Пĕр сасă-ђĕвĕ те илтĕнмест.

Епĕ çынсене ăсатма тумтирсĕрех тухнă. Çивĕ шатăр ђĕпĕтрĕ, çӳçенсе кайрăм та, алкумне ђупса улăхрăм. Йур йăлтăртатнипе, уйăх çуттипе умсанса каллех пĕр самантлăха йĕри-тавра пăхса илтĕм. Йал тĕлĕнђи хăмăр тĕтре хуллен хĕвел анăçĕ йенелле туртăнаť...

## Хăшпĕр сăмахсене ăнлантарса пани.

1. Кӳђкенсе — хутланса, ђĕркуçленсе.
2. Мăташса — муталаса, аркатса.
3. Талкăшаť — васкаса утаť.
4. Йанкăртатни — мăкăртатса вăрçни, пĕрмай ĕçсĕрех калаçни.
5. Сĕлкĕш — пăрлă, йурлă шыв.
6. Умсанса — йăмăхса; сăмахран, куç хĕвел çутипе йăмăхаť.

## ЫЙТУСЕМ:

*1. Автăр тĕп шухăшĕ мĕнле çырăнтараť?*

*2. Ђăвашсем ĕлĕк уйăх тĕттĕмленнине мĕншĕн „вупăр çийет“ тенĕ.*

*3. Хальхи вăхăтра ђăваш хрестђенĕсем уйăх тĕттĕмленни çине мĕнле пăхаççĕ?*

*4. Йал çуттăлла туртăннине калавра мĕнле майсемпе кăтартнă?*

**Иссайёв М.**

# РАПФАК ХЁРЁ.

Ахăлтатса кулакан пĕђĕк ађа пек çутă питлĕ хĕвел, айăкран тĕве майлă курăнакан лутра тусем хыçĕнђен хађ анђах упаленсе тухса, çуллахи каçăн кăвак сăнне çĕр çинђен хуса йађĕ. Çĕрле çăмăр пĕрĕхсе кайнă. Ирхи сывлăш уçă. Тневађнăй çикнал трупипе ирхи кăкăр тулли сывлаттаракан сывлăша:

— Ту-ту-ту-у-ут! Ту-ту-ту-у-ут! тутарса йарсанах, лакĕр, хускатса йанă сăпса йăви майлă кĕрлеме пуçларĕ. Кăнтăр йенелле тайлăмлă тăва лакĕр шурă кăшăлпа çавăрса илнĕ. Лакĕртен кăнтăралла темиçе вун çухрăма тӳрем улăхлă вырăн — çтеп тăсăлса вы̆ртат. Çĕр типтикĕс: Ђăваш респуплĕкĕнђи хресђенсене ылхантаракан, вĕсен халне типĕтекен çырма-çатра, кукша пуç пек тăвайккисем курăнмаççĕ кунта. Çĕр çип çапнă пек: тăçти айакри темиçе вун çухрăмри курăнат. Тулă анисем тинĕс пек хумханса выртаççĕ. Çăтмахлă тулă, ђăваш ĕçхалăхĕ çулталăкра пĕрре, мункунта çисе куракан шурă тулă, хăй вăйлă пулнипе мухтаннă пек пулса, йăвăр пуçахне сулласа ларат. Тулă анисем хушшинђи çулпа вырăссем тĕвесемпе тулă çине пăхса савăнса иртӗççĕ. Пиђĕсем, пиçсе çитнĕ арпус пек, хĕрлĕ. Тĕвисем пуçĕсене, патша ђухнехи стришнасем пек, кайалла йарса хуллен утса пыраççĕ.

Йăран çинђи купăста пуçĕсем пек, ретпе ларса тухнă шурă палаткăсем хушшинђе симĕс тумтирлĕ хĕрлĕ салтаксем йăшăлтатаççĕ. Пайан вырсарни — кану кунĕ. Салтаксем пуçтарăнма васкасах каймаççĕ. Хăшĕ-пĕри сухалсем хырма тапратрĕç. Хăшĕ алă çăвиђђен винттовккине «ђиксе туртаť», коťťолокне, крушкине хăйăрпа çутатаť. Хăшĕ Ленин палаткине çĕнĕ хаçатсем вулама кĕрет.

Лакĕр вырнаçнă вырăн хăйăрлă. Çуллахи кунсем хĕрӳ. Кăнтăрла йенђен вĕрекен ăшă çил вĕрилленнĕ хăйăра çавра çаврах вĕçтерет вара шăрăх кун.

* * *

Кашни рете тăватшарăн тăрса салтаксем комантирсемсĕрех ирхи апат çисе палаткăсем патнелле харăссăн, калăппа калăпланă пек, утаççĕ. Сывлăшра:

... Вунă çухрăм тата
Утас пулаť пирĕн.
Çĕр каçмашкăн
Вырăн тупас пулсан...

йанăраť, хавхалантараť салтака. Салтака шухăшне мантарса, хăпартлантарса йаракан йурă хăва хушшине çитсенех ђарăнса ларђĕ. Мелкеленсе ларакан хăва тĕмескисем, леш йенђе—палаткăсем. Тешурнăй саланма комантă пађĕ те, полк шкулĕнђе вĕренекен курсантсем ушкăнĕ ушкăнĕпе хăвасем çумĕнђи çерем çине, хӳтлĕхе кайса йăванђĕç. Палаткăсем патĕнђе, хĕвел çамкинђе, тӳсме çук шăрăх. Хăвасем çумĕнђе аван, сулхăнрах. Хутран-ситрен тара типĕтекен çил вĕркелет. Епĕ те тăрса хăва хушшинелле сулăнтăм.

Лутра хăва тураттисем хĕвел çуттипе выђђаççĕ. Пĕр хăва тĕмески айĕнђе Çемен пĕђђенех пĕр хут татăкĕ

ҫине пăхнă та, шухăша кайса ларат. Ҫемен полк шкулĕнҭе примерлă курсант, примерлă комсомолĕс. Унăн зинттовки сатворĕсем те, кĕмĕл ҫĕрĕ пек, йăлтăртатаҫҫĕ йалан. Оттелҍоннăй комантир та унне коттолок, крушкă, йе кĕреҫе тасамаррине, тутăхнине нихҫан та курман.

Вĕренес ĕҫре те Ҫемен малта пырат. Вăл парттийе кĕме сайавлени парсан, партти ҭленĕсем уншăн пурте хавассăн алă ҫĕклерĕҫ пухăра.

Ҫеменĕн вăхăҭĕпе кăшт шухăшлăрах ҫӳрес йăла халиҭҭен те пурҭҭĕ те, кунашкал пуҫа усса ларнине курман.

— Мĕн ҫинҭен пит пуҫа ҭиксех шухăшлатăн? Килтен хурлăхлă хыпар илмерĕн пулĕ вĕт? — тесе ыйтрăм епĕ Ҫеменпе йунашар пырса ларса.

Ҫемен хăйĕн шухăшне такама... кама та пулса пĕр ҫынна, каласа парасшăн ҫуннине епĕ унăн ни йĕреймен, ни кулайман, хура шăрҫа пек йăлтăртатакан, куҫĕсенҭе куртăм. Ҭĕри пыр тулли тапнă вăхăтра хăй патне йулташ пырса ларнипе Ҫемен хĕпĕртенĕ пек пулҭĕ.

— Хаҍ илнĕ ҫыру мар вăл — кивви... Анҭах тем иртнĕ пурнăҫ аса килҭĕ-ха, — терĕ вăл. Хăй кăкăр тулли сывласа илсе вăрăммăн вĕрсе кăларса йаҭĕ.

— Мĕн пулнă вара сан? Мĕн пĕҭҭен анҭах шутлатăн, тавай иккĕн шутласа пăхар, тен мĕн те пулсан шухăшласа кăларăпăр? — терĕм епĕ.

— Ех, Мĕтри, тепĕр ҫын пулсан калассӑм ҫукҭĕ те, сана, хамăн ҫывăх йулташ вырăнне шутласа, каласа парам. Аллинҭи ҫыру ҫине хурланса пăхса илҭĕ те кăсйине ҭикрĕ, вара калама пуҫларĕ.

— Вăл ак ҫапла пулҭĕ. Ҫук! Ăна тӳрех «пулҭĕ» тесе калама ҫук. Вăл майĕпе пулнă. Анҭах ҫав «майĕпе» маншăн та, уншăн та пит хăвăрт, сисĕнкĕсĕр иртсе

кайрĕ. Сисмĕн çĕртех епĕр, пит çывăх, пĕђĕкренех пĕрле ўснĕскерсем пек, пĕр-пĕрне пур çĕрте те, пур ĕçре те ĕненсе, тăвана йуратнинђен те питрех йуратса кайрăмăр.

— Епĕ пĕр хулара, Атăл хĕрĕнђи хулара пурнаттăмђĕ. Çулсем çамрăкђĕ: вунсаккăртађђĕ. Ĕçĕ çăмăл марђђĕ, типпокрафинђе ĕçлеттĕм епĕ ун ђух. Хĕллехи вăрăм çĕрсенђе, ĕçлесе ывăнсан, нўрлĕ тискер хваттертен тухса утаттăмђђĕ урампа. Утаттăмђђĕ... йулташсене курса калаçаттăмђђĕ, анђах çапах ђĕре темшĕн выртмасђђĕ. Мĕн те пулсан çитмен пекех туйăнатђĕ вара пĕрмайах.

Çуллахи шăрăх кунсенђе типпокрафинђе кунĕпе ура çинђе тăрса ĕçленĕ хыççăн питех те канас килетђĕ вара. Анђах кану тĕрлĕ пулат... Аптăрана йенне хуларан аслă çулпа тухса утаттăм. Çапла пĕрре, вăрман витĕр çĕлен пек авкаланса выртакан, хăйăрлă çулпа шывлă çырма хĕрне, кĕпер патне пырса тухрăм. Каç пулђĕ. Йавăр ĕçпе ывăннă çын пек, лăпкăђђĕ вăл каç. Çырмари шыв çинелле пăхрăм. Шыв, темшĕн хурланнă хĕрĕн хура куçĕ пек, тĕксĕм курăнђĕ мана. Ун çине пăхсан, хамăн ларса канас килнине тата лайăхрах туйрăм. Çул йўппине çерем çине кайса лартăм. Ман йĕритавра йăвăç çулçисем, çынсем пăшăлтатнă пек, пăшăлтатађђĕç. Таçта инçетре кас-кас лĕк-лĕк-лĕк кулнă пек илтĕнетђĕ.

Епĕ шухăша кайса лартăм. Пуçа темиçе тĕрлĕ шухăшсем те кĕрсе тухрĕç пулĕ ун ђух.

Вăйсăрлатакан йăвăр шухăша кайнипе епĕ хам çума çын пырса ларнине те сисмен.

Шăппăн: еххĕм! — ўсĕрни мана шухăшпа сĕнккесе ларнă çĕртен вăратса йађĕ. Епĕ куçа уçса çавăрăнса пăхрăм.

Типсе пĕрĕнсе пĕтнĕ питлĕ карђăк ман çинелле йăвашшăн кулса пăхнине куртăм.

Вăл ман пуçри шухăша пĕлнĕ пек:

— Шухăшлатна-ха, ађам?.. терĕ шăппăн. Карђăк пĕрĕннĕ тутисем кулма пăрахрĕç.

Епĕ сасартăках ним калама аптăранă пек пулса, ирĕксĕрех:

Шухăшлатăп-ха, асанне, шухăшлатăп, тесе йатăм.

Вăл ассăн сывласа илђĕ. Вара каллех пĕр тапхăр ним ђĕнмесĕр лартăмăр.

Епĕ пĕлĕт çинелле пăхса илтĕм. Лапкăн-лапкăн майĕпе шăвакан йăвăр хура пĕлĕтсем мана иртнĕ пурнăçăн хурлăхлă кунĕсене асилтерђĕç:

Карђăк татах вăрăммăн сывласа йађĕ.

— Мĕн пуçа ђиксе ларатăн? Хăна тантăш çамрăк хĕрсемпе калаçса, кулса иртермелле вăхăта шухăшпа çĕртетĕн!.. терĕ. Унăн йулашки сăмахĕнђе епĕ йăвăр хуйхă сисрĕм. Малалла мĕн калаçнине астумастăп. Тен калаçман та пулĕ. Анђах çапла ларнă çĕртех:

— Пурĕпĕрех пурин те вилмелле... тенĕ сăмах ман хăлхана çурса кĕрсе кайрĕ. Епĕ вăл тем калассине ђухласа:

— Çапла, асанне, пурте вилетпĕр çав, — терĕм.

Ун тутисем сиккеленме пуçларĕç:

— ... вилетпĕр... çирĕмпĕрремĕш çулта вилеймерĕм, ывăлăма пытартăм, сан пекех çамрăкђĕ. Вилнĕ ĕне тирне çирĕмĕр, йывăç хуппи хышларăмăр... Ырă çынсем пулăшма çăкăр илсе килђĕç... Ывăлăм пĕр трук пĕр çăкăр çисе йађĕ, çĕрĕпе йынăшрĕ, тытамак пек тытса пăрахађђĕ хăйне, ирпе хытрĕ, вилђĕ... Çăкăртан вĕт, тискер кайăкланђĕ, курасса сунман...

— Епĕ пурнатăп-ха, турă хам ĕмĕре тăстăр тесе, ăна кĕлтăватăп.

Епӗ ҫӗнмерӗм. Еп ӑна палларӑм, пӗлтӗм. Вӑл урам тӑрӑх мӑкӑртатса туйапа туйаланса иртнӗ ҫухне унтан пӗҫӗк аҫасем кулаттҫӗҫ. Ӑна ӑсран кайнӑ тетҫӗҫ. Анҫах вӑл ухмаха йермен. Ун ӑшӗнҫе тем пек пысӑк, лӑпкӑ каҫ пек, йӑвӑр хуйхӑ пулнӑ... йуратнӑ ывӑл хуйхи.

Ӑшӑ ҫил кассӑн килҫӗ. Ҫӳлте вилнӗ ҫын ӳҫӗ тӗслӗ уйӑх хура пӗлӗт ӑшне ҫӑмрӗ.

Епӗ тӑрса хуланалла утрӑм.

Темле тӑлӑххӑн иртетҫӗҫ кунсем.

* * *

Пӗрре Парттипе Канаш шкулӗнҫе веҫҫӗр пулҫӗ. Йулташсем ҫӗнҫӗҫ те, кайрӑм. Малтан йаланхи пек ҫпектаккӑҫ лартрӗҫ. Хаҫхи пекех астӑватӑп — йулташ: ҫӑваш хорӗ пулаттӑ пайан, тесессӗн — ҫӗрем кӑрт сиксе кайрӗ. Унҫҫен ҫӑваш йуррисене хор йурланине илтмен пирки, вӑл каҫ тӑван йурра кӗтсе илнӗ пек, кӗтсе илтӗм.

Ҫулла, канлӗ вӑхӑтра, йалта хӗрсене «Пирӗн урам аналалла» йурлама ыйтаттӑм вара. Вӗсем йурласа парсан, унҫҫен ӑшра пушӑ вырӑн пур пек туйӑнаканни тулсах кайатҫӗ. Илемлӗ-ҫке тӑван кӗвӗ!

Вӑл ҫӗр тӑван кӗвӗ маншӑн тата илемлӗрех туйӑнҫӗ. Хор йурланӑ ҫухне ҫӑваш ӗҫхалӑхӗ темиҫе ӗмӗрхи пусмӑр сӑнҫӑрне татса хӑватлӑн «Инттернатсионал» йурланӑ пек пулҫӗ. Ҫӗрем кӑкӑртан тапса тухас пек тапрӗ.

Ӑна та епӗ ҫи малтан ҫав ҫӗр куртӑм. Темшӗн, хам та калама пӗлместӗп, пирӗн куҫсем пӗрне пӗри тӗл пулса хире-хирӗҫ пӑхса тӑҫӗҫ... Ун хушаматне тепӗр ик-виҫ ернерен комсомол пуххинҫе тин пӗлтӗм епӗ.

Ҫук! ун ҫух нимех те ҫук-ха. Ун ҫух епӗр пӗр-пӗрне тӗнҫере пуррине те пӗлмен...

Кулленхи ёç шухăша çăтрĕ. Пĕтĕм вăйăм хĕрÿллĕ ĕçе кайса пыҕĕ. Кунсем кĕркуннехи пĕлĕтсем пек шурĕç. Хĕвел хĕртсе хĕллехи тислĕке çийеле кăларнипе урам варринҕи шурă йур та хуралса пыҕĕ. Кашни каçах ĕç хыçĕнҕен урама уçăлма тухсан ăна кураттăм. Ăнсăртран пĕр пĕрин çине пăхса илеттĕмĕр...

Çуркунне хăй патнелле кăҕăк туртатăҕĕ. Сарă сăнлă, хитре çуркуннене кĕтсе илейместĕм. Вăхăта хăвăртрах ирттерес килетҕĕ манăн ун ҕух. Тĕлĕкре те тĕнҕене илем кÿртекен симĕс тумлă çуркуннепе аташаттăм. Вăхăт хăй майĕпех шурĕ. Май уйăхĕн ăшă кунĕсем хура çĕре ҕуптуса симĕслетрĕç. Хулан пĕртен-пĕр лайăх вырăнĕ — çăва улмуççи ҕеҕекĕ шăршăпе тулҕĕ.

Пĕрре вăл манпа пĕрле ĕçлекен хĕрпе ман çинҕен калаçнă (хăй вăл рапфакра вĕренетҕĕ). Çак хĕр мана каласа паҕĕ. Анҕах епĕ ĕненмерĕм. Йепле ĕненĕн-ха есĕ халиҕҕен пĕлмен, пĕр-пĕринпе хире-хирĕç тăрса калаçманнипе çынна. Анҕах ҕĕрем ун патнеллех туртăнҕĕ...

... Ăна каламасăр хăварас мар, ытла та асăнмалла каç вăл!

Пысăк йал майлă хула урамĕ çуркуннехи каç мĕнлине пĕлетре есĕр?! Çук, ăна каласа пама хал çитес çук. Ăна çын хăй тĕлне килсен çеç пĕлме пултаратă.

Çуркуннехи Атăлăн йĕплĕ çилĕ вĕркелет.

— Ăçта лараршн? — терĕм епĕ. Вăл мана хирĕç:

— Ман çавăнта, рапфакран çÿлерех кукăрта пĕр хÿтĕ вырăн пĕлекенни пур. Пĕлтĕр хваттерте унта пурăннă ҕух туха-туха лараттăмăр епĕр унта. Айтăр, çавăнта кайар, — терĕ. Кайрăмăр.

Тулса çитнĕ уйăх çăтăк пĕлĕтпе пытанмалла выҕатă. Пĕлĕт айне пĕр кĕрет, пĕр тухатă. Епĕр ларакан хÿтлĕхлĕ вырăна хăма çурăкĕсем хушшинҕен хăйĕн, кĕмĕл пек

çуттине сапалаť. Тăрсан-тăрсан уйăх çути ун питне те çутатса илет. Çав вăхăтра епĕ ун çине пăхатăп та, вăл мана:

— Мĕншĕн есĕр ман çине пит пăхатăр? — тет.

— Ахалех... Анђах есĕ тархашшăн мана «есĕр» тесе ан ђĕн-ха, вăл мана кăмăла каймасť. Апла ђĕннипе есĕ маншăн пит инçери çын пек туйăнатăн! — тетĕп епĕ. Кăна хирĕç вăл:

— Епĕ çынсене «есĕр» тесе ђĕнме вĕреннĕ те, çавăнпа сана та çапла ђĕнтĕм, — терĕ, вăтаннă пек, пуçне çĕрелле усса. Вăл апла каласан, мана хам çинђен темиçе пăтлă тиййев йăтăнса аннă пекех пулђĕ.

Çав каç... епĕр пĕрне-пĕри ђылайђђен çывăх, шанђăклă йулташ пулассине иксĕмĕр те сисрĕмĕр. Тулнă уйăх та пирĕншĕн хăйĕн çуттине çĕр çине ытларах йанăн туйăнђĕ. Вăл ман çума тата хытăрах тĕршĕнђĕ, тата хытăрах ман çине тайăнђĕ... ирĕксĕрех йухса аннă куççулне шăлса илђĕ. Ун çумĕнђе ларма пит аванђђĕ-çке мана...

Хĕвел кунран-кун çӳлерех хăпарса, хăйĕн хĕрӳллĕ вăйне пĕр шеллемесĕр çĕр çине йанипе, хулан ђул сарман урамĕсенђи пылђăк та типрĕ. Ун вырăнне çемçе йешĕл курăк сăмсаланђĕ. Кайăксем йуррисене тата савăнăçлăрах йурларĕç. Кăмăллă иртетђĕç кунсем. Унпа канаттăм, унпа ирттереттĕм пушă вăхăта...

Шăрăх кунсем Атăл çинелле туртрĕçĕ. Атăл çине, йăлăм йенне луткăпа кăймасăр пĕр кун иртмерĕ. Савăнăçлă кунсемђђĕ вĕсем. Атăл тăрăх тăван кĕвĕ шăранаťђĕ. Атăл хумĕсем, ђĕђĕ ађи сăпка çинђе йаранса амăш йуррине итленĕ пек, итлетђĕç ăна. Хитре кĕвĕ, тăван йурă кăмăла çĕклетђĕ, ђĕре те савăнса хытăрах тапаťђĕ.

Каçхине Атăл хĕрринђи ватă йăмра ађашлаťђĕ, йе çăва çинђи шурă хурăнсем айĕнђе ђĕре çумне çыпăçа-

кан сăмахсем йухаттӗç. Пӗр-пӗрне пӗр сăмах калаймасăр ларнă минутсем те пулаттӗç... Ех, пурнăçăн тути кулатӗ çав ун ӗух!

* * *

Типпокрафи çумӗнӗи комсомол йаӗейккинӗе епӗ çекреттарта ӗçлеттӗм. Йаӗейккă пӗӗӗкех марӗӗ, ӗленсем çамрăк пирки ӗçӗ нумайӗӗӗ. Пӗтӗм вăйран тăрăшса ӗçлеттӗм. Хăш ӗух вăл та пулăшкалаттӗ.

Йаӗейккăра çурри ытла типпокрафи ӗçне тин вӗренекен аӗасем тăратӗӗç. Вӗсен пурнăçӗ те, укçа сахал илнӗ пирки, çăмăлах марӗӗ. Хулара тата хваттер те çителӗклӗ çукӗӗ, хваттер тӗлӗшпе хӗсӗкре пурăнаттăмăр. Мешӗенсем типпокрафире ӗçлекен çамрăксенӗен хваттершӗн виç хут тир сӗветӗӗç. Хваттерӗ çапах путлӗ марӗӗ. Çынпа тулнă пӳртре ирхинеӗӗен сывламалăх сывлăш йулмасттӗ. Пӗр вырăн çинӗе иккӗн-виççӗн выртса тăраттăмăр. Çитмен пурнăç йаӗейккă ӗçӗнӗе те палăраттӗ. Комсомолӗссем ӗлен укçине вăхăтра татса пыраймастӗӗç. Йаӗейккă ӗлен укçи тăрăх парăма кӗнӗӗӗ. Парăма татас тесе, епӗ пухура сăмах каларăм. Уйăх вӗçӗнӗе укçа илсен пӗтӗм парăма татас, тесе йышăнӗӗç. Çапла ман алăра уйăх пӗтнӗ çӗре 30 тенкӗ укçа пухăнӗӗ.

Çӗнӗ уйăхăн пӗрремӗшӗнӗе ман отпуска каймаллаӗӗӗ. Йалта пурăнакан аннепе шăллăма курманни нумай пулнă пирки, унта кайса ватă аннене хӗпӗртеттерес, тесе шутласа хунăӗӗ епӗ. Отпуска кайас майӗпе ӗупкаласа çӳресе çав вăтăр тенке кайса пама алă çитмерӗ. Кайса параймасăрах йала тухса кайрăм. Йуратнă хӗрӗн савса кулакан куçӗсем прахут пристăӊ çумӗнӗен çавăрăнса кайиӗӗенех ăсатса йаӗӗç мана...

* * *

Йала ҫитрӗм. Кивелнӗ пӳрт тӑрри виҫӗ ҫул хушшинђе малалла ӳпӗнни тӳрех куҫ умне пулђӗ. Киле кӗретӗп. Килкарти варринђе выртакан каска ҫинђе ватӑ аннем макӑрса ларать. Анне мана курсанах:

— Ах, Ҫемен, килтӗне!.. терӗ. Кӑшт кулнӑ пек пулђӗ, куҫҫулне шӑлса илђӗ те, тата хытӑрах макӑрса йађӗ. Епӗ аннепе йунашар пырса лартӑм. — Анне, аплах ан макӑр-ха, мӗнле пурӑннине каласа пар-ха луђђӑ, — тетӗп. Хам пӗђӗк картишне йӗри тавра пӑхса ҫавӑрӑнтӑм. Улӑм витнӗ аслӑк айӗнђе урапа кайри тӗнӗл ҫине тайӑнса ларать. Урапа патӗнђе ҫӗмӗрӗк кӑлтӑрмаҫҫӗ выртать. Кӑлтӑрмаҫ тесе калас ҫук ӑна: шӑлӗсем тухса ӳксе пӗтнӗ кӳпђекӗ пӗр ҫӗрте, тукӑнӗ ҫурмаран хуҫӑлнӑскер, тепӗр ҫӗрте.

Виҫӗ ҫул кайалла, выҫлӑх ҫул епӗ килтен икӗ мӑйан пашалупа Мускава, выҫӑ вилесрен, тухса кайнӑ ђухне, килте аннепе пӗђӗк шӑллӑмсӑр пуҫне, икӗ аслӑ пиђђем йулнӑђђӗ. Пӗри авланнӑђђӗ, тепри, Иван йатли, кађђӑ сынђӗ. Анне мана авланнӑ пиђђе уйӑрӑлса тухни ҫинђен сырса пӗлтернӗђђӗ, унтан вара епӗ тек ҫыру илмен.

Пӑхкалатӑп, аннесӗр пуҫне урӑх никам та курӑнмасть килте.

— Иван ӑҫта? — тесе ыйтрӑм епӗ аннерен.

— Ах, ывӑлӑм! Сан ҫинђе анђах йулђӗ ӗнтӗ шанђӑк та. Аслисем мана, ват сынна, пулӑшма уйламарӗҫ. Ӳстерсе ҫитертӗм те, тухса тарђӗҫ. Йакурӗ ес кайсан нумай та пурӑнмарӗ тухрӗ, вӑрҫа-вӑрҫах тухрӗ. Выҫлӑх ҫул вӗт... пирӗнпе пурӑнсан тӑрантарасси, терӗ пуђ. Пурӑнтӑмӑр ҫапах, вӑл тӑрантармасӑрах, пӗр йӗп вӗҫӗ пек те пулӑшман... Совет хӗрхенђӗ, пулӑшрӗ...

— Иванĕ уйăрăлса тухса кайни ĕнер уйăх çитрĕ... ах, ăш хыпрĕ, çăвар тӳпи типрĕ. Айта, Çемен, пӳрте кĕрер. Сан та çул çинђен ĕçес килет пул, сăмавар лартам, — терĕ анне.

— Сăмавар, терĕм, сăмаварĕ шăтнă та кĕлетре ларатха. Хам тӳрлеттерме укçа тупаймастăп. Ивана мĕн ђул каларăм, мĕн ђул каларăм, тӳрлеттер-ха, ађам, тӳрлеттер-ха, нумай укçа кайас çук, спаççипă калăп, — терĕм. Итлемерĕ. — Вăл сăмавар мана пулас çук, терĕ. Хаљ ĕнтĕ ђейникпе вĕрететпĕр, — терĕ те, анне хуран айне вут ђĕртсе ђейник çакса йађĕ.

— Ђипер çын пек уйăрăлса кайсан, çăва çинеђђĕ. Çын пек тумарĕ-çке, çын пек тумарĕ! Йал кулђĕ ĕнтĕ пирĕнтен, йал кулђĕ, ывăлăм! Йулашки пĕр михĕ çăнăха илсе тухса кайрĕ. Çитменни çине тата уйри тырра та пĕр пек уйăрса памарĕ вĕт... Икĕ çĕмел таçта кайса кĕђĕç... амăшĕнне вăрларĕ!

— Мĕн ђул каларăм... Ара, Иван, йал кулĕ, кам пур урăх йалта ватă амăшне пăрахса тухса кайакан? Уйăрăлса тухсан та, пурăнăç тăвасси ђасах пулмасŏ вăл. Пурте кирлĕ: çурђĕ те кирлĕ, выљăхĕ те кирлĕ — хаљ мĕн пурха сирĕн? Пĕр пĕрени çук вĕт, пĕр ђĕрĕ ђун выљăх çук... пирĕнпех пурăн-ха, — терĕм. Пирĕн лаши пур хуŏ, лашипе ĕçлĕн, ху çума пуçтарма ђарас çук. Пире Йармушпа иккĕне нумай кирлĕ мар — çăкăр тăвар пулсан, расхутне тытсан, санран урăх нимĕн те ыйтас çук епĕр, — терĕм хаљ те.

— Сире, шуйттан карланкисене, тăрантариђђен йута кайса парам, — тесе алăка шалт! хупса тухса кайрĕ.

— Арăмĕ пăсрĕ, арăмĕ! Кин вăл йалан тутлă çиме пăхаŏђĕ, йусав çӳресшĕнђĕ. Пуйан Туртуш хĕрĕ вĕт. Çук çын ађи пуйан хĕрне ĕмĕр ан илтĕр!

— Ăна каламасăр хăвараттăм-ха. Кăçал пĕр ана тырă пусрах выртса йулатђĕ, пуçтарас çукђĕ пуљ. Хам куљђанса, кашни кун макăрса ђирлесе кайрăм. Хапха патне те аран утса çитекен путлăм. Йармуш пĕђђен, вуник çулхи ађа, мĕн ђулах вырĕ! Çапла куљђанса ларнă ђухне Сантăр: Çемен çыру йарати? — тесе килсе кĕђĕ. Йаманни ђылай пулаŏ, — терĕм (Иван уйăрăлсан виç тăват кунтанах-ха вăл). Çемен килтĕрђĕ иçмаса, уйра тырă пур, хам ђирлĕ, тара тытас укçи çук, çаплипех йулаŏ пулĕ тесе макăратăп. Вăл вырмалли мĕн ђул йулнине, ана тĕлне ыйтса пĕлђĕ те:

— Ан куљђан, Тарйе аппа, вырсарни кун хамăр кайса вырса парăпăр, — терĕ. Ĕненмерĕм. Кампа выраŏши ку, хăйсен те ĕçлекенни хăй те аппăшĕ çеç, ашшĕамăш вата, тесе шутласа ларатăп.

Вырсарни кун кĕтў йараспа, вуннăн та ытла пулĕ (леш Çтаппан Иванђăн Хусанта вĕренекен хĕрĕ те пурђĕ унта), килђĕç:

— Вырса пĕтерсе килтĕмĕр, ултă çĕмел ларђĕ, — терĕç. Хĕпĕртесе апат çиме ђĕнетĕп, укçине хăçан парас ĕнтĕ сире? — тетĕп:

— Тавтапуç, çиместпĕр, укçи те кирлĕ мар, — терĕç. Ара, мĕнле ăс çитрĕ сирĕн вата çынна пулăшма? — тетĕп. Тĕлĕнмелле кăђухнехи çамрăкпа темĕскер йађейккă кумсамал, тег-и вĕсен... ђухăн çыншăн тăрăшаканни, тет-и — ват çын ăнланаймастăп. Тем ђул та спаççипă калатăп вĕсене, — терĕ анне йулашкинђен. Унтан ђей куркисем тасатма пуçларĕ. Епĕ, ђей ĕçмелле пулатђен тесе, пахђана тухса кайрăм.

Пахђа картисем, ватăлнă çын пек, туййаланнă. Пахђана, утине вăхăтра çулса тасатса пырайман пирки, вĕлтрен, тикенек пусса илнĕ. Карта хĕррипе пĕлтĕрхи

тикенек шăммисем хăлтăртатса лараççĕ. Пахђаран сарай витĕр тухнă ђухне çўлелле пăхрăм. Сарайăн улăм витнĕ тăрри темиçе çĕртен шăтнă, вăл шăтăкĕсенђен кĕрекен хĕвел çуттинђе тусан пĕрђисем выљанаçĕ. Курни илтни ман ђĕрене пĕтĕмпех хускатса йађĕ. Тўсеймерĕм кăмăл хуçăлђĕ. Ман кăсйере йађейккă укçи мĕннипе утмăл тенкĕ укçам пурђђĕ. Пўрте кĕтĕм те, аннене алă тенкине кăларса тыттартăм. Анне:

— Кунђулах ан пар, ывăлăм, хăна йулаť-и? — тет.

— Йулаť, анне, йулаť! — терĕм. Хам ăшра: райкома вăтăр тенкĕ ăçтан тупса парăп-ши? тетĕп.

Килте пĕр ерне пурăнса аннене йăпатса хăвартăм та, кайалла хам ĕçлекен хулана тухса карăм. Кайас умĕн анне:

— Хăвăнне ху пĕлетĕн те-ха, Çемен. Çынсем йалтах лайăх пурăнма пуçларĕç. Ав, Керле Кĕркури лавка лартрĕ, суттăваť ултă кĕтеслĕ пўрт турĕ, лайăх пурăнаť. Хăшĕ шушкă пĕçерсе пуйаççĕ. Сан та çавнашкал ĕçе тытăнсан май килмест-и çак, Çемен? — терĕ.

— Унашкал ĕçпе пурăнма пултараймастăп епĕ! — терĕм те, алă патăм.

— Ех, анне, шухăшусем те ху пекех ватă та, çапах сана йуратнă пек урăх кама йурататăп-ши епĕ?!.

* *
*

Хулана прахут каçаллапа çитрĕ. Пристăњ çинђен тухсанах пĕр паллакан ђăваш поеђĕ тĕл пулђĕ.

— А-а, Çемен, ăçтан килетĕн? — терĕ. Алă тытрăмăр. Ăçта кайнине, йалти пурнăçа каласа патăм.

— Куљђанмалли çук, ман хамăн та пĕр ватă анне анђах, йалта пĕђђенех пурăнаť, нађар… тăрсан-тăрсан, ђăваш кĕнеке-хаçат хуçисем ыркăмăллансан, пилĕкшер

тенкĕ йаркалатăп. Пурнăç мĕн ђул усал, çавăн ђул çинерех тăрас пулаť. Сăмахлакаласа сăра лавкки тĕлне çитрĕмĕр.

— Айта, ак пĕриккĕшне кĕрсе йăвантарар! Пайан ретактăр сылтăм ура çине пусса тăнă пулмалла, виçĕ сăвă патăм, виççĕшне те йађĕ, çак майпа йураť, — терĕ поет. Вăл поета епĕ йурататтăм. Тăван ђăваш ĕçхалăхне Çеçпĕл Мишши пек, ђĕререн йуратнăшăн йурататтăм, епĕ ăна.

Пивнойран тухсанах Райком çекреттарĕ хирĕç пулђĕ.

— Сана йађейккăн ђлен укçине вăхăтра татманшăн выкăвăр панă. Ыран Райкома пырас пулаť сан, — терĕ. Вăл сăмахсене илтсен çӳçĕм вирелле тăрса кайрĕ. Пĕр сăмах ђĕнмесĕр малалла утрăм.

— Ман таçта çыврас-ха кĕçĕр? — терĕм епĕ поет-йулташа.

— Сан та хваттер çук-им? — терĕ вăл.

— Пур та... икĕ уйăхшăн хваттер укçи тӳлемен те, кайсан укçа ыйтасран шикленетĕп, — терĕм.

— Айта, ара ман пата, ман хваттер йамăт. Пĕр ерне ернипех шырарăм епĕ хваттер, тупса пулмарĕ. Пĕр комнăтшăн 20 — 25 тенкĕ ыйтаççĕ. Комнăтне краваťпа сĕтел лартсан, хăвăн алăк умне тухса тăрас пулаť. Комунхоса ђерете çырăнсан, тепĕр вунă çултан, вилсе ђĕрĕлсе тăрсан тупса парĕç-и, çук-и? Хаљ луђђă, тађђăра пур ă натăп, — терĕ те вăл ман çинелле пăхса кулса йађĕ.

— Мĕнле тађђă!

— Вăрмантресăн сарайĕнђе, лаша вити мађђи çинђе Епĕ тађђă тенĕрен тӳсеймерĕм, кулса йатăм. — Ан кул кулмалли çук, хаљ ђăваш ђĕлхи шăпăр кутĕнђе ђух унтан туглине тупайрас çук ĕнтĕ! — терĕ те çĕрелле пăхса илђĕ. — Çук, пĕрмайах капла пулмĕ, ђăваш ђĕлхи хамăр çĕршывра кĕрекене лармаллах, лартăпăр!

— Хзаттер хуçи ман мешђен мар, Вăрмантрес куђăрĕ — ђăваш. Пурăннăшăн укçа илмест. Пĕтĕм услови те унпа: ман сарайĕнђе тапак туртмалла мар, çав анђах. Вырăн çемçе, утă ху айна мĕн ђул кирлĕ çавăн ђул сар! — терĕ поет.

Çĕрĕпе çывăраймарăм. Райкома укçа мĕнле тупса парас шухăш пуçран тухмарĕ. Ирхине ирех тăрса кивçен шырама тухса кайрăм. Темиçе çĕре çитрĕм, тупаймарăм. Унтан тупаймасăрах Райкома кайрăм та: йађейккăн ђлен укçине салатса йатăм. Хаљ тӳлеме пултараймастăп. Райком ирĕк парсан виçĕ уйăх хушшинђе тӳлесе татма сăмах паратăп, тесе сайавлени патăм.

Тепĕр кунне Райкома кайрăм та мана хут тытарђĕç. Хуђĕ çине çапла çырнăђђĕ:

*„Райком пӳровĕн проттокколĕнђен.*

*Итленĕ: типпокрафи йађейккин çекреттарĕ Каврилăв йулташ Райкома памалла 30 тенкĕ укçана салатса йани çинђен.*

*Йышăннă: Каврилăв йулташа, темиçе каласа та вăтăр тенкĕ ђлен укçине тӳллесе татманшăн, вăл укçана салатса йанăшăн, комсомолтан кăларас“.*

тенĕ.

Çапла комсомолтан тухса ӳкрĕм. Пурнăç йăвăрлăхĕ кăларса пăрахрĕ. Кĕпкома тепре сайавлени парса пăхрăм нимĕн те тухмарĕ, çаплипех хăварђĕç. Тĕпĕ йĕрĕпе мĕнле пулнине ыйтакан пулмарĕ. Хам та каласа паман (темшĕн каламан çавна, хаљ хамран хам тĕлĕнетĕп, — каланă пулсан аплах айăпламĕђђĕç пуљ).

Мĕн тăвас?.. Поет йулташпа кайса калаçас тесе Вăрмантрес сарайне кайрăм. Поет килте пулмарĕ, кĕтмелле пулђĕ. Хĕвел ансан вĕçтерсе çитрĕ.

— Çемен, ес кунта-çке, пайан сана шыраса ман тĕнке

тухнă. Паçăр рапфак луткипе йарăнма кайрăмăр: Пашков, Салма Хĕветри, райкомра ĕçлекенскер, тата икĕ хĕр рапфакран, пĕри сан леш, хайхи... Вăл пайан анђах екскурççирен килнĕ: Ленинкратра, Волховстройра пултăмăр, çул май Мускаврa Ленин мавсолейе кĕрсе куртăмăр, — терĕ мана. Лутка çинђе Салма Хĕветри сана комсомолтан кăларни çинђен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пађĕ: 30 тенкĕ ђлен укçине, йала отпуска кайсан, самокон ĕçсе пĕтернĕ, — терĕ. Епĕ: есĕ ăçтан самокон ĕçсе пĕтернĕ теме пултаратăн, тен çухатнă пулĕ, Çемен ĕçменнине епĕ лайăх пĕлетĕп, терĕм те:

— Пĕлетпĕр-çке, пĕлетпĕр, ĕçменрен сире иксĕре пĕркунне пивнойран тухнине курнă пуљ-çке, — терĕ вăл. Ахалех илсе кĕтĕм сана пивнăйа, тесе куљђантăм вара. Сан рапфак хĕрĕ тĕпђесех ыйтса пĕлђĕ унтан. Кала-ха, Çемен, ђăнах та ĕçсех пĕтертĕне вара есĕ ăна? Халиђђен ĕçекен марђĕ-çке есĕ, йепле труках ĕçме вĕренсе кайрăн вара? — терĕ поет. Ђĕрем тулашса çитнипе нимĕн те калаймарăм епĕ вăл ыйтнине хирĕç.

Каç тĕттĕмленсе килђĕ. Йуратнă хĕре, йуратнă йулташа хам айăпа ђăннипе каласа парас тесе, рапфак опшешиттийĕ патнелле тухса утрăм. Хĕвеланăç йенђен çăмăр пĕлĕђĕ кăвакарса хăпарттђĕ. Пăђă сывлăш, шăп çанталăк аслатиллĕ çăмăр килессе пĕлтерђĕç.

Опшешиттире вăл пулмарĕ,—таçта тухса кайнă, терĕç. Майĕпе утрăм урампах... Çăва тĕлне пырса тухрăм. Çăван шурă хурăнĕсен тăррисем ыйăхланă пек йерипе хумханса лараççĕ.

Кĕтмен çĕртенех ăна курах кайрăм. Вăл, пуçа ђикнĕ те, çăва карти хĕррипе ман паталла утса пыра парат. (Çуркунне епĕр ку тĕле ђасђасах килкелеттĕмĕр). Патнерех çитеспе йатран ђĕнсе илтĕм. Вăл пуçне çĕклесе

пăхрĕ те, трукаx ђарăнђĕ. Пĕр тапхăр пĕр вырăнта хытса кайнă пек пăхса тăђé те:

— Иутă есĕ, Иутă! Комсомола вăтăр кĕмĕл тенкĕлле сутакан мана текех йулташ мар! — терĕ. Унăн куçĕсенђен, ирхинехи йешĕл курăк çинђе йăлтăртакан вилшыв пек, икĕ тумлам куççуљ йухса анђĕ. Анђах вăл çавăнтах хăйне хăй алла илђĕ. Тек пĕр сăмах та ђĕнмерĕ. Çавăрăнђĕ те утрĕ.

Епĕ мĕн пулнине тĕплĕ ăнланаймасăр, пуçран çапнă çын пек, хам хыçри пĕрене çине кайса лартăм.

Çемен кăна каласан пĕр мехел ним ђĕнмесĕр ларђĕ. Çав вăхăтра полк шкулĕн палаткисем патĕнђе:

— Школа, смиррно-о! — тенĕ сас сыппăн сыппăн йанăрса кайрĕ.

— Ңађђаљнĕк килђĕ. Ыранхи саңатти планне каласа парат̆ пулмалла. Кайса итлер, терĕ Çемен ура çине тăрса.

— Сан каласа пĕтрĕ-и вара? — терĕм епĕ.

— Пĕтрĕ. Вара тепĕр куннех, мĕн пур пек йапаласене пасара тухса сутрăм та, Мускава тухса кайрăм... Сарайĕнђен тухнă ђухне поет йулташ мана ваљђи Песыменскийĕнни майлă çырнă сăвва:

Сыв пул, тăван сарайăм,
Сана пĕртте шеллемĕп.
Пур çĕрте те маншăн кил,
Пур çĕрте те пур йурă;
Пур çĕрте те пулĕ ĕç
Пулĕ ырă маххоркка!

тесе каласа тухса кайрăм.

Мускавра Тĕпкома сайавлени патăм. Тĕпкомра мĕнле мĕнле пулнине пĕтĕмпех каласа патăм та, комсомолрах

хăварђĕç. Вара ĕçлеме те Мускаврах йултăм, кайалла пĕртте ђун туртмарĕ... Мускавранах салтака илђĕç.

— Хĕр патне çыру йамарăна?—терĕм епĕ.

— Çук, йаман, ăçтине те пĕлместĕп, тен, мĕнле те пулсан аслă шкулта вĕренет пулĕ ĕнтĕ хађ... терĕ те Çемен ассăн сывласа йађĕ...

Нађђаљнĕк сăмахне итлемешкĕн лакĕрĕн пирвайхи линийĕ патнелле утрăмăр.

### Хăшпĕр сăмахсене ăнлантарса пани.

1. Пулăшма уйламарĕç—пулăшма шутламарĕç.
2. Тĕнке тухнă—вăйран кайнă, йăлахса çитнĕ.

## ЫЙТУСЕМ:

*1. Ку калавра тĕп керой тесе кама шутлатăр?*

*2. Çемен йатђейккă укçине амăшне парса хăварнинтђе унăн айăп пур-и?*

*3. Тĕпком Çемене мĕнле майпа комсомолтах хăварнă?*

## Тупмалли.

*Стр.*

Мускав сасси — *Пинер* . . . . . . . . . . . . 3
Мĕншĕн?.. — *Патман* . . . . . . . . . . . 18
Çĕпре — *Паймен* . . . . . . . . . . . . . 55
Выçлăх çул — *Паттура Иванĕ* . . . . . . . . 105
Çутталла — *Йаккăвлĕв Ç.* . . . . . . . . . 134
Вупăр — *Трупина Мархви* . . . . . . . . . 162
Рапфак хĕрĕ — *Исаĕв М.* . . . . . . . . . . 177

# Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ.

## ЧУВАШГИЗ

ЧЕБОКСАРЫ — ШУПАШКАР

**Имеются в продаже следующая художественная — литература: —**

**а) сборники избранных стихотворений.**

1) **Елђкер**—Самана . . . . . . . . . . 40 пус
2) **Рсай**—Çамрăк вăхăт . . . . . . . . 16 „
3) **Хусанккай**—Уйартсан . . . . . . . 35 „
4) **Ваçанкка**—Хастарлăх . . . . . . . 35 „
5) **Алентей**—Пирĕн сăвă . . . . . . . . 25 „
6) **Полоруссов**—Шелепи сăввисем, том I 65 „
7) **Полоруссов** „ „ том II 40 пус
8) **Çеçпĕљ Мишши**—Сăвăсем . . . . . 20 пус
9) Октăпĕр хисепне . . . . . . . . 35 пус
10) **Шупуççынни** . . . . . . . . . . .

**Пьессы.**

1) **Йуман**—Укăђђа касси . . . . . . . 60 пус
2) **Осипов**—Кушар . . . . . . . . . . 44 „
3) **Пайраш**—Телейсĕр кунсем . . . . . 30 „
4) **Трупина М.**—Çĕнтерђĕ . . . . . . . . 30 „
5) **Юркин П.**—Вĕрентекен . . . . . . . 24 „
6) **Тюмеров В.**—Пуçламăш . . . . . . 15 „
7) **Гарин**—Сарпике . . . . . . . . . . 20 „
7) **Шуç Левентти**—Йӳççи такăнтарђĕ . . 40 „

**Кĕнекесене Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕн макаçĕнĕсенђе тата пуштă кантурĕн çумĕнђи кĕнеке киоскисенђе илме пулаť.**

Хакĕ 1 т. 25 пус

Цена 1 р. 25 к.

„Çĕнĕ хунав“ — Сборник рассказов

Чувашское Государственное Издательство

г. Чебоксары